**А.В. Блинов, А.В. Егорова, Л.П. Николаева**

# Ч Ă В А Ш Ч Ĕ Л Х И

**5 класс**

Вĕренӳ пособийĕ, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан
вырăс чĕлхиллĕ шкулсем валли

# ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК

**5 класс**

Учебное пособие для общеобразовательных организаций
с русским языком обучения

**ЙЫШĂННĂ ПАЛЛĂСЕМ** (условные знаки)

1. (наушники (развитие речи)) – **Евĕрлесе кала** (повтори), **Хуравла** (ответь), **Итле** (послушай), **Каласа пар** (расскажи), **Тĕрĕс çыхăнтар** (Соедини правильно), **Вула** (Читай),
2. (маски)) **Мăшăрпа ĕçле** (работа в парах) **Рольпе выля** (Сыграй по ролям)
**3.** (диск) **– Атьăр юрлатпăр** (Давай споем)
**4.** (восклицательный знак (запомни)) **– Астуса юл** (запомни)
**5.** (ручка) **– Çыр** (Напиши)
**6.** (пазлы (задания повышенной сложности) **– Шутла** (реши — задания на логику)
**7.** (блокнот и карандаш (творческое задание)) **— Проект ту** (Сделай проект)
**8.** (земной шарик) — **Пĕлме кăсăклă** (Интересно узнать)
**9.** (сундучок) — **Халăх сăмахлăхĕ** (Народное творчество)
**10.** (кубики) - **Атьăр вылятпăр** (Давай сыграем)
**11.** (звездочка) — Йывăр ĕç (задание повышенной сложности)

Рис.1 в кружочке 50 x 50 сделать портреты основных героев
Рис.1.1 Атнер
Рис.1.2 Алина
Рис.1.3. Асамат
Рис.1.4. Ирина
Рис.1.5. Тимук
Рис.1.6. Улине
Рис.1.7. Юман
Рис. 10 Дамир (новый герой)

Раздел 1
Урок 1
1 стр.

Название раздела: **ПĔЛӲ КУНĔ**

**Мĕн аса илĕн?**

Салам сăмахĕсене, хальхи вăхăтри глаголсен çуклă формине, глаголăн инфинитив формине, ыйту сăмахĕсене аса илĕн.

**Мĕн вĕренĕн?**

| |
|---|
| Çу вăхăчĕ, кун йĕрки, шкул çинчен каласа пама вĕренĕн, тăван чĕлхе пĕлтерĕшне ăша хывăн. |

Название урока: **АВАН-И?**

**1.** (наушники) **Вула. Глаголсен вăхăтне кала**.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Рис.1.1 Атнер | Аван-и? Эпĕ Атнер ятлă. Манăн хушамат Кашкаров. Эпĕ вун пĕр çулта, пиллĕкмĕш класра вĕренетĕп. Эпĕ музыкăпа тата спортпа интересленетĕп. | Рис.1.2 Алина | Салам! Эпĕ Алина ятлă. Манăн хушамат Петрова. Эпĕ вун икĕ çулта, пиллĕкмĕш класра вĕренетĕп. Эпĕ пушă вăхăтра кĕнеке вулама тата ташлама юрататăп. |
| Рис.1.6. Улине | Сывлăх сунатăп! Эпĕ Улине ятлă. Манăн хушамат Коваленко. Эпĕ вун пĕр çулта, пиллĕкмĕш класа çӳретĕп. Эпĕ акăлчан тата китай чĕлхисем вĕренетĕп тата пушă вăхăтра тĕрлеме юрататăп. | Рис.1.7. Юман | Ырă кун пултăр! Эпĕ Юман ятлă. Манăн хушамат Туптов. Эпĕ вун икĕ çулта, пиллĕкмĕш класа çӳретĕп. Эпĕ компьютерпа кăсăкланатăп. Манăн йыттă пур. Эпир унпа питĕ туслă. Вăл мана шкултан кĕтсе илет. |

**2.** (ручка) **Ачасем мĕнле сывлăх сунаççĕ? Çыр.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1. Аван-и? | 2. … | 3. … | 4. … |

**3.** (наушники) **Хуравла. Тĕрĕс-и? Тĕрĕс мар-и?**

1. Ачасем пиллĕкмĕш класра вĕренеççĕ.
2. Улине вун икĕ çулта.
3. Атнер спортпа кăсăкланать.
4. Алина тĕрлеме юратать.
5. Юманăн кушак пур.
6. Улине китай чĕлхи вĕренет.
7. Атнер музыка итлеме юратать.
8. Юман кĕнеке вулама юратать.

2 стр.

**4.** (ручка) **Ыйтусен кĕске хуравĕсене туп.**

| | | |
|---|---|---|
| 1. Аван-и? | | А. Вунă çулта. |
| 2. Эсĕ мĕн ятлă? | | Ă. Каратэпе. |
| 3. Эсĕ миçе çулта? | | Б. Аван! |
| 4. Эсĕ миçемĕш класра вĕренетĕн? | | В. Юрататăп. |
| 5. Эсĕ мĕнпе кăсăкланатăн? | | Г. Антун |
| 6. Эсĕ музыка итлеме юрататăн-и? | | Д. Çук. |
| 7. Санăн йыттă пур-и? | | Е. Тăваттăмĕш класра. |

**5.** (маски) **Мăшăрпа ĕçле.**

| **— Эсĕ … кăсăкланатăн-и?**<br>**— Эпĕ … кăсăкланатăп (кăсăкланмастăп).** | |
|---|---|
| ✓ археологипе<br>✓ гаджетсемпе<br>✓ илемлĕ литературăпа<br>✓ историпе<br>✓ компьютер вăййисемпе<br>✓ мангопа<br>✓ модăпа<br>✓ музыкăпа | ✓ спортпа<br>✓ çемçе теттепе<br>✓ сул çӳревпе<br>✓ ташăсемпе<br>✓ театрпа<br>✓ тĕрĕпе<br>✓ ӳнерпе<br>✓ ют чĕлхесемпе |

**6.** (ручка) **-ма (-ме) аффикс хуш.**

Велосипедпа ярăн__, бассейнта иш__, кĕнеке вула__, компьютерпа выля__, конструктор пуçтар__, музыка итле__, пулă тыт___, çывăр__, ташла__, телевизор пăх___, усăлса çӳре__, ӳкер__, юлташсемпе тĕл пул__, юрла__.

**7.** (ручка) **Кирлĕ сăмахсем çыр. Каласа пар.**

1. Эпĕ … ятлă.
2. Манăн хушамат … .
3. Эпĕ … çулта.
4. Эпĕ …-мĕш класра вĕренетĕп.
5. Эпĕ …па (пе) кăсăкланатăп.
6. Пушă вăхăтра … ма (ме) юрататăп.

Урок 2
1 стр.
Название раздела: **ПĔЛӲ КУНĔ**
Название урока: **ХАЛЬ МĔНЛЕ УРОК ПУЛАТЬ?**

**1.** (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

| | |
|---|---|
| Рис. 2 70 x 70<br>обычная школа 3-этажная синего цвета. | 1. Ку **миçемĕш** шкул?<br>2. Вăл **ăçта** вырнаçнă?<br>3. Унăн адресĕ **мĕнле**?<br>4. Вăл çĕнĕ-**и**? Кивĕ-**и**?<br>5. Шкул **миçе** хутлă?<br>6. Вăл **мĕн** тĕслĕ?<br>7. Кунта **миçе** ача вĕренет? |

**Кирлĕ сăмахсем:** виçĕ, Иванов проспекчĕ, 1-мĕш çурт, кăвак, саккăрмĕш, пин ытла, çĕнĕ, хула хĕрринче.

**2.** (маски) **Диалога вула.**

А т н е р. Халь мĕнле урок пулать?
У л и н е. Истори урокĕ.
А т н е р. Вăл миçемĕш кабинетра пулать?
У л и н е. 207-мĕш (ик çĕр çиччĕмĕш) кабинетра.
А т н е р. Вăл иккĕмĕш хутра-и?
У л и н е. Иккĕмĕш хутра.

**3.** (наушники) **Тĕслĕхпе усă курса предложенисем ту.**

Тĕслĕх: Валентина Петровна 105-мĕш кабинетра биологи вĕрентет.

| Вĕрентекен | Вĕренӳ пӳлĕмĕ | Предмет ячĕ |
|---|---|---|
| Валентина Петровна | 105 | биологи |
| Анна Ивановна | 301 | вырăс чĕлхи |
| Марат Рустамович | 305 | географи |
| Артем Сергеевич | 207 | истори |
| Диана Андреевна | 214 | математика |
| Эрпина Николаевна | 311 | музыка |
| Айтар Степанович | 208 | чăваш чĕлхи |
| Андрей Николаевич | с порт залĕ | физкультура |

**4.** (маски) **Мăшăрпа ĕçле.**

1 - м ĕ ш в ĕ р е н е к е н. Пире историпе (биологипе, математикăпа, вырăс чĕлхипе) кам вĕрентет?
2 - м ĕ ш в ĕ р е н е к е н. Пире историпе … вĕрентет.
1 - м ĕ ш в ĕ р е н е к е н. Истори (биологи, математика, вырăс чĕлхи) урокĕ хăш кабинетра иртет?
2 - м ĕ ш в ĕ р е н е к е н. Истори урокĕ … кабинетра иртет.

2 стр.
**5.** (ручка) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1. Биологи | | а) итлеме тата юрлама | вĕрентет. |
| 2. Вырăс чĕлхи | | ă) авалхи пурнăçа тĕпчеме | |
| 3. Географи | | б) чĕрĕ çут çанталăка сăнама | |
| 4. Истори | | в) чăвашла тĕрĕс çырма тата калаçма | |
| 5. Математика | | г) сывлăха упрама тата çирĕплетме | |
| 6. Музыка | | д) вырăсла тĕрĕс çырма тата калаçма | |
| 7. Чăваш чĕлхи | | е) шутлама тата шухăшлама | |
| 8. Физкультура | | ё) чĕрĕ мар çут çанталăка сăнама | |

**6.** (маски) **Мăшăрпа ĕçле.**

— Сана хăш предмет килĕшет?
— Мана … предмечĕ килĕшет.
— Мĕншĕн?
— Мĕншĕн тесен эпĕ … .

**Кирлĕ сăмахсем**: футболла выляма юрататăп, чечек ӳстерме юрататăп, рок итлеме юрататăп, туссемпе чăвашла калаçатăп, авалхи пурнăçпа кăсăкланатăп, çул çӳреме юрататăп, эпĕ логика задачисем шутлама юрататăп, сăвă çырма юрататăп.

**7.** (ручка) **Кирлĕ сăмахсем çыр. Каласа пар.**

1. Эпĕ …-мĕш шкулта вĕренетĕп.
2. Вăл (хула варринче, хула хĕрринче, ял варринче, ял хĕрринче) вырнаçнă.
3. Унăн адресĕ: … (проспекчĕ, урамĕ), …-мĕш çурт.
4. Вăл (çĕнĕ, кивĕ).
5. Шкул (пĕр, икĕ, виçĕ, тăватă, пилĕк) хутлă.
6. Вăл (кăвак, хăмăр, сарă, сăрă, шурă, хĕрлĕ) тĕслĕ.
7. Шкулта … ача вĕренет.

**8.** (ручка) **Сăмахсене икĕ ушкăна пайла.**

Апат çи, аудиотекст итле, велосипедпа ярăн, задача шутла, кĕнеке вула, лагерьте кан, мăшăрпа ĕçле, нумай çывăр, тĕрĕс кала, тинĕс хĕррине кай, сăвă вĕрен, çут çанталăка сăна, тест çыр, тĕпче, хĕвелпе хĕртĕн, хуравла, шыва кĕр, ыйт, ют çĕр-шывра пул.

| **Шкулта** | **Каникулта** |
|---|---|
| ... | ... |

Урок 3
1 стр.
Название раздела: **ПĔЛӲ КУНĔ**
**Название урока: КЛАСС СЕХЕТĔНЧЕ**

**1.** (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

А р т ё м  С е р г е е в и ч. Ачасем, эпĕ Артём Сергеевич ятлă, сирĕн класс ертӳçи пулатăп. Паянхи класс сехетĕнче çуллахи каникул çинчен калаçатпăр.
А л и н а (кулса). Артём Сергеевич, эсир çулла ăçта пулнă?
А р т ё м  С е р г е е в и ч. Эпĕ çул çӳреме юрататăп, чăваш халăх историйĕпе кăсăкланатăп. Çулла тĕрлĕ вырăнта пулатăп. Кăçал эпĕ пĕр хулара пултăм. Вăл Тутар Республикинче Атăл хĕрринче вырнаçнă. Ку вырăнта чăвашсен мăн аслашшĕсем пурăннă. Халь унта историпе археологи музейĕ пур. Мĕнле хула-ши вăл? Тавçăрса илĕр!
А л и н а. Хусан-и?

А р т ё м   С е р г е е в и ч. Хусан мар.
Ю м а н. Пăлхар-и?
А р т ё м   С е р г е е в и ч. Тĕрĕс. Эсĕ Пăлхарта пулнă-и?
Ю м а н. Пулман, вуланă.

**2.** (ручка) **Çӳлти диалогпа усă курса кирлĕ сăмах ларт.**

Атăл ______, историпе археологи ______, класс ______, класс ______, çул ______, çуллахи ______, тавçăрса ______, тĕрлĕ ______, Тутар ______, чăваш халăх ______, чăвашсен ______.

**3.** (наушники) **Тĕрĕс-и? Тĕрĕс мар-и?**

1. Артём Сергеевич пиллĕкмĕш класс ертӳçи.
2. Паянхи класс сехечĕ çуллахи каникул çинчен пулать.
3. Артём Сергеевич çул çӳреме юратмасть.
4. Вăл вырăс халăх историйĕпе кăсăкланать.
5. Çулла вăл тĕрлĕ вырăнта пулать.
6. Кăçал Артём Сергеевич Тутар Республикинче пулнă.
7. Вăл Архитектура музейĕнче пулнă.
8. Алина тавçăрса илет.
9. Артём Сергеевич Пăлхарта пулнă.
10. Юман Пăлхарта пулнă.

2. стр.
**4.** (наушники) **Тавçăрса ил. Кам ăçта пулнă?**

**Рис.1.4**: Ку хула Атăл хĕрринче вырнаçнă. Унта Авиаци музейĕ, Иван Яковлев музейĕ пур. Ку мĕнле хула? Тавçăрса илĕр!
**Рис.1.1**: Ку хула Нева хĕрринче вырнаçнă. Кунта Хĕллехи кермен, Эрмитаж пур. Ку мĕнле хула? Тавçăрса илĕр!
**Рис.1.2**: Ку хула Европăна та, Азие те кĕрет. Вăл Турцире вырнаçнă. Ку мĕнле хула? Тавçăрса илĕр!
**Рис.1.6**: Ку хула Хура тинĕс хĕрринче вырнаçнă. Кунта океанариум, дендрари пур. Кунта ту çинче йĕлтĕрпе ярăнма пулать. Ку мĕнле хула? Тавçăрса илĕр!
**Рис.1.7**: Ку вырăнта хулаш пулнă. Вăл Елчĕк районĕнче вырнаçнă. Ку мĕнле вырăн? Тавçăрса илĕр!

**Кирлĕ сăмахсем:** Питĕр хули, Сочи хули, Стамбул хули, Аслă Таяпа ялĕ, Чĕмпĕр хули.

**5.** (наушники) **Хуравла. Çулла кам мĕн тунă?**

| | Атнер | Алина | Юман | Улине | Ирина | Асамат | Тимук |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Лагерьте каннă | х | | х | | х | | |
| Йĕлтĕрпе ярăннă | | | | х | | | |
| Авалхи укçа тупнă | | | х | | | | |
| Тĕрлĕ музейра пулнă | х | х | | х | х | х | х |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Футболла вылянă | x | | x | | | x | x |
| Уçăлса çӳренĕ | x | x | x | x | x | x | x |

**6.** (наушники) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1) шыва | а) хĕртĕн | 7) селфи | е) ӳкер |
| 2) хĕвелпе | ă) пуçтар | 8) туспа | ё) пăх |
| 3) çырла | б) тыт | 9) сăн | ĕ) ту |
| 4) купăста | в) кĕр | 10) кĕнеке | ж) паллаш |
| 5) скейтпа | г) ярăн | 11) экскурсие | з) кай |
| 6) пулă | д) кăшла | 12) мультфильм | и) вула |

**7.** (маски) **Мăшăрпа ĕçле**.

— Эсĕ çулла ăçта пулнă?
— Эпĕ çулла … пулнă.
— Унта мĕн-мĕн пур?
— Унта … пур.
— Эсĕ çулла мĕн-мĕн тунă?
— Эпĕ çулла … .

**Урок 4**
**1 стр.**
**Название раздела: ПĔЛӲ КУНĔ**
**Название урока: ИНТЕРВЬЮ**

**1.** (маски) **Диалога вула.**

| | | |
|---|---|---|
| **Рис.1.7** | Кил-ха, кил, пĕр япала кăтартатăп.<br>Мĕн?<br>Акă пăх.<br>Куна ăçта тупрăн?<br>Ялта, çырма хĕрринче.<br>Ку мĕнле укçа?<br>Эпĕ пĕлместĕп. Авалхи укçа пуль.<br>Атя Артём Сергеевичран ыйтатпăр.<br>Юрать. | **Рис.1.1** |

**2.** (наушники) **Ӳкерчĕксем тăрăх текст ту.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Рис. 3_1 50 х 50<br>1. Юман показывает Атнеру старинную монету | Рис. 3_2 50 х 50<br>2. Ирина замечает, как что-то Юман показывает Атнеру. | Рис. 3_3 50 х 50<br>3. Юман и Атнер идут к кабинету истории. | Рис. 3_4 50 х 50<br>4. Кабинет пустой. Там никого нет. |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Рис. 3_5 50 х 50<br>5. Ирина подходит к ребятам и спраши-вает о монете. | Рис. 3_6 50 х 50<br>6. Атнер прячет за спиной монету. | Рис. 3_7 50 х 50<br>7. Появляется Артем Сергеевич (учитель истории, классный руководитель, и в дальнейшем важный персонаж). | Рис. 3_8 50 х 50<br>8. Атнер показывает монету учителю ис-тории. |

1. Атнер авалхи укçана пытарать.
2. Вĕсене Ирина курать.
3. Ирина арçын ачасем патне пырать.
4. Çак вăхăтра Артём Сергеевич килет.

6. Юманпа Атнер истори кабинечĕ патне пыраççĕ.
7. Юман Атнере авалхи укçа кăтартать.
8. Кабинетра никам та çук.

5. Атнер вĕрентекене авалхи укçа кăтартать.

**3.** (наушники) **Кирлĕ сăмах ларт.**

1. Юман Атнере ... укçа кăтартать?
2. Вĕсене ... курать?
3. Юманпа Атнер ... пыраççĕ?
4. ... никам та çук?
5. Ирина ... пырать?
6. … авалхи укçана пытарать?
7. Çак вăхăтра ... килет?
8. Атнер ... авалхи укçа кăтартать.

**Кирлĕ сăмахсем:** ăçта, кам, мĕнле, камсем патне, кама, кам, мĕн патне, кам.

2 стр.

**4.** (наушники) **Тĕрĕс хурав туп**. Артём Сергеевич ачасене авалхи укçа çинчен мĕн каласа панă-ши?

Рис. 4 50 х 50 одна монета Волжской Булгарии



| | |
|---|---|
| | 1. Ку хальхи укçа. Унпа Раççейре усă кураççĕ. Хальхи укçапа тĕрлĕ япала туянма пулать.<br>2. Ку авалхи укçа. Унпа Атăлçи Пăлхарта усă курнă. Кун пек укçа авалхи хулаш вырăнĕнче тупма пулать. Тупсан ăна музея кайса памалла. |

**5.** (наушники) **Диалога вула. Хуравла. Ирина Артём Сергеевичран мĕн валли интервью илнĕ?**

| | |
|---|---|
| И р и н а. Артём Сергеевич, Сирĕнтен иртервью илме юрать-и?<br>А р т ё м   С е р г е е в и ч.. Мĕнле интервью? Мĕн çинчен?<br>И р и н а. Шкул хаçачĕ валли.<br>А р т ё м   С е р г е е в и ч. Хаваспах килĕшетĕп. | Рис. 5 Ирина берет интервью у учителя истории 70 х 70 на основании рис. 3_7 - портрет учителя истории Артем Сергеевича |

**6.** (наушники) **Артём Сергеевич хуравĕсене туп.**

| Ыйтусем | Хуравсем |
|---|---|
| 1. Эсир ăçта вĕреннĕ? | 1. Кĕнеке вулатăп, гитара калатăп. |
| 2. Эсир шкулта миçе çул ĕçлетĕр? | 2. Пилĕк çул. |
| 3. Эсир шкулта мĕнле вĕреннĕ? | 3. Кам шырать, çав тупать. |
| 4. Эсир пушă вăхăтра мĕн тăватăр? | 4. Университетра. |
| 5. Эсир спортпа туслă-и? | 5. Экспедицире. |
| 6. Эсир ăçта канма юрататăр? | 6. Туслă. Спортзала çӳретĕп. |
| 7. Сирĕн юратнă девиз мĕнле? | 7. Вăтам. «Пиллĕк» те, «иккĕ» те илнĕ. |

**7.** (пазлы) **Сăмах каçмăша шутла.**



1. Вăл шкулта вĕренет.
2. Вăл вĕренме пулăшать.
3. Ку предмет авалхи пурнăçа тĕпчет.
4. Ку предмет чĕрĕ мар çут çанталăка сăнать.
5. Ку предмет тĕрлĕ ĕç тума вĕрентет.
6. Унпа ӳкереççĕ, çыраççĕ, йĕр туртаççĕ.
7. Ку предмет шутлама вĕрентет.
8. Ку предмет сывлăха çирĕплетме пулăшать.
9. Вĕренмелли пӳлĕм.
10. Ку предмет ӳкерме вĕрентет.

Урок 5
1 стр.
Название раздела: **ПĔЛӲ КУНĔ**
**Название урока: МАНĂН ДЕВИЗ**

**1.** (маски) **Мăшăрпа ĕçле.**

| | |
|---|---|
| — Санăн юратнă девиз пур-и?<br>— Манăн юратнă девиз пур (çук).<br>— Санăн юратнă девиз мĕнле?<br>— Манăн юратнă девиз: «...». | Девизсем:<br>1. Эпĕ тумасан кам тăвать?<br>2. VENI, VIDI, VICI – Килтĕм, куртăм, çĕнтертĕм. (Гай Юлий Цезарь)<br>3. Нихăçан та ан кулян!<br>4. Кĕтме пĕлекен телейлĕ.<br>5. Çăлтăр *витĕр çул курăнать*.<br>6. Сăмах патăн — тыт! |

**Нихăçáн та ан кулýн** — пĕрре те кичем ан пул, ялан хаваслă пул.
**Ви́тĕр** — хушшинче.
**Çул курăнáть** — çул курма пулать.

**2.** (ручка) **Ирина шкул хаçачĕ валли калав çырнă. Унăн компьютерĕнче чăваш шрифчĕ пулман. Йăнăшсене тӳрлетсе çыр.**

| | |
|---|---|
| Рис. 6. 50 х 50<br>на основе рисунка 3_7 - портрет учителя истории Артем Сергеевича | Пире истори верентекен Артём Сергеевич ятла. Вал шкулта пилек çул еçлет. Артём Сергеевич университетра веренне. Вал шкулта ватам веренне: «пиллек» те, «икке» те илне. Артём Сергеевич пуша вахатра кенеке вулать, гитара калать. Вал спортпа пите тусла, спорт залне çўрет. Унан девизĕ: «Кам шырать, çав тупать». |

**3.** (наушники) **Хуравла. Ирина Артём Сергеевич çинчен мĕн çырма манса кайнă? Иртнĕ урокпа усă кур.**

**4.** (наушники) **Хуравла. Сан шутпа, вĕрентекен пушă вăхăтра мĕн-мĕн тăвать?**

| | | |
|---|---|---|
| Уçăлса çӳрет | Кино пăхать | Килти ĕç тăвать |
| Компьютерпа вылять | **В Ĕ Р Е Н Т Е К Е Н** | Теттепе вылять |
| Театр кружокне çӳрет | Пианино калать | Марафон чупать |

**5.** (маски) **Мăшăрпа ĕçле.**

— Эсĕ пушă вăхăтра мĕн тăватăн?
— Эпĕ пушă вăхăтра … (чупатăп, ишетĕп…).

2 стр.
**6.** (наушники) **Вула. Ваттисен сăмахне туп.**

Пĕр ача кашни кун компьютер умĕнче ларнă. Унăн аслашшĕ компьютерпа усă курма пĕлмен. Мăнукĕ ăна компьютерпа усă курма вĕрентесшĕн пулнă. Аслашшĕ вĕреннине мансах пынă. Мăнукĕ тĕлĕннĕ: «Асатте, мĕншĕн сана вĕренме йывăр-ха?». Аслашшĕ каланă: «Кирек мĕнле ĕçе те çамрăк чух вĕренмелле. Çамрăк чух вĕренме çăмăлрах. Çамрăк чух вĕренни – чул çинче, ватăлсан вĕренни – юр çинче». (Геннадий Волков калавĕ тăрăх.)

**7.** (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

1. Пĕр ача кашни кун мĕн умĕнче ларнă?
2. Унăн аслашшĕ компьютерпа усă курма пĕлнĕ-и?
3. Мăнукĕ аслашшĕне мĕнпе усă курма вĕрентесшĕн пулнă?
4. Аслашшĕне вĕренме çăмăл пулнă-и? Йывăр пулнă-и? Мĕншĕн?

**8.** (наушники) **Ыйтусене хуравла. Каласа пар.**

| | |
|---|---|
| 1. Ку **кам**?<br>2. Вăл **кам** пулнă?<br>3. Геннадий Волков **ăçта** çуралнă?<br>4. Вăл **хăçан** çуралнă?<br>5. Вăл **мĕн-мĕн** çырнă?<br>6. Унăн псевдонимĕ **мĕнле** пулнă?<br>7. Вăл **хăш çĕр-шывра** нимĕçле лекцисем вуланă?<br>8. Аслă Елчĕк ялĕнче ун ячĕпе **мĕн-мĕн** пур? | Рис. 21 50 х 50 портрет этнопеда-гога Геннадий Никандровича Волкова. |

**Кирлĕ сăмахсем:** Германире, Геннадий Никандрович Волков, статьясем, юмах-калав, Кашкăр Хуначи, палăк, музей, этнопедагог, 1927 çулхи юпа уйăхĕн 29-мĕшĕнче, Аслă Елчĕк ялĕнче.

**9.** (ручка) **Предложенисем йĕркеле.**

<table>
<tr><td rowspan="4">Манăн</td><td>асатте</td><td rowspan="4">компьютерпа усă курма</td><td rowspan="2">п ёлет.</td></tr>
<tr><td>асанне</td></tr>
<tr><td>кукаçи</td><td rowspan="2">пĕлмест.</td></tr>
<tr><td>кукамай</td></tr>
</table>

**Урок 6**
1 стр.
Название раздела: **ПĔЛӲ КУНĔ**
**Название урока: ТĂВАН ЧĔЛХЕ**

**1.** (наушники) **Хуравла. Эсĕ мĕнле шутлатăн?**

1. Çĕр çинче миçе чĕлхе?
а) хĕрĕхе яхăн; ă) ик çĕр ытла; б) çичĕ пин ытла; в) вунă пине яхăн.
2. Китайла миçе çын калаçать?
а) çĕр пин; ă) миллиона яхăн; б) миллиард ытла; в) вунă миллиард.
3. Чăвашла миçе çын калаçать?
а) çĕр пине яхăн; ă) миллион ытла; б) икĕ миллион; в) пилĕк миллион.
4. Анлă сарăлнă чĕлхесем шутне хăш чĕлхесем кĕреççĕ?
а) акăлчан; ă) эстон; б) гренланд; в) испан.

5. Çыннăн темиçе тăван чĕлхе пулма пултарать-и?
а) пултарать; ă) пултараймасть.

**2.** (наушники) **Полилога вула. Хуравла. Çыннăн миçе тăван чĕлхе пулма пултарать?**

А й т а р   С т е п а н о в и ч. Ачасем, çĕр çинче миçе чĕлхе? Пĕлетĕр-и?
И р и н а. Çĕр чĕлхе.
А с а м а т. Ман шутпа, çĕр çинче пин ытла чĕлхе.
А й т а р   С т е п а н о в и ч. Тата кам мĕнле шутлать?
А л и н а. Вунă пин чĕлхе-ши?
А й т а р   С т е п а н о в и ч. Çĕр çинче çичĕ пин ытла чĕлхе шутланать. Китайла тата акăлчанла миллиард ытла çын калаçать. Испанла, арабла тата вырăсла темиçе миллион çын калаçать. Вĕсем анлă сарăлнă чĕлхесем шутне кĕреççĕ. Чăвашла, эстонла пĕр миллион çын калаçать, исландла — 300 пин çын, гренландла — 57 пине яхăн çын. Çыннăн тăван чĕлхе пĕрре те, иккĕ те, виççĕ те пулма пултарать.
У л и н е. Ун пек пулма пултарать-и?
А й т а р   С т е п а н о в и ч. Пултарать. Тĕслĕхрен, Расулăн амăшĕ таджик, амăшĕ — чăваш. Ашшĕ унпа таджикла калаçать, амăшĕ — чăвашла, шкулта вырăсла вĕренет.

**3.** (ручка) **Диалогпа усă курса сăмах майлашăвĕсем ту.**

Анлă … , вырăсла … , мĕнле … , пин … , пине … , пулма … , çĕр … ,  таджикла … , тăван … , темиçе … .

**Кирлĕ сăмахсем**: вĕренет, калаçать, миллион, пултарать, сарăлнă, çинче, чĕлхе, шутланать, ытла, яхăн.

2 стр.
**4.** (наушники) **Карттăпа паллаш. Хуравла. Чăвашсем ăçта-ăçта пурăнаççĕ?**

рис. 7 140 х 70 Карта России с местами компактного проживания чувашей (регионы пронумеровать, но названия регионов на карте не писать. 1. Чувашская Республика. 2. Республика Марий Эл. 3. Республика Татарстан. 4. Кировская обл. 5. Удмуртская Республика. 6. Пермский край. 7. Республика Башкортостан. 8. Оренбургская обл. 9. Самарская обл. 10. Саратовская обл. 11. Ульяновская обл. 12. Пензенская обл. 13. Республика Мордовия. 14. Нижегородская обл.

1. Чăваш Республики. 2. Марий Эл Республики. 3. Тутар Республики. 4. Киров облаçĕ. 5. Удмурт Республики. 6. Пермь крайĕ. 7. Пушкăрт Республики. 8. Ĕренпур облаçĕ. 9. Самара облаçĕ. 10. Сарăту облаçĕ. 11. Чĕмпĕр облаçĕ. 12. Пенза облаçĕ. 13. Мордва Республики. 14. Чулхула облаçĕ.




**5.** (ручка) **Кирлĕ сăмахсем çыр.**

Чăвашсем тĕрлĕ ___________ пурăнаççĕ. Ытларах çак регионсенче: Чăваш ___________, Тутар ___________, Пушкăрт ___________, Самар ___________, Чĕмпĕр ___________, Ĕренпур ___________, Сарăту ___________, Пенза ___________. Чăваш чĕлхине ___________ та, ___________ те, ___________ та илтме пулать. Чăвашсем ют çĕр-шывсенче те пурăнаççĕ: ___________, ___________, ___________, ___________, ___________, ___________.

**Кирлĕ сăмахсем:** Америкăра, Германире, Казахстанта, Мускавра, облаçĕнче, Питĕр хулинче, Республикинче, çĕрте, Узбекистанта, Украинăра, Францире, Чулхулара.

**6.** (земной шар) **Пĕлме кăсăклă.**

Кашни хула ячĕн хăйĕн **этимологийĕ** пур. «Сарăту» тĕрĕк сăмахĕ шутланать. Вăл икĕ сăмахран тăрать: «сарă» тата «ту». «Хусан» «казан» сăмахран пулса кайнă, тутарла вăл «хуран» сăмаха пĕлтерет. «Йошкар-Ола» мари чĕлхинче «хĕрлĕ хула» тенине пĕлтерет. Чулхулара чулран тунă çурт нумай пулнă, çавăнпа чăвашсем ăна çапла каланă. Шупашкар этимологийĕ çинчен тĕрлĕрен шухăшлаççĕ. Пĕрисем «шупаш» тата «кар» сăмахсенчен пулса кайнă теççĕ. «Шупаш» – çар пусĕ, «кар» – хула тенине

пĕлтерет. Теприсем «Шупаш» ҫын ячĕ тесе шутлаҫҫĕ.

**Этимоло́ги** – сăмах мĕнле пулса кайнине тĕпчет.

**Урок 7**
1 стр.
Название раздела: **ПĔЛӐ̆ КУНĔ**
**Название урока: ЧĂВАШ ЧĔЛХИ**

**1.** (наушники) **Хуравла. Эсĕ мĕнле шутлатăн?**

1. Тăван чĕлхе кунне хăҫан паллă тăваҫҫĕ?
а) нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнче; ă) ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче; б) ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче.
2. Чăваш чĕлхи кунне хăҫан паллă тăваҫҫĕ?
а) нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнче; ă) ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче; б) ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче.
3. Тутар чĕлхи кунне хăҫан паллă тăваҫҫĕ?
а) нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнче; ă) ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче; б) ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче.

**2**. (земной шар) **Пĕлме кăсăклă.**

Тĕнчере «Тăван чĕлхе кунĕ» уяв пур. Ҫак уявăн хăйĕн историйĕ. 1952 (пин те тăхăр ҫĕр аллă иккĕмĕш) ҫулта, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнче, Бангладеш студенчĕсем демонстраци тухнă. Вĕсем хăйсен тăван бенгали чĕлхине патшалăх чĕлхи тума ыйтнă. Ҫавна асăнса Юнеско Тăван чĕлхе кунне паллă тума йышăннă, 2000 ҫулта нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнче паллă тума пуҫланă.

Ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче Чăваш чĕлхи кунне паллă тăваҫҫĕ. Ҫак кун аслă вĕрентекен Иван Яковлевич Яковлев ҫуралнă. Ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче Тутар чĕлхи кунне паллă тăваҫҫĕ. Ҫак кун тутарсен паллă поэчĕ Габдулла Тукай ҫуралнă.

**3.** (наушники) **Хуравла. Каласа пар.** (Ответь. Перескажи)

| | |
|---|---|
| 1. Ку **кам**?<br>2. Вăл **кам** пулнă?<br>3. Иван Яковлев **ăҫта** ҫуралнă?<br>4. Вăл **хăҫан** ҫуралнă?<br>5. Вăл чăваш халăхĕшĕн **мĕнле** паллă ĕҫсем тунă?<br>6. Вăл ачасем валли **мĕнле калавсем** ҫырнă?<br>7. Вăл Чĕмпĕрте **мĕн** уҫнă?<br>8. Шупашкарта ун ячĕпе **мĕн-мĕн** пур? | Рис. 8. 50 х 50 портрет чувашского просветителя Ивана Яковлевича Яковлева. |

**Кирлĕ сăмахсем:** 1848 ҫулта; алфавит тунă, букварь кăларнă, шкулсем уҫнă; аслă вĕрентекен; Иван Яковлев; музейсем, палăк, бюст, проспект, сквер; Тутар Республикинче; пĕчĕк; чăваш шкулĕ.

2 стр.
**4.** (наушники) **Ыйтăва хуравла.**

<table>
<tr><td>тăвансемпе калаçма</td><td>ют чĕлхесем (туркка, корей, япон, китай) вĕренме</td><td>чăваш историпе культурине тĕпчеме</td><td>çынсемпе хутшăнма</td></tr>
<tr><td>çынсем калаçнине ăнланма</td><td colspan="2" rowspan="2">Чăваш чĕлхи<br>мĕн тума кирлĕ?</td><td>чăвашла вулама</td></tr>
<tr><td>чăваш пулнине палăртма</td><td>радио итлеме</td></tr>
<tr><td>влогерсене пăхма</td><td>ют çĕрте «вăрттăн» калаçма</td><td>атте-аннене чăвашла вĕрентме</td><td>телевизор пăхма</td></tr>
</table>

**5.** (наушники) **Танлаштар**. **Хуравла**. **Чăваш чĕлхи мĕнле чĕлхесене вĕренме пулăшать?**

| Тĕрĕк чĕлхисем | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| чăваш | тутар | туркка | азербайджан | казах | узбек |
| анне | әни | anne | ana | ана | она |
| шыв | су | su | su | су | сув |
| пуç | баш | baş | baş | бас | бош |
| пĕрре | бер | bir | bir | бір | бири |
| хура | кара | kara | qara | қара | қора |
| çук | юк | yok | yox | жоқ | йўқ |

**Тĕ́рĕк чĕлхисе́м** – пĕр тымартан пулса кайнă чĕлхесен ушкăнĕ.

**6.** (маски) **Мăшăрпа ĕçле. Кирлĕ сăмахсене суйласа ил.**

— Аннӳ санпа хăш чĕлхепе калаçать?
— Анне манпа … калаçать.
— Аçу санпа хăш чĕлхепе калаçать?
— Атте манпа … калаçать.
— Асаннӳ санпа хăш чĕлхепе калаçать?
— Асанне манпа … калаçать.
— Кукаму санпа хăш чĕлхепе калаçать?
— Кукамай манпа … калаçать.

**Кирлĕ сăмахсем:** азербайджанла, вырăсла, ирçелле, марилле, мăкшăлла, пушкăртла, таджикла, тутарла, удмуртла, узбекла, чăвашла, эрменле.

**Урок 8**
1 стр.

Название раздела: **ПĔЛӲ КУНĔ**
**Название урока: ЧĔМПĔР ЧĂВАШ ШКУЛĔ**

**1.** (наушники) **Вула. Хуравла. Чĕмпĕр чăваш шкулĕ хăш хулара вырнаçнă?**

| | |
|---|---|
| Чĕмпĕрте «Чĕмпĕр чăваш шкулĕ. И.Я. Яковлев хваттерĕ» музей пур. Шкула Иван Яковлевич Яковлев 1868 çулта никĕсленĕ. Кунта чăваш, вырăс, мăкшă, ирçе, тутар, мари, удмурт ачисем пĕлӳ илнĕ. Вĕсем малтан тăван чĕлхепе вулама-çырма вĕреннĕ.<br>Шкулта çак предметсем пулнă: алгебра, геометри, физика, логика, истори, катехизис, чиркӳ историйĕ.<br>Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче 6 çул вĕреннĕ, унтах пурăннă. Шкулта хĕр ачасемпе арçын ачасем уйрăм вĕреннĕ. Арçын ачасем ĕç урокĕсенче сĕтел-пукан тунă. Хĕр ачасем тĕрлеме, çĕлеме вĕреннĕ. Шкулпа юнашар пахча тата ферма пулнă. Шкулта театр ĕçленĕ, виçĕ оркестр, хор пулнă. Кашни ача пĕр-пĕр инструмент калама пĕлнĕ. Çак шкулта паллă çынсем вĕреннĕ: Трубина Мархви çыравçă, Константин Иванов сăвăçă, Иоаким Максим-Кошкинский драматург, Федор Павлов композитор, Даниил Элмен патшалăх ĕçченĕ тата ыттисем те. | Рис. 9 50 х 50 здание Симбирской чуваш-ской школы. |

**Катехи́зис** — Библие ăнлантарни.

**2.** (ручка) **Çӳлти текстпа усă курса сăмах майлашăвĕсем ту.**

Вулама-çырма _________, ĕç _________, инструмент _________, паллă _________, патшалăх _________, пĕлӳ _________, тăван _________, уйрăм _________, унтах _________, сĕтел-пукан _________, чăваш _________, чиркӳ _________, шкулпа _________, 1868 çулта _________.

**3.** (наушники) **Хуравла.**

| | | |
|---|---|---|
| 1. Чĕмпĕрте **мĕн** пур? | | 1) 6 çул |
| 2. Ăна **кам** никĕсленĕ? | | 2) пĕр-пĕр инструмент |
| 3. Ăна **хăçан** никĕсленĕ? | | 3) «Чĕмпĕр чăваш шкулĕ. И.Я. Яковлев хваттерĕ» музей |
| 4. Унта **миçе** çул вĕреннĕ? | | 4) пĕрле вĕренмен, уйрăм |
| 5. Ку шкулта тутар ачисем пĕлӳ илнĕ-**и**? | | 5) 1868 çулта |
| 6. Хĕр ачасемпе арçын ачасем пĕрле вĕреннĕ-**и**? | | 6) пахча тата ферма |
| 7. Шкулпа юнашар **мĕн-мĕн** пулнă? | | 7) Иван Яковлевич Яковлев |
| 8. Кашни ача **мĕн** калама пĕлнĕ? | | 8) илнĕ |

2 стр.
**4.** (наушники) **Пĕрремĕш ĕҫри текста ят пар.**

1. Иван Яковлевич Яковлев шкулĕ.
2. «Чĕмпĕр чăваш шкулĕ. И.Я. Яковлев хваттерĕ» музей.
3. Тĕрлĕ халăх шкулĕ.
4. Чĕмпĕр чăваш шкулĕ.

**5.** (ручка) **Текст планне тĕрĕс ҫыр.**

1. Унта театр ĕҫленĕ, виҫĕ оркестр, хор пулнă.
2. Унта тĕрлĕ халăх ачисем вĕреннĕ.
3. Чĕмпĕр чăваш шкулне Иван Яковлев уҫнă.
4. Шкулпа юнашар пахча тата ферма пулнă.
5. Шкулта паллă ҫынсем пĕлӳ илнĕ.
6. Шкулта ултă ҫул вĕреннĕ.

**6**. (наушники) **Ӳкерчĕксем тăрăх предложенисем йĕркеле.**

Рис. 10 70 х 140 на деревянной доске музейные знаки, что можно делать в музее и что нельзя. В центре надпись «Музейра» (В музее) и 8 знаков. Музейные знаки лучше изобразить в кружочках:

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1. «разговаривать тихо» | 2. «бегать запрещено» | 3. «одежду сдавать в гардероб» | 4. «экспонаты трогать запрещено» |
| 5. «необходимо купить билет» | 6. «фотографировать разрешено» | 7. «с собакой заходить запрещено» | 8. «сорить запрещено» |

<table>
<tr><td rowspan="8">Музейра</td><td rowspan="8"></td><td>1) шăп калаҫма</td><td rowspan="8"></td><td rowspan="8">юрать.<br><br>юрамасть.<br><br>памалла.<br><br>памалла мар.<br><br>илмелле.<br><br>илмелле мар.</td></tr>
<tr><td>2) чупма</td></tr>
<tr><td>3) тумтире гардероба</td></tr>
<tr><td>4) экспонатсене тытма</td></tr>
<tr><td>5) билет</td></tr>
<tr><td>6) сăн ӳкерме</td></tr>
<tr><td>7) йытăпа ҫӳреме</td></tr>
<tr><td>8) ҫӳп-ҫап пăрахма</td></tr>
</table>

**Урок 9**
1 стр.
Название раздела: **ПĔЛӲ КУНĔ**
**Название урока: ЧĂВАШЛА КАЛАҪАТĂП**

**1.** (наушники) **Вула. Рольпе выля.**

(рисунки можно поместить в круги и рядом слева реплики героев)

| | | | |
|---|---|---|---|
| Рис.3.7 Артём Сергеевич | Эпĕ ĕнер чăвашсен ăслăлăх конферен-цине хутшăнтăм | Рис.1.1 Атнер | Пĕр ватă кинемей чарăнура манпа чăвашла калаçрĕ. Эпĕ ăна кирлĕ автобуса ларма пулăшрăм. |
| Рис.1.2 Алина | Эпĕ чăваш влогерне пăхатăп. Апат-çимĕç пĕçерме вĕренетĕп. | Рис.1.3. Асамат | Эпĕ чăвашла спектакльсем пăхма çӳретĕп. |
| Рис.1.4. Ирина | Эпĕ чăваш эстрада юррисене итлеме юрататăп. | Рис.1.5. Тимук | Эпĕ çăкăр лавккинче су-туçăпа яланах чăвашла ка-лаçатăп. |
| Рис.1.6. Улине | Эпир килте яланах чăвашла калаçатпăр. | Рис.1.7. Юман | Манăн Турцири юлташ чăвашла вĕренет. Эпĕ ăна вĕренме пулăшатăп. |

**Ắслăлăх** – пĕр-пĕр предмета тĕпчекен наука.
**Кинемéй** – ватă хĕрарăм.

**2.** (ручка) **Сăмахсенчен предложени йĕркеле.**

1. ăслăлăх, Артём Сергеевич, хутшăннă, конференцине.
2. пăхать, чăваш, влогерне, Алина.
3. Ирина, итлет, юррисене, чăваш.
4. чăвашла, килте, Улине, калаçать.
5. кинемее, Атнер, ватă, ларма, автобуса, пулăшрĕ.
6. Асамат, пăхать, спектакльсем, чăвашла.
7. сутуçăпа, Тимук, чăвашла, лавккинче, калаçать, çăкăр.
8. Турцири, чăвашла, Юман, юлташне, вĕрентет.

2 стр.

**3.** (наушники) **Артём Сергеевич каланине вула. Хуравла. Питĕр хулинче вăл мĕнле чăваш сăмахĕпе усă курнă?**

Пĕррехинче эпĕ Питĕр хулине кайрăм. Унта Эрмитажра пулса куртăм. Тĕлĕнмелле хитре музей вăл! Музейра тем те пур: картинăсем, скульптурăсем, авалхи паха япаласем. Ăна курма çынсем пĕтĕм çĕр-шывсенчен килеççĕ. Халăх питĕ нумай! Унтан-кунтан «Пардон!», «Сори!», «Эншульдигунг!», «Извините!» тени илтĕнет. Эпĕ те «Каçарăр!» теме пуçларăм. Мана та пурте ăнланчĕç.

**4.** (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

1. Артём Сергеевич ăçта кайнă?
2. Вăл ăçта пулса курнă?
3. Музейра мĕн-мĕн пур?
4. Эрмитажа курма çынсем ăçтан килеççĕ?
5. Унтан-кунтан мĕн тени илтĕнет?

6. Французла (акăлчанла, нимĕçле, вырăсла) «каçарăр» сăмах мĕнле пулать?

**5.** (ручка) **Кирлĕ сăмах ларт. Пăхмасăр вĕрен.**

Чăвашра _______ та чăвашла **кашлать**,
_______ та юрлать кунта ав чăвашла.
_______ чĕлхеллĕ халăх хушшинче
Калаçса çӳретĕп эпĕ _______! (Любовь Мартьянова)

**Кирлĕ сăмахсем:** вăрман, пин, шăпчăк, чăвашла.
**Кашлать** — шавлать.

**6.** (ручка) **Синквейн çыр.**

| | |
|---|---|
| Мĕн? | Чăваш чĕлхи |
| Мĕнле? | … , … . |
| Мĕн тăвать? | … , … … , … … . |
| Мĕн калама пулать? | … … … … … … . |
| Пĕтĕмлетӳ сăмахĕ: | … … . |

**Кирлĕ сăмахсем:** аталантарать; илемлĕ; пĕлӳ парать; пуян; тăван чĕлхе; чăваш чĕлхи ют чĕлхесем вĕренме пулăшать; хутшăнма пулăшать.

**Урок 10**
1 стр.
**Название раздела: ЭПĔ ТАТА МАНĂН ÇЕМЬЕ**
**Название урока: ЭПĔ ДАМИР ЯТЛĂ**

| |
|---|
| **Мĕн аса илĕн?**<br>Чăваш алфавитĕнчи сас паллисене, вĕсене палăртакан сасăсене аса илĕн.<br>**Мĕн вĕренĕн?**<br>Уçă тата хупă сасăсене ушкăнлама, сăпат местоименийĕсене вĕçлеме вĕренĕн, пусăм йĕркипе, ыйтуллă, хиствелĕ, калуллă предложенисемпе паллашăн. |

**1.** (маски) **Диалога вула. Палăртнă сăмахра миçе уçă сасă? Миçе хупă сасă?**

| | |
|---|---|
| А т н е р. Салам! Эсĕ мĕн ятлă?<br>Д а м и р. Эпĕ Дамир ятлă. Эсĕ мĕн ятлă?<br>А т н е р. Эпĕ — Атнер. Эсĕ хăш шкултан куçнă?<br>Д а м и р. Эпĕ Чĕмпĕр облаçĕнчен. Эпир **Шупашкара** пурăнма куçрăмăр.<br>А т н е р. Эсĕ футболла выляма юрататăн-и?<br>Д а м и р. Паллах, юрататăп.<br>А т н е р. Шкул хыççăн пирĕнпе выляма пыратăн-и?<br>Д а м и р. Хаваспах. | Рис. 10. 50 х 50 портрет нового героя Дамира |

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Чăваш чĕлхинче 9 уçă сасă: **[а], [ă], [ĕ], [и], [у], [ӳ], [ы], [э], [о]**.<br>[о] сасă вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче кăна тĕл пулать: альбом, блокнот, коридор. Уçă сасăсене каланă чухне сасă чăрмавсăр тухать.<br>Хупă сасăсене çак сас паллисем палăртаççĕ: б, в, г, д, ж, з, й, к, л, м, н, п, р, с, ç, т, ф, х, ц, ч, ш, щ. Хупă сасăсене каланă чухне чăрмав пулать: е чĕлхе, е шăл, е тута. |

**2.** (наушники) **Тĕрĕс вула.**

к * л
[ĕ] [и] [у]

п * р
[а] [ă] [е] [ĕ] [у] [ы]

х * р
[ĕ] [и] [у] [ы]

ç * р
[ĕ] [у] [ы]

т * п
[а] [ĕ] [у]

п * л
[ĕ] [и] [у] [ы]

**3.** (наушники) **Кирлĕ сас палли ларт. Пулнă сăмахсене вула.**

| | | | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | а | р | у | л | а | к | у | | п | у | | | и | л |
| | а | р | у | | а | к | у | | п | у | | | и | л |
| | а | р | у | | а | к | у | | п | у | | | и | л |

**4.** (наушники) **Предложенисенче кирлĕ сăмахсем ларт.**

1. Парта хушшине …
2. Дамира кĕнеке …
3. Ман пата хăнана …
4. Урамра … вĕрет.
5. Сывлăхлă … ! Телейлĕ … ! Вăйлă … !
6. Паян питĕ лайăх …

**Кирлĕ сăмахсем:** кил, кун, лар, пар, пул, çил.

2 стр.

**5.** (наушники) **Дамир хуравĕсене туп. [ӳ] сасăллă сăмаха палăртса вула.**

| Ыйтусем | Хуравсем |
|---|---|
| **1. Эсĕ хăш урамра пурăнатăн?** | 1. Математика, ӳнер. |
| 2. Эсĕ тутарла пĕлетĕн-и? | 2. Манăн кунта иккĕмĕш сыпăкри пичче пур. Эпир унпа питĕ туслă. |
| 3. Сана хăш предмет ытларах килĕшет? | 3. Пĕр «виççĕ». Литературăпа. |
| 4. Санăн Шупашкарта туссем пур-и? | 4. Тутарла та, чăвашла та, вырăсла та пĕлетĕп. |
| 5. Эсĕ социаллă тетелсенче пур-и? | 5. Пур. Манпа тетелте туслашма пултаратăр. |
| 6. Эсĕ мĕнле музыка итлетĕн? | **6. Николаев урамĕнче.** |
| 7. Санăн «виççĕсем» пур-и? | 7. Рок, рэп итлетĕп. |

**6.** (наушники) **Текста вула. Кирлĕ сăмахсем ларт.**

Эпĕ _______ облаçĕнче Сайман ялĕнче çуралнă. Пирĕн _______ чăвашсем те, тутарсем те пурăнаççĕ. Манăн атте — тутар. Вăл тухтăр пулса ______. Эпĕ унпа _______ калаçатăп. Манăн анне — чăваш. Вăл — бухгалтер. Эпĕ унпа чăвашла _______. Манăн шăллăм тата йăмăк пур. Шăллăм _______ вĕренет. _______ ача пахчине çӳрет. Эпĕ вĕсемпе чăвашла та, тутарла та калаçатăп.

Манăн кукаçипе ________ Шупашкарта пурăнаççĕ, çавăнпа эпир кунта пурăнма________. Мана Шупашкарта килĕшет.

**Кирлĕ сăмахсем**: ĕçлет, йăмăк, калаçатăп, кукамай, куçрăмăр, тутарла, Чĕмпĕр, шкулта, ялта.

**7.** (ручка) **Ху çинчен çыр.**

Эпĕ _______ çуралнă. Эпĕ ________ пурăнатăп. Эпĕ аттепе ________ калаçатăп. Эпĕ аннепе ________ калаçатăп. Манăн __________ (пичче, аппа, шăллăм, йăмăк, асанне, асатте, кукамай, кукаçи) пур. Мана ________ килĕшет.

**8.** (сундучок) **Хăвăрт кала. Хăвăрт каларăшсем мĕнле сасăсем калама вĕрентеççĕ?**

| | |
|---|---|
| Çĕпритун Çеменĕ çемçе çĕлĕк çĕлетнĕ. | Рис. 11. 50 х 50 (словно нарисован детской рукой) по сюжету скороговорки: на голове у него шапка-ушанка |

| | |
|---|---|
| Ӳркенчĕк ӳнерçĕ пĕчĕк ӳкерчĕк ӳкерчĕ. | Рис. 12. 50 х 50 (словно нарисован детской рукой) по сюжету скороговорки: Художник с ленцой нарисовал маленький рисунок. |

**Урок 11**
1 стр.
**Название раздела: ЭПĔ ТАТА МАНĂН ÇЕМЬЕ**
**Название урока: ЭСĔ МĔН ПУÇТАРАТĂН?**

(восклицательный знак)

Чăваш сăмахĕсенче уçă сасăсем хытă е çемçе пулаççĕ.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Хытă уçă сасăсем: | [а] | [ă] | [у] | [ы] |
| Çемçе уçă сасăсем: | [э] | [ĕ] | [ӳ] | [и] |

Сăмахра хытă уçă сасăсем çеç пулсан вăл хытă сăмах шутланать: вăрман, хула, юр. Сăмахра çемçе уçă сасăсем кăна пулсан вăл çемçе сăмах шутланать: хĕвел, ирхине, кӳлĕ.

Пĕрремĕш сыпăк хытă пулсан ытти сыпăксем те ытларах чухне хытă пулаççĕ. Пĕрремĕш сыпăк çемçе пулсан ытти сыпăксем те ытларах чухне çемçе пулаççĕ. Ку уçă сасăсен килĕшĕвĕн е **сингармонизм саккунĕ**.

**1.** (наушники) **Сăмахсене икĕ ушкăна пайла.**

Атăл, вăхăт, вĕрентекен, ĕнер, йывăр, кĕнеке, патшалăх, сăмах, çăлтăр, çемçе, çĕлĕк, тĕрлĕ, тинĕс, уçă, ӳнер, чăваш, Чĕмпĕр, хĕрринче, хупă, хытă.

| Хытă сăмахсем | Çемçе сăмахсем |
|---|---|
| Атăл, … | Вĕрентекен, … |

**2.** (ручка) **Çемçе сăмахсем ту.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| к | у | л | ă |
| к | | л | |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| к | ă | м | ă | л |
| к | | м | | л |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ш | у | т | л | а |
| ш | | т | л | |

| | | |
|---|---|---|
| х | ы | р |
| х | | р |

| | | | |
|---|---|---|---|
| с | ы | в | ă |
| с | | в | |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| в | ă | р | а | н |
| в | | р | | |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ч | ă | л | х | а |
| ч | | л | х | |

| | | |
|---|---|---|
| п | ы | л |
| п | | л |

**3.** (наушники) **Рольпе вула.**

| | | |
|---|---|---|
| Рис. 1.2 Алина<br>Эпĕ пукане пуçтаратăп. Манăн пуканесем валли уйрăм шкап пур. | Рис. 1.3. Асамат<br>Эпĕ тĕрлĕ укçа пуçтаратăп. Манăн килте пысăк коллекци пур: иена, юань, лира, евро, тенге, дирхам, франк. | Рис. 1.4. Ирина<br>Эпĕ йывăç тӳме пуçтаратăп. Манăн килте 100 ытла йывăç тӳме. Вĕсем тĕрлĕ тĕслĕ, тĕрлĕ формăллă. |
| Рис. 1.5. Тимук<br>Эпĕ ыран футбол мечĕкĕсем пуçтарма пуçласшăн. | Рис. 1.6. Улине<br>Эпир аппапа Антуан де Сент-Экзюперин «Пĕчĕк çеç принц» кĕнекисене пуçтаратпăр. Вĕсем тĕрлĕ чĕлхепе: акăлчанла, нимĕçле, вырăсла, чăвашла. | Рис. 1.7. Юман<br>Эпир аттепе тĕрлĕ чул пуçтаратпăр. Пирĕн коллекцире гранит, малахит, кварц чулсем пур. |

2 стр.
**4.** (земной шар) **Пĕлме кăсăклă.**

Коллекционер тĕрлĕ япала пуçтарать. Аристотель пĕрремĕш коллекционерсенчен пĕри шутланать. Вăл ӳсен-тăран пуçтарнă. Пĕрремĕш Петĕр коллекцийĕнче кайăк-кĕшĕк, хурт-кăпшанкă пулнă. Юрий Гагарин та тĕрлĕ кактус коллекциленĕ. Марина Карягина тĕве теттесем пуçтарать.

**5.** (ручка) **Вĕçле**.

Аристотель — …
Пĕрремĕш Петĕр — …
Юрий Гагарин — …
Марина Карягина — …

**Кирлĕ сăмахсем:** вырăс патши, чăваш çыравçи, тĕнчери пĕрремĕш космонавт, Авалхи Греци философĕ.

**6.** (наушники) **Хуравла. Каласа пар.** (Ответь. Перескажи)

| | |
|---|---|
| 1. Ку **кам**?<br>2. Вăл **кам** пулнă?<br>3. Павел Третьяков **ăçта** çуралнă?<br>4. Вăл **хăçан** çуралнă?<br>5. Вăл **мĕн** пуçтарнă?<br>6. Павел Третьяков **миçе** çулта картинăсем пуçтарма пуçланă?<br>7. Третьяков хăйĕн коллекцине **хăш** хулана парнеленĕ?<br>8. Вăл хăй картинăсем ӳкернĕ-**и**?<br>9. Мускавра ун ячĕпе **мĕн-мĕн** пур? | Рис. 13 50 х 50 портрет мецената-коллекционера Павла Михайловича Третьякова. |

**Кирлĕ сăмахсем:** 28 çулта; ӳкермен; коллекционер; Мускав хулине; картинăсем; Павел Михайлович Третьяков; Мускавра; палăк, галерея, урам; 1832 çулта.

**7.** (наушники) **Хуравла. Кам мĕн пуçтарать? Тĕрĕс çыхăнтар.**

| | |
|---|---|
| Гербарист | почта маркисем пуçтарать. |
| Нумизмат | значоксем, медальсем пуçтарать. |
| Фалерист | укçа пуçтарать |
| Филателист | типĕтнĕ ӳсен-тăран пуçтарать. |

**8.** (наушники) **Хуравла. Эсĕ мĕн те пулин пуçтаратăн-и?**

**Урок 12**
1 стр.
**Название раздела: ЭПĔ ТАТА МАНĂН ÇЕМЬЕ**
**Название урока: ЭПИР ВУЛАМА ЮРАТАТПĂР**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| **В, й, л, м, н, р** сас паллисем **ялан янăравлă** хупă сасăсене палăртаççĕ. Вĕсем ялан янăравлă илтĕнеççĕ: яла[**в**], [**в**]ăрман, ха[**в**]аслă.<br>**К, п, с, ç, т, х, ч, ш** сас паллисем **шавлă** хупă сасăсене палăртаççĕ.<br>**Б, г, д, ж, з, ф, ц, щ** сас паллисем вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче тĕл пулаççĕ: блокнот, гитара, диван, журнал, зебра, фабрика, цирк, щётка. |

**1.** (ручка) **Ялан янăравлă хупă сас палли лартса çыр.**

Йы__ăç тӳме, тĕр__ĕ чул, уй__ăм шкул, тĕ__е тетте, типĕт__ĕ ӳсен-тăран, пĕрре__ĕш коллекционер, а__алхи философ, ху__т-кăпшанкă, вы__ăс патши, чă__аш сăвăçи.

**2.** (ручка) **Тупсăмне туп. Мĕнле шавлă хупă сасăсемпе усă куртăн?**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 | Вăл шывра ишет. Ăна вăлтапа тытаççĕ. | | у | л | ă |
| 2 | Ăна хĕр ачасем алла тăхăнаççĕ. Вăл питĕ хитре. | | у | л | ă |
| 3 | Вăл уйра ӳсет. Унран çăнăх тăваççĕ, çăкăр пĕçереççĕ. | | у | л | ă |
| 4 | Ăна савăнăçлă пит çинче курма пулать. | | у | л | ă |

**3.** (ручка) **Сăмахсене икĕ ушкăна пайла.**

1. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем: багаж, …
2. Чăваш сăмахĕсем: вăрман, …

Багаж, банк, бинокль, борщ, велосипед, вăрман, жираф, завод, магазин, палăк, пукан, сĕтел, футбол, циркуль, чӳрече, ялав.

**4.** (наушники) **Вула. Хуравла. Улинен юратнă кĕнеки мĕн ятлă?**

Пирĕн çемьере пурте кĕнеке вулама юратаççĕ. Килте хамăрăн библиотека пур. Кĕнекесене асаттепе асанне пуçтарма пуçланă. Пирĕн чи юратнă кĕнеке «Пĕчĕк çеç принц» ятлă. Ăна пире пĕчĕк чух анне çывăрас умĕн вуласа панă. Ку повеçе француз çыравçи Антуан де Сент-Экзюпери çырнă. Ăна 300 ытла чĕлхене куçарнă. Эпир аппапа çак кĕнекесене пуçтарма пуçларăмăр. Пирĕн коллекцире 17 чĕлхене куçарнă кĕнеке. Вĕсен шутĕнче чăвашли те пур.

Начиная с 1 стр. переходим на 2 стр.

**5.** (маски) **Пĕчĕк принц çинчен рольпе вула. Палăртнă сăмахсенче миçе усă сасă? Миçе хупă сасă?**

| | |
|---|---|
| Тилĕ килнĕ.<br>— Салам, — тенĕ вăл.<br>— Салам, — **сăпайлăн** хуравланă Пĕчĕк принц. Вăл **çаврăнса** пăхнă, анчах никама та курман.<br>— Эпĕ кунта, — илтĕннĕ сасă. — **Улмуççи** айĕнче…<br>— Эсĕ кам? — ыйтнă Пĕчĕк принц. — Эсĕ **çав тери** хитре!<br>— Эпĕ Тилĕ, — тенĕ Тилĕ.<br>— Манпа выля-ха, — тенĕ Пĕчĕк принц. — Мана питĕ кичем…<br>— Эпĕ санпа **выляймастăп**, — тенĕ Тилĕ. — Мана алла вĕрентмен.<br>— Каçар эппин, — тенĕ Пĕчĕк принц. Кăшт шухăшласан ыйтнă: — Алла мĕнле вĕрентеççĕ?<br>— Эсĕ кунтан мар, — **тавçăрса илнĕ** Тилĕ. — Эсĕ кунта мĕн шыратăн?<br>— Çынсене шыратăп, — тенĕ Пĕчĕк Принц. — Алла | Рис. 14 50 х 50 Маленький принц и Лис |

| | |
|---|---|
| мĕнле вĕрентеççĕ?<br>— Çынсем килте чăх тытаççĕ. Эсĕ чăх шыратăн-и?<br>— Шырамастăп. — Эпĕ туссем шыратăп. — Алла мĕнле вĕрентеççĕ?<br>— Пĕр-пĕринпе **çыхăну** тытаççĕ.<br>— Çыхăну тытаççĕ-и?<br>— Çапла, — тенĕ Тилĕ. Хальлĕхе эсĕ маншăн пĕчĕк арçын ача кăна. Сан пек арçын ача çĕр пин. Эсĕ мана кирлĕ мар. Эпĕ те сана кирлĕ мар. Эпĕ саншăн тилĕ кăна. Ман пек тилĕ те çĕр пин. Эсĕ мана алла вĕрентсен эпир пĕр-пĕрне кирлĕ пулатпăр. Тĕнчере эсĕ маншăн пĕртен-пĕрре пулатăн… Эпĕ те саншăн тĕнчере пĕртен-пĕрре пулатăп.<br>(Антуан де Сент-Экзюперин «Пĕчĕк çеç принц» повеçĕ тăрăх) | |

| | |
|---|---|
| **Сăпайлăн кала** — шăппăн тата хитре кала.<br>**Çаврăнса пăх** — каялла пăх.<br>**Улмуççи** — пан улми йывăççĕ.<br>**Çав тери** — питĕ. | **Выляймастăп** — манăн выляма май çук.<br>**Тавçăрса ил** — ăнланса ил.<br>**Çыхăну тыт** — пĕр-пĕринпе хутшăн. |

Р а м к и у б р а т ь !

**4.** (наушники) **Хуравла. Тĕрĕс-и? Тĕрĕс мар-и?**

1. Пĕчĕк принцпа Тилĕ калаçнă.
2. Тилĕ хурăн айĕнче пулнă.
3. Тилĕ Пĕчĕк принцпа выляна.
4. Пĕчĕк принц чăхсем шыранă.
5. Хальлĕхе Пĕчĕк принц Тилле алла вĕрентмен-ха.
6. Хальлĕхе Тилĕшĕн Пĕчĕк принц пек арçын ача тĕнчере пĕрре.
7. Хальлĕхе Пĕчĕк принцшăн Тилĕ пек тилĕ тĕнчере çĕр пин.

**Урок 13**
1 стр.
**Название раздела: ЭПĔ ТАТА МАНĂН ÇЕМЬЕ**
**Название урока: ЮРАТНĂ КĔНЕКЕ**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Уçă сасăсем хытă тата çемçе пулаççĕ. **[а], [ă], [у], [ы] —** хытă уçă сасăсем, **[ĕ], [и], [ÿ], [э]** — çемçе уçă сасăсем. Хупă сасăсем çемçе уçă сасăсемпе юнашар тăнă чухне çемçен илтĕнеççĕ: хĕвел, кил, пÿрт. |

**1.** (наушники) **Тĕрĕс вула.**
Кулă — кÿлĕ, хура — хÿре, шутла — шÿтле, сывă — сивĕ, карман — кермен, хыр — хир, алăк — ĕлĕк, пылак — пиллĕк.

**2.** (наушники) **Тĕрĕс вула. Танлаштар**.

| Вырăсла | Чăвашла |
|---|---|
| Пил (ĕçнĕ) | Пил (чĕр чун) |
| Ил (юшкăн) | Ил (тыт) |
| Мел (пурă) | Мел (меслет) |

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Хупă сасăсен çемçелĕхне **ь** (çемçелĕх палли) палăртать: каять, вулать. |

**3.** (ручка) **Таблицăна тултар.**

Мĕн тăвать?

<table>
<tr><td></td><td></td><td></td><td rowspan="5">ет</td></tr>
<tr><td></td><td></td><td></td></tr>
<tr><td></td><td></td><td></td></tr>
<tr><td></td><td></td><td></td></tr>
<tr><td></td><td></td><td></td></tr>
</table>

<table>
<tr><td></td><td></td><td></td><td rowspan="5">ать</td></tr>
<tr><td></td><td></td><td></td></tr>
<tr><td></td><td></td><td></td></tr>
<tr><td></td><td></td><td></td></tr>
<tr><td></td><td></td><td></td></tr>
</table>

**Кирлĕ сăмахсем:** кил, лар, пăх, пер, пĕл, сик, çыр, тăр, чĕн, чуп.

**4.** (наушники) **Ӳкерчĕксемпе усă курса предложенисене вĕçле.**

<table>
<tr><td>Рис. 15-1 (сюжет из Маленького принца)<br>1. Король на троне на своей планете.</td><td>Рис. 15-2 (сюжет из Маленького принца)<br>2. Честолюбец на своей планете.</td><td>Рис. 15-3 (сюжет из Маленького принца)<br>3. Пьяница</td><td rowspan="2">Рис. 15-7 (сюжет из Маленького принца)<br>7. Летчик, который нарисовал барашка.</td></tr>
<tr><td>Рис. 15-4 (сюжет из Маленького принца)<br>4. Деловой человек</td><td>Рис. 15-5 (сюжет из Маленького принца)<br>5. Фонарщик</td><td>Рис. 15-6 (сюжет из Маленького принца)<br>6. Географ</td></tr>
</table>

2 стр.
1. Пĕрремĕш планета çинче патша пурăнать. Вăл …
2. Иккĕмĕш планета çинче чапа юратакан çын пурăнать. Вăл …
3. Виççĕмĕш планета çинче эрех ĕçекен çын пурăнать. Вăл …
4. Тăваттăмĕш планета çинче ĕçлĕ çын пурăнать. Вăл …
5. Пиллĕкмĕш планета çинче хунарçă пурăнать. Вăл …
6. Улттăмĕш планета çинче географ пурăнать. Вăл …
7. Çиччĕмĕш планета çинче вĕçевçĕ пурăнать. Вăл …

**Чапá юратакáн** — мухтава юратакан.
**Эрéх** — алкоголь.
**Вĕçéвçĕ** — пилот, самолётпа вĕçекен çын.

**Кирлĕ сăмахсем:** а) çул çӳревсем çинчен кĕнеке çырать; ă) Пĕчĕк принц валли сурăх путекĕ ӳкерет; б) хăйне мухтасан савăнать; в) эрех ĕçме юратать; г) тĕрлĕ ĕç

хушма юрататъ; д) ирхине хунарсене сӳнтерет, каçхине çутать; е) çăлтăр шутлама юрататъ.

**5.** (наушники) **Хуравла**. **Улине мĕнле хуравсем панă-ши?**

1. Пĕчĕк çеç принц ăçта пурăнать? (пуш хирте, астероид çинче, вăрманта)
2. Çак планета çинче мĕн-мĕн пур? (кĕлчечек, кӳлĕ, виçĕ вулкан, палăк, хула)
3. Ирхине вăл мĕн-мĕн тăвать? (чей ĕçет, планетăна тасататъ, ручка шыратъ, кĕлчечеке пăхатъ, ташлатъ)
4. Пĕррехинче ăçта каятъ? (çӳл çӳреве, кинона, хăнана, асламăшĕ патне)
5. Çул çӳреврe кама-кама тĕл пулатъ? (тилле, патшана, эрех ĕçекене, мулкача, хунар çутакана, вĕçевçе, ĕçлĕ çынна, географа, чапа юратакана)
6. Тилĕ Пĕчĕк çеç принца мĕн-мĕн каланă-ши? (Сана мĕн кирлĕ? Эсĕ мана алла вĕрентсен эпир пĕр-пĕрне кирлĕ пулатпăр. Кам шыратъ, çав тупатъ.)

**6.** (наушники) **Хуравла. Улинен çемйинче кам мĕнле кĕнеке вулатъ?**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Рис. 16-1<br>50 х 50<br>Обложка книги Дианы Уинн Джонс «Ходячий замок»<br><br>Пиччĕшĕ | Рис. 16-2<br>50 х 50<br>Обложка книги Марка Твена «Приключения Тома Сойера»<br><br>Шăллĕ | Рис. 16-3<br>50 х 50<br>Обложка книги Владислава Крапивина «Трое с площади Карронад»<br><br>Ашшĕ | Рис. 16-4<br>50 х 50<br>Обложка книги Владимира Железникова «Чучело»<br><br>Амăшĕ | Рис. 16-5<br>50 х 50<br>Обложка книги Льюиса Кэрролла «Алиса в Стране чудес»<br><br>Йăмăкĕ | Рис. 16-6<br>50 х 50<br>Обложка книги Марины Карягиной на чувашском языке «Ылтăн пан улми» («Золотое яблоко»)<br><br>Асламăшĕ |

**5.** (маски) **Мăшăрпа ĕçле.**

1.
— Эсĕ мĕнле кĕнеке вуланă?
— Эпĕ …. кĕнекине вуланă.
— Вăл хулăн-и? Çӳхе-и?
— Вăл …

2.
— Санăн юратнă кĕнекӳ мĕн ятлă?
— Манăн юратнă кĕнеке … ятлă.
— Унăн авторĕ кам?
— Унăн авторĕ … .

**Урок 14**
1 стр.
**Название раздела: ЭПĔ ТАТА МАНĂН ÇЕМЬЕ**
**Название урока: АСАННЕ, АН ПĂШĂРХАН!**

(восклицательный знак)

Сăмах сыпăксенчен тăратъ. Сыпăксенчен пĕрне вăйлăрах каланине **пусăм** теççĕ.
- ✓ Сăмахра [ă], [ĕ] сасăсем çук пулсан пусăм яланах юлашки сыпăк çине ӳкет.
- ✓ Сăмахра [ă], [ĕ] сасăсем кăна пулсан пусăм яланах пĕрремĕш сыпăк çине ӳкет.
- ✓ Сăмахра [ă], [ĕ] сасăсем те, ытти уçă сасăсем те пулсан пусăм [ă], [ĕ] сасăсемсĕр юлашки сыпăк çине ӳкет.

**1.** (ручка) **Çак сăмахсенче пусăм ларт.**

А. Авалхи, апат, ачасем, патша, улмуççи, урамра, хуравсем, шкулта, чечек, чӳрече.
Ă. Ăшă, вăрăм, вăхăт, ĕмĕр, кăмăл, кăсăклă, сăвăçă, çăлтăр, тĕрĕс, тĕрлĕ, шăппăн.
Б. Атăл, вĕçевçĕ, ĕне, кĕлчечек, кĕнеке, сурăх, сылтăм, сыпăк, тилĕ, хулăн, хунарçă.

**2.** (наушники) **Текстри палăртнă сăмахсен пусăмне вайлатса вула.**

Асамат **асламăшĕ** ялта пурăнать. Вăл **Укахви** ятлă. Укахви аппа **утмăл тăвату** çулта. Унăн **хуçалăхĕ** пысăк. Вăл ĕне, сурăх, чăх-чĕп **тытать**, пахча çимĕç **ӳстерет**. Унăн Интернетра **хăйĕн** влогĕ пур. Влог «Укахви пахчи» ятлă. Унта вăл пахча çимĕç ӳстерме вĕрентет, тĕрлĕ **сĕнӳ** парать. Асамат час-часах асламăшĕ патне çӳрет.

**3.** (наушники) **Диалог йĕркеле.**

| | |
|---|---|
| – …<br>– Салам! Итлетĕп, асанне.<br>– …<br>– Телефон кутамккара пулнă. Илтмен.<br>– …<br>– Канашран иртсе кайрăмăр.<br>– …<br>– Çисе тухрăм.<br>– …<br>– Тăхăнтăм.<br>– …<br>– Илтĕм, ан пăшăрхан. | Рис. 17 50 х 50 Асамат говорит по телефону (лицо Асамата со смартфоном) |

**Кирлĕ предложенисем:** 1. Эсĕ ăçта çитрĕн? 2. Асамат, салам! 3. Кишĕр вăрри илтĕн-и? 4. Ăшă калпак тăхăнтăн-и? 5. Мĕншĕн телефон тытмастăн? 6. Апат çисе тухрăн-и?

2 стр.
**4.** (наушники) **Асламăшĕ Асамата мĕнле сĕнӳсем парать-ши? Тĕрĕс çыхăнтар.**

8 схематических рисунков-карточек предметов 50 х 50 (советы бабушки внуку)

| | | | |
|---|---|---|---|
| Рис. 18_1 50 х 50<br>1. <u>Пятерка</u><br>(Старайся хорошо учиться!) | Рис. 18_2 50 х 50<br>2. <u>Тарелка с горячим супом</u><br>(еще горячее!) | Рис. 18_3 50 х 50<br>3. <u>Чувашская буква «Ă»</u><br>(Дорожи именем народа!) | Рис. 18_4 50 х 50<br>4. <u>Силуэт родителей</u><br>Слушайся родителей! |
| Рис. 18_5 50 х 50<br>5. <u>Два больших пальца в значении «Хорошо»</u><br>(Уважай других)! | Рис. 18_6 50 х 50<br>6. <u>шапка (не ушанка!)</u><br>Не забудь одеть шапку! | Рис. 18_7 50 х 50<br>7. <u>Деньги</u><br>(держи аккуратно!) | Рис. 18_8 50 х 50<br>8. <u>Телефон</u><br>(Время от времени позванивай) |

**Асламăшĕн сĕнĕвĕсем:** 1. Укçуна перекетле! 2. Аçу-аннӳне итле! 3. Çынпа лайăх пул! 4. Калпак тăхăнма ан ман! 5. Тăрăшса вĕрен! 6. Хушăран шăнкăравла! 7. Чăваш ятне ан яр! 8. Вĕри апат çи!

**5.** (наушники) **Асамат мĕн хуравланă-ши? Тĕрĕс çыхăнтар.**

**Асамат хуравĕсем:** 1. Паллах, итлетĕп. 2. Эпĕ чăваш пулнишĕн савăнатăп. 3. Пĕлетĕп, вĕри апат усăллă. 4. Перекетлетĕп. Ноутбук валли пухатăп. 5. Эпĕ пур çынпа та туслă пурăнатăп. 6. Манăн капюшон пур. 7. Эпĕ «пиллĕк» паллă юрататăп. 8. Кашни кун шăнкăравлатăп.

**6.** (диск) **Атьăр юрлатпăр.**

**Асанне, ан пăшăрхан!**

1. Асанне пăшăрханать,
«Кирлĕ» сĕнӳсем парать:
«Тулта çумăр, сивĕ çил,
Калпак тăхăн, сунчăк ил».

Хушса юрламалли:

Асанне, ан пăшăрхан,
Веçех лайăх пулать ман.
Асанне, ан пăшăрхан,
Веçех лайăх пулать ман.

2. Асанне пăшăрханать,
«Кирлĕ» сĕнӳсем парать:
«Ан çухат телефонна,
Хушăран шăнкăравла».

Хушса юрламалли.

3. Асанне пăшăрханать,
«Кирлĕ» сĕнӳсем парать:
«Аçу-аннӳне итле,
Укçуна перекетле».

Хушса юрламалли.

4. Асанне пăшăрханать,
«Кирлĕ» сĕнӳсем парать:
«Лайăх вĕрен, пĕлӳ ил,
Каникулта яла кил!»

**Урок 15**
1 стр.
**Название раздела: ЭПĔ ТАТА МАНĂН ÇЕМЬЕ**
**Название урока: ÇЕМЬЕРИ ЙĂЛАСЕМ**

(восклицательный знак)

Япала ятне, паллă ятне, хисеп ятне ылмаштаракан пуплев пайне местоимени теççĕ.
Сăпат местоименийĕсем япалана сăпат тăрăх кăтартаççĕ. Ку ушкăна çак местоименисем кĕреççĕ: **эпĕ, эсĕ, вăл**. Вĕсем нумайлă хисепре пулаççĕ: **эпир, эсир, вĕсем**.

**1.** (ручка) **Таблицăна тултар.**

| Падежсем | Ыйтусем | Пĕрреллĕ хисеп | Ыйтусем | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|---|---|

| Тĕп | кам? | эпĕ | эсĕ | камсем? | эпир | эсир |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Камăнлăх | кам**ăн**? | манăн | | кам**сен**? | | сирĕн |
| Пару | кам**а**? | | сана | кам**сене**? | пире | |
| Вырăн | кам**ра**? | | | кам**сенче**? | | сирĕнте |
| Туху | кам**ран**? | манран | | кам**сенчен**? | пирĕнтен | |
| Пĕрлелĕх | кам**па**? | | санпа | кам**семпе**? | | сирĕнпе |
| Çуклăх | кам**сăр**? | | | кам**семсĕр**? | пирĕнсĕр | |
| Пирке | кам**шăн**? | | | кам**семшĕн?** | | сирĕншĕн |

Х у ш с а  к а л а н и. Хуравсене кĕнеке вĕçĕнчи таблицăпа танлаштар.

**2.** (наушники). **Атнер çемйиинчи йăласемпе паллаш. Сирĕн çемьере мĕнле йăласем пур? Местоименисем туп. Вĕсен ыйтăвĕсене палăрт.**

| | | |
|---|---|---|
| 1. Эпир пĕрле апатла-натпăр. | 2. Эпир канмалли кунсенче асаттепе асанне патне çӳретпĕр. | 3. Эпир Çĕнĕ çула пĕрле кĕтсе илетпĕр. |
| 4. Эпир пурте пĕр-пĕрне алăк патĕнче кĕтсе илетпĕр, ыталатпăр. | **Пирĕн çемьери йăласем** | 5. Эпир çемйипех сĕтел вăййисем выляма юра-татпăр. |
| 6. Эпир тутлă апат-çимĕçе пурин валли те пĕр пек пайлатпăр. | 7. Эпир эрнере пĕрре пĕрле пĕр-пĕр фильм пăхатпăр, кайран ăна сӳтсе яватпăр. | 8. Эпир кĕркунне çемйипех çĕр улми пуçтарма каятпăр. |

2 стр.
**3.** (наушники) **Текста вула. Местоименисем туп.**

Чăваш Енре паллă йăх пур. Вăл Фомиряковсен йăхĕ. Вĕсен шутĕнче: ӳнерçĕсем, спортсменсем, патшалăх ĕçченĕсем, музыкантсем, алă ăстисем, **усламçăсем**. Вĕсем çулталăкра виççĕ Шупашкар районĕнчи Чаканар ялĕнче пуçтарăнаççĕ, спорт ăмăртăвĕсем ирттереççĕ. Хĕлле йĕлтĕрпе ăмăртаççĕ, турник çинче туртăнаççĕ, çулла чупаççĕ, тăршшĕне сикеççĕ, диск ывăтаççĕ, ишеççĕ, кире пуканĕ йăтаççĕ. Юлашки вăхăтра шашкăлла та выляççĕ, кĕрешеççĕ те. Çак турнира Фомиряковсен 200 ытла тăванĕ хутшăнать. Çĕнтерӳçĕсем валли ятарлă кубоксем пур. Спортсменсен ячĕсене тата рекорчĕсене кун-çул кĕнекине çыраççĕ.

Ăмăртусене Фомиряковсем 50 çул ытла ирттереççĕ. Çак йăла вĕсене пĕрлештерет. Вĕсем хăйсен тăванĕсене çиччĕмĕш сыпăк таран пĕлеççĕ.

**Йăх** — тăвансем, пĕр çемьерен тухнă çынсем.
**Усла́мçă** — бизнес çынни.
**Кире́ пука́нĕ** — спорт инвентарĕ, ăна пĕр алăпа йăтаççĕ.

**4.** (наушники) **Текста ят пар.**

1. Фомиряковсен çемйин йăли. 2. Чаканар ялĕнче. 3. 200 ытла тăван.

**5.** (ручка) **Тӗрӗс ҫыхӑнтар.**

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Паллӑ | | йӑхӗ | | турник ҫинче | | сикеҫҫӗ |
| Фомиряковсен | | ӑсти | | тӑршшӗне | | ирттереҫҫӗ |
| Патшалӑх | | районӗ | | диск | | йӑтаҫҫӗ |
| Алӑ | | ялӗ | | кире пуканӗ | | ҫыраҫҫӗ |
| Шупашкар | | ӑмӑртӑвӗ | | шашкӑлла | | пӗлеҫҫӗ |
| Чаканар | | ярӑнаҫҫӗ | | кун-ҫул кӗнеки | | туртӑнаҫҫӗ |
| Спорт | | ӗҫченӗ | | 50 ҫул ытла | | выляҫҫӗ |
| Йӗлтӗрпе | | йӑх | | 7-мӗш сыпӑк таран | | ывӑтаҫҫӗ |

**6.** (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

1. Фомиряковсен йӑхӗнче мӗнле професси ҫыннисем пур?
2. Вӗсем ҫулталӑкра виҫҫӗ ӑҫта пуҫтарӑнаҫҫӗ?
3. Чаканар ялӗнче мӗн ирттереҫҫӗ?
4. Ӑмӑртусенче мӗн-мӗн тӑваҫҫӗ?
5. Ҫак турнира миҫе тӑванӗ хутшӑнать?
6. Ҫӗнтерӳҫӗсем валли мӗнсем пур?
7. Спортсменсен ячӗсене ӑҫта ҫыраҫҫӗ?
8. Ӑмӑртусене Фомиряковсем миҫе ҫул ирттереҫҫӗ?
9. Ҫак йӑла вӗсене мӗнпе пулӑшать?
10. Вӗсем хӑйсен тӑванӗсене миҫемӗш сыпӑк таран пӗлеҫҫӗ?

**Урок 16**
1 стр.
**Название раздела: ЭПӖ ТАТА МАНӐН ҪЕМЬЕ**
**Название урока: ҪӐВӐНМАЛЛИ ПӲЛӖМРЕ**

(восклицательный знак)

Мӗнле тӗллевпе каланине кура предложенисем икӗ ушкӑна пайланаҫҫӗ: ыйтусӑррисем тата ыйтуллисем. Содержанине кура ыйтусӑр предложенисем калуллӑ е хистевлӗ пулаҫҫӗ.
Ыйтуллӑ предложенире вара яланах мӗнле те пулин ыйту пур. Чӑваш чӗлхинче ыйтӑва **кам? мӗн? миҫе? ӑҫта? хӑҫан?** тата ытти ыйту сӑмахӗсемпе е **- и, - ши** ыйту татӑкӗсемпе палӑртаҫҫӗ.

**1.** (ручка) **Палӑртнӑ сӑмахсем вырӑнне ӑҫта? кам? мӗн тӑвать? миҫе? хӑҫан? ыйтусем лартса ыйтуллӑ предложенисем ту.**

**Аппа** ирхине ҫӑвӑнмалли пӳлӗмре пӗр сехет ҫӑвӑнать.
Аппа **ирхине** ҫӑвӑнмалли пӳлӗмре пӗр сехет ҫӑвӑнать.
Аппа ирхине **ҫӑвӑнмалли пӳлӗмре** пӗр сехет ҫӑвӑнать.
Аппа ирхине ҫӑвӑнмалли пӳлӗмре **пӗр** сехет ҫӑвӑнать.
Аппа ирхине ҫӑвӑнмалли пӳлӗмре пӗр сехет **ҫӑвӑнать**.

**2.** (наушники) **Рольпе вула. Ыйтуллă, калуллă, хистевлĕ предложенисем туп.**
рис. 19 140 х 100
Семья Атнера. На рисунке 4 человека. В ванной, не спеша, феном выпрямляет волосы старшая сестра Атнера Вера. Рядом с ванной комнатой стоит мама, за ней — папа, и самый последний — Атнер. Персонажи подписать. Все ждут своей очереди попасть в ванную комнату. Над каждым реплика:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Паян шкула тем тесен те калпаксăр каятăп. (Я сегодня в школу, что ни говорили, пойду без шапки) | Мĕн тăвать-ши вăл унта? (Чем же она там занимается?) | Кун пек ĕç тухмасть. Хĕрĕм,васкарах çăвăн! (Так дело не пойдет. Доченька, быстрее умывайся) | Эпĕ каллех шкула кая юлатăп ĕнтĕ. (Я опять в школу опоздаю) |
| Вера | амăшĕ (мама) | ашшĕ (отец) | Атнер |

2 стр.
**3.** (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

1. Ӳкерчĕкри ĕç хăçан пулса иртет?
2. Çăвăнмалли пӳлĕмре кам?
3. Вăл мĕн тăвать?
4. Çăвăнмалли пӳлĕм умĕнче кам-кам тăрать?
5. Вĕсем мĕн тăвасшăн-ши?
6. Сан шутпа, ӳкерчĕкри ĕç кашни кун пулать-и?
7. Сирĕн çемьере çăвăнмалли пӳлĕме черет пур-и?
8. Сирĕн çемьере кам пĕрремĕш çывăрса тăрать?

**4.** (наушники) **Хуравла.**

| | | |
|---|---|---|
| 1. Мĕншĕн тесен лифт чарăнса ларнă. | 2. Мĕншĕн тесен йытăран тарнă. | 3. Мĕншĕн тесен автобус вăхăтра килмен. |
| 4. Мĕншĕн тесен хваттер уççине шыранă. | **Атнер шкула мĕншĕн кая юлнă?** | 5. Мĕншĕн тесен çăвăнмалли пӳлĕме черет тăнă. |
| 6. Мĕншĕн тесен поликлиникăна кайнă. | 7. Мĕншĕн тесен чи кайран çывăрса тăнă. | 8. Йăмăкне ача пахчине ăсатнă. |

**5.** (наушники) **Калуллă предложенисем йĕркеле.**

| **Кампа?** | **Кам?** | **Хăçан?** | **Ăçта?** | **Мĕн тăваççĕ?** |
|---|---|---|---|---|
| аттепе | | каçхине | | спектакль пăхаççĕ |
| | кукамай | | хулара | пурăнаççĕ |
| асаттепе | асанне | çулла | | канаççĕ |
| шăллăмпа | | кăнтăрла | ача пахчинче | |
| | пичче | | | баскетболла выляççĕ |

**Кирлӗ сӑмахсем**: анне, аппапа, йӑмӑк, канмалли кун, кӑнтӑрта, кукаҫипе, спортзалта, театрта, ҫывӑраҫҫӗ, хӗлле.

**6.** (наушники) **Хавхалантаракан сӑмахсемпе паллаш. Хистевлӗ предложени туп.**

| | |
|---|---|
| ✓ Маттур!<br>✓ Савӑнтартӑн пире!<br>✓ Эпир санпа мухтанатпӑр!<br>✓ Питӗ лайӑх!<br>✓ Ман шанӑҫа тӳрре кӑлартӑн!<br>✓ Вӑйлӑ! | ✓ Эсӗ чи-чи…<br>✓ Малашне те ҫакӑн пек пул!<br>✓ Тӑрӑшсан пулать!<br>✓ Тумла та чула шӑтарать!<br>✓ Мӗн тери чаплӑ ӗҫ!<br>✓ Тӗлӗнмелле! |

**7.** (наушники) **Хуравла. Сана мӗнле сӑмахсемпе хавхалантараҫҫӗ?**

— Сана аҫупа аннӳ (асласупа асаннӳ, кукаҫупа кукаму, пӗр тӑвансем, вӗрентекенсем, тусу-юлташу мӗнле сӑмахсемпе хавхалантараҫҫӗ?
— Мана аттепе анне ҫак сӑмахсемпе хавхалантараҫҫӗ: …

**Урок 17**
1 стр.
**Название раздела: ЭПӖ ТАТА МАНӐН ҪЕМЬЕ**
**Название урока: ХӐВНА ТӖРӖСЛЕ**

**1.** (ручка) **Хуравла.**

| Темӑсем | Баллсем | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1. Уҫӑ сасӑсем | 10 | 20 | 30 | 40 |
| 2. Хупӑ сасӑсем | 10 | 20 | 30 | 40 |
| 3. Ялан янӑравлӑ хупӑ сасӑсем | 10 | 20 | 30 | 40 |
| 4. Шавлӑ хупӑ сасӑсем | 10 | 20 | 30 | 40 |

Ыйтусем.
**1. Уҫӑ сасӑсем.**
10 балл. — **Кӗнекесем** сӑмахра миҫе уҫӑ сасӑ?
20 балл. — Чӑваш чӗлхинче миҫе уҫӑ сасӑ?
30 балл. — **К_шак, м_нча, к_тамкка, _па** сӑмахсенче мӗнле уҫӑ сасӑ ҫухалнӑ?
40 балл. — Мӗнле уҫӑ сасӑ вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ сӑмахсенче кӑна тӗл пулать?

**2. Хупӑ сасӑсем.**
10 балл. — **Ҫанталӑк** сӑмахра миҫе хупӑ сасӑ?
20 балл. — Хупӑ сасӑсем мӗнле икӗ ушкӑна пайланаҫҫӗ?
30 балл. — Хупӑ сасӑсене мӗнле тӑватӑ уҫӑ сасӑ ҫемҫетет?
40 балл. — Мӗнле хупӑ сасӑсене вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ?

**3. Ялан янăравлă хупă сасăсем.**
10 балл. — **Вĕрентекен** сăмахра миçе янăравлă хупă сасă?
20 балл. — Чăваш чĕлхинче миçе ялан янăравлă хупă сасă?
30 балл. — **_ăрман, чă_аш, яла_** сăмахсенче мĕнле ялан янăравлă хупă сасă çухалнă?
40 балл. — Вырăс чĕлхинче мĕнле ялан янăравлă хупă сасă çук?

**4. Шавлă хупă сасăсем.**
10 балл. — **Республика** сăмахра миçе шавлă хупă сасă?
20 балл. — Чăваш чĕлхинче миçе шавлă хупă сасă?
30 балл. — **Чече_, пу_ане, _ил** сăмахсенче мĕнле хупă сасă çухалнă?
40 балл. — Хăш сăмахра [к] шавлă хупă сасă янăрамасть: мулкач, пукан, тăваткал/

2 стр.
**2.** (ручка) **Ача-пăча кулăшне вула. Текст айĕнчи ĕçсене пурнăçла.**

**Эпĕ Америка уçман**

5-мĕш класра географи урокĕ пырать. Вĕрентекен Колумб çинчен каласа парать. Арланов Артём чӳречерен пăхса ларать, урок итлемест. Пуçне парттă çине хурать те çывăрса каять. Вĕрентекен Артём умне пырать те ыйтать:
— Арланов, Америкăна кам уçнă?
Артём шарт! сиксе вăранса каять:
— Эпĕ Америка уçман, – тет.

1. Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсем туп.
2. Пилĕк сыпăкран тăракан сăмаха туп.
3. Пусăм пĕрремĕш сыпăк çине ӳкекен виçĕ сăмах туп.
4. Сăпат местоименийĕ туп.
5. Иккĕмĕш предложение çырса ил. Янăравлă илтĕнекен шавлă хупă сасăсене аялтан турт.

**3.** (ручка) **Сăмахсене икĕ ушкăна пайла.**

Ăмăрту, вăхăт, вĕçевçĕ, ĕçчен, ирттер, ирхине, йăла, йăх, кĕлчечек, патша, пӳлĕм, сехет, çăвăн, тар, тăван, тĕве, тĕнче, тилĕ, усламçă, ӳнерçĕ, чĕлхе, хунарçă.

| Хытă сăмахсем | Çемçе сăмахсем |
|---|---|
| | |

**4**. (ручка) **Ыйту сăмахĕсене тĕрĕс ларт.**

1. Кĕрхи каникул … пуçланать?
2. Эсĕ кĕрхи каникулта … канатăн?
3. Паян … урок пулать?
4. … урока хатĕр?
5. Эс урока … хатĕр мар?
6. Паян столовăйра … çитереççĕ?

**Ыйту сăмахĕсем:** ăçта? кам? мĕн? мĕншĕн? миçе? хăçан?

**5**. (ручка). **Амăшĕ ачине мĕн калать-ши? Тĕрĕс çыхăнтар. Хиствелĕ предложенисем туп.**

**Ача ёçĕ-хĕлĕ**

1. Пĕчĕк ача йĕрет.
2. Ача шкултан таврăнать.
3. Ача шкула кайма пуçтарăнать.
4. Ача çиет.
5. Ача куккăшĕ патне хăнана каять.

**Ача амăшĕн сăмахĕсем**

1. Салам. Аллуна çу, апат çиетпĕр.
2. Мĕн пулчĕ, ачам?
3. Апачĕ тутлă пултăр.
4. Манран салам кала.
5. Паян çумăр çăвать. Сунчăк ил.

**Урок 18**
1 стр.
**Название раздела: ШКУЛ**
**Название урока: КЛАСС ХАÇАЧĔ**

**Мĕн аса илĕн?**

Уçă тата хупă сасăсене, сăпат местоименийĕсене, пусăм йĕркине, ыйтуллă, хистевлĕ, калуллă предложенисене аса илĕн.

**Мĕн вĕренĕн?**

Алфавитпа усă курма, уçă тата хупă сасăсене, пысăк тата пĕчĕк сас паллисене тĕрĕс çырма, сăмахсенче çемçелĕх тата хытăлăх паллисене тĕрĕс лартма, сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарма, орфографи словарĕсемпе ĕçлеме вĕренĕн.

(восклицательный знак)

Сасăсене çырура сас паллисемпе палăртаççĕ. Сас паллисем çинчен вĕрентекен наукăна графика теççĕ. Чăваш алфавитĕнче 37 сас палли. Чăваш алфавитне вырăс алфавитне тĕпе хурса йĕркеленĕ. Ăă, Ĕĕ, Çç, Ӳӳ сас паллисем чăваш сăмахĕсенче кăна тĕл пулаççĕ. Кашни сас паллин хăйĕн ячĕ тата вырăнĕ пур.

**1.** (наушники) **Чăваш алфавичĕпе паллаш**.

| | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **Аа** | **Ăă** | **Бб** | **Вв** | **Гг** | **Дд** | **Ее** | **Ёё** | **Ĕĕ** | **Жж** | **Зз** | **Ии** | **Йй** |
| [а] | [ă] | [бă] | [вă] | [гă] | [дă] | [йэ] | [йо] | [ĕ] | [жă] | [зă] | [и] | [йă] |
| **Кк** | **Лл** | **Мм** | **Нн** | **Оо** | **Пп** | **Рр** | **Сс** | **Çç** | **Тт** | **Уу** | **Ӳӳ** | **Фф** |
| [кă] | [лă] | [мă] | [нă] | [о] | [пă] | [рă] | [сă] | [çă] | [тă] | [у] | [ӳ] | [фă] |
| **Хх** | **Цц** | **Чч** | **Шш** | **Щщ** | **ъ** | | **Ыы** | **ь** | | **Ээ** | **Юю** | **Яя** |
| [хă] | [цă] | [чă] | [шă] | [щă] | хытăлăх палли | | [ы] | çемçелĕх палли | | [э] | [йу] | [йа] |

**2.** (наушники) **Хуравла**.

| | |
|---|---|
| 1. Чăваш алфавитĕнче миçе сас палли?<br>2. «Ăă» хăш сас палли хыççăн тăрать?<br>3. «Ĕĕ» хăш сас паллисем хушшинче тăрать?<br>4. «Çç» хăш сас палли умĕн тăрать? | Рис. 20 70 х 70 3 состава вагонов (можно игрушечных)<br>1-й состав: 3 вагона. Перед составом нагло стоит ворона, под ней написано: **умĕнче** (перед), другая ворона находится между двумя вагонами и подписать: **хушшинче** (между), |

| | |
|---|---|
| 5. «Ӳӳ» алфавитра миçемĕш тăрать?<br>6. Хăш сас паллисем сасса палăртмаççĕ?<br>7. Хăш сас палли алфавит вĕçĕнче тăрать?<br>8. Хăш сас палли алфавит варринче тăрать?<br>9. Хăш сас палли алфавит пуçламăшĕнче тăрать?<br>10. Хăш сас паллисем икĕ сасса палăртаççĕ? | третья ворона позади: **хыçĕнче** (сзади)<br>2-й состав: 3 вагона. На первом вагоне сидит ворона и над вагоном написано: **1-мĕш** (первый вагон), на втором – вторая ворона и на вагоне подписать: **2-мĕш** (второй), третья ворона – на третьем: **3-мĕш** (третий)<br>3-й состав: 3 вагона. Также, как второй состав, но вместо первый пишем: **пуçламăшĕнче** (в начале), вторая ворона на втором – **варринче** (в центре), третья ворона на третьем: **вĕçĕнче** (в конце) |

2 стр.

**3.** (наушники) **Вула. Текста ят пар. Сăпат местоименийĕсене туп. Хăш падежрине кала.**

Юман яланах мĕн те пулин шутласа кăларать. Унăн пуçĕнче çĕр шухăш. Эпир ăна «шухăш **çӳпçи**» тесе калатпăр. Вăл пире пачах та кӳренмест. Пĕррехинче вăл класа чупса кĕчĕ те:

– Эврика! – терĕ. – Атьăр Интернет хаçат кăларатпăр! Эпир унта хамăр класс çинчен çыратпăр. Манăн хатĕр материал та пур! Кам корреспондент пуласшăн? Кам материалсене Интернета вырнаçтарасшăн? Кам редактор пулать?

Иринăпа Алина корреспондент пулма килĕшрĕç. Атнерпе Тимук материалсене Интернета вырнаçтарма хатĕр. Юман редактор пулас терĕ. Хаçата «Пĕрремĕш парттă» ят патăмăр.

Халь пирĕн класс хаçачĕ икĕ эрнере пĕрре тухать.

**Кирлĕ ятсем:** «Пирĕн класс», «Интернет хаçат», «Шухăш çӳпçи», «Пĕрремĕш парттă», «Кам редактор пулать?».

**Çӳпçé** — япала упрамалли савăт.

**4.** (земной шар) **Пĕлме кăсăклă. Пусăма тĕрĕс лартса вула.**

«Эврика» – авалхи грек сăмахĕ. Вăл «эпĕ тупрăм» тенине пĕлтерет. Ăна пĕрремĕш хут паллă ăсчах инженер Архимед каланă.

**5.** (наушники) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1) шутласа | а) çыратпăр | 6) корреспондент | е) пулас терĕ |
| 2) чупса | ă) кăларатпăр | 7) Интернета | ĕ) пулма килĕшрĕ |
| 3) пачах та | б) кĕчĕ | 8) редактор | ё) патăмăр |
| 4) хаçат | в) кăларать | 9) ят | ж) тухать |
| 5) класс çинчен | г) кӳренмест | 10) эрнере пĕрре | з) вырнаçтарасшăн |

**6.** (ручка) **Сăмахсене алфавит йĕркипе çыр. Хуравла. Сирĕн класс мĕнле?**

Чипер, ĕмĕтлĕ, расна, яштака, фантазиллĕ, балет кăмăллакан, евĕклĕ, кутăн, савăнăçлă, ăслă, хаваслă, эрудициллĕ, тимлĕ, пултаруллă, гуманлă, лăпкă, çирĕп кăмăллă, юлхав, активлă, маттур, усал, нĕрлĕ, йăваш, вăйлă, шавлă, ырă, оригиналлă, илемлĕ, журнал вулама юратакан, детектив юратакан.

**7.** (ручка) **Ятсене мĕнле паллă ячĕсемпе палăртма пулать? 6-мĕш хăнăхтарупа усă кур. Хăвăн ятна та паллă ячĕсемпе палăрт.**

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| А | активлă | Т | | С | | М | |
| Т | тимлĕ | И | | О | | А | |
| Н | нĕрлĕ | М | | Ф | | Т | |
| Е | евĕклĕ | У | | И | | В | |
| Р | расна | К | | Я | | И | |

**Урок 19**
1 стр.
**Название раздела: ШКУЛ**
**Название урока: ПĔР КЛАСРА ВĔРЕНЕКЕНСЕМ**

(восклицательный знак)

Пысăк сас паллисене çакăн пек чух çыраççĕ:
1. Предложени пуçламăшĕнчи пĕрремĕш сăмаха.
2. Пайăр ятсене: çын ятне, хушаматне, ашшĕ ятне; чĕр чун ячĕсене; географи объекчĕсен ячĕсене; тĕрлĕ организацисен ячĕсене; кĕнеке, хаçат-журнал ячĕсене, уяв ячĕсене; астрономири тĕрлĕ объектсен ячĕсене тата ытти те.

**1.** (ручка) **Таблицăна тултар.**

Альп, Шупашкар, Турци, Çавал, Урал, Çĕрпӳ, Геннадий Волков, Кавказ, Китай, Чĕмпĕр, Сĕве, Даниил Элмен, Канаш, Испани, Марфа Трубина, Сăр, Атăл, Константин Иванов, Алтай, Мексика.

| Çĕр-шыв | Хула | Юхан шыв | Çын ячĕпе хушамачĕ | Сăрт-ту |
|---|---|---|---|---|
| | | | Геннадий Волков | |
| Китай | | | | Альп |
| | Чĕмпĕр | | | |
| | | Çавал | | |

**2.** (наушники) **Диалога вула**. Сăпат местоименийĕсене туп. Вĕсен падежне кала.

А т н е р. Улине, кала-ха мана, санăн хушамату Албутова мĕне пĕлтерет?
У л и н е. Атте каланă тăрăх, пирĕн хушамат «пуян çын» тенине пĕлтерет. Чăвашсем пуян çынна улпут тенĕ.

А т н е р. Мĕн тери кăсăклă! Пирĕн те чăваш хушамачĕ. Кашкаров хушамат «кашкăр» сăмахран пулса кайнă.

**3.** (маски) **Ятсем мĕне пĕлтереççĕ? Мăшăрпа ĕçле.**

— «Асамат» сăмах хăш чĕлхерен кĕнĕ?
— «Асамат» – араб чĕлхинчен кĕнĕ сăмах.
— Вăл мĕн тенине пĕлтерет?
— Вăл «хастар çын» тенине пĕлтерет.

— «…» сăмах хăш чĕлхерен кĕнĕ?
— «...» – чĕлхинчен кĕнĕ сăмах.
— Вăл мĕн тенине пĕлтерет?
— Вăл «...» тенине пĕлтерет.

| Ятсем | Хăш чĕлхерен кĕнĕ? | Мĕн тенине пĕлтерет? |
|---|---|---|
| Асамат | араб чĕлхинчен | хастар çын |
| Тимук | грек чĕлхинчен | турра хисеплекен |
| Ирина | грек чĕлхинчен | лăпкă, тăнăçлă |
| Юман | чăваш сăмахĕ | çирĕп |
| Алина | араб чĕлхинчен | паллă, пархатарлă |
| Дамир | тутар чĕлхинчен | тимĕр |
| Надежда | вырăс чĕлхинчен | шанчăк |
| Марина | латин чĕлхинчен | тинĕсри |

2 стр.
**4.** (маски) **Диалога вула. Хиставлĕ предложени туп.**

А л и н а. Улине, сана валли пĕчĕк çыру пур.
У л и н е. Кам пачĕ?
А л и н а. Астумастăп. Такам пачĕ.
У л и н е (сасăпа вулать). «Улине, эпĕ сана 14.00 сехетре уроксен йĕрки патĕнче кĕтетĕп. 35.21.9. 16.1.17.1. 14.12.15.9.30.7.23.9.17...» Ку мĕн? «...Манăн сана валли пĕчĕк парне пур». Алина, кала-ха, кам пачĕ? Пĕлетĕн-çке.
А л и н а. Каламастăп. Сăмах патăм.
У л и н е. Пĕр класра вĕренекен-и?
А л и н а. Пĕр класра вĕренекен. Каятăн-и вара?
У л и н е. Пĕлместĕп.

**5.** (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

1. Алина Улинене мĕн панă?
2. Алина кам çырнине калать-и?
3. Улине çырăва мĕнле вулать? Сасăпа-и? Ăшра-и?
4. Алинăна 14.00 сехетре ăçта кĕтеççĕ?
5. Ăна валли мĕн хатĕрленĕ?
6. Çырура тата мĕн çырнă? Алфавит йĕркипе усă курса вула.
7. Сан шутпа, Улине тĕл пулăва каять-и? Каймасть-и?
8. Сана чĕнсен эсĕ тĕл пулăва каятăн-и? Каймастăн-и?

**6.** (наушники) **Улинен шухăшĕсене вула. Сан шутпа, çак çырăва кам çырнă-ши?**

| | | |
|---|---|---|
| Рис. 1.1 Атнер | | Рис. 1.5. Тимук |
| Атнер питĕ пултаруллă: реп калать, китайла вĕренет, унăн вăхăт сахал. Вăл хĕр ачасемпе калаçмасть. | | Тимук ӳнер шкулне çӳрет, хип-хоп ташлать, Интернетра ларма, шӳтлеме юратать. Вăл манпа калаçмасть. |
| Рис. 1.3. Асамат | Рис.1.6. Улине | Рис. 1.7. Юман |
| Асамат спортпа туслă: шахмăтпа кăсăкланать, йĕлтĕрпе çӳрет, теннисла вылять. Вăл вăтанчăк. | | Юман яланах мĕн те пулин шутласа кăларать, театр студине çӳрет, историпе кăсăкланать. Вăл «пĕлĕтре вĕçет». |
| Рис. 10 Дамир<br>Дамир класра çĕнĕ ача. Вăл ытла та сăпайлă. Нихăçан та пĕрремĕш пырса калаçмасть. | | Рис. 1.2 и 1.4 Алина и Ирина, которые смеются.<br>Хĕрсем хăйсем çырман-ши? |

**Урок 20**
1 стр.
**Название раздела: ШКУЛ**
**Название урока: УЛИНЕ ВАЛЛИ ПАРНЕ**

(восклицательный знак)

Çемçе усă сасăпа юнашар тăракан хупă сасăсем яланах çемçен илтĕнеççĕ. Вĕсем хыççăн çемçелĕх палли лартмаççĕ: кĕнеке, кил, пĕлет.

Хытă сăмахсенче юлашки хупă сасă çемçе пулсан ун хыççăн çемçелĕх палли лартаççĕ: кукăль, калать, халь.

Хытă сăмах варринче пĕртен-пĕр хупă сасă çемçе пулсан ăна çемçелĕх паллипе кăтартаççĕ: выльăх, атьăр.

[Ч] сасă умĕнчи [л], [н] сасăсем яланах çемçен илтĕнеççĕ. Вĕсем хыççăн çемçелĕх палли лартмаççĕ: мунча, шанчăклă, пăнчă.

**1.** (ручка) **Кирлĕ çĕрте çемçелĕх палли ларт.**

Çырат_, пулат_, илет_, кулат_, вылят_, килет_, каят_, сикет_, тăрат_, чупат_, ӳкерет_.

**2.** (ручка) **Кашни сăмахра йăнăш пур. Йăнăшсене тӳрлет. Пусăм ларт.**

Илтеть, чечекь, Ельчĕк, пĕлĕть, çиль, суньчăк, хĕвель, утат, калаçмаст.

**3.** (наушники) **Тĕрĕс хурав суйласа ил**.

«Хĕвел» сăмахра **л** сас палли хыççăн мĕншĕн çемçелĕх палли лартмаççĕ?

А. Хытă уçă сасăпа юнашар тăракан хупă сасăсем хыттăн илтĕнеççĕ.
Ă. Çемçе уçă сасăпа юнашар тăракан хупă сасăсем яланах çемçен илтĕнеççĕ.

**4. (**маски**) Диалога вула.**

| | |
|---|---|
| А т н е р. Салам!<br>У л и н е. Салам! Эсĕ кунта мĕн тăватăн?<br>А т н е р. Эпĕ сана кĕтетĕп.<br>У л и н е. Çырăва эсĕ çыртăн-и?<br>А т н е р. Мĕнле çыру?<br>У л и н е. Эсĕ вара мана мĕншĕн кĕтетĕн?<br>А т н е р. Ман сана парне памалла.<br>У л и н е. Камран?<br>А т н е р. Каламастăп. Сăмах патăм.<br>У л и н е. Пĕр класра вĕренекен-и?<br>А т н е р. Пĕр класра вĕренекен. | Рис. 21 70 х 70 Атнер с Улине разговаривают возле школьного расписания. У Атнера в руках закрытая подарочная коробка средних размеров (чтобы поместилась книга). У Улине в руках записка. |

2 стр.
**5.** (наушники) **Ӳкерчĕк тăрăх ыйтусене хуравла.**

1. Эсĕ ӳкерчĕкре камсене куратăн?
2. Вĕсем ăçта тĕл пулнă?
3. Улине аллинче мĕн пур?
4. Атнер аллинче мĕн пур?
5. Атнер арчана кама парасшăн?
6. Арчара мĕн?
7. Парнене кам хатĕрленĕ?

**Кирлĕ сăмахсем:** парне, пĕр класра вĕренекен, пĕчĕк арча, пĕчĕк çыру, Улинене, Улинепе Атнере, уроксен йĕрки патĕнче.

**6.** (наушники) **Хуравла. Улине мĕн шутлать?**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| **Рис. 1.6** Улине думает, над ней облачко с мыслью: **«Пĕчĕк арчара мĕнле парне-ши?»** | Унта | Рис. 22_1 50 х 50 шоколадка | Рис. 22_2 50 х 50 игрушечный зайчик | мар-ши? |
| | | Рис. 22_3 50 х 50 краски гуашь | Рис. 22_4 50 х 50 масмак (чувашская лента с вышитым узором) | |
| | | Рис. 22_5 50 х 50 чувашско-английский словарь: чăвашла-акăлчанла | Рис. 22_6 50 х 50 нитки для вышивания. | |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | словарь | | |

**7.** (наушники) **Текста вула. Ыйтуллă тата калуллă предложенисем туп.**

Улине уроксем хыççăн васкаса килне каять. Унăн хăвăртрах парнене уçса пăхас килет. Кам панă-ши ку парнене? Мĕн-ши унта? Улине килне çитет те парнене уçать. Арчара Улинен портречĕ. Ăна кăранташпа ӳкернĕ. Чăн-чăн ӳнерçĕ пекех. Улинене портрет килĕшет. Кам ӳкернĕ-ши? Улине тӳрех тавçăрса илет. Эсир тавçăрса илтĕр-и?

**8.** (наушники) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1) уроксем | а) пăхас килет | 6) Улинен | д) портречĕ |
| 2) васкаса | ă) хыççăн | 7) кăранташпа | е) ӳнерçĕ |
| 3) уçса | б) çитет | 8) чăн-чăн | ĕ) илет |
| 4) кам | в) килне каять | 9) тавçăрса | ж) портрет килĕшет |
| 5) килне | г) панă | 10) Улинене | з) ӳкернĕ |

**Урок 21**
1 стр.
**Название раздела: ШКУЛ**
**Название урока: ДИКТАНТ ÇЫРАТПĂР**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Словарь — сăмахсен пуххи. Унта сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарнă. Тĕрлĕ словарь пулать: орфоэпи словарĕ, чăвашла-вырăсла словарь, синонимсен словарĕ, этимологи словарĕ, фразеологи словарĕ, орфографи словарĕ тата ытти те. |

**1.** (наушники) **Тупсăмне туп.**

1. Ку словарь сăмахсене тĕрĕс çырма вĕрентет. Ку мĕнле словарь?
2. Ку словарь чăвашларан вырăсла куçарма пулăшать. Ку мĕнле словарь?
3. Ку словарь сăмахсем мĕнле пулса кайнине ăнлантарать. Ку мĕнле словарь?
4. Ку словарь пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсене ушкăнлать. Ку мĕнле словарь?
5. Ку словарь фразеологизмсем мĕне пĕлтернине ăнлантарса парать. Ку мĕнле словарь?
6. Ку словарь сăмахсене тĕрĕс калама вĕрентет.

**2.** (наушники) **Диалога вула.**

А й т а р С т е п а н о в и ч. Ачасем, паян урокра диктант çыратпăр. Диктант теми доска çинче: «Чулхула».
Ю м а н. «Чулхула» сăмаха пĕрле çырмалла-и? Уйрăм çырмалла мар-и?
А й т а р С т е п а н о в и ч. Чулхула — хула ячĕ, пĕрле çыратпăр. Тĕрĕс çырма орфографи словарĕ пулăшать.
Ю м а н. Чăнах та!

**3.** (ручка) **Сăмахсене тĕрĕс çырнă-и? Словарьпе тĕрĕсле.**
Арçынача, пан улми, çĕрулми, çĕршыв, хĕр-ача.

**4.** (наушники) **Пĕлме кăсăклă фактсем.**

1. Пĕрремĕш чăваш словарьне Швеци çынни Филипп Иоганн фон Страленберг тунă. Вăл 1730 çулта хăйĕн кĕнекине 28 чăваш сăмахне кĕртнĕ.
2. Хальхи вăхăтра пур словаре те вулавăшра та, Интернетра та тупма пулать. Интернетри чи пысăк электронлă словарьсен пуххи «Электронлă сăмахсар» сайтра.
3. Текстсене пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарма Интернетри «Яндекс куçаруçă» сайт пулăшать.
4. Чăвашсен чи паллă, чи пуян словарĕ — Н.И. Ашмарин словарĕ шутланать.

**5.** (наушники) **Хуравла. Каласа пар.** (Ответь. Перескажи)

| | |
|---|---|
| 1. Ку **кам**?<br>2. Вăл **кам** пулнă?<br>3. Вăл **ăçта** çуралнă?<br>4. Вăл вырăс-**и**? Чăваш-**и**?<br>5. Унăн чи паллă ĕçĕ **мĕн ятлă**?<br>6. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки **миçе** томлă?<br>7. Унта **миçе** сăмах шутланать?<br>8. Чăваш Республикинче ун ячĕпе **мĕн-мĕн** пур? | Рис. 23 50 x 50 горельеф Ашмарина в Чебоксарах. |

**Кирлĕ сăмахсем:** вырăс; паллă чĕлхеçĕ; Етĕрне хулинче; урам, горельеф, çурт; Николай Ашмарин; Чăваш сăмахĕсен кĕнеки; хĕрĕх пине яхăн.

**Горелье́ф** — стена çинче тухса тăракан ӳкерчĕк.

2 стр.
**6.** (наушники) **Текста вула.**

Николай Ашмарин çырнă «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» латинла ячĕ: «Thesaurus Linguae Tschuvaschorum» (Тезаврус лингвэ чувашорум). Тезаврус — çӳпçе, мул арчи, словарь тенине пĕлтерет. Ку словаре чăваш энциклопедийĕ теççĕ. Кунта сăмахсем кăна мар, ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем, юрăсем, халапсем, вырăнти калаçу сăмахĕсем, ял, хула, çырма, вăрман ячĕсем пур. Словарьте чăвашсен йăли-йĕрки çинчен те çырса кăтартнă. Ашмарина чăваш Далĕ теççĕ. Кун пек словарьсем тĕнчере сахал.

**7.** (наушники) **Хуравла**.




| | |
|---|---|
| 1. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки латинла **мĕн** | Рис. 24 50 x 50 |

| | |
|---|---|
| ятлă?<br>2. Тезаврус **мĕн** тенине пĕлтерет?<br>3. Ку словаре **мĕн** теççĕ?<br>4. Словарьте **мĕн-мĕн** пур?<br>5. Унта чăвашсен йăли-йĕрки çинчен çырса кăтартнă-**и**?<br>6. Ашмарина **кам** теççĕ?<br>7. Кун пек словарьсем тĕнчере нумай-**и**? | первый словарь Ашмарина |

**8.** (наушники) **Синквейн çыр.**

**Кирлĕ сăмахсем**: паллă чĕлхеçĕ, ĕçчен, Николай Ашмарин, тĕпчет, çырать, Николай Ашмарин – 17 томлă словарь авторĕ, ăслă, вĕренет.

**9.** (ручка) **Тимук «Улма-çырла» тематика словарĕ тума пуçланă. Вĕçле.**

Рис. 25, рисунки фруктов и ягод 50 х 50

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Рис.25_1 виноград | | Рис.25_2 облепиха | Рис.25_3 клубника | Рис.25_4 жимолость | Рис.25_5 малина |
| иçĕм çырли | пан улми | сырлан | | хăвăш | |
| | Рис.25_6 земляника | Рис.25_7 смородина | | Рис.25_8 шиповник | Рис.25_9 клюква |
| хура çырла | хурăн çырли | | чие | шăлан | шур çырли |

**10.** (блокнот и ручка) **Килĕшекен тема суйласа ил те ӳкерчĕклĕ тематика словарĕ ту. 9-мĕш ĕçри тĕслĕхпе усă кур.**

«Апат-çимĕç», «Улма-çырла», «Пахча çимĕç», «Килти чĕр чунсем», «Кашăк-чашăк», «Йывăççем».

**Урок 22**
1 стр.
**Название раздела: ШКУЛ**
**Название урока: ПАЯН ХĂШ КУН?**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Шут хисеп ячĕсем япала шутне е ĕç миçе хут пулнине пĕлтереççĕ: пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă. Кусем тулли формăри хисеп ячĕсем.<br>Япала шутне палăртакан хисеп ячĕсене пĕр хупă сас паллипе çыраççĕ. Вĕсене кĕске формăри шут хисеп ячĕсем теççĕ: пĕр кун, икĕ эрне, виçĕ уйăх, тăватă çын.<br>Йĕрке хисеп ячĕсем япаласен йĕркери вырăнне кăтартаççĕ. Вĕсем шут хисеп ячĕсен тулли форми çумне **-мĕш** аффикс хушăннипе пулаççĕ: **пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш, тăваттăмĕш**. |

**1.** (ручка) **Хисеп ячĕсене сăмахпа çыр.**
**Тĕслĕх:** 1 сĕтел — пĕр сĕтел.

1 сĕтел, 5 пукан, 7 сăмах, 3 эрне, 4 урок, 8 шкул ачи, 2 кĕнеке, 10 кун.

**2.** (ручка) **Шут хисеп ячĕсенчен йĕрке хисеп ячĕсем ту.**
**Тĕслĕх:** 1 — пĕрремĕш.

1, 2, 3, 4, 5, 6, 7, 8, 9, 10, 12, 15.

**3.** (ручка) **Хуравла.**

| | | |
|---|---|---|
| тунти | ытлари | юн |
| кĕçнерни | **кун** | эрне |
| шăмат | вырсарни | канмалли |

1. Эрнере миçе кун?
2. Хăш кун эрнери кун ятне пĕлтермест?
3. Эрнен пĕрремĕш кунĕ мĕн ятлă?
4. Эрнен тăваттăмĕш кунĕ мĕн ятлă?
5. Эрнен юлашки кунĕ мĕн ятлă?
6. Ытлари кун хыççăн хăш кун пулать?
7. Шăмат кун умĕн хăш кун пулать?
8. Хăш кунсем канмалли кунсем шутланаççĕ?
9. Хăш кунсенче ачасем шкулта вĕренеççĕ?

2 стр.
**4.** (диск) **Атьăр юрлатпăр!** **Б ез рамки!**

| | | |
|---|---|---|
| Паян хăш кун? / 2 хут<br>Тунти кун. / 2 хут<br>Эп шкула каятăп / 2 хут<br>Вĕренме. / 2 хут | Паян хăш кун? / 2 хут<br>________ кун. / 2 хут<br>Эп шкула каятăп / 2 хут<br>Вĕренме. / 2 хут | Паян хăш кун? / 2 хут<br>Шăмат кун. / 2 хут<br>Эп шкула каймастăп / 2 хут<br>Вĕренме. / 2 хут |

**5.** (маски) **Рольпе вула. Хистевлĕ предложени туп.**

Т и м у к. Улине, манпа кинона пыратăн-и?
У л и н е. Юрать. Пыратăп. Хăш кун?
Т и м у к. Тунти кун.
У л и н е. Юрать. Тăхта-ха… Манăн тунти кун тĕрĕ кружокĕ.
Т и м у к. Апла ытлари кун.
У л и н е. Юрать. Тăхта-ха… Манăн ытлари кун ӳнер кружокĕ.
Т и м у к. Апла юн кун.
У л и н е. Юрать. Тăхта-ха… Эпĕ юн кун Алина патне хăнана каятăп.

Т и м у к. Апла кӗҫнерни кун…
У л и н е. Юрать. Тăхта-ха… Эпӗ кӗҫнерни кун ют чӗлхе шкулне ҫӳретӗп.
Т и м у к. Апла эрне кун…
У л и н е. Юрать. Тăхта-ха… Манăн эрне кун ташă кружокӗ.
Т и м у к. Апла шăмат кун…
У л и н е. Юрать. Тăхта-ха… Эпир шăмат кун ҫемьепе яла каятпăр.
Т и м у к. Апла вырсарни кун…
У л и н е. Юрать. Тăхта-ха… Вырсарни кун урок тумалла.
Т и м у к. Апла тепӗр эрнере…
У л и н е. Юрать.

**6.** (ручка) **Хуравла. Улине хăш кун мӗн тăвать?**

| Кун ячӗ | Улине мӗн тăвать? | Кун ячӗ | Улине мӗн тăвать? |
|---|---|---|---|
| Тунти кун | | Ытлари кун | |
| Юн кун | | Кӗҫнерни кун | |
| Эрне кун | | Шăмат кун | |
| Вырсарни кун | | | |

**7.** (глобус) **Пӗлме кăсăклă.**

Ӗлӗк чăвашсен эрнере пилӗк кун пулнă. Эрнен пӗрремӗш кунӗ эрне кун пулнă. Кӗҫнерни кун эрне кун умӗн пулать. Вăл «кӗҫӗн эрне кунӗ» тенине пӗлтерет. XVI ӗмӗрте чăвашсем вырăссен кун йӗркине йышăннă. Чăвашсен эрни ҫумне «шăмат кун» тата «вырсарни кун» хушăннă. Шăмат (шаббат) – еврей чӗлхинчен кӗнӗ сăмах. Вăл «кану» тенине пӗлтерет. Вырсарни кун «вырăс эрни кунӗ» тенине пӗлтерет.

**8.** (наушники) **Хуравла. Тӗрӗс-и? Тӗрӗс мар-и?**

1. Ӗлӗк чăвашсен эрнере ултă кун пулнă. 2. Эрнен пӗрремӗш кунӗ вырсарни кун пулнă. 3. Кӗҫнерни кун эрне кун умӗн пулать. 4. Эрне кун «кӗҫӗн эрне кунӗ» тенине пӗлтерет. 5. XVI ӗмӗрте вырăссем чăвашсен кун йӗрки ҫине куҫнă. 6. XVI ӗмӗрте чăвашсен эрни ҫумне «шăмат кун» тата «вырсарни кун» хушăннă. 7. Шăмат (шаббат) – перс чӗлхинчен кӗнӗ сăмах. 8. Вăл «кану» тенине пӗлтерет. 9. Вырсарни кун «вырăс эрни кунӗ» тенине пӗлтерет.

**Урок 23**
1 стр.
**Название раздела: ШКУЛ**
**Название урока: ПӖЛСЕ ТĂМА**

(восклицательный знак)

Чăваш чӗлхинче глаголсен пуҫламăш форми питӗ пӗлтерӗшлӗ. Ун ҫумне аффикс-сем хушăннипе ытти сăмахсем пулаҫҫӗ. Пуҫламăш формăри глаголсем иккӗмӗш сăпатра, пӗрреллӗ хисепре тăраҫҫӗ. Вӗсемпе пӗр-пӗр ӗҫ тума хушнă е ыйтнă чухне усă кураҫҫӗ: *кил, вула, ҫи, лар.*

| |
|---|
| Словарьсенче глаголсене пуҫламăш формăра ҫыраҫҫĕ. |

**1.** (ручка) **Глаголсен пуҫламăш формисене туп.**

Калатăп, ҫыратпăр, вулаҫҫĕ, ӳкернĕ, пĕлесшĕн, каятăн, вĕренмелле, ыйтать, чупатăр, ăнланмастăп.

**2**. (наушники) **Пĕлтерĕве вула**. **Глаголсен пуҫламăш формине туп.**

5 «А» класс валли пĕлсе тăма!

Юн кун, чӳк уйăхĕн 19-мĕшĕнче, истори урокĕ Наци музейĕнче иртет. Шкул умĕнче 12 сехетре тĕл пулатпăр. Музея троллейбуспа каятпăр. Каялла шкула 14.00 сехетре таврăнатпăр. Музея кĕмелли билет 100 тенкĕ тăрать.

**3.** (наушники) **Иккĕмĕш ĕҫпе усă курса таблицăна тултар. Виҫҫĕмĕш юпана хăвăн вариантна ҫыр.**

| Чек-лист | Истори урокĕ | Уроксем хыҫҫăн |
|---|---|---|
| Камсем валли | | |
| Каймалли вырăн | | |
| Хăш кун | | |
| Миҫемĕш числора | | |
| Тĕл пулмалли вырăн | | |
| Тĕл пулмалли вăхăт | | |
| Транспорт | | |
| Билет хакĕ | | |
| Таврăнмалли вăхăт | | |

**4.** (наушники) **Пĕлтерӳсенче мĕнле информаци ҫитмест? Хуравла.**
(оформить в виде объявления в электронном журнале)

| | |
|---|---|
| 5-мĕш классем валли пĕлсе тăма!<br>Эрне кун Пăлхар хулашне экскурсие каятпăр. Чапаев палăкĕ патĕнче ирхине 6 сехетре тĕл пулатпăр. Пăлхара автобуспа каятпăр. Каялла тепĕр кун 18.00 сехетре таврăнатпăр. Экскурси хакĕ 3000 тенкĕ. | Рис. 3_7 Артём Сергеевич |

2 стр.

| | |
|---|---|
| Рис. 26 50 х 50 портрет учителя физкультуры (новый персонаж) Андрей Николаевич. | 5«А» класри арҫын ачасем валли пĕлсе тăма!<br>Шăмат кун, чӳк уйăхĕн 25-мĕшĕнче, стадионта футбол матчĕ иртет. Шкул умĕнче тĕл пулатпăр. Стадиона ҫуран каятпăр. Каялла шкула 17.00 сехетре таврăнатпăр. Стадиона тӳлевсĕр кĕртеҫҫĕ. |

**5**. (наушники) **Диалога вула.**

И р и н а. Анне, эпир паян Наци музейне каятпăр.
И р и н а  а м ă ш ĕ. Кампа? Миçере?
И р и н а.  Класпа. Истори урокĕ вăхăтĕнче.
И р и н а  а м ă ш ĕ. Сирĕн паян истори урокĕ пур-и?
И р и н а.  Паян истори урокĕ биологи вырăнне пулать.
И р и н а  а м ă ш ĕ. Биологи мĕншĕн пулмасть?
И р и н а.  Ĕнер истори вырăнне биологи пулчĕ.
И р и н а  а м ă ш ĕ. Эрнере сирĕн биологи миçе?
И р и н а.  Э-э. Эрнере пĕрре пулать.
И р и н а  а м ă ш ĕ. Истори вара миçе хут пулать?
И р и н а.  Э-э. Акă электронлă дневникра пăхма пултаратăн.

| Урок № | Урок вăхăчĕ | Тунти кун | Ытлари кун | Юн кун | Кĕçнерни кун | Эрне кун |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 08.00 — 08.40 | вырăс чĕлхи | ӳнер | вырăс чĕлхи | вырăс чĕлхи | технологи |
| 2 | 08.50 — 09.30 | физкультура | истори | акăлчан чĕлхи | тăван литература | технологи |
| 3 | 09.50 — 10.30 | математика | математика | истори | математика | акăлчан чĕлхи |
| 4 | 10.50 — 11.30 | математика | литература | математика | литература | биологи |
| 5 | 11.50 — 12.30 | акăлчан чĕлхи | вырăс чĕлхи | тăван чĕлхе | географи | вырăс чĕлхи |
| 6 | 12.40 — 13.20 | музыка | тăван ен культури | | физкультура | литература |

**6.** (наушники) **Хуравла**. **Санăн тата мĕнле предмет вĕренес килет?**

| | | |
|---|---|---|
| китай чĕлхи | психологи | информатика |
| финанс пĕлӳлĕхĕ | сцена ăсталăхĕ | общество пĕлĕвĕ |
| риторика | этика | ытти халăхсен культури |

**Урок 24**
1 стр.
**Название раздела: ВĂХĂТ. КĔРХИ СĂНСЕМ**
**Название урока: ÇУЛТАЛĂК ВĂХĂЧĔСЕМ**

**Мĕн аса илĕн?**

Пайăр ятсене, çемçен илтĕнекен хупă сасăсене тĕрĕс çырассине аса илĕн.

**Мĕн вĕренĕн?**

Шавлă хупă сасăсене, вăраммăн илтĕнекен хупă сасăсене тĕрĕс çырма, сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарма вĕренĕн.

Архаизмсемпе, историзмсемпе, неологизмсемпе, паллă ячĕсен пулăвĕпе, паллă ячĕсен тĕп, танлаштару, вăйлă формисемпе, кăшкăруллă тата кăшкăруллă мар

| |
|---|
| предложенисемпе, пĕр йышши определениллĕ предложенисемпе паллашăн. |

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Шавлă хупă сасăсем икĕ уçă сасă хушшинче янăраса илтĕнеççĕ: кăва**к**ал [кăва**г**ал], у**п**а [у**б**а], па**с**ар [па**з**ар], у**ç**ă [у**Ç**ă], йы**т**ă [йы**д**ă], вă**х**ăт [вă**Х**ăт], а**ч**а [а**Ч**а], ă**ш**ă [ă**ж**ă].<br>Шавлă хупă сасăсем янăравлă хупă сасăпа уçă сасă хушшинче янăраса илтĕнеççĕ: автан [ав**д**ан], мулкач [мул**г**ач], кăмпа [кăм**б**а], сăмса [сăм**з**а], арча [ар**Ч**а], арçын [ар**Ç**ын], чăлха [чăл**Х**а], чаршав [чар**ж**ав].<br>Икĕ хупă сасă юнашар тăнă чух вăрăммăн илтĕнет: тăваттă, асанне, хĕлле. |

**1.** (ручка) **Диктант çыр. Сăмахсене сыпăксем çине пайла.**

Алса, Атăл, вĕрентекен, кĕнеке, кукаçи, кушак, малтан, пушă, пысăк, сĕтел, çанталăк, тутар, хупă, Чĕмпĕр, чиркӳ, шкулта, юлташ, япала.

**2. (**ручка**) Йăнăшсене тӳрлет.**
Рис. 27 70 x 140
(на тетрадном листе в линейку записка ученика с ошибками своему товарищу)
Эзĕ килте историбе таблица тултарнă-и? Манăн кĕнеге шкулта юлнă. Эбĕ урога хадĕр мар. Çырса илме парадăн-и? Пидĕ ыйтадăп.
Артём
2 стр.

**3.** (маски) **Диалога вула.**

А с а м а т. Тимук, футболла выляма пыратăн-и?
Т и м у к. Миçере?
А с а м а т. Икĕ сехетре.
Т и м у к. Пĕлместĕп… Манăн музыка шкулне хатĕрленмелле.
А с а м а т. Мĕн тумалла?
Т и м у к. Вивальдин «Çулталăк вăхăчĕсем» **кĕввине** итлемелле.
А с а м а т. Ăнланмалла. Манăн пĕр шухăш пур. Эсĕ наушник тăхăн та итле. Çав вăхăтра выля.
Т и м у к. Чăнах та. Лайăх шухăш!

**Кĕ́вĕ** — мелоди.

**4.** (наушники) **Хуравла. Каласа пар.** (Ответь. Перескажи)

| | |
|---|---|
| 1. Ку **кам**?<br>2. Вăл **кам** пулнă?<br>3. Вăл **хăçан** пурăннă?<br>4. Вăл **ăçта** çуралнă?<br>5. Унăн пĕрремĕш музыка вĕрентекенĕ **кам** пулнă?<br>6. Унăн чи паллă ĕçĕ **мĕн** ятлă?<br>7. «Çулталăк вăхăчĕсем» *хайлав* **миçе** пайран тăрать? | Рис. 28 50 x 50 портрет Антонио Вивальди. |

| | |
|---|---|
| 8. Пайсен ячĕсем **мĕн-мĕн** ятлă? | |

**Кирлĕ сăмахсем:** «Çуркунне», «Çулла», «Кĕркунне», «Хĕлле»; Венеци хулинче; Антонио Вивальди; ашшĕ; паллă композитор; тăвată; «Çулталăк вăхăчĕсем»; XVII–XVIII ĕмĕрсенче.

**Хайла́в** — литература е музыка ĕçĕ.

**5.** (наушники) **Сăмах майлашăвĕсене хăш ӳкерчĕкпе çыхăнтарма пулать?**

| | |
|---|---|
| Рис 29_1 50 х 50 Рисунок весны<br>и подписать ÇУРКУННЕ | Рис 29_2 50 х 50 Рисунок лета<br>и подписать ÇУЛЛА |
| Рис 29_3 50 х 50 Рисунок осени<br>и подписать КĔРКУННЕ | Рис 29_4 50 х 50 Рисунок зимы<br>и подписать ХĔЛЛЕ |

Çумăр çăвать, юр ирĕлет, çил вĕрет, хĕвел хĕртет, курăк ӳсет, симĕс çулçă тухать, сарă çулçă ӳкет, шурă юр выртать, пăр ларать, пăр каять.

**Урок 25**
1 стр.
**Название раздела: ВĂХĂТ. КĔРХИ СĂНСЕМ**
**Название урока: КĔРКУННЕ**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Сăмах сыпăксенчен тăрать. Сыпăка уçă сасă тăвать. Сăмахра миçе уçă сасă, çавăн чухлĕ сыпăк: пу-ка-не, я-лав, се-хет. Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чухне сăмах сыпăксем çине мĕнле пайланнине пăхса куçармалла. Пĕр сас паллине сăмахра уйăрма юрамасть. Икĕ хупă сасă юнашар пулсан пĕри малтанхи сыпăка каять, тепри — хыççăнхи сыпăка: пах-ча, ук-ça. Виçĕ хупă сасă юнашар пулсан сăмаха икĕ тĕрлĕ сыпăклама пулать: ку-там-кка е ку-тамк-ка. |

**1.** (ручка) **Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçар.**
Тĕслĕх: кĕркунне — кĕр-кунне, кĕркун-не.

Çуркунне, кăранташ, вĕрентекен, Шупашкар, Нарспи, шултра.

**2. (**ручка**) Диалога вула.**

| | |
|---|---|
| Т и м у к  а м ă ш ĕ. Тимук, сана мĕн пулнă? Эсĕ мĕншĕн **салхуллă**?<br>Т и м у к. Музыка шкулĕнче «виççĕ» илтĕм. | Т и м у к. Эпĕ Вивальдин хайлавне итлерĕм.<br>Т и м у к  а м ă ш ĕ. Хăçан?<br>Т и м у к. Футболла вылянă чухне. |

| | |
|---|---|
| Т и м у к  а м ă ш ĕ. Мĕншĕн вара?<br>Т и м у к. Вивальдин «Çулталăк вăхăчĕсем» хайлавĕшĕн.<br>Т и м у к  а м ă ш ĕ. Эсĕ ĕнер касчченех футболла вылярăн. Тен, çавăнпа урок тума ĕлкĕреймерĕн. | Т и м у к  а м ă ш ĕ. Ăнлантăм. Пĕр вăхăтра икĕ ĕç тума йывăр çав.<br>Т и м у к. Килĕшетĕп.<br>Т и м у к  а м ă ш ĕ. Атя пĕрле итлетпĕр, итленĕ вăхăтра ӳкеретпĕр.<br>Т и м у к. Юрать. |

**Салхӳллă** — кăмăлсăр, савăнăçлă мар.

**3.** (ручка) **Ыйтусене хуравласа ӳкерчĕк тăрăх калав çыр.**

| | |
|---|---|
| Тимук Антонио Вивальдин «Çулталăк вăхăчĕсем» хайлавĕ тăрăх ӳкерчĕк тунă.<br><br>1.Ӳкерчĕкре мĕн курăтăн?<br>2. Ӳкерчĕк миçе пайран тăрать?<br>3. Çуркуннехи вăхăт мĕн тĕслĕ?<br>4. Çуркуннехи туратсем çинче мĕн?<br>5. Çуллахи вăхăт мĕн тĕслĕ?<br>6. Çуллахи туратсем çинче мĕн?<br>7. Кĕркуннехи вăхăт мĕн тĕслĕ?<br>8. Кĕркуннехи туратсем çинче мĕн?<br>9. Хĕллехи вăхăт мĕн тĕслĕ?<br>10. Хĕллехи туратсем çинче мĕн? | Рис. 30 70 х 70 (примерно такую картину) Такие же цвета (зима — синий и розовый) |
| 11. Çулталăкăн кашни вăхăчĕ мĕнле? | Тимофей Васильев. «Çулталăк вăхăчĕсем». Антонио Вивальди хайлавĕ тăрăх. |

2 стр.

**Кирлĕ сăмахсем:** илемлĕ, йывăç, кăвакпа кĕрен, симĕс çулçă, сарă, сарă çулçă тата хĕрлĕ пан улми, сенкер, симĕс, тăватă, шурă юр пĕрчи, шурă чечек.

**4.** (наушники) **Текста вула.**

| | |
|---|---|
| Исаак Левитан — вырăс ӳнерçи. Вăл Литвара 1860 çулта çуралнă. Ӳнерçĕ паллă пейзажист шутланать. Левитан пине яхăн картина ӳкернĕ.<br>Левитанăн вĕрентекенĕсем Алексей Саврасов тата Василий Поленов ӳнерçĕсем пулнă. Çамрăк Левитан ĕçĕсене Павел Третьяков хакланă, унăн «Сокольникири кĕрхи кун» картинине туяннă. Кĕркунне теми Левитаншăн | Рис. 31 50 х 50 портрет Исаака Левитана. |

| | |
|---|---|
| питӗ ҫывӑх. Унӑн «Ылтӑн кӗркунне», «Кӗрхи кун», «Кӗрхи тӗтре», «Юман вӑрманӗ кӗркунне», «Кӗркунне ялта» картинисем питӗ паллӑ шутланаҫҫӗ.<br>Левитана Атӑлӑн чи аслӑ юрӑҫи теме те пулать. Атӑл тӑрӑхӗнчи вӑрмансем, уйсем, пысӑк хуласемпе пӗчӗк ялсем ӑна ӳкерме хавхалантарнӑ.<br>Левитан тӗрлӗ ҫӗр-шывра пулса курнӑ: Германире, Францире, Италире. Унта та вӑл пейзаж ӳкернӗ, этюдсем ҫырнӑ.<br>1898 ҫулта Левитана «Пейзаж ӳнерӗн академикӗ» ят панӑ.<br>1900 ҫулта Исаак Левитан чирлесе вилнӗ. | |

**5.** (наушники) **Тӗрӗс ҫыхӑнтар.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1) вырӑс | а) яхӑн | 6) кӗрхи | д) чи аслӑ юрӑҫи |
| 2) паллӑ | ӑ) ӳнерҫи | 7) юман | е) вӑрманӗ |
| 3) пине | б) кӗркунне | 8) Атӑлӑн | ӗ) ҫӗр-шывра |
| 4) кӗрхи | в) пейзажист | 9) ӳкерме | ж) тӗтре |
| 5) ылтӑн | г) кун | 10) тӗрлӗ | з) хавхалантарнӑ |

**6.** (наушники) **Тӗрӗс-и? Тӗрӗс мар-и?**

1. Исаак Левитан — чӑваш ӳнерҫи.
2. Вӑл паллӑ портретист шутланать.
3. Левитан пине яхӑн картина ӳкернӗ.
4. Ҫамрӑк Левитан ӗҫӗсене Павел Третьяков хаклать.
5. Левитан кӗркуннехи вӑхӑта ӳкерме юратмасть.
6. Левитан Атӑл тӑрӑхне ӳкерме юратнӑ.
7. Левитан Азире нумай пурӑнать.
8. 1898 ҫулта И. Левитана «Пейзаж ӳнерӗн академикӗ» ят панӑ.

**Урок 26**
1 стр.
**Название раздела: ВӐХӐТ. КӖРХИ СӐНСЕМ**
**Название урока: КӖРХИ СӐН ӲКЕРЧӖКСЕМ**

(восклицательный знак)

Архаизм — халӗ усӑ курма пӑрахнӑ сӑмах, ӑна ҫӗннипе улӑштарнӑ: чир — амак, ялав — элем, ту — ат.

Историзм — ялалипе пӗрле манӑҫа тухнӑ сӑмах. Историзмсем шутне ялала ячӗсем ҫеҫ кӗреҫҫӗ: улпут — ҫӗр ӗҫӗпе пуйнӑ ҫын, шупӑр — ҫиелти тум**, пӑт** — вун ултӑ килограмм.

Неологизм — чӗлхере нумай пулмасть усӑ курма пуҫланӑ сӑмах: **компьютер**, **тетел**, **подкаст**.

**1.** (ручка) **Сӑмахсене виҫӗ ушкӑна пайла. Словарьпе усӑ кур.**

Ӑт (выляса ил), купса (суту-илӳ тӑвакан ҫын), курав (выставка), нӗрлӗ (хитре), тетел (интернет), пӑча (ача), сӑмахсар (словарь), сапа (савӑт), ҫӑпата (авалхи пушмак), тевет (хӗрсен авалхи капӑрлӑхӗ), хайлав (ӳнер ӗҫӗ, произведени), хушпу (ӑна хӗрарӑмсем пуҫне тӑхӑннӑ).

| Архаизмсем | Историзмсем | Неологизмсем |
|---|---|---|
| ӑт | купса | курав |
| | | |
| | | |
| | | |

**2.** (ручка) **Ку хӑҫан пулать? Хура кӗркунне-и? Ылтӑн кӗркунне-и?**

Рис. 32_1 70 х 70 Исаак Левитан. «Золотая осень» и рис 32_2 70 х 70 Исаак Левитан. «Поздняя осень»

| | |
|---|---|
|  |  |
| И. Левитан. Ылтӑн кӗркунне. | И. Левитан. Хура кӗркунне. |

1. Тӳпере хӗвел пӑхать. Ку хӑҫан пулать?
2. Сивӗ ҫумӑр ҫӑвать. Ку хӑҫан пулать?
3. Йывӑҫ ҫулҫисем сарӑ-хӗрлӗ тӗслӗ. Ку хӑҫан пулать?
4. Йывӑҫсем ҫара. Ку хӑҫан пулать?
5. Урамра йӗпе-сапа тӑрать. Ку хӑҫан пулать?

2 стр.

6. Кӑвакалсем кӑнтӑра вӗҫсе каяҫҫӗ. Ку хӑҫан пулать?
7. Ҫӗрле шӑнтать. Ку хӑҫан пулать?
8. Ҫынсем вӑрманта кӑмпа пуҫтараҫҫӗ. Ку хӑҫан пулать?
9. Амӑшӗсем ачисене калпак тӑхӑнтараҫҫӗ. Ку хӑҫан пулать?
10. Чӗр чунсем хӗллене ҫывӑрма выртаҫҫӗ. Ку хӑҫан пулать?

**Çара́** — çулçăсăр, тумсăр.
**Йĕпе́-сапа́** — çумăрлă çанталăк.

**3.** (маски) **Диалога вула. Неологизм туп.**

Ю м а н. Итлетĕп, Атнер.
А т н е р. Эсĕ мĕн тăватăн?
Ю м а н. Эпĕ тетелти хаçат валли материал хатĕрлетĕп.
А т н е р. Мана «Canon» фотоаппарат илсе пачĕç. Атя парка сăн ӳкерме. Кайран хаçат валли репортаж тăватпăр.
Ю м а н. Чăнкă фотоаппарат! Манăн та килте ларас килмест. Хăш парка каятпăр?
А т н е р. Мана пĕрех! Атя хамăр вырăнта тĕл пулатпăр.
Ю м а н. Юрать.

**4.** (наушники) **Юман репортажне вула. Сăн ӳкерчĕксене ят пар.**

Эпир паян Кашкаров Атнерпе паркра пултăмăр. Унта ăнсăртран Улинепе Алинăна тĕл пултăмăр. Вĕсем пакшасем курнă иккен. Пĕр пакши кайри урисем çине тăнă, хĕр ачасенчен апат ыйтнă. Хĕр ачасем пакшана телефонпа ӳкернĕ.
Акă пирĕн сăн ӳкерчĕксем:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Рис. 33_1 50 х 50 4 пары ног в осенних листьях | Рис. 33_2 50 х 50 Тропинка, покрытая осенними листьями | Рис. 33_3 50 х 50 Гроздья рябины | Рис. 33_4 50 х 50 Белка просит покушать. | Рис. 33_5 50 х 50 Кленовый лист красного цвета |
| 1. Сăн ӳкерекен Атнер | 2. Сăн ӳкерекен Юман | 3. Сăн ӳкерекен Улине | 4. Сăн ӳкерекен Улине | 5. Сăн ӳкерекен Алина |

**Сукма́к** — утма çул.

**Кирлĕ ятсем:** Вĕрене çулçи. Кĕрхи сукмак. Пакша. Пилеш çырли. Пирĕн пушмаксем.

**Урок 27**
1 стр.
**Название раздела: ВĂХĂТ. КĔРХИ СĂНСЕМ**
**Название урока: КĔРКУННЕХИ КАНИКУЛ УМĔН**

(восклицательный знак)

Камăн е мĕнĕн, ĕçĕн е паллăн паллине пĕлтерекен пуплев пайне паллă ячĕ теççĕ. Унăн ыйтăвĕсем: **мĕнле? ăçти? хăçанхи?**

**Мĕнле?** ыйтури сăмахсем: хитре, пĕчĕк, ырă.

**Ăçти?** ыйтури паллă ячĕсем япала ячĕ çумне **- ри, - ти** аффикссем хушăннипе пулаççĕ. Сăмах **р, л, н** сасăсемпе вĕçленсен **- ти** аффикс, ытти чухне **- ри** аффикс хушăнать: шкулти, килти, урамри, кĕнекери.

**Хăçанхи?** ыйтури паллă ячĕсем япала ячĕ е наречи çумне **- хи** аффикс хушăннипе пулаççĕ: паянхи, кĕрхи, тунти кунхи.

**1.** (ручка) **Паллă ячĕсене ушкăнла.**

Авалхи, класри, кăнтăрлахи, ирхи, паллă, пушă, çăмăл, çуллахи, туслă, хаваслă, хальхи, хулари, Чĕмпĕрти, шкулти, ялти.

| **Мĕнле?** | **Ăçти?** | **Хăçанхи?** |
|---|---|---|
| анлă | ял**ти** | авал**хи** |
| ... | ... | ... |

**2.** (наушники) **Ачасене вĕрентекен мĕн хуравлать? Диалогра паллă ячĕсене тупăр.**

| | |
|---|---|
| В ĕ р е н т е к е н. Манăн лайăх хыпар пур. Кĕркуннехи каникулта класпа Пăлхара каятпăр<br>А ч а с е м. Мĕнпе каятпăр?<br>В ĕ р е н т е к е н. ...<br>А ч а с е м. Хăш кун каятпăр?<br>В ĕ р е н т е к е н. ...<br>А ч а с е м. Çанталăк мĕнле пулать?<br>В ĕ р е н т е к е н. ...<br>А ч а с е м. Çул çӳревре миçе кун пулатпăр?<br>В ĕ р е н т е к е н. ...<br>А ч а с е м. Ăçта çĕр каçатпăр?<br>В ĕ р е н т е к е н. ...<br>А ч а с е м. Йытта илме юрать-и?<br>В ĕ р е н т е к е н. ... | Ответы (на цветных полосках вразброс)<br>Р а м к и у б р а т ь !<br>Хăна çуртĕнче<br><br>Автобуспа<br><br>Шел пулин те, юрамасть.<br><br>Шăмат кун<br><br>Икĕ кун<br><br>Лайăх, уяр |

**3.** (наушники) **Хуравла**. **Санăн шутупа, вĕрентекен çул çӳреве мĕншĕн йытă илесшĕн мар? Суйла. Паллă ячĕ туп. Унăн ыйтăвне палăрт.**

1. Мĕншĕн тесен йытă валли ятарлă контейнер кирлĕ.
2. Мĕншĕн тесен йытă çăварлăхпа пулмалла.
3. Мĕншĕн тесен музея йытăпа кĕме юрамасть.
4. Мĕншĕн тесен йытăпа час-часах уçăлса çӳремелле.
5. Мĕншĕн тесен йытă нумай çиет.

2 стр.
6. Мĕншĕн тесен йытă çыртма пултарать.
7. Мĕншĕн тесен йытă кушак хыççăн чупать.
8. Мĕншĕн тесен хăш-пĕр ачасен аллерги пулма пулать.
9. Мĕншĕн тесен йытă чӳречерен пăхма юрататъ.
10. Мĕншĕн тесен йытă чирлеме пултарать.

**Çăварлăх** — йытă çăварне тăхăнтармалли хатĕр.

**4.** (наушники) **Хуравла. Каласа пар.** (Ответь. Перескажи). **Паллӑ ячӗсем туп.**

| | |
|---|---|
| 1. Ку **мӗн**?<br>2. Вӑл **мӗн** тӗслӗ?<br>3. Унӑн ӑрачӗ **мӗнле**?<br>4. Вӑл **мӗнле**?<br>5. Шпиц пысӑк-**и**? Пӗчӗк-**и**?<br>6. Унӑн ҫӑварлӑх, *майкӑч* пур-**и**?<br>7. Вӑл **мӗн тума** юратать?<br>8. Вӑл **мӗн тума** пултарать?<br>9. Унӑн Тӑван ҫӗр-шывӗ **мӗн ятлӑ**? | Рис. 34 50 х 50 собака шпиц бежевого цвета. Без намордника и без ошейника. |

**Кирлӗ сӑмахсем:** «алӑ ҫупма», Германи, йытӑ, пӗчӗк, сарӑ, ҫӑмламас, ҫук, шпиц, шыва кӗме.

**Ма́йкӑч** — йытӑ майне тӑхӑнтармалли хатӗр.

**5.** (наушники) **Кирлӗ сӑмахсем ларт. Экскурсин пӗрремӗш кунӗн программипе паллаш. Паллӑ ятне туп. Унӑн ыйтӑвне паларт.**

**Экскурсин 1-мӗш кунӗ (шӑмат кун)**

06.45 — … умӗнче пухӑнатпӑр.
07.00 — автобуспа ҫула тухатпӑр.
12.00 — … хулине ҫитетпӗр. Апат ҫиетпӗр.
13.00 — «Чӗмпӗр чӑваш шкулӗ. И.Я. Яковлев хваттерӗ» музея кӗретпӗр.
14.00 — … тӑрӑх ҫӳретпӗр.
16.00 — Кивӗ Майнӑна каятпӑр.
17.00 — Кивӗ Майнӑпа юнашар, Атӑл хӗрринче, … лартатпӑр.
18.30 — ... чӗртетпӗр, ҫӗр улми пӗҫеретпӗр.
20.00 — каҫхи ... ҫиетпӗр.
20.30 — … вылятпӑр.
21.30 — ҫывӑрма выртатпӑр.

**Кирлӗ сӑмахсем:** апат, вӑйӑсем, кӑвайт, хула, чатӑрсем, Чӗмпӗр, шкул.

**Урок 28**
1 стр.
**Название раздела: ВӐХӐТ. КӖРХИ СӐНСЕМ**
**Название урока: КАНИКУЛТИ ПЛАНСЕМ**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Паллӑ ячӗн виҫӗ форма:<br>1. Тӗп форма — паллӑ ячӗн пуҫламӑш форми: хитре, вӑйлӑ, симӗс, йывӑр.<br>2. Танлаштару форми япалан е ӗҫӗн палли пысӑкрах е пӗчӗкрех пулнине кӑтартать. |

<table><tr><td>Тĕп форма çумне - рах (- рех), - тарах (- терех) аффикссем хушăннипе пулать: хитререх, вăйлăрах, симĕсрех, йывăртарах. Паллă ячĕ [р] сасăпа вĕçленсен -тарах (- терех) аффикс, ытти чухне - рах (- рех) аффикс хушăнать.<br>3. Вăйлă форма япалан е ĕçĕн пахалăхĕ чи пысăккине пĕлтерет. Вăйлă форма тăвату мелпе пулать:<br>а) сăмаха икĕ хут каланипе: хитре-хитре, симĕс-симĕс;<br>ă) чăн, чи татăксене паллă ячĕсем умне лартнипе: чăн пысăк ача, чи хитре чечек, чи йывăр кутамкка;<br>б) икĕ хут каланă сăмахăн пĕрремĕш сăмахне кĕскетнипе: кăн-кăвак, çап-çамрăк, тĕп-тĕрĕс, ем-ешĕл. Кĕскелнĕ сăмахсем вĕçĕнче п, н, м хупă сасăсем тăраççĕ.<br>в) ятарлă вĕр, сĕм, тăр, яр сăмахсемпе усă курнипе: вĕр çĕнĕ, сĕм тĕттĕм, тăр пĕччен, вăр çаврака, яр уçă.</td></tr></table>

**1.** (ручка) **Паллă ячĕсене ушкăнла.**

Ачашрах, инçе, вăтанчăк, кивĕ, лайăхрах, çăмăлтарах, çамламас, тап-таса, тутлăрах, уяр, хитререх, чи авалхи, чи хаваслă, шап-шурă, яр çутă.

| Тĕп форма | Танлаштару форми | Вăйлă форма |
|---|---|---|
| инçе | ачашрах | чи авалхи |
| ... | ... | ... |

**2.** (ручка) **Паллă ячĕсен танлаштару формине ту.**

Ăслă — ăслă**рах**; вăрăм — …; кахал — …; кĕске — …; кивĕ — …; пĕчĕк — …; пысăк — …; чипер — …, хаклă — …, хулăн — … .

**3.** (наушники) **Диалога вула. - хи аффикслă паллă ячĕ туп.**

| | |
|---|---|
| Юм а н. Атăлçи Пăлхар ăçта вырнаçнă пулнă-ши?<br>А т н е р. Атăл хĕрринче пуль. Атя Интернетра пăхатпăр.<br>(Карттă çине пăхаççĕ.)<br>Юм а н. Кунта Атăл кăна мар, тĕрлĕ юхан шыв пур иккен.<br>А т н е р. Чăнах та. Пăх-ха, мĕнле хуласем пулнă: Пăлхар, Пӳлер, Сăвар.<br>Юм а н. Халь ун пек хуласем çук пуль.<br>А т н е р. Ку хуласем çук. Çав вырăнсенче хулашсем кăна.<br>Юм а н. Мĕншĕн карттă çинче чăвашсем çук?<br>А т н е р. Авалхи чăвашсене пăлхарсем тенĕ.<br>Юм а н. Ман унта кайса курас килет. | Рис. 35 70 х 70<br>На карте нужно обозначить контуры<br><br><br>нынешней Чувашии, Марий Эл, Татарстана, чтобы примерно представлять локацию Волжской Булгарии.<br>Нужно нанести на карту названия:<br>Волжская Болгария — **Атăлçи Пăлхар** мордва — **ирçе**, марийцы — **çармăс**, удмурты — **удмурт**, Волга — **Атăл**, Свияга — **Сĕве**, Сура — **Сăр**, Кама — **Шур Атăл**, Большой Черемшан — **Аслă Çарăмсан**.<br>Болгар — **Пăлхар**, Биляр — **Пӳлер**, Сувар — **Сăвар**, другие городища лучше не указывать. |

2 стр.

**4.** (наушники) **Карттă çине пăхса хуравла.**

1. Атăлçи Пăлхарта **мĕнле** хуласем пулнă?
2. Атăлçи Пăлхарта **мĕнле** юхан шывсем юхнă?
3. Атăлçи Пăлхарта чăвашсем пурăннă-**и**?
4. Атăлçи Пăлхарпа юнашар **мĕнле** халăхсем пурăннă?
5. Чăваш Республикин территорийĕ Атăлçи Пăлхара кĕнĕ-**и**?

**5.** (наушники) **Хуравла. Тĕрĕс-и? Тĕрĕс мар-и?**

1. Пӳлер хули Париж хулинчен пысăкрах пулнă.
2. Атăлçи Пăлхарта чăвашла калаçнă.
3. Пăлхар хулинче шыв пăрăхĕ пулнă.
4. Атăлçи Пăлхар Хура тинĕс хĕрринче вырнаçнă.
5. Атăлçи Пăлхар Руçпе, Персипе, Индипе суту-илӳ тунă.

Ответы перевернуть

**Тĕрĕс хуравсем.**

1. Тĕрĕс. Пысăкрах пулнă.
2. Тĕрĕс мар. Пăлхарла калаçнă.
3. Тĕрĕс. Шыв пăрăхĕ пулнă.
4. Тĕрĕс мар. Атăл тăрăхĕнче вырнаçнă.
5. Тĕрĕс. Руçпе, Персипе, Индипе суту-илӳ тунă.

**6.** (наушники) **Диалога вула. Халапра кирлĕ сăмахсем ларт.**

Ат н ер. Кукамай, эпир Пăлхара каятпăр!
А т н е р к у к а м ă ш ĕ. Пăлхарсем чăвашсен мăн аслашшĕсем пулнă.
Ат н е р. Пăлхарсем камсенчен пулса кайнă вара?
А т н е р к у к а м ă ш ĕ. Пĕлме йывăр, анчах ваттисем каланă тăрăх, улăпсенчен. Итле-ха, мăнукăм, эпĕ сана Улăп çинчен халап каласа паратăп.

**Улăп халапĕ**

Улăп çемйи пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳренĕ. Пĕррехинче вĕсем ... хĕррине çитнĕ. Улăп амăшĕ каланă:

–Эпĕ çӳресе ывăнтăм. Кунта питĕ ... . Атя кунта юлатпăр.

Улăп килĕшнĕ. … çемйи Атăл тăрăхĕнче пурăнма пуçланă.

**Кирлĕ сăмахсем**: лайăх, Атăл, Улăп.

**Урок 29**

1 стр.

**Название раздела: ВĂХĂТ. КĔРХИ САНСЕМ**

**Название урока: КĔРХИ ÇУЛ ÇӲРЕВ МАРШРУЧĔ**

(восклицательный знак)

Ыйтуллă е ыйтусăр предложенисем мĕнле те пулин кăмăл-туйăма палăртма пултараççĕ: савăнăçа, хурланăва, тĕлĕнĕве тата ытти те. Пысăк туйăмпа, сасса ӳстерсе каланă предложенисене кăшкăрулла (туйăмлă) предложенисем теççĕ. Туйăмлă предложенисем хыççăн çырура кăшкăру палли лартаççĕ: *Кил кунта! Тĕлĕнмелле лайăх! Эсĕ пĕлместĕн-им?!*

Калаçу чĕлхинче интонаци пĕлтерĕшĕ çав тери пысăк. Интонацирен калаканнин кăмăл-туйăмне пĕлме пулать.

**1.** (ручка) **Предложени вĕçĕнче чарăну палли ларт.**

1. Маттур (савăнса)__ 2. Савăнтартăн (кăшкăрса) __ 3. Питĕ лайăх (савăнса)__ 4. Эсĕ фотоаппарат илетĕн-и (ыйтса)__ 5. Ман шанăçа тӳрре кăлартăн (пысăк туйăмпа)__ 6. Тăрăшсан пулать (лăпкă сасăпа)__ 7. Вайлă (хытă сасăпа)__ 8. Эсĕ чи-чи-чи-чи (кăшкăрса)__

**2.** (ручка) **Ӳкерчĕксемпе предложенисене тĕрĕс çыхăнтар.**

(рисунки пронумеровать)

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Рис. 36_1 50 х 50 Тимур радостно прыгает. Он как бы говорит: «Ура! Мы едем в путешествие» | Рис. 36_2 50 х 50 Красивые осенние листья на фотографии | Рис. 36_3 50 х 50 В небе летят журавли | Рис. 36_4 50 х 50 Спортивный кубок | Рис. 36_5 50 х 50 Дорожный переход со светофором с горящим желтым светом |

**Кирлĕ предложенисем:** 1. Ас ту! Асăрханулла пул! 2. Пăх-ха, тăрнасем! 3. Тĕлĕнмелле хитре çулçăсем! 4. Утăрья! Эпир çĕнтертĕмĕр! 5. Утăрья! Эпир çул çӳреве каятпăр!

**Утăрья́** — хытă савăннă чух калаççĕ.

**3.** (наушники) **Вула. Вăйлă формăри паллă ятне туп.**

| | |
|---|---|
| Рис. 3_7. 50 х 50 портрет учителя истории Артёма Сергеевича | Эпĕ кĕрхи çул çӳреве çакăн пек маршрутпа кайма сĕнетĕп. Шупашкар — Çĕрпӳ — Канаш — Патăрьел — Шăмăршă — Чĕмпĕр — Кивĕ Майна — Пăлхар. Каялла вара урăх çулпа, Хусан урлă, таврăнатпăр. Çула май Шăмăршă районĕнче Кĕтрак патша палăкĕ умĕнче чарăнатпăр. Кĕтрак патша вăл Атăлçи Пăлхарăн пĕрремĕш патши пулнă. Çак палăка 2022 çулта лартнă. Унтан Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче пулатпăр. Ăна Иван Яковлевич Яковлев уçнă. Чĕмпĕрте Ă сас палли палăкĕ пур. Ун умĕнче сăн ӳкерĕнетпĕр. Кайран Чĕмпĕр облаçĕнчи Кивĕ Майна ялĕ патĕнче чарăнатпăр. Кивĕ Майна Раççейри чи авалхи ялсенчен пĕри шутланать. Унта археологсем чавса тĕпченĕ вырăн нумай. |

2 стр.
**4.** (наушники) **Хуравла**.

1. Ачасем хăш хулана маларах çитеççĕ? Канаша-и? Чĕмпĕре-и?
2. Ачасем **хăш** вырăна маларах çитеççĕ? Патăрьеле-и? Чĕмпĕре-и?
3. Маршрут тăрăх Канаш хыççăн мĕнле ял пулать?
4. Шăмăршă хыççăн мĕнле хула пулать?
5. Кĕтрак патша палăкĕ хăш районта вырнаçнă?
6. Ăна хăçан лартнă?
7. Чĕмпĕр чăваш шкулне кам уçнă?
8. Чĕмпĕрте хăш сас палли палăкĕ пур?
9. Кивĕ Майна мĕнле ял шутланать?

**5.** (ручка) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Шупашкар | | хули | Патăрьел | | хули |
| Çĕрпӳ | | | Чĕмпĕр | | |
| Канаш | | ялĕ | Кивĕ Майна | | ялĕ |
| Шăмăршă | | | Пăлхар | | |

**6.** (наушники) **Хуравла. Каласа пар.**

| | |
|---|---|
| 1. Ку **кам**?<br>2. Вăл **мĕн** çинче ларать?<br>3. Унăн аллинче **мĕн**?<br>4. Кăтрак **кам** пулнă?<br>5. Вăл **мĕнле** çĕр-шыв патши пулнă?<br>6. Кăтрак Атăлçи Пăлхарăн **миçемĕш** патши шутланнă?<br>7. Вăл **миçемĕш** ĕмĕрсенче пурăннă? | Рис. 28 50 x 50 памятник булгарскому хану Котрагу (в Шемуршинском районе Чувашии). |

**Кирлĕ сăмахсем:** VII–VIII, Атăлçи Пăлхар, Кăтрак, лаша, патша, пĕрремĕш, ялав.

**7.** (диск) **Атьăр юрлатпăр.**

| | |
|---|---|
| 1. Инçе çула тухатпăр,<br>Каятпăр Пăлхара.<br>Кайма пуçтарăнатпăр,<br>Веçех — кутамккара.<br><br>Хушса юрламалли:<br><br>Эх, каяр, эх, каяр!<br>Шупашкар, Канаш, Пăлхар!<br>Чĕмпĕре çитсе курар,<br>Кивĕ Майнăра пулар,<br>Хусан урлă таврăнар.<br>Эх, хаваслă пурăнар! | |
| 2. Юрлатпăр, савăнатпăр<br>Хаваслă ушкăнра.<br>Кайсан кăшт чарăнатпăр,<br>Каратпăр чатăра.<br><br>Хушса юрламалли. | |

**Урок 30**
1 стр.
**Название раздела: ВĂХĂТ. КĔРХИ СĂНСЕМ**
**Название урока: ПĂЛХАРА КАЯТПĂР**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Вĕçленнĕ шухăша палăртакан пĕр сăмаха е сăмахсен пĕрлешĕвне предложени теççĕ: Хĕлле. Паян çанталăк лайăх! Эсĕ паян мĕн тăватăн?<br>Уйрăм ыйтура тăракан хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсене предложени членĕ теççĕ. Тĕп членсем — подлежащи тата сказуемăй. Кĕçĕн членсем — определени, дополнени, |

обстоятельство.

Япала ятне ӑнлантаракан кӗҫӗн члена определени теҫҫӗ: Кӗрхи каникулта ачасем ҫул ҫӳреве каяҫҫӗ.

Пӗр ыйтура тӑракан, пӗр сӑмахпа ҫыхӑнакан членсене пӗр йышши членсем теҫҫӗ. Вӗсене хӳреллӗ пӑнчӑпа уйӑраҫҫӗ: Алина сарӑ, хӗрлӗ, хӑмӑр ҫулҫӑсем пуҫтарчӗ. **Сарӑ, хӗрлӗ, хӑмӑр** сӑмахсем пӗр йышши определенисем пулаҫҫӗ.

**1.** (ручка) **Чарӑну паллисем ларт. Пӗр йышши определенисене хумлӑ йӗрпе палӑрт.**

1. Хура сивӗ йӗпе кӗркунне иртсе кайрӗ. 2. Пӑлхар пысӑк хитре хула. 3. Ачасемшӗн каникул хаваслӑ савӑнӑҫлӑ кӑсӑклӑ вӑхӑт. 4. Эпир кӑсӑклӑ инҫе ҫул ҫӳреве каятпӑр. 5. Шпиц — сарӑ ҫӑмламас пӗчӗк йытӑ.

**2.** (наушники) **Кирлӗ сӑмахсем ларт. Экскурсин иккӗмӗш кун программипе паллаш. Паллӑ ячӗсене туп.**

**Экскурсин 2-мӗш кунӗ**

06.00 — тӑратпӑр, ҫӑвӑнатпӑр.
07.00 — ирхи ... ҫиетпӗр.
08.00 — Пӑлхара каятпӑр.
09.30 — ... хулине ҫитетпӗр. Шурӑ Мечӗтпе паллашатпӑр.
11.00 — Пӑлхар ... уҫӑлса ҫӳретпӗр.
13.00 — кӑнтӑрлахи апат ҫиетпӗр.
14.00 — Пӑлхар историйӗн музейне кӗретпӗр.
15.30 — Пӑлхартан тухатпӑр. Хусан урлӑ Шупашкара килетпӗр.
22.00 — … ҫитетпӗр.

**Кирлӗ сӑмахсем:** Пӑлхар, апат, тӑрӑх, Шупашкара.

**3.** (наушники) **Хуравла**.

1. Ачасем миҫе сехетре тӑраҫҫӗ?
2. Ачасем миҫе сехетре ирхи апат ҫиеҫҫӗ?
3. Ачасем миҫе сехетре Пӑлхара каяҫҫӗ?
4. Ачасем миҫе сехетре Пӑлхар хулине ҫитеҫҫӗ?
5. Ачасем миҫе сехетре Пӑлхар историйӗн музейне кӗреҫҫӗ?
6. Ачасем миҫе сехетре Пӑлхартан тухаҫҫӗ?
7. Ачасем миҫе сехетре Шупашкара ҫитеҫҫӗ?

2 стр.

**4.** (наушники) **Диалога вула. Ачасем лавккара хӑш уйрӑмсене кӗресшӗн?**

И р и н а. Эпӗ лавккана кӗрсе тухасшӑн.
А л и н а. Эсӗ унта мӗн илесшӗн?
И р и н а. Пӗр-пӗр тутлӑ, техӗмлӗ пылак апат-ҫимӗҫ.
А л и н а. Эпӗ те кӗретӗп. Мана салфетка кирлӗ.

У л и н е. Ман валли шыв илĕр-ха тархасшăн.
И р и н а.  Сана газлă шыв кирлĕ-и?
У л и н е. Çук, мана газсăр шыв кирлĕ.

**Кирлĕ сăмахсем суйла** (лавккари уйрăмсем): аш-какай, гигиена таварĕсем, ĕçме, канфет-печени, пулă, çăкăр, сĕт-турăх, кăлпасси.

**5.** (наушники) **Хуравла. Экскурсие кайма кам мĕн илнĕ?**

| | Алина | Асамат | Атнер | Ирина | Тимур | Улине | Юман |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Фотоаппарат | | | √ | | | | |
| Шыв | | √ | √ | √ | | √ | |
| Салфетка | √ | | √ | √ | | √ | |
| Канфет | | √ | | √ | | | √ |
| Рубик шакмакĕ | | | | | √ | | |
| Хăлхалăх | | | √ | | √ | | |
| Хунар | | √ | | | | | √ |

**Хăлха́лăх** —хăлхана тăхăнса итлемелли хатĕр.

**6.** (ручка) **Сăмах каçмăша тултар. Мĕнле сăмах пытаннă?**



1. Хăш хулара «Чĕмпĕр чăваш шкулĕ. И.Я. Яковлев хваттерĕ» музей пур?
2. Ачасем Атăл хĕрринче мĕнсем караççĕ?
3. Кивĕ Майна хăш юхан шыв хĕрринче вырнаçнă?
4. Тутарстан тĕп хули мĕн ятлă?
5. Ăна Атнерпе Тимур çул çӳреве илнĕ.
6. Атăлçи Пăлхарăн пĕрремĕш патши мĕн ятлă?

**Урок 31**
1 стр.
**Название раздела: ШКУЛ. ВĂХĂТ. КĔРХИ ĂНСЕМ. АПАТ-ÇИМĔÇ**
**Название урока: ХĂВНА ТĔРĔСЛЕ**

**1.** (ручка) **Хуравла.**

| Темăсем | Баллсем | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1. Алфавит | 10 | 20 | 30 | 40 |
| 2. Словарьсем | 10 | 20 | 30 | 40 |
| 3. Николай Ашмарин | 10 | 20 | 30 | 40 |
| 4. Лексика | 10 | 20 | 30 | 40 |

Ыйтусем.

**1. Алфавит.**

10 балл. — Чăваш алфавитĕнче миçе сас палли?
20 балл. — Мĕнле сас паллисем чăваш алфавитĕнче кăна тĕл пулаççĕ?
30 балл. — Хытăлăх палли тата çемçелĕх палли хушшинче мĕнле сас палли тăрать?
40 балл. — Чăваш алфавитне хăш халăх алфавитне тĕпе хурса йĕркеленĕ?

**2. Словарьсем.**

10 балл. — Мĕн вăл словарь?
20 балл. — Словарьте сăмахсене мĕнле вырнаçтарнă?
30 балл. — Орфографи словарĕ мĕне вĕрентет?
40 балл. — Орфоэпи словарĕ мĕне вĕрентет?

**3. Николай Ашмарин.**

10 балл. — Кам вăл Николай Ашмарин?
20 балл. — Чăваш сăмахĕсен кĕнеки (словарь) миçе томлă?
30 балл. — Николай Ашмарин словарĕнче миçе сăмах?
40 балл. — Николай Ашмарина кампа танлаштараççĕ?

**4. Лексика.**

10 балл. — Усă курма пăрахнă, çĕннисемпе улăштарнă сăмахсене мĕнле сăмахсем теççĕ?
20 балл. — Япалипе пĕрле манăçа тухнă сăмахсене мĕнле сăмахсем теççĕ?
30 балл. — Нумай пулмасть усă курма пуçланă сăмахсене мĕнле сăмахсем теççĕ?
40 балл. — «Тетел» сăмах мĕнле сăмах шутне кĕрет (архаизм, неологизм, историзм)?

2 стр.

**2.** (ручка) **Йăнăшсене тӳрлет.**

1. Манăн тус рита ятлă. Унăн хушамачĕ васильева. Ашшĕ ячĕпе ăна петровна тесе чĕнеççĕ. Рита шупашкарта пурăнать. Вăл уроксем хыççăн «салампи» ушкăна юрлама çӳрет. Манăн тус ӳссен полина гагарина пек юрăçă пуласшăн.
2. Манăн юратнă кĕнеке «ылтăн панулми» ятлă. Кĕнеке авторĕ марина корягина.
3. Шупашкар атăл хĕрринче ларать. Атăл хĕрринче шупашкар, хусан, чĕмпĕр хулисем вырнаçнă.

**3.** (ручка) **Кашни йĕркере йăнăш çырнă сăмах туп.**

а) юрлать, пĕлеть, пулать, пурăнать;
ă) вылять, каять, çиеть, суять;
г) икĕ ача, виçĕ упа, çичĕ кун, вун иккĕ уйăх;

б) ил, кил, чечек, хĕвель;
в) пĕрремĕш, тăваттăмĕш, пилĕкмĕш, вуннăмĕш;
д) пĕр пуç, тăххăр çырла, çичĕ курăк, çĕр тус;
е) кужак, шăши, упа, мулкач;
ё) юлташ, пугане, ăшă, кăмак.

**4.** (ручка) **Таблицăна тултар. Мĕн тăвать? ыйтури сăмахсене çыр.**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | е | т |
| | | | е | т |
| | | | е | т |
| | | | е | т |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | | а | т | ь |
| | | | а | т | ь |
| | | | а | т | ь |
| | | | а | т | ь |

**5.** (ручка) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

1. Мĕнле?
2. Ăçти?
3. Хăçанхи?
4. Миçе?
5. Миçемĕш?
6. Мĕн ту?

а) пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш, тăваттăмĕш;
ă) уçăлса çӳре, ярăн, выля, сăн ӳкер;
б) ăслă, аслă, паллă, кăсăклă;
в) ялти, хулари, уйри, пахчари;
г) паянхи, ыранхи, ирхи, каçхи;
д) пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă.

**6.** (ручка) **Кирлĕ аффикс хуш.**

1. **-ри**, **-ти**: кинотеатр… кафе, шкул… пурнăç, çыру… сăмахсем, тинĕс… пулă, тухăç… халăх, кăнтăр… çимĕç, хаçат… сăн ӳкерчĕк, клас… ачасем, урам… çынсем, кил… ĕç.
2. **-рах (-рех)**, **-тарах (-терех)**: пысăк – пысăк…, вăйлă – вăйлă…, чипер – чипер…, кивĕ – кивĕ…, нумай – нумай…, хастар – хастар…, вăрăм… – вăрăм, сăпайлă – сăпайлă…, çĕнĕ – çĕнĕ… .

**Урок 32**
1 стр.
**Название раздела: АПАТ-ÇИМĔÇ** (ПРОДУКТЫ ПИТАНИЯ)
**Название урока: ÇУЛ ÇӲРЕВЕ ИЛНĔ АПАТ-ÇИМĔÇ**

**Мĕн аса илĕн?**

Сингармонизм саккунне, шавлă хупă сасăсене, пайăр ятсене, кăшкăрулла предложенисене, паллă ячĕн формисене аса илĕн.

**Мĕн вĕренĕн?**

Пĕр йышши подлежащиллĕ тата пĕр йышши дополнениллĕ предложенисемпе, сингармонизм саккунĕ пасăлнин сăлтавĕсемпе, мăшăр сăмахсемпе, чĕнӳ сăмахĕсемпе паллашăн.

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Подлежащи – предложенин тӗп членӗ. Вӑл **кам?** е **мӗн?** ыйтура тӑрать. Атнер, Алина, Асамат класра лараҫҫӗ. Атнер, Алина, Асамат — пӗр йышши подлежащисем пулаҫҫӗ.<br>Дополнени — предложенин кӗҫӗн членӗ. Дополненисем глагола, паллӑ ячӗпе наречие ӑнлантараҫҫӗ. Вӗсем пур падеж ыйтӑвӗсенче те тӑма пултараҫҫӗ. Юман ҫул ҫӳреве фотоаппарат, сунчӑк, апат-ҫимӗҫ илет. Фотоаппарат, сунчӑк, апат-ҫимӗҫ — пӗр йышши дополненисем пулаҫҫӗ. |

**1.** (ручка) **Пӗр йышши подлежащисене хӳреллӗ пӑнчӑпа уйӑр, тӳрӗ йӗрпе палӑрт.**

1. Пӑлхар Пӳлер Аслӑ Таяпа — авалхи хулашсем. 2. Шӑрттан чӑкӑт хуплу пӳремеч — чӑваш апат-ҫимӗҫӗ. 3. Юман Улине Тимук автобусра ҫывӑрса кайнӑ. 4. Шупашкарта ытларах чӑвашсем вырӑссем пурӑнаҫҫӗ. 5. Стена ҫинче сехет картина бра ҫакӑнса тӑрать.

**2.** (ручка) **Предложенисене кирлӗ сӑмахсем ларт. Пӗр йышши дополненисене пунктирлӑ йӗрпе палӑрт.**

1. Асанне … пӗҫерчӗ. 2. Ачасем фестивале … килнӗ. 3. Атнер ҫулла … каясшӑн. 4. Улине ... бутерброд турӗ. 5. Асамат шкула ... килнӗ.

**Кирлӗ сӑмахсем:** ҫупа, сырпа, помидорпа; кукӑль, пӳремеч, пицца; яла, лагере, кӑнтӑра; кӗнекесӗр, тетрадьсӗр; Хусантан, Мускавран, Чӗмпӗртен, Улатӑртан.

**3.** (наушники) **Ӳкерчӗксем тӑрӑх калав ту.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Рис. 33.1 50 х 50<br>Юман садится в автобус первым | Рис. 33.2 50 х 50<br>Юман садится возле окна и пристегивает пояс. | Рис. 33.3 50 х 50<br>Юман занимает свободное место для своего друга возле себя | Рис. 33.4 50 х 50<br>Атнер открывает воду с газом, и брызги летят на Юмана. |
| Рис. 33.5 50 х 50<br>Ирина дает Юману салфетку. | Рис. 33.6 50 х 50<br>Атнер надевает наушники и начинает слушать музыку. | Рис. 33.7 50 х 50<br>Юман повернулся к окну и стал смотреть в окно. | Рис. 33.8 50 х 50<br>Автобус трогается. |

2 стр.
1. Мана Ирина салфетка пачӗ. 2. Эпӗ автобуса пӗрремӗш кӗтӗм. 3. Эпӗ чӳрече енне ҫаврӑнтӑм. 4. Атнер газлӑ шыв уҫрӗ. Шыв ман ҫине те сирпӗнчӗ. 5. Атнер валли вырӑн йышӑнтӑм. 6. Автобус тапранчӗ. 7. Чӳрече умне лартӑм, пиҫиххи ҫыхрӑм. 8. Атнер хӑлхалӑх тӑхӑнчӗ те музыка итлеме пуҫларӗ.

**Си́рпӗнчӗ** — шыв тумламӗсем лекрӗҫ, тӑкӑнчӗҫ.
**Вы́рӑн йы́шӑнтӑм** — ку вырӑна ыттисене лартмарӑм.
**Авто́бус тапра́нчӗ** — автобус малалла кайрӗ.

**4.** (наушники). **Хуравла. Сан шутпа, Юман ҫине газлӑ шыв сирпӗнсен вӑл Атнере мӗн каланӑ-ши? Атнер Юмана мӗн каланӑ-ши? Кӑшкӑруллӑ предложенисем туп.**

| | |
|---|---|
| 1. Эсӗ мӗн тӑватӑн?<br>2. Ас ту!<br>3. Каҫар тархасшӑн! | 4. Асӑрхан!<br>5. Халь ман мӗн тумалла?<br>6. Лайӑх пулчӗ, тавтапуҫ! |

**5.** (наушники) **Ачасене ҫул ҫӳреве килтен мӗнле апат-ҫимӗҫ парса янӑ? Предложенисенче пӗр йышши подлежащисене, дополненисене туп. Вӑйлӑ формӑри паллӑ ятне туп.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Рис.1.1 Атнер<br>Мана анне кукӑль, пицца парса ячӗ. | Рис.1.2 Алина<br>Манӑн круасансем пур. Вӗсене шӑккалатпа, бананпа пӗҫерне. | Рис.1.3. Асамат<br>Асанне манӑн кутамккана ҫӑмарта, ҫӑкӑр, котлет чикнӗ. | Рис.1.4. Ирина<br>Эпӗ канфет, печени, вафли илтӗм. |
| Рис.1.5. Тимук<br>Эпӗ улма-ҫырла юрататӑп. Манӑн кутамккара пан улми, банан, груша выртать. | Рис.1.6. Улине<br>Эпӗ ҫул ҫинче ҫиме юратмастӑп. Эпӗ шыв, сӗткен чикрӗм. | Рис.1.7. Юман<br>Эпӗ бутербродсӑр пурӑнаймастӑп. Кӑлпассипе, сырпа, авокадӑпа тунӑ бутерброд питӗ тутлӑ. | Рис. 10 Дамир<br>Чи лайӑх апат — чак-чак. Ӑна чейпе, сӗткенпе, шывпа ҫиме пулать. |

**6**. (маски) **Мӑшӑрпа ӗҫле.**

– Эсӗ мӗнле апат-ҫимӗҫ юрататӑн?
– Эпӗ …, … юрататӑп.
– Эсӗ мӗнле апат-ҫимӗҫ юратмастӑн?
– Эпӗ …, … юратмастӑп.
– Эсир килте мӗн-мӗн пӗҫеретӗр?
– Эпир килте …, … пӗҫеретпӗр.

**Урок 33**
1 стр.
**Название раздела: АПАТ-ҪИМӖҪ** (ПРОДУКТЫ ПИТАНИЯ)
**Название урока: «ХУРАН КУКЛИ» КАФЕ**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Сӑмахра хытӑ уҫӑ сасӑсем те, ҫемҫе уҫӑ сасӑсем те пулсан вӑл хутӑш сӑмах шутланать: анне, пукане, кукаҫи. Кун пек сӑмахсенче сингармонизм саккунӗ пӑсӑлнӑ.<br>Чӑваш чӗлхинче падеж аффиксӗсем мӑшӑрлӑ пулаҫҫӗ. Хытӑ сӑмӑх ҫумне хытӑ аффикс хушӑнать, ҫемҫе сӑмах ҫумне ҫемҫе аффикс хушӑнать: вӑрман-**та**, кил-**те**, хула-**ран**, пӳлӗм-**рен**. Хӑш-пӗр аффикссем мӑшӑрсӑр: лаша-**сем**, чечек-**сем,** пӗрре-**мӗш**, ултта-**мӗш**. «Лашасем», «улттӑмӗш» сӑмахсенче уҫӑ сингармонизм саккунӗ пӑсӑлнӑ. Чӑваш чӗлхине вырӑс чӗлхинчен улшӑнмасӑр йышӑннӑ сӑмахсем уҫӑ сасӑсен килӗшӗвне пӑхӑнмаҫҫӗ: телефон, кафе, театр, машина, истори.<br>Икӗ сӑмахран пулнӑ сӑмаха хутлӑ сӑмах теҫҫӗ: асанне = аслӑ + анне, тумтир = тум + тир. Хутлӑ сӑмахра та уҫӑ сасӑсен килӗшӗвӗн саккунӗ пӑсӑлма пултарать. |

**1.** (ручка) **Сăмахсене виçĕ ушкăна пайла. Шавлă хупă сасăсене аялтан турт.**

Атăлçи, Пăлхар, Пӳлер, Сăвар, тăрăхĕнче, тинĕс, патшалăх, кукаçи, сĕтел.

| Хытă сăмахсем | Çемçе сăмахсем | Хутăш сăмахсем |
|---|---|---|
| | | |

**2.** (наушники) **Хăш сăмах ытлашши? Мĕншĕн? Хуравла. Пайăр ятсене туп.**
1. Çарăмсан, Сĕве, Атăл, Сăр. 2. Пăлхар, Пӳлер, Сăвар, Шупашкар. 3. Чăваш, çармăс, удмурт, ирçе. 4. Асатте, асанне, кукаçи, кукамай.

**3.** (ручка) **Тĕрĕс вариант çыр.**

**А. -сăр (-сĕр)**: кĕнеке-**сĕр**, шкул-**сăр**, пукан-…, чечек-…, сахăр-…, телефон-…, сехет-…, сухан-… .
**Ă. -па (-пе)**: анне-**пе**, юлташ-**па**, тус-…, клас-…, ручкă-…, Атнер-…, çăкăр-…, сĕт-… .

**4.** (наушники) **Аффикссене палăрт. Хуравла. Хăш сăмахсенче сингармонизм саккунĕ пăсăлнă?**

Кăшмансем, вуннăмĕш, ирхине, паянхи, ĕнерхи, иккĕмĕш, ĕнесем, упасем, сырăшсем, тинĕссем, вуннăмĕш, пиллĕкмĕш, авалхи, хĕллехи, çуллахи.

2 стр.
**5.** (наушники) **Ачасем апат çиме чарăннă. Улинепе Иринăн калаçăвне тĕрĕс йĕркеле.**

| | |
|---|---|
| ( ) И р и н а. Эсĕ мĕн çиме юрататăн вара?<br>( ) У л и н е. Сосиска çук пулсан чăх какайĕ илетĕп.<br>( И р и н а. Котлетпа фри çĕр улми çиес килет.<br>(1) У л и н е. Манăн хырăм выçрĕ.<br>( ) И р и н а. Эпĕ те вара чăх какайĕ илетĕп.<br>( ) У л и н е. Эпĕ котлет юратмастăп.<br>( ) И р и н а. Манăн та хырăм выçрĕ.<br>(7) У л и н е. Эпĕ сосиска çиме юрататăп.<br>( ) И р и н а. Менюра сосиска çук.<br>(3) У л и н е. Санăн мĕн çиес килет? | Рис. 34 50 х 50 Ирина и Улине выбирают в кафе что покушать. |

**6.** (наушники) **Менюпа паллаш.**

Афиша меню в кафе «Хуран кукли»
Рис. 35. 140 на 100 (по возможности облагородить, можно вставить маленькие рисунки)
**Меню**

| | |
|---|---|
| **Салатсем:**<br>Пахча çимĕç салачĕ 50 тенкĕ<br>«Цезарь» салат 80 тенкĕ<br>«Оливье» салат 70 тенкĕ<br>Грек салачĕ 100 тенкĕ<br><br>**Яшка, шӳрпе:**<br>Какай шӳрпи 120 тенкĕ<br>Пулă шӳрпи 100 тенкĕ<br>Кăшман яшки 70 тенкĕ<br>Чăх яшки 60 тенкĕ<br><br>**Хуран кукли:**<br>Тăпăрчă хуран куклийĕ 40 тенкĕ<br>Чие хуран куклийĕ 50 тенкĕ<br>Çĕр улми хуран куклийĕ 30 тенкĕ<br>Кăмпа хуран куклийĕ 50 тенкĕ | **Пулă, какай:**<br>Килти котлет 50 тенкĕ<br>Пельмень 80 тенкĕ<br>Чăх какайĕ 90 тенкĕ<br>Кĕркке пулă 140 тенкĕ<br><br>**Гарнирсем:**<br>Çĕр улми нимĕрĕ 30 тенкĕ<br>Фри çĕр улми 40 тенкĕ<br>Рис 20 тенкĕ<br>Макарон 15 тенкĕ<br><br>**Ĕçме:**<br>Чей 10 тенкĕ<br>Компот 20 тенкĕ<br>Сĕткен 25 тенкĕ<br>Кофе 30 тенкĕ |

**7.** (наушники) **Хуравла.**

1 «Хуран кукли» кафере эсĕ çиме мĕн илетĕн?
2. «Хуран кукли» кафере эсĕ ĕçме мĕн илетĕн?
3. Сана кафере апат çиме миçе тенкĕ кирлĕ пулать?
4. Сирĕн хулара (ялта) мĕн ятлă кафесем пур?
5. Эсĕ кафене çӳретĕн-и? Хăш кафене çӳретĕн?

**Урок 34**
1 стр.
**Название раздела: АПАТ-ÇИМĔÇ** (ПРОДУКТЫ ПИТАНИЯ)
**Название урока: САВĂТ-САПА**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Мăшăр сăмахсем пĕтĕмлетӳ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем шутланаççĕ. Мăшăр сăмахсем е синонимсем, е антонимсем, е пĕр йышши ăнлава пĕлтерекен сăмахсем пулаççĕ. Вĕсем икĕ сăмахран тăраççĕ. Мăшăр сăмахсене дефиспа çырмалла: çăкăр-тăвар, апат-çимĕç, савăт-сапа, ача-пăча, паян-ыран. |

**1.** (наушники) **Мăшăрне туп. Мăшăр сăмахсене виçĕ ушкăна пайла:**
**а) синонимсем; ă) антонимсем; б) пĕр ăнлава пĕлтерекен сăмахсем.**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| кашăк | | турăх | атă | | анне |
| сĕт | | çырла | сĕтел | | пукан |
| аш | | чашăк | атте | | ура |
| улма | | пĕремĕк | ир | | пушмак |
| канфет | | какай | алă | | каç |

**2.** (ручка) **Мăшăр сăмахсем çыр.**

1. Шăрттан, кăлпасси, ветчина, котлет, сосиска – …
2. Зефир, мармелад, вафли, печени, шăккалат – …
3. Кроссовка, туфли, сантали, кеда, бутса – …
4. Чие, хăмла çырли, çĕр çырли, хурлăхан, груша – …
5. Шкап, диван, кресло, кравать, тумба – …
6. Хăйма, çу, тăпăрчă, кефир, йогурт – …

**3**. (наушники) **Савăт-сапапа паллаш.**
Рис. 36 70 х 100 12 рисунков расположить по кругу. В центре написать **савăт-сапа** (посуда) под рисунками названия на чувашском *** ДАТЬ ЮЛЕ ЛУТОШКИНОЙ (картинку взять из 1001 слова).

Чей курки (кружка), хуран (котелок), кастрюль, çатма (сковорода), çĕçĕ (нож), чашăк (чашка, миска), кашăк (ложка), турилкке (тарелка), чӳлмек (горшок), çăпала (половник), ывăс (разделочная доска), тăвар савăчĕ (солонка).

2 стр.
**4.** (наушники) **Тупсăмне туп.**

1. Унпа пахча çимĕç, аш-какай, çăкăр касаççĕ. Мĕн вăл?
2. Ун çинче пахча çимĕç, аш-какай, çăкăр касаççĕ. Мĕн вăл?
3. Унта яшка, пельмень, пăтă, макарон пĕçереççĕ. Мĕн вăл?
4. Унпа кăмакара шаркку пĕçереççĕ. Мĕн вăл?
5. Унпа чей, сĕт, компот, сĕткен ĕçеççĕ. Мĕн вăл?
6. Унпа кăвайт çинче пулă шӳрпи пĕçереççĕ. Мĕн вăл?
7. Унпа çăмарта, çĕр улми, котлет, кăмпа ăшалаççĕ. Мĕн вăл?

**5.** (наушники) **Полилога вула. Хăш сăмахсенче калаçура сасăсем ылмашăнма пултараççĕ?**

Э к с к у р с и   и р т т е р е к е н. Ачасем, вăйă вылятпăр-и? Кам вылясшăн?
А т н е р. Эпĕ.
А л и на. Эпĕ те.
У л и н е. Эпĕ çывăрасшăн.
И р и н а. Эсĕ çывăр. Эпĕ сана беруши пама пултаратăп.
А с а м а т. Мĕнле вăйă вылятпăр?
Э к с к у р с и   и р т т е р е к е н. «Тăваттăмĕшĕ ытлашши» вăйă. Эпĕ сире тăвата сăмах калатăп. Сирĕн хăш сăмах ытлашши пулнине пĕлмелле. Пуçлатпăр! Хуран, çатма, çĕр çырли, турилкке.
А т н е р. Çĕр çырли!
Ю м а н. Мĕншĕн çĕр çырли? Вăл икĕ сăмахран тăрать, çавăнпа-и?
А т н е р. Çук ĕнтĕ. Çĕр çырли савăт-сапа мар.
Э к с к у р с и   и р т т е р е к е н. Тĕрĕс. Маттур, Атнер! Халь Атнер сăмахсем калать.
А т н е р.  Кайăк, чул, чĕр чун, çын.
А л и н а. Чул! Чул чĕрĕ мар.

А т н е р. Тӗрӗс, Алина! Халь санӑн черет.
А л и н а. Апельсин, пан улми, лимон, мандарин.
А р т ё м С е р г е е в и ч. Е лимон. Вӑл йӳҫӗ. Е пан улми. Вӑл цитрус мар.
А л и н а. Тӗрӗс. Эпӗ лимон ҫинчен шутламан та.
А р т ё м С е р г е е в и ч. Ҫил, кушак, яшка, йытӑ.
Э к с к у р с и и р т т е р е к е н. Эпӗ каласшӑн! Калама юрать-и?
А р т ё м С е р г е е в и ч. Калӑр!
Э к с к у р с и и р т т е р е к е н. Кушак. Вӑл кӑна вӗрмест.
А р т ё м С е р г е е в и ч. Тӗрӗс. Сире парне! Шӑккалат!

**Чӗрӗ** – вӑл сывлать, шыв ӗҫет, ӳсет, вилет.

**6.** (ручка) **Диалогпа усӑ кур. Текстра кирлӗ сӑмахсем ларт.**

Ачасем автобусра «… ытлашши» вӑййӑ выляҫҫӗ. Пӗр ачан ... сӑмах каламалла. Пӗр сӑмахӗ ... пулмалла. Ытти ачасен ҫав сӑмаха ... . Артём Сергеевич ... шӑккалат парнелет.

**Кирлӗ сӑмахсем:** пӗлмелле, ҫӗнтерӳҫӗне, тӑватӑ, Тӑваттӑмӗш, ытлашши.

## Урок 35

1 стр.

**Название раздела: АПАТ-ҪИМӖҪ** (ПРОДУКТЫ ПИТАНИЯ)

**Название урока: ЧӐВАШ ХАЛӐХ АПАЧӖ**

(восклицательный знак)

Чӑваш чӗлхинче япала ячӗсен камӑнлӑх форми пур. Япала камӑн е мӗнӗн пулнине ятарлӑ аффикссемпе палӑртма пулать.

| Сӑпат местоиме-име-нийӗсем | Хупӑ сасӑпа пӗтекен сӑмахсем | | | Уҫӑ сасӑпа пӗтекен сӑмахсем | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | хытӑ | ҫемҫе | [д], [т], [д’], [т’] | хытӑ | ҫемҫе | [у] | [ӳ] |
| | тус | чечек | сехет | ача | чӗлхе | ҫыру | пӗлӳ |
| Манӑн | тус, тус**ӑм** | чечек, чечек**ӗм** | сехет, сехет**ӗм** | ача, ача**м** | чӗлхе, чӗлхе**м** | ҫыру, ҫыр**ӑвӑм** | пӗлӳ, пӗл**ӗвӗм** |
| Санӑн | тус**у** | чечек**ӳ** | сехет**ӳ** | ач**у** | чӗлх**ӳ** | ҫыр**ӑву** | пӗл**ӗвӳ** |
| Унӑн | тус**ӗ** | чечек**ӗ** | сехе**чӗ** | ач**и** | чӗлх**и** | ҫыр**ӑвӗ** | пӗл**ӗвӗ** |
| Пирӗн | тус, тус**ӑмӑр** | чечек, чечек**ӗмӗр** | сехет, сехет**ӗмӗр** | ача, ача-**мӑр** | чӗлхе, чӗлхе**мӗр** | ҫыру, ҫыр**ӑвӑмӑр** | пӗлӳ, пӗл**ӗвӗмӗр** |
| Сирӗн | тус**ӑр** | чечек**ӗр** | сехет**ӗр** | ач**ӑр** | чӗлх**ӗр** | ҫыр**ӑвӑр** | пӗл**ӗвӗр** |
| Вӗсен | тус**ӗ** | чечек**ӗ** | сехе**ч(ӗ)** | ач**и** | чӗлх**и** | ҫыр**ӑвӗ** | пӗл**ӗвӗ** |

Япала камӑн е мӗнӗн пулнине палӑртма икӗ вариантпа усӑ кураҫҫӗ: **унӑн тусӗ** е **тусӗ**, **санӑн чечекӳ** е **чечекӳ** тесе калама пулать.

**1.** (ручка) **Кирлӗ аффикс ларт.**

**Тĕслĕх:** Санăн (кĕпе) — санăн кĕпӳ.

1. Санăн (кĕпе), санăн (пушмак), санăн (курка), санăн (сĕтел), санăн (парне).
2. Унăн (телефон), унăн (кушак), унăн (кутамкка), унăн (тетрадь), унăн (кĕнеке).
3. Сирĕн (ҫӳрев), сирĕн (пулăшу), сирĕн (урок), сирĕн (вăхăт), сирĕн (кил).
4. Вĕсен (ҫурт), вĕсен (шкул), вĕсен (ĕҫ), вĕсен (компьютер), вĕсен (хула).

**2**. (стрелки) **Тĕрĕс ҫыхăнтар. Камăнлăх аффиксĕсене палăрт.**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Чăваш | шӳрпи | | ҫĕр | сĕчĕ |
| Гагарин | вулавăшĕ | | *ыраш* | ҫырли |
| Наци | Республики | | хуран | пăтти |
| какай | вăййи | | рис | хули |
| компьютер | палăкĕ | | ĕне | кукли |
| хур | какайĕ | | Шупашкар | ҫăнăхĕ |

**Ыра́ш** — тырă-пулă, уйра ӳсет, унран хура ҫăкăр пĕҫереҫҫĕ.

2 стр.
**3. (наушники) Хуравла. Мĕн вăл?**

1. Ку апат сăваплă апат-ҫимĕҫ шутланнă. Ăна кăмакара пĕҫернĕ.
2. Ку чăваш халăх апачĕ, ҫаврака кукăль, ăна чустапа какайран тунă. Кăмакара пĕҫернĕ.
3. Ку апат-ҫимĕҫе ытларах хĕлле ҫинĕ. Ҫулла валли ăна тăварланă.
4. Ку пахча ҫимĕҫе XIX ĕмĕрĕн вĕҫĕнче ҫиме пуҫланă. Халь вăл пур пахчара та ӳсет.
5. Ку чăваш халăх апачĕ, ăна тăпăрчăран тунă. Кăмакара пĕҫернĕ.
6. Ку чăваш халăх апачĕ, пĕчĕк кукăль, ăна чустапа тăпăрчăран тунă. Хуранта пĕҫернĕ.
7. Ку чăваш халăх апачĕ, ăна какайран тунă. Кăмакара икĕ-виҫĕ кун тытнă.

**Сăва́плă** — хисеплĕ.

**4**. (наушники) **Текста вула. Виҫҫĕмĕш ĕҫри ыйтусен хуравĕсене текстра туп.**

Чăвашсем ансат апат ҫинĕ. Апачĕ тутлă та усăллă пулнă: серте-пултран, сĕт-турăх, аш-какай. Ҫырмара пулă тытнă, вăрманта ҫырла-мăйăр пуҫтарнă. Тырă-пулă, пахча ҫимĕҫ ӳстернĕ.

Чăваш пур апата та ҫăкăрпа ҫинĕ. Ҫăкăр сăваплă ҫимĕҫ шутланнă, ăна ҫемьере аслисем кăна каснă. Ҫăкăра ытларах ыраш ҫăнăхĕнчен пĕҫернĕ. Ҫăнăхран тем те хатĕрленĕ: кулач, икерчĕ, пӳремеч, хуплу, хуран кукли, ҫăмах, кукăль. Хуплу — ҫаврака кукăль, ăна какайран тунă, кăмакара пĕҫернĕ.

Чăваш тĕрлĕ яшка пĕҫернĕ: какай шӳрпи, пулă шӳрпи, серте яшки, вĕлтĕрен яшки, пултран яшки, сĕт яшки, ҫăмах яшки тата ытти те.

Ĕлĕк-авал сивĕтмĕш пулман, ҫавăнпа аш-какай ытларах хĕлле ҫинĕ.

Ҫĕр улмине вара XIX ĕмĕрĕн вĕҫĕнче кăна ҫиме тытăннă.

Кашни килте ĕне пулнă. Ĕне сĕтĕнчен турăх, тăпăрчă, хăйма тунă. Турăх ҫине симĕс сухан ярса ҫинĕ. Хăймаран ҫу тунă. Тăпăрчăран чăкăт пĕҫернĕ. Чăваш хăнана кайнă

чух кукăль, чăкăт, хур какайĕ илнĕ. Хăнасене какай шӳрпипе, сăрапа кĕтсе илнĕ. Хăна умне шăрттан лартнă. Шăрттан чăвашсен чи паха апачĕсенчен пĕри шутланать. Ăна какайран пĕçернĕ, кăмакра 2–3 кун тытнă. «Хăна килсен аш пиçет, аш пиçмесен пит пиçет», – тенĕ чăвашсем.

**Ансáт апáт** — пĕçерме çăмăл апат.
**Çăмáх** — пĕчĕк чуста татăкĕ, ăна яшкана яраççĕ.

**5.** (наушники) **«Хăна килсен аш пиçет, аш пиçмесен пит пиçет» ваттисен сăмахне мĕнле ăнланатăн?**

1. Хăна килсен аш пĕçерет.
2. Хăнана тутлă апат-çимĕçпе кĕтсе илмелле.
3. Хăнана тутлă апат-çимĕçпе кĕтсе илмелле мар.

**Пиçéт** — çиме хатĕр пулать.
**Пит пиçéт** – пит хĕрелет.

**Урок 36**
1 стр.
**Название раздела: АПАТ-ÇИМĔÇ** (ПРОДУКТЫ ПИТАНИЯ)
**Название урока: СĔТ-ТУРĂХ**
(восклицательный знак)

Чĕнӳ сăмахĕсем – кама е мĕне чĕнсе каланине кăтартакан сăмахсем. Вĕсем предложени членĕсем пулмаççĕ. Чĕнӳ сăмахĕсем предложенире тĕрлĕ вырăнта тăма пултараççĕ. Вĕсене çырура хӳреллĕ пăнчă е кăшкăру палли лартса уйăраççĕ: **Ачам,** кил-ха кунта. **Коля!** Урама тух! **Хисеплĕ вĕрентекен**, уяв ячĕпе саламлатăп.

**1.** (ручка) **Предложенисенче чĕнӳ сăмахĕсене чарăну паллисемпе уйăр.**

1. Сывă-и юратнă аннем? 2. Тух-ха Тимук урама! 3. Мучи сана пулăшмалла-и?
4. Кинемей сире миçемĕш троллейбус кирлĕ? 5. Тăван чĕлхем Таса хĕлхем! (Митта Ваçлейĕ). 6. Сывă пулăр ачасем! 7. Тепре тĕл пуличчен юлташăм! 8. Йăмăкăм сана çуралнă кун ячĕпе саламлатăп!

**Хĕлхéм** — вут-çулăмăн питĕ пĕчĕк пайĕ.

**2.** (земной шар) **Пĕлме кăсăклă. Танлаштару форминчи паллă ячĕсене туп.**

Авалхи йĕрке тăрăх, чăвашсем ĕлĕк пĕр-пĕрне ятран сахал чĕннĕ. Чĕнмелли сăмахĕсем тĕрлĕрен пулнă: анне, атте. Ашшĕ-амăшĕсем ачисене — ывăлăм, хĕрĕм е ачам тесе каланă. Палламан çынсем те çамрăкрах çынсене ывăлăм, хĕрĕм е ачам тесе чĕннĕ. Ватăрах çынсем ачасене мăнукăм теме пултарнă. Пĕр тăвансем шăллăм, йăмăкăм, пичче, аппа тенĕ. Ачасем хăйсенчен аслăрах çынсене ячĕ çумне «пичче», «аппа» сăмахсем хушнă. Палламан ватă çынсене чĕннĕ чух «мучи», «кинемей» сăмахсемпе усă курнă.

**Мучи́** — хисеплĕ ватă арçын.

**Кинеме́й** — хисеплӗ вата хӗрарӑм.

**3.** (наушники) **Ача ытти ҫынсене мӗнле чӗнме пултарать? Тӗрӗс ҫыхӑнтар.**

| | | |
|---|---|---|
| 1. Ача тантӑша мӗнле чӗнет? | | асатте, асанне |
| 2. Ача палламан ачана мӗнле чӗнме пултарать? | | кукаҫи, кукамай |
| 3. Ача пӗр тӑвана мӗнле чӗнме пултарать? | | пичче, аппа |
| 4. Ача ашшӗ-амӑшне мӗнле чӗнет? | | (ятран) |
| 5. Ача аслашшӗ-асламӑшне мӗнле чӗнет? | | мучи, кинемей |
| 6. Ача кукашшӗ-кукамӑшне мӗнле чӗнет? | | ачи, хӗр ачи |
| 7. Ача палланӑ аслӑрах ҫынна мӗнле чӗнме пултарать? | | аппа, пичче, йӑмӑк, шӑллӑм |
| 8. Ача палламан аслӑрах ҫынна мӗнле чӗнме пулта-рать? | | (ятран) + пичче, (ятран) + аппа |
| 9. Ача палламан ватӑ ҫынна мӗнле чӗнме пултарать? | | атте, анне |

**4.** (маски) **Диалога вула.**

М ӑ н у к ӗ. Кукамай, эсӗ коктейль тума пӗлетӗн-и?
К у к а м ӑ ш ӗ. Пӗлетӗп. Мӗн вӑл коктейль?
М ӑ н у к ӗ.  Ӑна сӗтрен тӑваҫҫӗ. Ванильлӗ, шӑккалатлӑ, ҫырлаллӑ коктейль пулать.
К у к а м ӑ ш ӗ. Эсӗ хӑшне ӗҫесшӗн?
М ӑ н у к ӗ.  Эпӗ ҫырлаллӑ коктейль юрататӑп.
К у к а м ӑ ш ӗ. Атя сӗт илетпӗр те унта ҫырла яратпӑр. Пирӗн шӑнтнӑ ҫӗр ҫырли нумай.

2 стр.
(продолжение диалога)
М ӑ н у к ӗ. Кукамай, коктейль кун пек тумаҫҫӗ. Акӑ эпӗ Интернетра рецепт тупрӑм. Малтан блендерпа 200 грамм ҫырла вӗтетмелле. Кайран пӗр литр сӗт пайӑн-пайӑн ямалла, кӑпӑкланиччен пӑтратмалла. Виҫӗ апат кашӑкӗ пыл хушса тата пӑтратмалла. Пулчӗ.
К у к а м ӑ ш ӗ. Коктейль тума питӗ ҫӑмӑл. Атя тӑватпӑр.

**Шӑ́нтнӑ (шӑнт) ҫӗр ҫырли́** — морозильникра упранӑ ҫӗр ҫырли.
**Кӑпӑкланиччӗ́н (кӑпӑкла́н)** — хӑмпӑсем пуличчен.

**5.** (наушники) **Ӳкерчӗксене рецепт тӑрӑх вырнаҫтар.**

Рис. 37 Нужно нарисовать рисунки по рецепту коктейла и потом их перепутать, расположив в следующем порядке: Рис 37_4, 37_2, 37_5, 37_1, 37_3

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Рис. 37_1 50 х 50 клубника в блендере | Рис. 37_2 50 х 50 молоко наливается в блендер | Рис. 37_3 50 х 50 взбитое до пены молоко с ягодами | Рис. 37_4 50 х 50 добавление меда и размешивание | Рис. 37_5 50 х 50 сверху положить клубнику. |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | (частями) | (коктейль) | | |

**6.** (земной шар) **Пĕлме кăсăклă. Вăйлă формăри паллă ятне туп.**

Биологсем каланă тăрăх, Çĕр çинче 6500 (ултă пин те пилĕк çĕр) ытла сĕтпе ӳстерекен чĕр чун. Этем (лат. Homo sapiens) те вĕсен шутне кĕрет. Сĕт этем пурнăçĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнать. Эпир çуралсанах анне сĕчĕпе ӳсетпĕр. Кайран качака е ĕне сĕтне ĕçме пуçлатпăр. Тĕрлĕ вырăнта çынсем лаша, сурăх, тĕве, пăлан, лама, буйвол сĕчĕсене ĕçеççĕ. Лаша сĕтĕнчен кăмăс тăваççĕ, тĕве сĕтĕнчен шубат тăваççĕ. Кăмăспа шубат – турăх е кефир пек ĕçмесем. Сурăх сĕтĕнчен брынза, сыр тăваççĕ.

**Этéм** — çын.

**7.** (наушники) **Тĕрĕс-и? Тĕрĕс мар-и?**

1. Биологсем каланă тăрăх, Çĕр çинче пин те пилĕк çĕр ытла сĕтпе ӳстерекен чĕр чун. 2. Этем хăйĕн ачине сĕтпе ӳстермест. 3. Сĕт этем пурнăçĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнать. 4. Эпир çуралсанах ĕне сĕчĕпе ӳсетпĕр. 5. Этем качака е ĕне сĕтне ĕçмест. 6. Тĕрлĕ вырăнта çынсем лаша, сурăх, тĕве, пăлан, лама, буйвол сĕчĕсене ĕçеççĕ. 7. Лаша сĕтĕнчен турăх тăваççĕ. 8. Тĕве сĕтĕнчен шубат тăваççĕ. 9. Кăмăспа шубат – турăх е кефир пек ĕçмесем. 10. Лаша сĕтĕнчен брынза тăваççĕ.

**8**. (ручка) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| биологсем | | ӳстерекен | | тĕрлĕ | | шубат тăваççĕ |
| Çĕр | | йышăнать | | лаша сĕтĕнчен | | вырăнта |
| сĕтпе | | çинче | | сурăх сĕтĕнчен | | кăмăс тăваççĕ |
| вĕсен шутне | | каланă тăрăх | | тĕве сĕтĕнчен | | вĕсен шутне кĕрет |
| пысăк вырăн | | кĕрет | | этем те | | брынза тăваççĕ |

**Урок 37**
1 стр.
**Название раздела: ÇУЛТАЛĂК ВĂХĂЧĔ. ХĔЛЛЕХИ КУНСЕМ** (ВРЕМЕНА ГОДА. ЗИМА)
**Название урока: ПĂЛХАР ХУЛАШĔ ЮРПА КĔТСЕ ИЛЕТ**

**Мĕн аса илĕн?**

Паллă ячĕсен формисене, мăшăр сăмахсене, чĕнӳ сăмахĕсене, хутăш сăмахсене аса илĕн.

**Мĕн вĕренĕн?**

Интонаципе, сăмахăн тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсемпе, антонимсемпе, синонимсемпе, пĕр йышши сказуемăйлă предложенисемпе, хыç сăмахсемпе паллашăн.

(восклицательный знак)

Интонаци — пуплев пуламĕ. Интонаципе кăмăла палăртма пулать. Предложение савăнса, тĕлĕнсе, кăшкăрса, хушса, ыйтса калама пулать. Ыйтуллă предложенире ыйту сăмахĕсене тата ыйту татăкĕсене палăртса калатпăр. Анлă предложенире кирлĕ сăмах хыççăн тăхтав тăватпăр: *Эпĕ* | паян ачасемпе кинона каятăп. Эпĕ *паян* | ачасемпе кинона каятăп. Эпĕ паян *ачасемпе* | кинона каятăп. Эпĕ паян ачасемпе *кинона* | каятăп.

**1.** (наушники) **Предложенисене тĕрлĕ интонаципе вула.**

1. **Пĕрремĕш юр** | çусан ачасем юрпа пемелле вылярĕç.
2. Пĕрремĕш юр **çусан** | ачасем юрпа пемелле вылярĕç.
3. Пĕрремĕш юр çусан **ачасем** | юрпа пемелле вылярĕç.
4. Пĕрремĕш юр çусан ачасем **юрпа пемелле** | вылярĕç.

**2.** (наушники) **Предложени вĕçĕнчи чарăну паллисене пăхса тĕрлĕ интонаципе вула.**

1. Эпĕ паян «пиллĕк» илтĕм.
2. Эпĕ паян «пиллĕк» илтĕм!
3. Эсĕ паян «пиллĕк» илтĕн-и?

**3.** (наушники) **Предложение тĕрлĕ кăмăл-туйăмпа кала.**



| | | |
|---|---|---|
| Паян шкула каймалла мар. | | Хурланса (грустный) |
| Паян шкула каймалла мар. |  | Савăнса (радостный) |
| Паян шкула каймалла мар-и? |  | Тĕлĕнсе (удивленный) |
| Паян шкула каймалла мар. |  | Хăраса (испуганный) |

2 стр.

**4.** (наушники) **Диалога тĕрлĕ интонаципе вула (савăнăçлă, тарăхса). Чĕнӳ сăмахĕ туп.**

Экскурси ирттерекен. Ачасем, эпир Пăлхара çитрĕмĕр.
Артём Сергеевич. Пăлхар хулашĕ пире пĕрремĕш юрпа кĕтсе илет! Атьăр пĕрремĕш юр ячĕпе пĕр-пĕрне саламлатпăр!
Ачасем. Саламлатăп! Саламлатăп! Саламлатăп! Пĕрремĕш юр ячĕпе!!!

5. (наушники) **Пăлхар хулашĕпе паллаш.**

Рис. 38 140 х 200 (найти на карте те достопримечательности, которые указаны ниже)




1. Информаци центрĕ. (Турист. Инф. центр) 2. Анăç хапхи. (Западные ворота) 3. «Икерчĕ çурчĕ» кафе. (Кафе «Блинная») 4. Пăлхар цивилизацийĕн музейĕ. (Музей болгарской цивилизации) 5. Çырулăх музейĕ. (Музей письменности) 6. Тĕп мечет. (Соборная мечеть) 7. Аслă минарет. (Большой минарет) 8. Успени чиркĕвĕ. (Успенская церковь) 9. Хан керменĕ. (Ханский дворец) 10. Хансен мунчи. (Ханская баня) 11. Хура палата. (Черная палата) 12. «Хан таврашĕн» авалхи сăн-сăпатне тавăрса кăтартакан лапам. (Площадка исторической реконструкции «Ханская ставка») 13. Шурă палата (Белая палата) 14. Кăнтăр хапхи. (Южные ворота) 15. Çăкăр музейĕ. (Музей хлеба) 16. Тухăç хапхи. (Восточные ворота)

**6**. (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

1. Пăлхар хулашĕ ăçта вырнаçнă? (Атăл хĕрринче, Сĕве хĕрринче)
2. Пăлхар хулашĕн миçе хапха? (тăвата, виçĕ, икĕ)
4. Тĕп мечетпе юнашар мĕн вырнаçнă? (Шурă палата, Успени чиркĕвĕ, Тухăç хапхи)
5. Тĕп мечет ăçта вырнаçнă? (çурçĕр енче, анăç енче, кăнтăр енче)
6. Атăл хĕрринче мĕн-мĕн вырнаçнă? (Информаци центрĕ, Хура палата, Пăлхар цивилизацийĕн музейĕ)

**Урок 38**

1 стр.

**Название раздела: ÇУЛТАЛĂК ВĂХĂЧĔ. ХĔЛЛЕХИ КУНСЕМ** (ВРЕМЕНА ГОДА. ЗИМА)

**Название урока: ХӖЛЛЕХИ ӲКЕРЧӖК**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Кашни сăмахăн хăйĕн пĕлтерĕшĕ пур. Пĕр сăмах пĕр ăнлава пĕлтерет пулсан ăна пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмах, темиҫе ăнлава пĕлтерет пулсан нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах теҫҫĕ. Сăмахсен пĕлтерĕшĕсем тӳрĕ те, куҫăмлă та пулма пултараҫҫĕ. Пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсем яланах тӳрĕ пĕлтерĕшпе ҫӳреҫҫĕ: ҫӳҫ, юман, виҫҫĕ. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тӳрĕ те, куҫăмлă та пулаҫҫĕ: Ача пукан ҫине **ларчĕ**. / Кăҫал хĕл ир **ларчĕ**. **Тимĕр** чашăк. / **Тимĕр** шапа. Сăмахсен куҫăмлă пĕлтерĕшĕ сăмах майлашăвĕсенче ҫеç палăрать. |

**1.** (ручка) **Таблицăна тултар.**

Ача ури — сĕтел ури; ăшă кăмăл — ăшă сĕт; кайăк сăмси — ҫăкăр сăмси; сивĕ ҫанталăк — сивĕ сăмах; ҫын куҫĕ — чӳрече куҫĕ; ылтăн алă – ылтăн кашăк.

| Тӳрĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | Куҫăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсем |
|---|---|
| … | … |

**2.** (ручка) **Предложенисемпе усă курса «Хĕллехи ӳкерчĕк» калав ҫыр.**
(написать слова в виде кластера!)

| | | |
|---|---|---|
| Ачасем юрпа пемелле выляҫҫĕ. | Урамра сивĕ. | Таврара шап-шурă юр выртать. |
| Йывăҫсем хĕллехи тум тăхăннă. | **Хĕллехи ҫанталăк** | Уй-хир шур пĕркенчĕкпе витĕннĕ. |
| Кăпăшка юр ҫăвать. | Хĕл ларчĕ. | Шывсем пăрпа хупланнă. |

**Пĕркенчĕкпé** — ҫӳхе утиялпа, унпа кравате витеҫҫĕ.
**Витéт** — хуплать.
**Кăпăшкá** — ҫемҫе, мамăк пек.

**3.** (наушники) **Сăвва вула. Куҫăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене туп. Вăйлă формăри паллă ятне тата мăшăр сăмах туп.**

Э к с к у р с и   и р т т е р е к е н. Манăн сăвă йĕркисем пур.

| | |
|---|---|
| Авалхи Пăлхар умра —<br>Йăлтах шап-шурă таврара.<br>Юр айĕнче чиркӳ-мечет<br>Ĕлĕкхи ҫинчен *пуплет.* | Хан керменĕ, тĕп мечет<br>Аваллăх тĕнчине чĕнет.<br>Вĕсем калас сăмахсене<br>Хĕл пĕркенчĕкпе витет. |

**Йăлтáх** — веҫех.
**Пуплéт** — калаҫать.

**4**. (ручка) **Предложенисене вĕҫле.**

1. Атнер асламăшĕпе … . 2. Амăшĕ ачине утиялпа … . 3. Юман Тимука урама … .

**Кирлĕ сăмахсем:** витет, пуплет, чĕнет.

2 стр.
**5.** (наушники) **Вула**. **Куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене туп.**

Э к с к у р с и  и р т т е р е к е н. Ачасем, халь эпĕ сире «Мăн асаттесен йĕрĕпе» экскурси маршручĕпе паллаштаратăп.

| | | |
|---|---|---|
| Пăлхар цивилизацийĕн музейĕ.<br>Кунта эсир Атăлçи Пăлхарăн пуян историйĕпе, культурипе паллашатăр. Музей залĕсенче эсир X–XV ĕмĕрсенчи археологи экспоначĕсене куратăр. Вĕсене ку вырăнта археологи ĕçĕсем тунă чухне тупнă. | | Рис. 39_1 50 x 50<br>Музей болгарской цивилизации |
| Рис. 39_2 50 x 50<br>Соборная мечеть | Тĕп мечет.<br>XIII ĕмĕрти архитектура палăкĕ. Вăл Авалхи Пăлхарта тĕп çурт пулнă. Кунта мусульмансем кĕлĕ тунă, тĕрлĕ йăла-йĕрке ирттернĕ. Халь те Тĕп мечет ислама ĕненекенсемшĕн сăваплă вырăн шутланать. | |
| Хан керменĕ.<br>XIII ĕмĕрти архитектура палăкĕ. Ăна пăлхарсем шурă чултан тунă, Тĕп мечетрен маларах лартнă. Унăн никĕсĕпе хӳмин пĕчĕк пайĕ кăна сыхланса юлнă. | | Рис. 39_3 50 x 50<br>Ханский дворец |

**6**. (наушники) **Текстпа усă курса тĕрĕс çыхăнтар**.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Пăлхар | | палăкĕ | Атăлçи | | ĕçĕсем |
| архитектура | | Пăлхар | сыхланса | | тунă |
| Тĕп | | мечет | тĕрлĕ | | юлнă |
| сăваплă | | цивилизацийĕ | археологи | | Пăлхар |
| авалхи | | керменĕ | шурă чултан | | йăла-йĕрке |
| Хан | | вырăн | кĕлĕ | | тунă |

**7.** (наушники) **Текстпа усă курса хуравла**.
1. Пăлхар цивилизацийĕн музейĕнче мĕнпе паллашма пулать?
2. Музей залĕсенче миçемĕш ĕмĕрсенчи археологи экспоначĕсем пур?
3. Тĕп мечетре мусульмансем мĕн-мĕн тунă?
4. Хăш архитектура палăкĕ лайăхрах сыхланса юлнă?
5. Пăлхарсем Хан керменне мĕнрен тунă?

**Урок 39**
1 стр.

**Название раздела: ÇУЛТАЛĂК ВĂХĂЧĔ. ХĔЛЛЕХИ КУНСЕМ** (ВРЕМЕНА ГОДА. ЗИМА)
**Название урока: ÇĔНĔ ÇУЛ**

(восклицательный знак)

Антонимсем — хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: пысăк — пĕчĕк, ăшă — сивĕ, кĕр — тух.
Синонимсем — пĕр пек пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: хитре — илемлĕ, аш — какай, калаç — пупле.
Антонимсем те, синонимсем те пĕр пуплев пайĕнчен пулаççĕ.

**1.** (ручка) **Антонимсем пулакан сăмахсене туп та аялтан турт.**

Атте-анне, ăшă — …, ĕçчен — …, ир- …, нумай — …, пĕрле — …, пуçла — …, савăнăçлă — …, çемçе — …, çĕнĕ — …, уçă — …, хальхи — …, ывăл - …, ыйт — … .

**Кирлĕ сăмахсем:** авалхи, вĕçле, каç, кахал, кивĕ, салхуллă, сахал, сивĕ, уйрăм, хĕр, хупă, хуравла, хытă.

**2.** (ручка) **Синонимсем туп. Хутăш сăмахсене аялтан турт.**

Авалхи, ăстала, йăваш, лайăх, мелоди, тус, уяр, ӳркенчĕк, хайлав, хаваслă, хитре.

**Кирлĕ сăмахсем:** аван, ĕлĕкхи, кĕвĕ, лăпкă, произведени, савăнăçлă, ту, хĕвеллĕ, чипер, юлташ, юлхав.

**3.** (наушники) **Текста вула. Палăртнă паллă ячĕсен антонимĕсене туп. «Вăрăмрах» сăмах мĕнле формăра тăрать?**

**Çĕнĕ** çул чи **авалхи** уяв шутланать. Ăсчахсем тĕпченĕ тăрăх, ăна Вавилонта 4000 çул каялла уявлама пуçланă. Ку уява çуркунне кунпа çĕр танлашнă вăхăтра паллă тунă. Чăвашсем те Çĕнĕ çула çав вăхăтра кĕтсе илнĕ. Çĕнĕ çул уявне Мăн кун уявĕ тенĕ, мĕншĕн тесен кун тăршшĕ çĕр тăршшĕнчен **вăрăмрах** пулма пуçлать. Çанталăк ăшăтать, çут çанталăк вăранать, чĕрĕлет. Çынсем савăннă, пĕр-пĕрне саламланă, çĕнĕ кĕпе тăхăннă.

Раççейре Çĕнĕ çула çуркунне, кайран авăн уйăхĕн пĕрремĕшĕнче уявланă. Петĕр патша хушнипе Çĕнĕ çул уявне 1700 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнче паллă тума пуçланă. Çав вăхăтран çынсем çурчĕсене чăрăшпа илемлетнĕ.

Китайра Çĕнĕ çула кăрлачăн 21-мĕшĕ хыççăн çĕнĕ уйăх тухсан уявлаççĕ. Унта уяв темиçе кун пырать. Пĕрремĕш кун фейерверк яраççĕ, усалсене хăратма **тутлă** шăршăллă çурта çунтараççĕ.

Иран тата ытти тĕрĕк халăхĕсем Çĕнĕ çула Навруз теççĕ. Ăна çуркунне кунпа çĕр танлашнă вăхăтра паллă тăваççĕ. Навруз умĕн пӳрт-çурта тирпейлеççĕ, тутлă апат-çимĕç хатĕрлеççĕ, кил-çурта чечеклĕ йывăç турачĕсемпе хитрелетеççĕ.

**Танла́шнă** — пĕр пекленнĕ.
**Мăн** — аслă.

**4.** (наушники) **Текстра ӳкерчĕксемпе çыхăннă предложенисем туп.**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Рис. 40_1 50 х 50 фейерверк и свечи красного цвета | Рис. 40_2 50 х 50 плов в красивом восточном блюде | Рис. 40_3 50 х 50 домотканое льняное платье с чувашским узором (на рукавах и вороте) | Рис. 40_4 50 х 50 елка (без украшений) | Рис. 40_5 50 х 50 Вавилонская стена (не башня) или город |

2 стр.
**5.** (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

1. Ҫӗнӗ ҫул мӗнле уяв шутланать?
2. Ӑна миҫе ҫул каялла уявлама пуҫланӑ?
3. Ӑна ӑҫта уявлама пуҫланӑ?
4. Чӑвашсем Ҫӗнӗ ҫул уявне мӗн тенӗ?
5. Вӗсем уявра мӗн-мӗн тунӑ?
6. Раççейре Ҫӗнӗ ҫула малтан хӑҫан уявланӑ?
7. Кам хушнипе Ҫӗнӗ ҫул уявне 1700 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗн 1-мӗшӗнче паллӑ тума пуҫланӑ?
8. Китайра Ҫӗнӗ ҫула хӑҫан уявлаҫҫӗ?
9. Уявра мӗн-мӗн тӑваҫҫӗ?
10. Иран тата ытти тӗрӗк халӑхӗсем Ҫӗнӗ ҫула мӗн теҫҫӗ?
11. Навруз умӗн мӗн-мӗн тӑваҫҫӗ?

**6.** (наушники) **Хуравла. Ӗненетӗн-и? Ӗненместӗн-и?**

1. Испанире кашни ҫыннӑн Ҫӗнӗ ҫул умӗн 12 иҫӗм ҫырли ҫимелле.
2. Грузире Ҫӗнӗ ҫул умӗн пӗр-пӗрне витререн шывпа сапаҫҫӗ.
3. Таиландра Ҫӗнӗ ҫула ҫулталӑкра виҫӗ хут паллӑ тӑваҫҫӗ (Европӑри пек, Китай тата Таиланд календарӗсем тӑрӑх).
4. Португалире, йӑла тӑрӑх, 12 сехетре сылтӑм алӑпа сулахай хӑлхана туртмалла.
5. Албанире Ҫӗнӗ ҫул умӗн сыснасене урам тӑрӑх хӑвалаҫҫӗ.
6. Чӑвашсен Ҫӗнӗ ҫул Сурхури уявӗнчен пуҫланать. Вӑл пӗр эрне тӑсӑлать.
7. Италире Ҫӗнӗ ҫул умӗн кивӗ япаласене чӳречерен ывӑтаҫҫӗ.
8. Вырӑссем ҫемье туслӑ пурӑнтӑр тесе сӗтел урисене вӗренпе ҫыхнӑ.
9. Якутсем, авалхи йӑла тӑрӑх, Ҫӗнӗ ҫула ҫулла кӗтсе илеҫҫӗ.
10. Сингапурта торт ҫиессипе ӑмӑрту ирттереҫҫӗ.
11. Бирмӑра Ҫӗнӗ ҫулта пулӑсене шыва, чӗр чунсене ирӗке яраҫҫӗ.
12. Англире ачасем Хӗл Мучи патне ҫыру ҫыраҫҫӗ, ҫырӑвне каминта ҫунтараҫҫӗ.

**Кирлӗ сӑмахсем:** кӗтсе илеҫҫӗ, паллӑ тӑваҫҫӗ, пуҫланать, пылак пӑр ҫиессипе ирттереҫҫӗ, ҫапмаҫҫӗ, ҫимелле, ҫунтараҫҫӗ, ҫыхнӑ, туртмалла мар, хӑваламаҫҫӗ, ывӑтаҫҫӗ, яраҫҫӗ.

**Хӑвала́ҫҫӗ** — хыҫҫӑн чупаҫҫӗ.

**7.** (диск) **Атьӑр юрлатпӑр!**

**Пӗлтӗм пӗчӗк вӑрттӑнлӑх**

1. Пĕлтĕм пĕчĕк вăрттăнлăх, туссем.
   Чăрăша хĕлле пач сивĕ мар,
   Çавăнпа ăна киле,
   Çавăнпа ăна киле
   Илсе килме кирлĕ мар.

2. Пĕлтĕм пĕчĕк вăрттăнлăх, туссем.
   Чăрăшсене лайăх вăрмантах.
   Йĕплĕ симĕс чăрăша,
   Йĕплĕ симĕс чăрăша
   Касасран çăлатăпах.

3. Пĕчĕк йĕплĕ симĕс чăрăшсем
   Пулас теççĕ çӳллĕ йывăççем.
   Ӳсчĕр вĕсем вăрмантах,
   Çĕнĕ çула кĕтчĕр кунтах
   Нумай-нумай çул хушши.

4. Пĕлтĕм пĕчĕк вăрттăнлăх, туссем.
   Чăрăша хĕлле пач сивĕ мар,
   Çавăнпа ăна киле,
   Çавăнпа ăна киле
   Илсе килме кирлĕ мар.

(«Машăпа упа» мультфильмран)

**Урок 40**
1 стр.
**Название раздела: ÇУЛТАЛĂК ВĂХĂЧĔ. ХĔЛЛЕХИ КУНСЕМ** (ВРЕМЕНА ГОДА. ЗИМА)
**Название урока: МАНĂН ТА ÇАКĂН ПЕК ЯРĂНАС КИЛЕТ**

(восклицательный знак)

Глагол — ĕç-пулăма кăтартакан пуплев пайĕ. Кăтарту наклоненийĕнчи глаголсем вăхăт тăрăх улшăнаççĕ.

| Кăтарту наклоненийĕ | | |
|---|---|---|
| Хальхи вăхăт | Иртнĕ вăхăт | Пулас вăхăт |
| | Пĕрре иртнĕ вăхăт | Темиçе иртнĕ вăхăт |

Глаголсем предложенире ытларах чухне сказуемăй пулаççĕ.
Сказуемăй подлежащи ĕçне кăтартать, **мĕн тăвать? мĕн вăл? мĕнле?** ыйтусенче тăрать. Предложенире тĕп член пулать: Ачасем хĕлле йĕлтĕрпе ярăнаççĕ, юр кĕлетке тăваççĕ. **Ярăнаççĕ, тăваççĕ** глаголсем пĕр йышши сказуемăйсем пулаççĕ.

**1.** (ручка) **Пĕр йышши сказуемăйсене хӳреллĕ пăнчăпа уйăр, икĕ йĕрпе палăрт.**

1. Ирхине эпĕ вырăн пуçтаратăп хускану тăватăп çăвăнатăп шăл тасататăп. 2. Кафере эпир пицца çиетпĕр кола ĕçетпĕр караоке юрлатпăр. 3. Çул çӳреве ачасем кӳлĕ хĕррине каяççĕ чатăр караççĕ. 4. Кӳлĕ хĕрринче вĕсем пулă тытаççĕ кăвайт чĕртеççĕ шӳрпе пĕçереççĕ. 5. Каçхине çул çӳревçĕсем вăйăсем выляççĕ гитара калаççĕ. 6. Канакансем тинĕсре шыва кĕреççĕ çыран хĕрринче хĕвелпе хĕртĕнеççĕ волейболла выляççĕ.

**2**. (ручка) **Предложенисенче кирлĕ сăмахсем ларт. Пĕр йышши дополненисене пунктирлă йĕрпе палăрт.**

1. Сăрт-ту çинчен ярăнмалли центрта ачасем сноубордпа … , вĕри чей … , сăн … .
2. Паркра шкул ачисем сырăш … , сырăш çине тĕрлĕ вăрă … .

3. Бассейнта Атнер тусĕсемпе ăмăртмалла ... , шыври пололла … .
4. Театрта куракансем спектакль … , артистсене чечек … , алă … .
5. Каникулта эпĕ нумай … , юлташсемпе уçăлса … , конструктор … , компьютерпа … .
6. Ют чĕлхесен шкулĕнче эпир акăлчанла … , эссе … , аудио … , юрă … .

**Кирлĕ сăмахсем:** ишет, вылять; пăхаççĕ, парнелеççĕ, çупаççĕ; çакаççĕ, хураççĕ;, çыврăратăп çӳретĕп, пуçтаратăп, «ĕçлетĕп»; калаçатпăр, çыратпăр, итлетпĕр, юрлатпăр; ярăнаççĕ, ĕçеççĕ, ӳкерĕнеççĕ.

**3.** (земной шар) **Кирлĕ сăмахсем ларт.**

**Конькипе илемлĕ ярăнни**

Археологсем … , çын конькипе 3 пин çул каялла ярăнма пуçланă. Пĕрремĕш коньки шăмăран пулнă. XII–XIV ĕмĕрсенчен вара Голландире ... коньки тума тытăннă. Европăри пĕрремĕш чемпионат XIX ĕмĕрте Гамбургра иртнĕ. 1908 çулта конькипе илемлĕ ярăнасси Олимпиада … кĕрет.

2 стр.

Раççейре конькипе ярăнма … вăхăтĕнче пуçланă. Халь Раççейре конькипе илемлĕ ярăнасси питĕ … . Раççей фигурисчĕсем … паллă. Аслă … Лев Толстой та, паллă математик Софья Ковалевская та, нимĕç сăвăçи Вольфганг Гёте те конькипе ярăнма юратнă.

Хăш-пĕр вырăнта … конькие «тăркăч» теççĕ, тутарсем — «тимераяк». Тимераяк чăвашла «тимĕр ура» тенине пĕлтерет.

**Шăмăра́н** — чĕр чун шăмминчен тунă.

**Кирлĕ сăмахсем**: анлă сарăлнă, вăййисене, Пĕрремĕш Петĕр патша, çыравçă, тĕнчипе, тĕпчене тăрăх, тимĕр, чăвашсем.

**4.** (наушники) **Ӳкерчĕкпе паллаш. Хуравла. Тĕрĕс-и? Тĕрĕс мар-и?**

Рис. 41 140 х 70

Крытый каток. Наверху лозунг, на котором написано «Эсĕ тем тума та пултаратăн!» Внизу на бортике написано «Мал ĕмĕтлĕ пул!». На коньках красиво катается девочка и улыбается (у нее красный шарф), другая (у нее зеленый шарф) только учится — ей помогает парень (с голубой шапкой), еще одна девочка (только у нее розовая юбка) крутится с поднятыми руками, какой-то мальчик (только у него красная шапка) сидит на скамейке и завязывает коньки. Два-три мальчика (в белых шлемах) играют в хоккей. В сторонке стоит маленькая девочка (только она в желтой шапке) и смотрит с восторгом. Ее реплика: «Манăн та çакăн пек ярăнас килет» (Я тоже так хочу кататься). Какая-то девочка (только она в оранжевой шапке) упала и плачет. Очень высокий парень без головного убора подходит к катку.

1. Хĕрлĕ шарфлă хĕр ача япăх ярăнать.
2. Симĕс шарфлă хĕр ача ярăнма вĕренет.
3. Кăвак калпаклă арçын ача хĕр ачана пулăшать.
4. Кĕрен юбкăллă хĕр ача коньки тăхăнать.
5. Хĕрлĕ калпаклă арçын ача конькипе ярăнать.
6. Шурă шлемлă арçын ачасем хоккейла выляççĕ.

7. Сарă калпаклă хĕр ача конькипе çаврăнать.
8. Хĕрлĕ сарă калпаклă хĕр ача ӳкнĕ.
9. Çӳллĕ арçын ача каток патне утать.

5. (наушники) **Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем туп. Ӳкерчĕкре çак сăмахсемпе çыхăннă япаласене кăтарт.**

Арçын ача, аялта, йĕрет, калпакпа, кулать, лайăх, ларать, лутра, пăр, пĕчĕк, пысăк, çара пуçăн, çӳллĕ, çӳлте, тăрать, утать, хаваслă, хĕр ача, хура, салхуллă, шыв, шурă, япăх.

**Урок 41**
1 стр.
**Название раздела: ÇУЛТАЛĂК ВĂХĂЧĔ. ХĔЛЛЕХИ КУНСЕМ** (ВРЕМЕНА ГОДА. ЗИМА)
**Название урока: ЭПĔ СНОУБОРДПА ЯРĂНМА ВĔРЕНЕСШĔН**

**(восклицательный знак)**

Предложенире пĕр сăмаха тепĕр сăмахпа çыхăнтарма пулăшакан пуплев пайне **хыç сăмахсем** теççĕ. Хыç сăмахсем улшăнаканнисем тата улшăнманнисем пулаççĕ. Улшăнманнисен шутне çак хыç сăмахсем кĕреççĕ: **пек, евĕр, пирки, пула, валли, çинчен, чух, хыççăн, умĕн, тавра, урлă, тăрăх, яхăн, таран, ытла, витĕр** тата ытти те.

**1.** (ручка) **Предложенисенче кирлĕ хыç сăмахсем ларт.**

**Схематические рисунки. Рисунки пронумеровать.**

| Рис.42-1 50 x 50 | Рис.42-2 50 x 50 | Рис.42-3 50 x 50 | Рис.42-4 50 x 50 | Рис.42-5 50 x 50 | Рис.42-6 50 x 50 |
|---|---|---|---|---|---|
| Ребёнок на лыжах бегает вокруг стадиона (показать стрелкой – вокруг) | Мальчик переходит дорогу (показать стрелкой – через) | Девочка идёт вдоль дороги (показать стрелкой – вдоль) | Книга. На обложке планеты | На руке коробка с подарком | Нарисовать цифру 10 |

1. Ача стадион … йĕлтĕрпе чупать.
2. Арçын ача çул … каçать.
3. Хĕр ача çул … утать.
4. Ку кĕнеке планетăсем … .
5. Эпĕ анне … парне хатĕрлерĕм.
6. Ачасем вуннă … шутлама вĕренеççĕ.

**Кирлĕ сăмахсем**: валли, çинчен, тавра, таран, тăрăх, урлă.

**2.** (наушники) **Хуравла. Ыйтусенче хыç сăмахсем туп.**

1. Эсĕ уроксем хыççăн ăçта каятăн? (киле, спорт секцине, кружока, тус патне)
2. Эсĕ çывăрас умĕн мĕн тăватăн? (шăл тасататăп, çăвăнатăп, кĕнеке вулатăп, апат çиетĕп, мультфильм пăхатăп)

3. Эсӗ мӗн ҫинчен шутлатӑн? (ҫуллахи каникул, ҫул ҫӳрев, йытӑ, ҫуралнӑ кун)
4. Санӑн кам пек пулас килет? (анне, атте, асатте, асанне, аппа, пичче, хам)
5. Ҫул ҫӳреве кайнӑ чух эсӗ мӗн илетӗн? (апат, фотоаппарат, телефон, хунар, мечӗк, вӑлта, шыв, бейсболка)
6. Шупашкарта миҫе пин ҫын пурӑнать? (100 пин ытла, 400 пин ытла, 800 пин ытла)
7. Эсӗ мӗн пирки шкула кая юлтӑн? (ҫывӑрса юлнӑ, лифт чарӑнса ларнӑ, автобус вӑхӑтра килмен, поликлиникӑна кайнӑ)

2 стр.

**3.** (маски) **Диалога вула. Тӗрӗс ҫыхӑнтар. Грамматика справочникӗнче улшӑнакан хыҫ сӑмахсемпе паллаш. Диалогра улшӑнакан хыҫ сӑмах туп.**

| Атнер: | | Асамат: |
|---|---|---|
| 1. Асамат, итле-ха, эсӗ вырсарни кун мӗн тӑватӑн? | | А. Манӑн сноуборд ҫук. Эпӗ ярӑнма та пӗлместӗп. |
| 2. Эпир ҫемьепе сӑрт-ту ҫинчен ярӑнмалли центра каятпӑр. Эпӗ унта сноубордпа ярӑнма вӗренесшӗн. Пирӗнпе пырас килмест-и? | | Ӑ. Апла атте-аннепе калаҫатӑп. |
| 3. Темех мар, унта сноуборд тара илме пулать тата инструктор ярӑнма вӗрентет. | | Б. Хаклӑ-и? |
| 4. Хаклах мар. | | В. Пӗлместӗп. Килте пулатӑп. Мӗншӗн ыйтатӑн? |

**Тара́ илме́** — укҫалла вӑхӑтлӑха илме.

**4.** (земной шар) **Пӗлме кӑсӑклӑ. Текст пайӗсене тӗрӗс вырнаҫтар. Улшӑнман хыҫ сӑмах туп.**

1. Сноубординг е сноуборд — ҫӗнӗ спорт тӗсӗ. Вӑл икӗ сӑмахран тӑрать.
2. Вӑл йӗлтӗре пӗрлештернӗ — хӑйӗн хӗрӗ валли ярӑнмалли хатӗр ӑсталанӑ.
3. Ҫӗнӗ хӗллехи спорт тӗсӗ питӗ хӑвӑрт анлӑ сарӑлать.
4. 1998 (пин те тӑхӑр ҫӗр тӑхӑр вун саккӑрмӗш) ҫулта ӑна Олимпиада вӑййисене кӗртеҫҫӗ.
5. Акӑлчан чӗлхинче «сноу» (snow) сӑмах «юр» тенине, «борд» (board) сӑмах «хӑма» тенине пӗлтерет, сноубординг вара — «юр хӑмипе ярӑнни».
6. Юр хӑмине 1960 (пин те тӑхӑр ҫӗр утмӑлмӗш) ҫулта Америкӑра пурӑнакан ҫын шутласа кӑларнӑ.

**5.** (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

1. Сноубординг мӗнле спорт тӗсӗ?
2. Акӑлчан чӗлхинче «сноу» (snow) сӑмах мӗн тенине пӗлтерет?
3. Акӑлчан чӗлхинче «борд» (board) сӑмах мӗн тенине пӗлтерет?
4. Юр хӑмине хӑҫан шутласа кӑларнӑ?
5. Юр хӑмине ӑҫта шутласа кӑларнӑ?

6. Юр хăмине кам шутласа кăларнă?
7. Америка çынни кам валли ярăнмалли хатĕр ăсталанă?
8. Сноубординга Олимпиада вăййисене кĕртнĕ-и?
9. Эсĕ хĕлле мĕнпе ярăнма юрататăн?

**Урок 42**
1 стр.
**Название раздела: ПУШĂ ВĂХĂТРА** (НА ДОСУГЕ)
**Название урока: КУН ЙĔРКИ**

**Мĕн аса илĕн?**

Пĕр йышши сказуемăйлă предложенисене, хыç сăмахсене, антонимсене, синонимсене аса илĕн.

Интонацие, тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене аса илĕн.

**Мĕн вĕренĕн?**

Йышăннă сăмахсемпе, сăмах майлашăвĕсен пулăвĕсемпе, виççĕмĕш сăпат местоименийĕсен вĕçленĕвĕпе, хальхи вăхăтри глаголсен пулăвĕпе, пĕр йышши обстоятельствăллă предложенисемпе паллашăн.

(восклицательный знак)

Сăмахсем вырăс чĕлхинчен чăваш чĕлхине улшăнса (калаçу урлă) тата улшăнмасăр (çыру урлă) кĕнĕ. Улшăнса кĕнисем: апат, кĕнеке, купăста. Улшăнмасăр кĕнисем: компьютер, тетрадь. Ытти чĕлхесенчен йышăннă сăмахсем те сахал мар. Мари чĕлхинчен кĕнисем: кукăль, тенкел, чĕкеç. Тутар чĕлхинчен кĕнисем: юлташ, чечек. Араб чĕлхинчен кĕнисем: авал, сехет, телей.

Вырăс чĕлхинчен улшăнмасăр кĕнĕ сăмахсен пусăмĕ тĕп формăра вырăс чĕлхинчи пекех: антоним, гаджет, троллейбус. Вĕсем çумне **а (е)** сасăллă аффикс хушăнсан пусăм аффикс çине ӳкет: антонимсéм, гаджетрá, троллейбуспá; **ă (ĕ)** сасăллă аффикс хушăнсан пусăм хăй вырăнĕнче юлать: гáлстук – гáлстуксăр, автóбус – автóбусшăн.

**1.** (ручка) **Сăмахсене икĕ ушкăна пайла:** пичке, кăранташ, институт, доклад, чашăк, мăнук, шкул, чуста, бинт, спутник, кушак, çемье, кабинет, пенал, утиял, сăмавар, перчетке, суд, техника, цирк, алфавит.

| Улшăнса (калаçу урлă) кĕнĕ сăмахсем | Улшăнмасăр (çыру урлă) кĕнĕ сăмахсем |
|---|---|
| сĕтел | шахтĕр |
| … | … |

**2.** (маски) **Диалога вула. Çыру урлă кĕнĕ сăмах туп. Диалогра хыç сăмахсем пур-и?**

– Мăн асанне, эсĕ ача чух ирхине миçере тăнă?
– Автан авăтсан.
– Мăн асанне, эсĕ ача чух миçере çывăрма выртнă?
– Хĕвел ансан.
– Мăн асанне, эсĕ ача чух миçере кăнтăрлахи апат çинĕ?

– Хырăм выçсан.
– Мăн асанне, эсĕ компьютерпа миçе сехет вылянă?
– Мăнукăм, пирĕн компьютерсем пулман. Эпир урамра вылянă.
– Эсир мĕнле телейлĕ пулнă! Сирĕн кун йĕрки пулман!

2 стр.
**3.** (наушники) **Хуравла. Сан шутпа, кун йĕрки кирлĕ-и? Кирлĕ мар-и?**

| Кун йĕрки мĕн тума кирлĕ? | |
|---|---|
| ✓ куна тĕрĕс йĕркелеме<br>✓ вăхăта перекетлеме<br>✓ нумай ĕç туса ĕлкĕрме<br>✓ шкула вăхăтра çитме | ✓ яваплă пулма вĕренме<br>✓ лайăх вĕренме<br>✓ сывлăхлă пулма<br>✓ пур ĕçе те вăхăтра тума |

**4.** (ручка) **Тĕрĕс çыхăнтар. Тĕслĕхпе усă курса предложенисем ту**. **Пĕр йышши сказуемăйсене аялтан турт.**
**Тĕслĕх**: Ача ултă сехет те вăтăр минутра <u>тăрать</u>, вырăн <u>пуçтарать</u>.

Ача … мĕн тăвать?

| | |
|---|---|
| 6.30 (ултă сехет те вăтăр минутра) | тăрать, вырăн пуçтарать |
| 6.40 (ултă сехет те хĕрĕх минутра) | шкула каять |
| 6.50 (ултă сехет те алă минутра) | шăл тасатать, çăвăнать, çӳç турать |
| 7.00 (çичĕ сехетре) | хускану тăвать |
| 7.20 (çичĕ сехет те çирĕм минутра) | кружока каять, усăлса çӳрет |
| 14.00 (вун тăвата сехетре) | апат çиет, тумланать |
| 15.00 (вун пилĕк сехетре) | шкултан таврăнать, апат çиет |
| 17.00 (вун çичĕ сехетре) | çăвăнать, çывăрма выртать |
| 20.00 (çирĕм сехетре) | урок тăвать, кĕнеке вулать |
| 22.00 (çирĕм икĕ сехетре) | компьютерпа вылять, тетелте ларать |

**5.** (наушники) **Диалога вула. Йышăннă сăмахсем туп. Диалогра хыç сăмахсем пур-и?**

| | |
|---|---|
| И р и н а. Диана Андреевна, Сирĕнтен иртервью илме юрать-и?<br>Д и а н а А н д р е е в н а. Мĕнле интервью? Мĕн валли?<br>И р и н а. Шкул хаçатĕнчи «Кун йĕрки» рубрика валли.<br>Д и а н а А н д р е е в н а. Юрать. Хаваспах килĕшетĕп. | Рис. 43 50 х 50 портрет учителя математики Дианы Андреевны (Ирина берет интервью у учителя математики) |

**6.** (наушники) **Диана Андреевна мĕн хуравланă-ши?**

| Ыйтусем | Хуравсем |
|---|---|
| 1. Сирĕн кун йĕрки пур-и? | 1. Эпĕ ултă сехетре хамах вăранатăп. |
| 2. Эсир вăраткăçа миçене лартатăр? | 2. Пушă вăхăтра эпĕ ӳкеретĕп. |
| 3. Эсир кашни кун пĕр вăхăтра çывăрма выртатăр-и? | 3. Паллах, пур. |
| 4. Сирĕн хобби пур-и? | 4. Нихăçан та ан парăн! |
| 5. Эсир спортпа туслă-и? | 5. Пĕр вăхăтра выртма тăрăшатăп. |
| 6. Эсир кунне миçе хут çиетĕр? | 6. Питĕ туслă. Тунти кун тата кĕçнерни кун тренажёр залне, шăмат кун бассейна çӳретĕп. Хĕлле йĕлтĕрпе ярăнма юрататăп. |
| 7. Сирĕн юратнă девиз мĕнле? | 7. Тăвата-пилĕк хут çиетĕп. |

**Вăрáткăç** — вăраткăçлă сехет.
**Ан пáрăн** – пуçланă ĕçе ан пăрах, йывăр пулсан та туса пĕтер.

**Урок 43**
1 стр.
**Название раздела: ПУШĂ ВĂХĂТРА** (НА ДОСУГЕ)
**Название урока: ХУРАН КУКЛИ РЕЦЕПЧĔ**
(восклицательный знак)

Пĕр ăнлавпа çыхăннă хăй пĕлтерĕшлĕ икĕ е темиçе сăмах пĕрлешĕвне сăмах майлашăвĕ теççĕ: кĕнеке вула, хитре чечек, вунă ача.

Сăмах майлашăвĕ хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен çеç пулать. Хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахпа хыç сăмах сăмах майлашăвĕ тумаççĕ. Анне валли, уроксем хыççăн, çул урлă – сăмах майлашăвĕсем мар.

**1.** (ручка) **Сăмах майлашăвĕсене çырса ил. Палăртнă сăмахсен синонимĕсене туп.**

**Кăсăклă** çул çӳрев, кĕпер урлă, коридор тăрăх, кун йĕрки, манăн тус, Пăлхар çинчен, пĕрремĕш юр, пин таран, пин ытла, **симĕс** чатăр, Çĕнĕ çул, çичĕ кун, çумăр витĕр, Тăван çĕр-шыв, чăваш чĕлхи, чăрăш тавра, хĕллехи каникул.

**2.** (наушники) **Хуравла. Кам мĕнпе кăсăкланать? Эсĕ мĕнпе кăсăкланатăн?**

| | Атнер | Улине | Ирина | Алина | Юман | Тимук | Асамат | Дамир |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Спортпа | V | V | V | V | | V | V | V |
| Музыкăпа | V | | V | | | V | | V |
| Ют чĕлхесемпе | V | V | | | | | | |
| Компьютерпа | | | | | V | | V | V |
| Археологипе | | | | | V | | | |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Кулинарипе | | V | V | V | |
| Ташăпа | V | | V | | V |
| Илемлĕ литературăпа | | V | V | | V |
| Ӳнерпе | V | | | | V |

**3.** (наушники) **Диалога вула. Хуравла. Алина мĕнпе кăсăкланать?**

И р и н а. Алина, салам. Эсĕ кулинарипе кăсăкланатăн. Ăна пурте пĕлеççĕ.
А л и н а. Çапла, çĕнĕ рецепт шырама, çĕнĕ апат пĕçерме, пĕçернĕ «шедеврпа» туссене хăналама питĕ юрататăп.
И р и н а. Класс хаçатĕнче «Тутанса пăх» рубрикăра пĕр-пĕр юратнă апат рецепчĕпе паллаштарма пултаратăн-и?
А л и н а. Хаваспах. Эпĕ «Пĕрремĕш парта» интернет хаçат вулаканĕсене асанне рецепчĕпе паллаштарăп.

**4.** (ручка) **Диалогпа усă курса сăмах майлашăвĕсем ту.**

… кăсăклан, … шыра, … апат, … хаçачĕ, … пĕçерме, … хăнала, … рубрика, … рецепчĕ, ... парта, … кукли.

2 стр.

**5.** (наушники) **Алина рецепчĕпе паллаш. Палăртнă сăмахсен антонимĕсене туп.**

Чуста:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Рис. 44_1 полстакана воды 50 x 50 | Рис. 44_2 50 x 50 полстакана молока | Рис. 44_3 50 x 50 2,5 стакана муки | Рис. 44_4 50 x 50 1 яйцо | Рис. 44_5 50 x 50 пол чайной ложки соли | Рис. 44_6 50 x 50 2 столовых ложки раст. масла |
| 100 мл шыв | 100 мл сĕт | 450 г çăнăх | 1 çăмарта | кăштах тăвар | кăштах тип çу |

Ăшлăх:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Рис. 44_7 полстакана воды 50 x 50 | Рис. 44_8 50 x 50 зеленый лук (порезанный) | Рис. 44_4 50 x 50 1 яйцо | Рис. 44_9 50 x 50 маленький кусочек сливочного масла | Рис. 44_5 50 x 50 пол чайной ложки соли | Рис. 44_10 50 x 50 1 чайная ложка сахара |
| 400 г тăпăрчă | 200 г симĕс сухан | 1 çăмарта | 20 г услам çу | кăштах тăвар | кăштах сахăр |

Пĕçермелли йĕрке.

1. Чуста çăрмалла.
2. Чустана **пĕчĕк** пайсем çине пайламалла.
3. Уйрăм савăтра ăшлăх ингредиенчĕсене хутăштармалла.
4. Кашни пай çине **кăштах** ăшлăх хурса пĕчĕк кукăльсем тумалла.
5. Хурана (е кастрюле) 1 литр шыв ямалла, унта кăштах тăвар хушмалла та вĕреме

кёртмелле.
6. Пěчěк кукǎльсене вěрекен шыва ямалла.
7. **Вǎйсǎр** çулǎм çинче 7 минут пěçермелле.
8. Пěçернě хуран куклине хǎймапа е услам çупа çимелле.

**Çǎрмаллá** – ингредиентсене пěрле хутǎштармалла, лайǎх пǎтраштармалла.
**Çýлǎм** — çунакан газ çути.

**Урок 44**
1 стр.
**Название раздела: ПУШǍ ВǍХǍТРА** (НА ДОСУГЕ)
**Название урока: ПУЛАС АРХЕОЛОГ**

(восклицательный знак)

**Вǎл** – виççěмěш сǎпатри, пěрреллě хисепри местоимени. Унпа калаçǎва хутшǎнман çынна тата япалана палǎртаççě. **Вěсем** – виççěмěш сǎпатри, нумайлǎ хисепри местоимени. Унпа калаçǎва хутшǎнман çынсене тата япаласене палǎртаççě. **Вǎл** тата **вěсем** местоимenisем падежсем тǎрǎх улшǎнаççě.

**1.** (ручка) **Таблицǎна тултар.**

| Падежсем | Ыйтусем | Пěрреллě хисеп | Ыйтусем | Нумайлǎ хисеп |
|---|---|---|---|---|
| Тěп | кам? | Вǎл | камсем? | Вěсем |
| Камǎнлǎх | кам**ǎн**? | … | кам**сен**? | … |
| Пару | кам**а**? | … | кам**сене**? | … |
| Вырǎн | Кам**ра**? | … | кам**сенче**? | … |
| Туху | кам**ран**? | … | кам**сенчен**? | … |
| Пěрлелěх | кам**па**? | … | кам**семпе**? | … |
| Çуклǎх | кам**сǎр**? | … | кам**семсěр**? | … |
| Пирке | кам**шǎн**? | … | кам**семшěн?** | … |

**Кирлě сǎмахсем:** унǎн, вěсен, унра, вěсенче, ǎна, вěсене, унран, вěсенчен, унсǎр, вěсемсěр, унпа, вěсемпе, уншǎн, вěсемшěн.

**2.** (наушники) **Диалога вула. Сǎпат местоименийěсене туп.**

Артём Сергеевич. Ачасем, автобуса кěретпěр! Вырǎнсене йышǎнатпǎр! Юлташсене пǎрахса хǎвармастпǎр! Пурте пур-и?
Асамат. Эп пур!
Тимур. Эп те пур!
Артём Сергеевич. Кам çук вара?
Улине. Юман çук.
Артём Сергеевич. Ǎçта вǎл? Кам пěлет?

У л и н е. Эп пĕлместĕп.
А л и н а. Вăл кĕреçепе шыв хĕррине кайрĕ.
А р т ё м   С е р г е е в и ч. Хăçан? Кампа? Мĕн тума?
А л и н а. Пĕр сехет каялла. Пĕчченех. Вăл авалхи укçа тупасшăн.
А р т ё м   С е р г е е в и ч. Мĕн калас ĕнтĕ — пулас археолог! Çамрăк Каховский! Кайса пăхатăп. Мĕн тупнă-ши вăл?

**4.** (земной шар) **Пĕлме кăсăклă.**

Археолог — çĕр чавса авалхи япаласем шыракан ăсчах. Археолог – авалхи грек сăмахĕ. Вăл икĕ сăмахран тăрать: «архайос» тата «логос». «Архайос» сăмах – «авалхи» тенине, «логос» – «сăмах, пĕлӳ» тенине пĕлтерет.
«Лог» сăмах нумай профессии ятĕнче тĕл пулать: биолог, филолог, эколог. «Логи» сăмах вара ăслăлăха пĕлтерет: биологи, филологи, экологи.

**Ăсча́х** — ăслă çын, тĕпчевçĕ.

2 стр.
**5.** (наушники) **Хуравла. Каласа пар.** (Ответь. Перескажи)

| | |
|---|---|
| 1. Ку **кам**?<br>2. Вăл **кам** пулнă?<br>3. Вăл **ăçта** çуралнă?<br>4. Вăл **миçемĕш** çулта çуралнă?<br>5. Вăл **ăçта** ĕçленĕ?<br>6. Вăл **мĕн-мĕн** тĕпченĕ?<br>7. Унăн чи паллă кĕнеки **мĕн** ятлă? | Рис. 45 50 х 50 портрет Каховского Василия Филипповича, известный чувашский археолог |

**Кирлĕ сăмахсем:** Канаш районĕнче; Чăваш патшалăх университетĕнче; «Чăваш халăхĕ пулса кайни»; Каховский Василий Филиппович; хулашсем, Улăп тăприсем; археолог ăсчах; 1916.

**Ӳлăп тăпри́** – сăртлă вырăн.

**6.** (наушники) **Кам вăл? Пĕл. Хуравла. Санăн хăш профессипе паллашас килет?**

1. Вăл йытта алла вĕрентет, тĕрлĕ ĕç тума хăнăхтарать.
2. Вăл çăлтăрсене, планетăсене тĕпчет.
3. Вăл çут çанталăка тĕпчет тата упрать.
4. Вăл Çĕр тытăмне тĕпчет, çĕр айĕнчи пуянлăхсем шырать.
5. Вăл çын психикине тĕпчет, йывăр вăхăтра çынсене пулăшать.
6. Вăл тĕрĕк чĕлхисене тĕпчет.
7. Вăл тĕрĕс апатланма вĕрентет.
8. Вăл чĕр чунсене тĕпчет, ĕрчетет, упрать.

**Кирлĕ сăмахсем:** астролог, геолог, зоолог, кинолог, диетолог, психолог, тюрколог, эколог.

**7.** (наушники) **Ача-пăча керменĕнчи кружоксен йĕркипе паллаш. Ыйтусене хуравла.**

| | Кружок ячĕ | Ӳсĕм | Хăш кун | Миçере |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Акăлчан чĕлхи кружокĕ | 7—14 çулхи | тн, юн, шм | 17.00—18.00 |
| 2. | Археологи кружокĕ | 11—17 çулхи | ыт, эр | 18.00—19.00 |
| 3. | Блогинг студийĕ | 10—17 çулхи | ыт, юн, эр | 16.30—18.00 |
| 4. | Дизайн студийĕ | 11—15 çулхи | ыт, кç | 18.00—19.00 |
| 5. | Кинологи кружокĕ | 7—14 çулхи | тн, кç | 16.00—17.30 |
| 6. | «Салам» фольклор кружокĕ | 7—12 çулхи | юн, эр | 18.00—19.30 |
| 7. | «Ташă академийĕ» студи | 7—14 çулхи | тн, юн, эр | 17.00—18.00 |
| 8. | Ӳнер студийĕ | 7—14 çулхи | юн, шм | 15.00—16.00 |
| 9. | «Чаршав» театр студийĕ | 11—14 çулхи | тн, кç | 17.00—19.00 |

1. Ача-пăча керменĕнче мĕнле кружоксем ĕçлеççĕ? 2. Ача-пăча керменĕнче мĕнле студисем ĕçлеççĕ? 3. Унта миçе çулхи ачасем çӳреме пултараççĕ? 4. Ача-пăча керменĕ хăш кун ĕçлемест? 5. Ӳнер студийĕ миçерен миçеччен ĕçлет? 6. Хăш студи пиллĕкрен çиччĕччен ĕçлет? 7. Блогинг студийĕ хăш кун ĕçлет?

**8.** (маски) **Çӳлти таблицăпа усă курса мăшăрпа ĕçле.**

… студийĕ (кружокĕ) хăш кун ĕçлет?
… студийĕ (кружокĕ) миçерен миçеччен ĕçлет?

**Урок 45**
1 стр.
**Название раздела: ПУШĂ ВĂХĂТРА** (НА ДОСУГЕ)
**Название урока: КĂСĂКЛĂ КĔНЕКЕ**

(восклицательный знак)
**Хальхи вахăтри глаголсен сăпатланăвĕ**

| Хисеп | Сăпат | Местоимени | Пурлă форма | Çуклă форма |
|---|---|---|---|---|
| Пĕрреллĕ | 1 | Эпĕ | лар-атăп<br>ил-етĕп | лар-мас-тăп<br>ил-мес-тĕп |
| | 2 | Эсĕ | лар-атăн<br>ил-етĕн | лар-мас-тăн<br>ил-мес-тĕн |
| | 3 | Вăл | лар-ать<br>ил-ет | лар-мас-ть<br>ил-мес-т |
| Нумайлă | 1 | Эпир | лар-атпăр<br>ил-етпĕр | лар-мас-тпăр<br>ил-мес-тпĕр |
| | 2 | Эсир | лар-атăр<br>ил-етĕр | лар-мас-тăр<br>ил-мес-тĕр |
| | 3 | Вĕсем | лар-аççĕ<br>ил-еççĕ | лар-маç-çĕ<br>ил-меç-çĕ |

(Восклицательный знак)

|  |
|---|
| Чăваш сăмахĕсенче икĕ уçă сасă юнашар тăма пултараймасть. Ку вăл чăваш фонетикин çирĕп саккунĕ. Уçă сасăпа вĕçленекен сăмахсем çумне уçă сасăпа пуçланакан аффикссем хушăннă чухне пĕр уçă сасси тухса ӳкет. Тĕслĕхрен: вула + атăп = вулатăп, çӳре + етĕп = çӳретĕп.<br>Хальхи вăхăт аффиксĕсене йышăннă чухне «ту», «çу», «шу», «сӳ» евĕрлĕ глаголсенче **[у], [ӳ]** сасăсем **[ăв], [ĕв]** сасăсемпе ылмашаççĕ: **ту** — **тăв**ать, **çу** — **çăв**ать, **шу** — **шăв**ать, **сӳ** — **сĕв**ет. |

**1.** (ручка) **Глаголсен хисепне, сăпатне палăрт.**

**Тĕслĕх:** чупать – пĕрреллĕ хисеп, 3-мĕш сăпат.

Пĕçереççĕ, кĕтет, юрататăн, пурăнатпăр, çывăратăр, вуламаççĕ, çăвăнмасть, çиместĕн, таврăнатăп, вылямастăр, килмеççĕ.

**2.** (маска) **Диалога вула. Глагол туп, унăн вăхăтне, хисепне, сăпатне палăрт.**

А с а м а т. Юман, мĕн вулатăн?
Ю м а н. «Тĕнчери 100 тĕлĕнтермĕш» кĕнеке.
А с а м а т. Кăсăклă-и?
Ю м а н. Маншăн питĕ кăсăклă.
А с а м а т. Халь мĕн çинчен вулатăн?
Ю м а н. Китайри терракота çар çинчен.
А с а м а т. Терракота мĕн вăл?
Ю м а н. Терракота — хĕртнĕ тăм. Унран ĕлĕк-авал тĕрлĕ япала тунă: савăт-сапа, тетте, шыв пăрăхĕ.
А с а м а т. Тетте çар салтакĕсем-и?
Ю м а н. Çын пысăкăш салтаксем, лашасем. Атя вуласа паратăп.

**Шыв пắрăхĕ** — шыв юхтармалли труба.

2 стр.
**3.** (наушники) **Текстпа паллаш. Палăртнă глаголсене хальхи вăхăтра лартса вула.**

| | | |
|---|---|---|
| 1974 çулта Китайра пĕр хресчен пусă **чавнă**. Вăл ĕçленĕ вăхăтра терракотăран тунă çын кĕлетки **тупнă**. Археологсем çак вырăнта ĕçлеме **пуçланă** та 8 пин ытла салтак, лаша, урапа чавса **кăларнă**. Тупнă кĕлеткесене «Терракота çар» ят **панă**. Ку çара пĕрремĕш Китай патши хушнипе **тунă**. Китай патши Цинь Шихуанди ятлă пулнă. Вăл 2300 çул каялла пурăннă. 1987 çулта *Юнеско* терракота çара тĕнче пуянлăхĕ шутне **кĕртнĕ**. | Рис. 46 70 х 70<br>Терракотовые солдаты и лошади из терракотовой армии в Китае.<br>Подписать: **Терракота çар** | |

**Пу́сă** — шыв ăсмалли вырăн.
**Çын кĕлеткú** — çын фигури.

**Юне́ско** — тĕнчери чи паллă культура организацийĕ.

**4.** (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

1. Хресчен мĕн тунă? 2. Ĕçленĕ вăхăтра вăл мĕн тупнă? 3. Çак вырăнта камсем ĕçлеме пуçланă? 4. Археологсем мĕн-мĕн тупнă? 5. Тупнă кĕлеткесене мĕнле ят панă? 6. Ку çара кам хушнипе тунă? 7. Китай патши мĕн ятлă пулнă? 8. Вăл миçе çул каялла пурăннă? 9. Юнеско терракота çара мĕн шутне кĕртнĕ?

**5.** (наушники) **Кирлĕ сăмахсене лартса вула**. **Хальхи вăхăтри глаголсене туп.**

А с а м а т. Манăн ________ кĕнеке вара «Бронза арçын ача» ятлă. Унăн авторĕ — Владислав Крапивин. Ку кĕнеке ________ çинчен. Вĕсем çамрăк фехтовальщиксен клубне çӳренĕ. Вăхăт иртсен клуб саланать. Тĕп герой Даниил Вострецов юлташĕсене ________ шутлать. Клуба çĕнĕ арçын ача Даня Рафалов килет. Унăн хушма ячĕ — Кинтель. Пĕррехинче вăл шифрланă ________ илсе килет. Ку çырăва ăна ________ панă. Ку çырăва ________ тĕнче вăрçи пуçланнă чух юлташĕ çырнă. Кинтель çырăва клубри юлташĕсене __________. Тавçăруллă ачасем çырăвăн тупсăмне тупаççĕ, тахçан пурăннă _________ тĕпчесе пĕлеççĕ, «Рафаил» фрегатăн историйĕпе паллашаççĕ.

**Хушма́ ят** — иккĕмĕш ят.
**Тавçăру́ллă ачасе́м** — ăслă, хăвăрт шутлакан ачасем.
**Фрегáт** — парăслă карап.
**Пáрăс** — мачта çинчи пысăк пусма татăкĕ, вăл карапа ишме пулăшать.

**Кирлĕ сăмахсем**: ачасем, кăтартать, мăн асламăшĕ, пĕрремĕш, пуçтарма, çынсен кун-çулне, çыру, юратнă.

**6.** (наушники) **Хуравла**.
1. Санăн юратнă кĕнеке мĕн ятлă? 2. Унăн авторĕ кам? 3. Вăл мĕн çинчен?

**Урок 46**
1 стр.
**Название раздела: ПУШĂ ВĂХĂТРА** (НА ДОСУГЕ)
**Название урока: СПЕКТАКЛЬ ЛАРТАТПĂР**

(восклицательный знак)

**Обстоятельство** — предложенин кĕçĕн членĕ. Вăл ĕç паллине, вăхăтне, вырăнне, сăлтавне, тĕллевне кăтартать. Тĕрлĕ пуплев пайĕ пулать, ытларах глагола ăнлантарать. Ачасен каникул хĕлле, суркунне, çулла тата кĕркунне пулать. Хĕлле, суркунне, çулла тата кĕркунне — пĕр йышши обстоятельствăсем пулаççĕ.

**1.** (ручка) **Çырса ил. Обстоятельствăсене тĕслĕхри пек палăрт.**

**Тĕслĕх:** Шкул ачи доска çине тирпейлĕ, хитре çырать.

1. Ача сăвва илемлĕ, палăртуллă вуласа пачĕ.
2. Пуçламăш класс ачисем шăмат кун та, вырсарни кун та канаççĕ.

3. Тимук паян та, ĕнер те шкула килмерĕ.
4. Вăл савăннипе, тĕлĕннипе кăшкăрса ячĕ.

**2.** (наушники) **Диалога вула.**

В ĕ р е н т е к е н. Пуш уйăхĕн 27-мĕшĕ – театр кунĕ. Эпĕ театра кайма сĕнетĕп.
А л и н а. Мĕнле спектакле?
В ĕ р е н т е к е н. Эпир сирĕнпе «Изумруд хулинчи асамçă» кĕнеке вуланăччĕ. Ун тăрăх спектакль лартнă.
Ю м а н. Хăш театрта пулать?
В ĕ р е н т е к е н. Çамрăксен театрĕнче.
А с а м а т. Манăн каяс килмест.
В ĕ р е н т е к е н. Юрать. Кам каяс тет, аллăрсене çĕклĕр.

**3.** (наушники) **Хуравла.**

1. Спектакль мĕн ятлă?
2. Спектакль ăçта пулать?
3. Спектакль хăçан пулать?
4. Спектакль миçере пуçланать?
5. Спектакле кам повеçĕ тăрăх лартнă?
6. «Изумруд хулинчи асамçă» спектакле лартакан режиссёр кам?
7. «Изумруд хулинчи асамçă» спектакле лартакан ÿнерçĕ кам?
8. «Изумруд хулинчи асамçă» спектаклĕн композиторĕ кам?
9. Ку спектакле ачасем миçе çултан пуçласа кайма пултараççĕ?
10. Спектакль миçе сехет пырать?

6+

Чувашский государственный ордена Дружбы народов ТЕАТР ЮНОГО ЗРИТЕЛЯ имени М. Сеспеля

Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Халăхсен туслăхĕ орденлĕ Чăваш патшалăх ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔ

**Пуш уйăхĕн 27-мĕшĕ**

**ИЗУМРУД ХУЛИНЧИ АСАМÇĂ**
**(Волшебник изумрудного города)**

Лартакан режиссёр – Степан Пектеев
Лартакан ÿнерçĕ – Екатерина Андреева
Композитор – Евгений Роднянский
Александр Волков повеçĕ тăрăх

**14 сехетре пуçланать**
**1 сехет пырать**

2 стр.
**4.** (наушники) **Диалога вула. Хыç сăмахсем туп.**

А т н е р. Ачасем, атьăр хамăр та спектакль лартатпăр!
У л и н е. Мĕнле спектакль?
А т н е р. Астрид Линдгренăн «Лĕннебергăри Эмиль мыскарисем» кĕнеки тăрăх.
У л и н е. О-о-о! Ку манăн юратнă кĕнекесенчен пĕри!
Т и м у к. Эпĕ кун пек кĕнеке вуламан.
У л и н е. Ку кĕнеке пĕр ашкăнчăк арçын ача çинчен. Ашкăнчăк пулсан та Эмиль питĕ ырă кăмăллă пулнă. Ӳссен вăл «пысăк çын» пулать. Эпĕ ăна вуланă чух куççуль тухиччен култăм.
Ю м а н. Санăн сценари пур-и?
А т н е р. Çырма пуçларăм. Ак итлĕр!

**А́шкăнчăк** — лăпкă мар, чупма, выляма юратакан.
**Куççу́ль** — йĕнĕ е кулнă чух куçран юхакан шыв.

**5.** (маска) **Рольпе выля. Хуравла. Эмиль мĕн-мĕн тăвать?**

| | |
|---|---|
| 1-мĕш сцена. Сĕтел хушшинче.<br>Эмиль апат çинĕ чух пуçне савăта чикет те нимĕнле те кăлараймасть.<br><br>Л и н а. Халь яшкана ăçта ятратпăр? Урăх сăват çук.<br>А м ă ш ĕ. Çак савăтран Эмиль пуçне мĕнле кăлармалла-ши? Çĕмĕрмелле мар-ши?<br>А л ь ф р е д. Парăр-ха, хам кăларса пăхатăп.<br><br>Альфред яшка савăтне çӳлелле çĕклеме пуçлать. Савăтпа пĕрле Эмиль те çӳлелле çĕкленет. Эмиль кăшкăрать.<br>Э м и л ь. Вырăна ларт мана!<br><br>Пурте Эмиль тавра пуçтарăнаççĕ.<br><br>И д а. Курăр-ха, вăл йĕрет.<br>Э м и л ь. Эпĕ йĕме шутламастăп та. Шӳрпе вăл.<br>А м ă ш ĕ. Яшка савăтне çĕмĕретпĕр.<br>А ш ш ĕ. Çĕмĕрместпĕр. Эпĕ вăл савăта тăвата крона парса илнĕ. Атьăр тухтăр патне каятпăр!<br><br>2-мĕш сцена. Тухтăр патĕнче.<br>В а т ă  ç ы н. Ох-ох-ох! Санăн, мĕн, хăлхусем шăнаççĕ-им?<br>Э м и л ь. Çук, халь шăнмаççĕ.<br>В а т ă  ç ы н. Апла пулсан мĕншĕн тăхăнтăн ку савăта?<br>Э м и л ь. Хăлхасем ан шăнччăр терĕм.<br>Т у х т ă р. Сывă-и, ачам? Камран пытантăн вара эсĕ?<br><br>Эмиль амăшĕ вĕрентнĕ пек хисеплĕн пуçне тайрĕ. Эмиль пуç тайнă вăхăтра савăт сĕтел кĕтессине лекрĕ те пуçĕнчен тухса ӳкрĕ. Икĕ пая пайланчĕ.<br>А ш ш ĕ. Пĕтрĕ манăн тăватă крона! | Рис. 47. 70 х 70<br>рисунок Эмиля из книги Астрид Линдгрен «Приключения Эмиля из Лённиберги» с горшком на голове (первые главы книги) |

**Çĕмĕрмелле́** — темиçе пая пайламалла.
**Пуçне́ та́йрĕ** — пуçĕпе сывлăх сунчĕ.
**Лек** — çапăн, перĕн.

## Урок 47

1 стр.
**Название раздела: УЯВСЕМ** (ПРАЗДНИКИ)
**Название урока: КАМ ВӐЛ ÇĔР-ШЫВ ХӲТĔЛЕВÇИ?**

**Фонетика тишкерĕвĕ.**
1. Сӑмаха сыпӑксем çине уйӑрмалла: пуян [пу-йан].
2. Пусӑма кӑтартмалла: пуя́н.
3. Сӑмахра миçе сасӑ тата сас палли пулнине палӑртмалла: 5 сасӑ, 4 сас палли.
4. Уçӑ сасӑсене палӑртмалла, вĕсем мĕнле сасӑсем пулнине каламалла: [у], [а];
[у] – хытӑ уçӑ сасӑ, [а] – хытӑ уçӑ сасӑ.
5. Хупӑ сасӑсене палӑртмалла, вĕсем мĕнле сасӑсем пулнине каламалла: [п], [й], [н];
[п] – шавлӑ хупӑ сасӑ, [й] – ялан янӑравлӑ çемçе хупӑ сасӑ, [н] – ялан янӑравлӑ хытӑ хупӑ сасӑ.
6. Сас паллисен ячĕсене каласа тухмалла: пӑ, у, йӑ, а, нӑ.
7. Сасӑсемпе сас паллисен шучĕ тан мар пулсан ӑна ӑнлантарса памалла: пуян [пуйан] сӑмахра «я» сас палли икĕ сасса [йа] пĕлтерет.

**1.** (наушники) **Фонетика тишкерĕвĕ ту. Тĕслĕхпе усӑ кур.**

| | Кукӑль | Супӑнь | Ялав |
|---|---|---|---|
| 1. | Ку-кӑль | | |
| 2. | Ку́кӑль | | |
| 3. | 5 сасӑ, 6 сас палли | | |
| 4. | Уçӑ сасӑсем: [у] [ӑ]<br>[у] — хытӑ уçӑ сасӑ<br>[ӑ] — хытӑ уçӑ сасӑ | | |
| 5. | Хупӑ сасӑсем: [к] [г] [л’]<br>[к] — шавлӑ хытӑ хупӑ сасӑ<br>[г] — янравлӑ хытӑ хупӑ сасӑ<br>[л’] — ялан янравлӑ çемçе хупӑ сасӑ | | |
| 6. | Сас паллисен ячĕсем: кӑ, у, кӑ, ӑ, лӑ, çемçелĕх паллли | | |
| 7. | Кукӑль [кугӑл’] сӑмахра сас паллисен шучĕ сасӑсенчен ытларах, мĕншĕн тесен **ь** сасса пĕлтермест | | |

**2.** (наушники) **Хуравла. Сан шутупа, кам вӑл çĕр-шыв хӳтĕлевçи?**

Артём Сергеевич. Ачасем, Çĕр-шыв хӳтĕлевçи кунĕ çывхарса пырать. Кам вӑл хӳтĕлевçĕ? Кам мĕнле ӑнланать?

| | |
|---|---|
| Ман шутпа, манӑн мӑн асатте чӑн-чӑн хӳтĕлевçĕ. Вӑл Тӑван çĕр-шывӑн аслӑ вӑрçи вӑхӑтĕнче Ленинграда хӳтĕленĕ. Виçĕ хутчен аманнӑ. Ӑна медальсемпе наградӑланӑ. | Рис.1.3. Асамат |

2 стр.

| | |
|---|---|
| Рис.1.4. Ирина | Манăн иккĕмĕш сыпăкри пичче — офицер. Вăл Инçет Хĕвел тухăçра çар тивĕçне пурнăçлать. Вăл пире хӳтĕлет. Ман шутпа, вăл та çĕр-шыв хӳтĕлевçи. |
| Манăн мăн кукамай вăрçă вăхăтĕнче Сăр тăрăхĕнче окоп чавнă. Вăл Сăр хĕрринчи хӳтĕлев чикки шутланнă. Ун чухне питĕ сивĕ пулнă. Манăн мăн кукамай та çĕр-шыв хӳтĕлевçи. | Рис.1.5. Тимук |
| Рис.1.7. Юман | Манăн кукка Çĕпĕрте пурăнать. Вăл Чрезвычайлă лару-тăру министерствинче ĕçлет. Вăл ту çинчен çынсене антарать, шывра çăлать, вăрманта пушар сӳнтерет. Ман шутпа, вăл та çĕр-шыв хӳтĕлевçи. |
| Ман шутпа, чăн-чăн хӳтĕлевçĕ вăл кулленхи ĕçе лайăх тăвакан çын. Кашни çыннăн хăйĕн ĕçне тӳрĕ кăмăлпа, тăрăшса тумалла. Вара пирĕн çĕр-шыв пуян, вăйлă тата çирĕп пулать. | Рис.1.6. Улине |

А р т ё м  С е р г е е в и ч. Ман шутпа, çĕр-шыв хӳтĕлевçи — хăй çине яваплăх илме, Тăван çĕр-шывне, тăван çемйине хӳтĕлеме пултаракан çын.

**Ама́ннă** — кĕлеткине снаряд катăкĕ е пуля лекнĕ.
**Çар тивĕçне́ пурнăçла́ть** — çарта хăйĕн ĕçне тăвать.
**Хӳтĕле́в чикки́** (чикĕ) — хӳтĕлев вырăнĕ.
**Çĕ́пĕр** — Урал тăвĕсен леш енчи çĕр.
**Шывра́ çăла́ть** — шывран тухма пулăшать.
**Тӳ́рĕ кăмăлпа́** — тĕрĕс, суймасăр.

**3.** (наушники) **Ыйтусене хуравла**.

1. Асаматăн аслашшĕ вăрçă вăхăтĕнче мĕнле хулана хӳтĕленĕ? 2. Вăл миçе хутчен аманнă? 3. Иринăн иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ кам? 4. Вăл çар тивĕçне ăçта пурнăçлать? 5. Тимукăн мăн кукамăшĕ вăрçă вăхăтĕнче мĕн тунă? 6. Сăр тăрăхĕнчи окопсем мĕн чикки шутланнă? 7. Юманăн куккăшĕ ăçта ĕçлет? 8. Вăл мĕн-мĕн тăвать? 9. Улине шучĕпе, кам вăл чăн-чăн хӳтĕлевçĕ? 10. Кашни çыннăн хăйĕн ĕçне мĕнле тумалла?

**4.** (наушники) **Тĕрĕс хурав суйла.**

| | |
|---|---|
| 1. Ӳкерчĕкре кам-кам пур? (вĕçевçĕ, сутуçă, тинĕççĕ, тухтăр, чикĕ хуралçи, тĕпчевçĕ)<br>2. Вĕсем камсем? (вĕрентекенсем, салтаксем, çĕр-шыв хӳтĕлевçисем, шкул ачисем)<br>3. Çĕр-шыв хӳтĕлевçи мĕне хӳтĕлет? (тăван килне, çемйине, Тăван çĕр-шывне, ют çĕр-шыва)<br>4. Çĕр-шыв хӳтĕлевçин мĕнле пулмалла? (ăслă, вăйлă, сывлăхлă, кахал, тӳрĕ кăмăллă, ухмах, хăюллă) | Рис. 48 50 х 50<br>Профили защитников Отечества: моряк, пограничник, лётчик |

**Урок 48**
1 стр.
**Название раздела: УЯВСЕМ** (ПРАЗДНИКИ)
**Название урока: ПУШ УЙĂХĔН 8-МĔШĔНЧЕ**

**1.** (ручка) **Йĕрке хисепĕсем ту.**

**Тĕслĕх:** пĕрре — пĕрремĕш.

Иккĕ — … , виççĕ — … , тăваттă — … , пиллĕк — … , улттă — … , çиччĕ — … , саккăр — … , тăххăр — … , вуннă — … , çирĕм — … , аллă — … , çĕр — … .

**2.** (ручка) **Сăмах майлашăвĕсене тишкер, вĕсене мĕнле йĕркеленине тавçăр. Çак мелпе усă курса ытти сăмах майлашăвĕсене çыр.**

Пĕрремĕш пĕремĕк, иккĕмĕш _______, виççĕмĕш витре, тăваттăмĕш телефон, пиллĕкмĕш ________, улттăмĕш _________, çиччĕмĕш _________, саккăрмĕш савăт, тăххăрмĕш _______, вуннăмĕш ________.

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Йĕрке хисеп ячĕ виççĕмĕш сăпат аффиксне йышăнма пултарать: пуш уйăхĕн саккăрмĕш кунĕ — пуш уйăхĕн саккăрмĕш**ĕ**. Ун пек чухне вăл, япала ячĕ пек, падежсем тăрăх вĕçленет: Пуш уйăхĕн саккăрмĕш**ĕнче** (вырăн падежĕ). |

**3.** (маска) **Хуравла.**

1. Эсĕ хăçан çуралнă?
Эпĕ _________ уйăхĕн __________-мĕшĕнче çуралнă.
2. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ хăçан пулать?
Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ _________ уйăхĕн __________-мĕшĕнче пулать.
3. Вĕренӳ çулĕ хăçан вĕçленет?
Вĕренӳ çулĕ _________ уйăхĕн __________-мĕшĕнче вĕçленет.

**Теçетке ячĕсем**: 10 – вуннă, 20 – çирĕм, 30 – вăтăр.
**Уйăх ячĕсем:** кăрлач, нарăс, пуш, ака, çу, çĕртме, утă, çурла, авăн, юпа, чӳк, раштав.

**4.** (маска) **Пĕлме кăсăклă.**

Пуш уйăхĕн 8-мĕш кунне XX ĕмĕр пуçламăшĕнче паллă тума пуçланă. Çак кун хĕрарăмсем хăйсен прависене хӳтĕлеме митинга тухнă. ООН йышăннипе халь пуш уйăхĕн 8-мĕшĕ Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ шутланать. Раççейре ку уявра канаççĕ, хĕрарăмсене саламлаççĕ, парнесем параççĕ.

**5.** (наушники) **Ачасен калавĕсемпе паллаш. Виççĕмĕш сăпатри местоименисене туп. Эсĕ мĕнле паллă хĕрарăмсене пĕлетĕн?**

А р т ĕ м  С е р г е е в и ч. Паянхи класс сехечĕ Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ çинчен пулать, тĕнчене улăштарма пултарнă хĕрарăмсемпе паллашатпăр. Кам пуçлать?

2 стр.

| | |
|---|---|
| И р и н а. Эпĕ! Эпĕ Зоя Парфёнова ҫинчен вуласа пĕлтĕм. Зоя Парфёнова Улатăр хулинче ҫуралнă. Ăна Совет Союзĕн Геройĕ ят панă. Вăл Тăван ҫĕр-шывăн аслă вăрҫи вăхăтĕнче вĕҫевҫĕ пулнă, арҫынсемпе тан фашистсене хирĕҫ ҫапăҫнă. Ку мана питĕ тĕлĕнтерчĕ. | Рис. 49_1 50 х 50 портрет Зои Парфеновой, летчицы, Героя СССР из Алатыря |
| Рис. 49_2 50 х 50 портрет Зои Мироновой из Ядрина, дипломат в ООН | Т и м у к. Эпĕ Зоя Миронова ҫинчен каласа парасшăн. Вăл та тĕлĕнмелле ҫын пулнă. Зоя Миронова та пирĕн ентеш. Вăл Етĕрне хулинче ҫуралнă. Нумай ҫул хушши ООНта СССР элчи пулса тăрăшнă, хĕр арăмсен прависене хӳтĕленĕ. |
| А л и н а. Эпĕ Майя Плисецкаяпа паллаштарасшăн. Майя Плисецкая Мускавра ҫуралнă. Вăл балерина, хореограф, балетмейстер пулнă, Мускаври Пысăк театртра ĕҫленĕ. Ăна пĕтĕм тĕнчипе пĕлеҫҫĕ. Вăл питĕ хитре, йăрăс пӳллĕ хĕрарăм пулнă. Манăн та ун пек пулас килет. | Рис. 49_3 50 х 50 портрет Майи Плисецкой, балерины Большого театра |
| Рис. 49_4 50 х 50 портрет Катрин Швитцер, первой женщины марафонистки. | Ю м а н. Эпĕ Катрин Швитцер ҫинчен пĕлтĕм. Катрин Швитцер Германире ҫуралнă. Вăл хĕрарăмсенчен пĕрремĕш марафон чупнă. Ăмăртăва йĕркелекенсем ăна арҫынсемпе пĕрле чупма чарасшăн пулнă. 20 ҫулхи Катрин пурпĕрех Бостонта марафон чупса тухнă. Ку 1967 ҫулта пулнă. Мĕншĕн ăна чупма ирĕк паман? Тĕлĕнмелле! |

А р т ё м  С е р г е е в и ч. Шел пулин те, иртнĕ ĕмĕрте хĕрарăмсемпе арҫынсен прависем пĕр пек пулман. Хĕрарăмсем хăйсен прависене хӳтĕлеме пултарнă. Пирĕн те хамăр правасене хӳтĕлеме пĕлмелле.

**Арҫынсемпе́ тан** — арҫынсемпе пĕр пек.
**Пи́рĕн енте́ш** — пирĕнпе пĕр вырăнта (ялта, хулара) ҫуралнă ҫын.
**Элчи́ (э́лчĕ)** — дипломат, посол.
**Йăрăс пӳ́ллĕ** — яштака кĕлеткеллĕ.

**6.** (наушники) **Текстпа усă курса таблицăна тултар. Таблицăна малалла тăс.**

| Кам вăл? | Ăҫта ҫуралнă? | Мĕнпе паллă? |
|---|---|---|
| Зоя Парфёнова | Улатăр хулинче | Тăван ҫĕр-шывăн аслă вăрҫинче вĕҫевҫĕ пулнă, Совет Союзĕн Геройĕ ят илнĕ |
| … | … | … |

**Урок 49**
1 стр.
**Название раздела: УЯВСЕМ** (ПРАЗДНИКИ)
**Название урока: ДАМИРĂН ҪУРАЛНĂ КУНĔ**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Радиора, телевиденире, хаçат-журналта, кӗнекесенче, шкулта, театрта усӑ куракан чӗлхене литература чӗлхи теççӗ.<br>Уйрӑм вырӑнта, пӗр-пӗр районта, ялсенче çеç усӑ куракан чӗлхене вырӑнти калаçу чӗлхи (диалект) теççӗ: маçак (асатте), шӗкӗнтӗр (кишӗр), çӑмӑр (çумӑр), çок (çук). |

**1.** (ручка) **Сӑмахсене икӗ ушкӑна пайла.**

Апи — анне; икӗрчӗ — кульмак; кӑшман — чӗкӗнтӗр; мечӗк — пӳске; орам — урам; паранкӑ – çӗр улми; пан улми — полми; порӑн — пурӑн; сехет — сахат; шу — шыв.

| Литература чӗлхи | Вырӑнти калаçу чӗлхи |
|---|---|
| анне | апи |
| … | … |

**2.** (маски) **Дамир хуравӗсене тупса полилога вула. Диалект сӑмахне туп.**

Д а м и р. Манӑн шӑмат кун çуралнӑ кун. Эпӗ сире скалодрома чӗнетӗп. Скалодром хыççӑн кафене кӗретпӗр.
И р и н а. Эпӗ çӳле хӑпарма хӑратӑп. Ахаль пыма юрать-и?
Д а м и р. …
А с а м а т. Шеп! Эпӗ хаваспа пыратӑп. Сана мӗн парнелемелле?
Д а м и р. …
Ю м а н. Манӑн скалодрома каяс килмест. Тӳрех кафене кайма юрать-и?
Д а м и р. …
У л и н е. Эпӗ скалодромра пӗрре те пулман. Унта инструктор пулать-и?
Д а м и р. …
А т н е р. Пирӗн мӗн те пулин илмелле-и?
Д а м и р. …

**Кирлӗ хуравсем**: 1. Кафе скалодромрах пур. 2. Нимех те кирлӗ мар… Пӳске пулсан аван. 3. Пулать паллах. 4. Спорт формипе пушмакӗ. 5. Пыма юрать.

**Шеп** — лайӑх, аван.

**3.** (наушники) **Тӗрӗс-и? Тӗрӗс мар-и?**

1. Дамирӑн çуралнӑ кунӗ вырсарни кун.
2. Дамир ачасене скалодрома чӗнет.
3. Асамат çӳле хӑпарма хӑрать.
4. Юман тӳрех кафене пырасшӑн.
5. Дамир мечӗк парнелеме ыйтать.
6. Улине скалодромра виçӗ хут пулнӑ.
7. Скалодромра инструктор çук.
8. Скалодрома спорт формине кӑна илмелле.

2 стр.
**4.** (наушники) **Çуралнӑ куна мӗнле ирттерме пулать?**
(написать фразы в виде кластера!)

| | | |
|---|---|---|
| Юлташсене боулинга чӗнме пулать. | Юлташсемпе ҫул ҫӳреве кайма пулать | Юлташсемпе лазертаг вӑййа выляма пулать |
| Юлташсемпе квест иртттерме пулать | **Ҫуралнӑ куна мӗнле ирттерме пулать?** | Юлташсене хӑнана чӗнме пулать |
| Юлташсене кафене чӗнме пулать | Юлташсене пӗр-пӗр мастер-класа чӗнме пулать | … |

**5.** (блокнот) **Схема тӑрӑх блокнот ту.**

**https://youtu.be/1p950BFmbvg**

| | | |
|---|---|---|
| Рис. 50_1 50 на 50<br>Взять лист бумаги | Рис. 50_2 50 на 50<br>Лист бумаги согнуть на 4 части вдоль листа. | Рис. 50_3 50 на 50<br>Лист бумаги разрезать, ножницы показать |
| Рис. 50_4 50 на 50<br>Отрезки бумаг согнуть на 8 частей | Рис. 50_5 50 на 50<br>Отрезки бумаг согнуть в виде гармошки | Рис. 50_6 50 на 50<br>Отрезки-гармошки бумаги склеить между собой в длинную гармошку, накладывая концы друг на друга |
| Рис. 50_7 50 на 50<br>Одну сторону полностью намазать клеем и сформировать страницы | Рис. 50_8 50 на 50<br>Одну сторону полностью намазать клеем и сформировать страницы | Рис. 50_9 50 x 50<br><br>сделать обложку |

**Урок 50**
1 стр.
**Название раздела: УЯВСЕМ** (ПРАЗДНИКИ)
**Название урока: СУРХУРИ УЯВӖ**

(восклицательный знак)

Фразеологизм (е сăмах çаврăнăшĕ) — пĕлтерĕшĕпе куçăмлă, тытăмĕпе çирĕп сăмах майлашăвĕ. Çак сăмах майлашăвĕнче сăмахсем хăйсен тӳрĕ пĕлтерĕшĕсене çухатнă, тепĕр пĕлтерĕш илнĕ: яка пыр (тутлă апат çиме юратакан çын), икĕ питлĕ (икĕ майлă пулакан), пуç тай (хисепле), алă ус (нимĕн те ан ту).

**1.** (ручка) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

| | |
|---|---|
| алă çитмест | килĕш |
| ăс пух | нумай калаçакан çын |
| вăрăм чĕлхе | вăхăт сахал |
| кăмăла кай | шухăшла |
| пуç ват | вĕрен |

| | |
|---|---|
| пыл та çу | савăн |
| çăвара шыв сып | илт |
| сăмах тыт | калаçма чарăн, шăп пул |
| хăлхана кĕр | пурнăçла, ту |
| ырă кур | аван, лайăх, çепĕç |

**Шыв сып** — кăштах шыв ĕç, çăварта тыт.

**2.** (ручка) **Предложенисенче пĕрремĕш хăнăхтарури сăмах çаврăнăшĕсене ларт.**

1. Мана концерт ____ ____ рĕ. 2. Манăн асаттепе асанне ____ ____ ____ пурăнаççĕ. 3. Юсав тума ____ ____. 4. Эпĕ ____ ____ ____рăм, урăх пĕр сăмах та каламарăм. 5. Манăн пичче университетра ____ ____ать. 6. Вăл каланă ____не ____рĕ.

**3.** (наушники) **Календарьпе паллаш.**

Рис. 51 140 х 70 (взять картинку из учебника 3 класса, страница 74)
нужно будет поменять некоторые картинки, там где:
раштав — барашек (вместо елки)
кăрлач — ёлка (вместо маски)
авăн — звоночек (вместо яблока)

2 стр.
**4.** (наушники) **Схемăсемпе усă курса предложенисем йĕркеле. Уявсенче мĕн тунине кала. Хальхи вăхăтри глаголсене туп, сăпатне тата хисепне палăрт.**

1. … уйăхĕн …мĕшĕнче … паллă тăваççĕ.
2. … уйăхĕнче … паллă тăваççĕ.
3. … уйăхĕнче … ларма пуçлаççĕ.

| Уйăх ячĕ | Число | Уяв ячĕ | Мĕн тăваççĕ? |
|---|---|---|---|
| Пуш | 8 (саккăр) | Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ | Хĕрарăмсене саламлаççĕ, парнесем параççĕ. |
| Ака | 25 (çирĕм пиллĕк) | Чăваш чĕлхи кунĕ | Иван Яковлев палăкĕ умне чечек хураççĕ, тĕрлĕ акци ирттереççĕ, концерт лартаççĕ. |
| Çу | 9 (тăххăр) | Çĕнтерӳ кунĕ | Çĕнтерӳ палăкĕсем умне чечек хураççĕ. |
| Çĕртме | | Акатуй | Тĕрлĕ вăйă ирттереççĕ, лашапа ăмăртаççĕ, |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | Çимĕк | кĕрешççĕ, юрлаççĕ, ташлаççĕ. Мăн асатте-асаннесене асăнаççĕ, çурта çутаççĕ. |
| Утă | | Уяв (çинçе) | Кăвайт чĕртеççĕ, кăвайт тавра карталанса юрлаççĕ, ташлаççĕ, выляççĕ. |
| Çурла | 14 (вун тăваттă)<br>19 (вун тăххăр) | Пыл сăпасĕ<br>Пан улми сăпасĕ | Пыл çиеççĕ, пĕр-пĕрне пылпа хăналаççĕ. Пан улми çиеççĕ, кукăль пĕçереççĕ. |
| Авăн | 1 (пĕрре)<br><br>21 (çирĕм пĕрре) | Пĕлӳ кунĕ<br><br>Чӳклеме | Линейка, тăнăçлăх урокĕ ирттереççĕ. Çĕнĕ хăмларан сăра вĕретеççĕ. Çĕнĕ тырăран çăкăр пĕçереççĕ. |
| Юпа | | Улах | Улах ларма пуçлаççĕ, çыхаççĕ, тĕрлеççĕ, юрлаççĕ, ташлаççĕ. |
| Чӳк | 26 (çирĕм улттă) | Чăваш тĕрри кунĕ | Куравсем, ăсталăх лаççисем ирттереççĕ. |
| Раштав | 21 (çирĕм пĕрре) | Сурхури | Йăва пĕçереççĕ, мăйăрпа хăналаççĕ. Хĕрсем юмăç яраççĕ. |
| Кăрлач | 1 (пĕрре) | Çĕнĕ çул | Чăрăш капăрлатаççĕ, сĕтел хатĕрлеççĕ, пĕр-пĕрне саламлаççĕ. |
| Нарăс | 21 (çирĕм пĕрре) | Тăван чĕлхе кунĕ | Тĕрлĕ чĕлхепе калаçаççĕ, юрлаççĕ, сăвă вулаççĕ. Тĕрлĕ халăх йăлисемпе паллашаççĕ. |

**Карталанса́** — пĕр-пĕрне алăран тытса карта ту.
**Ю́мăç яр** — пулас пурнăçа пĕл.
**Ула́х лар** — çамрăксем пĕр çуртра пуçтарăнса лараççĕ.

**5.** (наушники) **Пĕлме кăсăклă**.

Сурхурире хĕрсем тĕрлĕ мелпе юмăç яраççĕ. Автанпа юмăç яни — чи палли. Пĕр-пĕр çуртра çĕрле урайне тырă, кăмрăк, тимĕр укçа хураççĕ, чашăкпа шыв лартаççĕ. Пӳрте автан илсе кĕреççĕ, вăл мĕн патне пынине сăнаççĕ. Тырă патне пырсан — пулас мăшăрĕ ĕçчен пулать, кăмрăк патне пырсан чухăн пулать, тимĕр укçа патне пырсан пуян пулать, шыв патне пырсан эрех ĕçекен пулать. Автан пĕр вырăнта тăрсан хĕр кăçал качча каймасть.

**Урок 51**
1 стр.
**Название раздела: УЯВСЕМ** (ПРАЗДНИКИ)
**Название урока: МĂН КУН**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Ят сăмах майлашăвĕсенче тĕп сăмах — япала ячĕ. Вăл сăмах майлашăвĕ вĕçĕнче тăрать. |

**1.** (ручка) **Сăмах майлашăвĕсене ушкăнла.**

Аслă аппа, ватă çын, вăтăр процент, вĕсен урамĕ, икĕ кун, Патăрьел районĕ, паянхи

урок, пирĕн çемье, пылак пăр, сакăр падеж, санăн йăмăку, сирĕн шкул, çирĕм кĕнеке, тăваттăмĕш çурт, тимĕр укçа, тутлă апат, унăн кушакĕ, ӳнер урокĕ, чăваш чĕлхи, шкул ачи.

| **пал. я. + яп. я.** | **яп. я. + яп. я.** | **хис. я. + яп. я.** | **мест. + яп. я.** |
|---|---|---|---|
| сивĕ çил | Шупашкар хули | çиччĕмĕш хут | манăн тус |
| … | … | … | … |

**2.** (наушники) **Полилога вула. Ят сăмах майлашăвĕсене туп.**

А р т ё м  С е р г е е в и ч. Ачасем, калăр-ха тархасшăн, сирĕн çемйĕрте чи паллă уяв хăшĕ?
Ю м а н. Пирĕн çемьере чи паллă уяв — Çĕнĕ çул. Эпир чăрăш капăрлататпăр, сĕтел хатĕрлетпĕр, пĕр-пĕрне парне паратпăр, хăнасене чĕнетпĕр.
А т н е р. Пирĕн çемьере чи паллă уяв — Çимĕк. Эпир кашни çулах çĕртме уйăхĕнче яла каятпăр, мăн асаттесене асăнатпăр. Пирĕн тăвансем пурте тĕп çурта пуçтарăнаççĕ.
И р и н а. Пирĕн çемьере чи паллă уяв — Мăн кун. Эпир уяв умĕн мунча кĕретпĕр. Уяв кунĕнче ирхине çĕнĕ кĕпе тăхăнатпăр, çĕнĕ хĕвеле кĕтсе илме тухатпăр. Хĕвел тухнă чух ват асанне пирĕн çине хăмла, тырă сапать, «Сывлăхлă пулăр!» – тет. Маншăн вăл питĕ кăсăклă, тĕлĕнмелле уяв.
А р т ё м  С е р г е е в и ч. Питĕ интереслĕ! Кĕçех Мăн кун çитет. Эпĕ сире Мăн кун халапĕ каласа парасшăн. Çак халапа мана кукамай каласа панăччĕ.

**Тĕп çурт** — мăн асатте-асанне пурăннă çурт.
**Ват асанне́** — асаттен амăшĕ.

2 стр.
**3.** (наушники) **Халапа вула.**

Хĕлĕпех сарă Хĕвел çине усал Вупăр карчăк тапăннă. Вăл Хĕвеле тӳперен хăваланă. Хĕвел сайра тухма пуçланă. Чăваш паттăрĕсем Хĕвеле хӳтĕлесшĕн пулнă. Шур сухалсем паттăрсене пилленĕ. Паттăрсем Вупăрпа çичĕ кун та çичĕ каç çапăçнă, юлашкинчен çĕнтернĕ. Чăваш каччисем Хĕвеле сурпан çине хунă, пĕлĕте янă. Хĕвел йăл кулнă, ташланă, таса пĕлĕт тăрăх чупнă.
Çакна асăнса чăвашсем Мăн кун умĕн кил-çурта тасатаççĕ, мунча хутса кĕреççĕ. Хĕвел чăвашсен пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнать, çавăнпа та ăна тĕрĕсенче, тĕрлĕ эрешсенче, чăваш гербĕпе ялавĕ çинче курма пулать.

**Ву́пăр ка́рчăк** — вată усал хĕрарăм.
**Та́пăннă** — хирĕç çапăçма пынă.
**Сайра́** — сахал.
**Шур сухáл** — хисеплĕ ватă çын.
**Пилле́нĕ** — халал панă, пĕр-пĕр ĕç тума хавхалантарнă, ирĕк панă.
**Чăвáш каччисе́м** — чăваш çамрăкĕсем.
**Сурпáн** — тĕрленĕ вăрăм ал шăлли, ăна хĕрарăмсем пуçне çыхаççĕ.

**4.** (наушники) **Ят сăмах майлашăвĕсене тĕрĕс çыхăнтар.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| сарă | паттăрĕ | чăваш | кун |
| усал | сухал | таса | кĕпе |
| чăваш | Хĕвел | Мăн | тӳпе |
| шур | карчăк | çĕнĕ | вырăн |
| çичĕ | кун | пысăк | каччи |

**5.** (блокнот и карандаш) **Текстра ӳкерчĕксемпе çыхăннă предложенисем туп.**

Рис. 51 по мотивам чувашской легенды: по представлениям чувашей, в этот день солнце восходит пританцовывая, т. е. особенно торжественно и радостно. Вместе с детьми на встречу нового, молодого солнца выходили и старики. Они рассказывали ребятам древние сказки и легенды о борьбе Солнца со злой колдуньей Вупăр. В одной из этих легенд повествуется, что за долгую зиму на солнце постоянно нападали злые духи, посланные старухой Вупăр, и хотели его стащить с неба в преисподнюю. Солнце все меньше и меньше появлялось на небе. Тогда чувашские батыры решили освободить Солнце из плена. Собралась дружина добрых молодцев и, получив благословение старцев, направилась на восток, чтобы вызволить Солнце. Семь дней и семь ночей сражались батыры со слугами Вупăр и наконец одолели их. Злая старуха Вупăр со сворой своих помощников убежала в подземелье, спряталась во владениях Шайтана.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Рис. 51_1 50 x 50 Злая колдунья, которая закрыва-ет Солнце. | Рис. 51_2 50 x 50 Аксакал старец благословляет молодцев | Рис. 51_3 50 x 50 Злая колдунья и молодцы сража-ются за Солнце. | Рис. 51_4 50 x 50 Один из молодце в поднимает Солнце на небо. | Рис. 51_5 50 x 50 Солнце улыбает-ся. Чуваши же ставят знак солн-✵ца на одежде |

**6.** (наушники) **Мăн кун сăввисене вĕрен.** **Рамки убрать!**

| | |
|---|---|
| Тух, тух, хĕвел, тух, хĕвел,<br>Кăвак тӳпене тух, хĕвел.<br>Шанкăр уяр ту, хĕвел,<br>Хĕрлĕ кĕпе тăхăнтар,<br>Алла хĕрлĕ маття пар.<br>Хĕрли сана, шурри мана. | Тух, тух, хĕвел, тух, хĕвел,<br>Хĕрлĕ çитти саратпăр,<br>Тух, тух, хĕвел, тух, хĕвел,<br>Хĕрлĕ çăмарта паратпăр.<br>Курăр, курăр, пурте курăр,<br>Хĕвел ташлать савăнса<br>Пире ыррине сунса. |

**Ша́нкăр уяр** — тӳпере пĕр пĕлĕт те çук.
**Маття́** — пĕчĕк ачасем «çăмарта» сăмаха çакăн пек калаççĕ.
**Çитти́ (çи́тĕ)** — пысăк пусма, унпа витеççĕ. Тĕслĕхрен, сĕтел çитти, вырăн çитти.

**Урок 52**
**Название раздела: АПАТ-ÇИМĔÇ. ХĔЛЛЕХИ КУНСЕМ. ПУШĂ ВĂХĂТРА. УЯВСЕМ**
**Название урока: ХĂВНА ТĔРĔСЛЕ**

**1.** (ручка) **Мăшăр сăмахсемпе усă курса сăмах ушкăнĕсене пĕтĕмлет.**

1. Пулă, какай, çăкăр, сыр, çăмарта    а) шыв-шур

| | | | |
|---|---|---|---|
| 2. | Кӳлĕ, пĕве, юхан шыв, тинĕс, океан | ӑ) | савӑт-сапа |
| 3. | Ҫӑпала, турилкке, ҫатма, ҫĕҫĕ, чӳлмек | б) | йывӑҫ-курӑк |
| 4. | Юман, ҫеҫпĕл, ҫырла, серте | в) | апат-ҫимĕҫ |

**2.** (ручка) **Палӑртнӑ сӑмахсенче** ***-у (-ӳ), -ĕ (-и), -ӑр (-ĕр)*** **камӑнлӑх аффиксĕсене ларт.**

- Сирĕн **ҫурт…** ӑҫта вырнаҫнӑ?
- Санӑн **пӳлĕм…** пысӑк-и?
- Вĕсен **хваттер…** икĕ пӳлĕмлĕ.
- Унӑн **телефон…** ҫĕнĕ.

**3**. (ручка) **Предложенисенче куҫӑмлӑ пĕлтерĕшлĕ сӑмахсене тĕрĕс ларт.**

- ✓ Ылтӑн кĕркунне хыҫҫӑн ______ кĕркунне пуҫланчĕ.
- ✓ Мана асанне _____ сӑмах каларĕ, ӑшӑ сĕт ĕҫтерчĕ.
- ✓ Ҫеҫпĕл Мишши _____ чунлӑ поэт пулнӑ.
- ✓ Ҫуркунне ҫут ҫанталӑк ыйхӑран ______.
- ✓

**Кирлĕ сӑмахсем:** ӑшӑ, вӑранчĕ, вĕри, хура.

**4.** (ручка) **Предложенисенче антоним пулакан сӑмахсене тĕрĕс ларт.**

- ✓ Пӑлхар ______ хула, Ҫĕнĕ Шупашкар – хальхи.
- ✓ Ĕҫчен ҫынна кун кĕске, ______ ҫынна ______ кĕске.
- ✓ Пĕчĕк чӑн сӑмах _____ суя сӑмаха ҫĕнтерет.
- ✓

**Кирлĕ сӑмахсем:** авалхи, кахал, пысӑк, ҫĕр.

**5.** (ручка) **Палӑртнӑ сӑмахсене синонимсемпе улӑштар.**

Ҫĕнĕ ҫул уявне ҫуркунне **паллӑ тунӑ**.
Пирĕн хула **хитре** вырӑнта ларать.
Театр умĕнче **савӑнӑҫлӑ** кĕвĕ янӑрать.

**Кирлĕ сӑмахсем:** уявланӑ, хаваслӑ, илемлĕ.

**6.** (ручка) **Предложенисенче хыҫ сӑмахсем туп.**

- Ҫуллахи каникул хыҫҫӑн вĕренӳ ҫулĕ пуҫланать.
- Эпĕ сан патна каҫхине пыратӑп.
- Кушак манӑн вырӑн ҫинче ҫывӑрать.
- Вӑл амӑшĕ валли парне туянчĕ.

**7.** (ручка) **Предложенири 3-мĕш сӑпат местоименийĕсене туп. Вĕсен падежне палӑрт.**

1. Унӑн кĕнеки питĕ кӑсӑклӑ.
2. Ӑна валли сĕткен илмелле-и?
3. Эпĕ ҫул ҫӳреве унпа пыратӑп.
4. Мана унсӑр кичем пулать.

**8.** (ручка) **Таблицӑна тултар.**

| Глагол | Сăпат | Хисеп | Форма |
|---|---|---|---|
| Пурăнатпăр | 1 | нумайлă | пурлă |
| Калаçмастпăр | | | çуклă |
| Вулать | | пĕрреллĕ | |
| Каймастăн | 2 | | |

**9.** (ручка) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

| **Предложени** | **Предложени тĕсĕ** |
|---|---|
| 1. Атнер, Асамат, Юман – питĕ çывăх туссем. | а) пĕр йышши обстоятельствăллă предложени |
| 2. Çул çӳревре ачасем кăсăклă вырăнсемпе паллашаççĕ, сăн ӳкерĕнеççĕ. | ă) пĕр йышши дополнениллĕ предложени |
| 3. Манăн кукка университетра, академире вĕреннĕ. | б) пĕр йышши сказуемăйлă предложени |
| 4. Ачасем вăрманта çырла, кăмпа пуçтарчĕç. | ă) пĕр йышши подлежащиллĕ предложени |

**10.** (ручка) **Медаль** сăмахăн фонетика тишкерĕвне ту.

**11.** (ручка) **Диалект сăмахĕсем вырăнне литература чĕлхинчи сăмахсене çыр.**

1. Эпир кĕркунне пахчана **паранкă** кăларма кайрăмăр.
2. Миçе **сахат** çитнĕ-ши?
3. Манăн **шу** ĕçес килет.
4. Манăн **маçак** питĕ ватă.

**Кирлĕ сăмахсем:** асатте, шыв, çĕр улми, сехет.

**12.** (ручка) Предложенисенче фразеологизмсене (сăмах çаврăнăшĕсене) туп.

1. Нумай калаçакан çынна вăрăм __________ теççĕ.
2. Икĕ майлă пулакан çынна икĕ __________ теççĕ.
3. Тутлă апат çиме юратакан çынна яка __________ теççĕ.

**Кирлĕ сăмахсем:** пыр, чĕлхе, питлĕ.

**13.** (ручка) **Ят сăмах майлашăвĕсем ту.**

Хитре _____, пиллĕкмĕш ______, авалхи _____, тимĕр _____, вунă _____, кăвак ___.

**Урок 53**
1 стр.
**Название раздела: ÇУЛТАЛĂК ВĂХĂЧĔ. ÇУРКУННЕ** (ВРЕМЯ ГОДА. ВЕСНА)
**Название урока: ÇУРКУННЕ МĔН ТУМА ПУЛАТЬ?**

**Мĕн аса илĕн?**

Диалект сăмахĕсене, архаизмсене, хыç сăмахсене, фразеологизмсене, ят сăмах майлашăвĕсене аса илĕн.

**Мĕн вĕренĕн?**

Тăтăш усă куракан тата сайра тĕл пулакан сăмахсемпе, иртнĕ вăхăтри глаголсен пулăвĕпе, çуклă предложенисен тата ыйтуллă предложенисен пулăвĕпе паллашăн.

(восклицательный знак)

Чĕлхери сăмахсене икĕ ушкăна пайлама пулать: тăтăш усă куракан сăмахсем, сайра тĕл пулакан сăмахсем.

Тăтăш усă куракан сăмахсем кулленхи пурнăçри чи кирлĕ япаласемпе ăнлавсене пĕлтереççĕ: атте, анне, куç, пуç, çăкăр, çĕр улми тата ытти те.

Сайра тĕл пулакан сăмахсем шутне кивелнĕ сăмахсем (историзмсем, архаизмсем), çĕнĕ сăмахсем (неологизмсем) кĕреççĕ: уес (уезд), элем (пĕчĕк ялав), усламçă (бизнесмен), влог (видеоблог) тата ытти те.

**1.** (ручка) **Сăмахсене ушкăнла.**

Алтăр, аппа, вулавăш, вырăн, калем, сĕтел, çĕр-шыв, сурпан, тухья, уяв, хула, элчĕ, яшка.

| Тăтăш усă куракан сăмахсем | Сайра тĕл пулакан сăмахсем |
|---|---|
| аппа | алтăр (курка) |
| … | … |

**2.** (ручка) **Уйăх ячĕсене пĕл.**

Аак, ăсран, ăту, кӳч, навă, пшу, пюа, раçул, ташарв, тремĕç, уç, чалкăр.

**3.** (ручка) **Предложенисене вĕçле.**

Çуркуннехи уйăхсем — … , … , … .
Çуллахи уйăхсем — … , … , … .
Кĕркуннехи уйăхсем — … , … , … .
Хĕллехи уйăхсем — … , … , … .

**4.** (ручка) **Хуравла. Çуркунне мĕн тума пулать?**

А р т ё м   С е р г е е в и ч. Ачасем, çуркунне мĕн тума пулать?
А л и н а. Çанталăк ăшăтать. Çӳхерех тумланма пулать.
А с а м а т. Урамра ытларах усăлса çӳреме пулать.

рис. 52 70 х 140
слова, написанные на белой доске маркером

**Çуркунне мĕн тума пулать?** (что можно сделать весной)

**вăрманта** чи пысăк йывăç шырама
**кишĕр** акма
**лĕпĕшсене** сăн ӳкерме
пĕр кун **телефонсăр** пурăнма
**пикника** кайма
**пӳлĕме** хут чечексемпе илемлетме
**стадионта** футболла выляма
субботника тухма
çĕнĕ тумтир **туянма**
**çĕр улми** лартма
**çеçпĕл** чечекĕ курма
çуллахи каникула кĕтме
ташă студине çӳреме
**шăпчăк** юррине итлеме
ют **чĕлхе** вĕренме

2 стр.
**5.** (ручка) **4-мĕш хăнăхтарури сăмах майлашăвĕсене ӳкерчĕксемпе çыхăнтар.**
рис. 53 15 маленьких рисунков 50 х 50, рисунки пронумеровать.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 53_1<br>легкая куртка | 53_2<br>телефон пере-черкнут | 53_3<br>бабочка | 53_4<br>футбольный мяч | 53_5<br>соловей |
| 53_6<br>лопата и картош-ка | 53_7<br>корейские буквы | 53_8<br>петрушка на под-оконнике | 53_9<br>подснежник | 53_10<br>танец девочки |
| 53_11<br>календарик апре-ля (по-чувашски написать **ака**), где перечеркнун-ты часть дат подр от 1 по 10 напри-мер. | 53_12<br>сосиска на шам-пуре | 53_13<br>рука в перчатке собирает мусор | 53_14<br>большое старое дерево | 53_15<br>(на стенке в ком-нате) из бумаги весенние цветы |

**6.** (наушники) **Артём Сергеевич историне вула. Ят сăмах майлашăвĕсене туп.**

Пĕрре çуркунне ______ класра вĕреннĕ чухне эпир юлташпа парка кайрăмăр. Пирĕн _______ юррине магнитофон çине çыртарас килчĕ. Эпир ирхине _______ парка çитрĕмĕр те кайăксен юррисене çыртарма пуçларăмăр. Çав вăхăтра темĕнле _______ кăшкăрса ячĕ. Малтан тĕлĕнтĕмĕр, кайран тин ăнланса илтĕмĕр — ку ______ сасси-çке. Уçланкăра Мускавран килнĕ _________ вырнаçнăччĕ. Çын çук чухне пиле ________ илсе тухнă иккен.

**Кирлĕ сăмахсем:** зоопарк, пил, пилĕк сехетрех, çиччĕмĕш, уçăлса çӳреме, чĕр чун, шăпчăк.

**7.** (земной шар) **Пĕлме кăсăклă. Хальхи вăхăтри глаголсене çырса ил. Вĕсен хисепĕсене кăтарт.**

| | |
|---|---|
| Шăпчăксем шурлăхсемпе кӳлĕсем хĕрринче пурăнаççĕ. Вĕсем йăвисене чăтлăхра çĕр çинче тăваççĕ. Çăмартисем тĕттĕм симĕс | Рис. 54 50 х 50<br>Соловей |

| | |
|---|---|
| куракă тĕслĕ. Вĕсем хурт-кăпшанкăпа *тăранса пурăнаççĕ*, пĕр кун хушшинче хăйсен йывăрăшĕ чухлĕ çиеççĕ. Пĕр сехетре 50 çухрăм таран вĕçме пултараççĕ. Шăпчăксем питĕ чаплă юрăçăсем. Вĕсен аçисем кăна юрлаççĕ, пĕр-пĕрин сассине 2–3 çухрăмран илтеççĕ. Халăх сăнанă тăрăх, шăпчăк юрлама пуçласан купăста лартма юрать. | |

**Чăтлăхра́** — питĕ нумай йывăç-курăк ӳсекен вырăнта.
**Тăранса́ пурăна́ççĕ** — çисе пурăнаççĕ.
**Шắпчăк аçи́** — шăпчăк чĕппин ашшĕ.

**Урок 54**
1 стр.
**Название раздела: ÇУЛТАЛĂК ВĂХĂЧĔ. ÇУРКУННЕ** (ВРЕМЯ ГОДА. ВЕСНА)
**Название урока: ЮМАН СĂН ӲКЕРЧĔКĔСЕМ**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Чăваш чĕлхинче иртнĕ вăхăтри глаголсем пĕрре иртнĕ вăхăтра (кай**рĕ**, тух**рĕ**, кур**чĕ**, ил**чĕ**), темиçе иртнĕ вăхăтра (ка**ятчĕ**, тух**атчĕ**, кур**атчĕ**, ил**етчĕ**) пулаççĕ. |

**Пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ**

| Хисеп | Сăпат | Местоимени | Пурлă форма | Çуклă форма |
|---|---|---|---|---|
| Пĕрреллĕ | 1 | Эпĕ | кала-рăм, çи-рĕм<br>лар-тăм, ил-тĕм | кала-ма-рăм, çи-ме-рĕм<br>лар-ма-рăм, ил-ме-рĕм |
| | 2 | Эсĕ | кала-рăн, çи-рĕн<br>лар-тăн, ил-тĕн | кала-ма-рăн, çи-ме-рĕн<br>лар-ма-рăн, ил-ме-рĕн |
| | 3 | Вăл | кала-рĕ, çи-рĕ<br>лар-чĕ, ил-чĕ | кала-ма-рĕ, çи-ме-рĕ<br>лар-ма-рĕ, ил-ме-рĕ |
| Нумайлă | 1 | Эпир | кала-рăмăр, çи-рĕмĕр<br>лар-тăмăр, ил-тĕмĕр | кала-ма-рăмăр, çи-ме-рĕмĕр<br>лар-ма-рăмăр, ил-ме-рĕмĕр |
| | 2 | Эсир | кала-рăр, çи-рĕр<br>лар-тăр, ил-тĕр | кала-ма-рăр, çи-ме-рĕр<br>лар-ма-рăр, ил-ме-рĕр |
| | 3 | Вĕсем | кала-рĕç, çи-рĕç<br>лар-чĕç, ил-чĕç | кала-ма-рĕç, çи-ме-рĕç<br>лар-ма-рĕç, ил-ме-рĕç |

**1.** (ручка) **Глаголсене иртнĕ вăхăтра ларт.**

| | |
|---|---|
| 1. Эпĕ шыра___, çӳре___, кан___, пĕл___.<br>2. Эсĕ шыра___, çӳре___, кан___, пĕл___.<br>3. Вăл шыра___, çӳре___, кан___, пĕл___. | 4. Эпир шыра___, çӳре___, кан___, пĕл___.<br>5. Эсир шыра___, çӳре___, кан___, пĕл___.<br>6. Вĕсем шыра___, çӳре___, кан___, пĕл___. |

**2.** (наушники) **Диалога вула. Сан шутпа, Юман мĕн хуравланă-ши? Иртнĕ вăхăтри глаголсене туп.**

Ю м а н. Ĕнер эпир кăтра кăмпа пуçтарма вăрмана кайрăмăр, Ăсата та илтĕмĕр. Питĕ нумай сăн ӳкертĕмĕр. Акă кур.
А т н е р. Кăтарт.

Ю м а н. Ăсат йытă комбинезонĕпе. Ăсатпа лĕпĕш. Кăтра кăмпа. Кукша пуçсем. Пыл куракĕ çинче пыл хурчĕ. Ăсат Атăл хĕрринче. Акă сăвăс куртăм.
А т н е р. Ăсат вара мĕншĕн комбинезонпа? Сивĕ пулчĕ-им?
Ю м а н. … .

**Кирлĕ хуравсем:** 1. Ăсата яланах сивĕ. 2. Сăвăсран хӳтĕленме. 3. Илемшĕн.

2 стр.
**3.** (наушники) **Иккĕмĕш хăнăхтарупа усă курса ӳкерчĕксене ят пар.**

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Рис. 55_1 50 х 50<br>Пчела на цветке медуница. | Рис. 55_2 50 х 50<br>Лайка на берегу Волги | Рис. 55_3 50 х 50<br>Собака породы Лайка в собачьем комбинезоне | Рис. 55_4 50 х 50<br>Клещ на листке или на стебле | Рис. 55_5 50 х 50<br>Гриб сморчок | Рис. 55_6 50 х 50<br>Цветущие (желтые) одуванчики | Рис. 55_7 50 х 50<br>Лайка играет с бабочкой |

**4.** (земной шар) **Текст тăрăх предложенисем ту.**

| Хăçан? | Кам? Мĕн? | Ăçта | Мĕн турĕ? |
|---|---|---|---|
| Ĕнер<br><br><br>Паян | Атнер<br>Ăсат<br>пыл хурчĕ<br>Юман | Атăл хĕрринче<br>вăрманта<br>пыл куракĕ çинче<br>шкулта | кăтра кăмпа пуçтарчĕ<br>кукша пуçа сăн ӳкерчĕ<br>пыл пуçтарчĕ<br>сăвăс курчĕ<br>сăн ӳкерчĕксем кăтартрĕ<br>сăн ӳкерчĕксем пăхрĕ<br>чупса çӳрерĕ |

**5.** (земной шар) **Пĕлме кăсăклă**.

Сăвăс — сакăр ураллă, эрешмен евĕрлĕ хăрушă чĕр чун. Вăл юнпа тăранса пурăнать, тĕрлĕ чир ертет. Сăвăс çуркунне тухать, çынсем çине, йытă-кушак çине ларма пултарать. Сăвăсран хӳтĕленме çынсем çара ӳте хупласçĕ, чĕр чунсене те тумтир тăхăнтарасçĕ.

**Эрешме́н** — пĕчĕк сакăр ураллă чĕр чун; çуртсенче карта тăвать.
**Ерте́т** — чирпе чирлеттерет.
**Çара́** — хупламан.
**Ӳт** — кĕлеткен çиелти пайĕ.

**6.** (ручка) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| **сакăр** | | евĕрлĕ | | çуркунне | | ӳт |
| эрешмен | | тăранса пурăнать | | ларма | | пултарать |
| хăрушă | | ертет | | сăвăсран | | тухать |
| юнпа | | чĕр чун | | çара | | хупласçĕ |

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| тĕрлĕ | | **ураллӑ** | | ӳте | | тăхăнтартаççĕ |
| чир | | чир | | тумтир | | хӳтĕлен |

**7.** (маски) **Мăшăрпа ĕçле.**

— Эсĕ кăтра кăмпа курнă-и?
— Эпĕ кăтра кăмпа … (курнă / курман)
— Эсĕ кăтра кăмпа çисе курнă-и?
— Эпĕ кăтра кăмпа … (çисе курнă / çисе курман)

**Урок 55**
1 стр.
**Название раздела: ÇУЛТАЛĂК ВĂХĂЧĔ. ÇУРКУННЕ** (ВРЕМЯ ГОДА. ВЕСНА)
**Название урока: КУКАМАЙ КАЛАВĔСЕМ**

**1.** (ручка) **Илемлĕ вула. Палăртнă глаголсем хăш вăхăтра-ши? Диалект сăмахĕпе архаизм туп.**

— *Мерчен мĕскер* вăл, асанне?
— Мерчен-и? Вăл, ара, шăрçаччĕ. Шăрça, **няням.**
Вĕттисене тухья çине çакса **яратчĕç**,
Шултрисенчен **тăватчĕç** сулă,
Мăя **çакатчĕç**, хăлхана.
Мерчен вăл тĕрлĕ тĕслĕ пулнă: хĕрли, сарри.
Вăл йăлана халь манчĕç ĕнтĕ.
— Асанне, кăтарт-ха тухьюна мана.
— Тухья? Мĕскер тума сана?

Петĕр Хусанкай

**Мерче́н** — хаклă шăрça, коралл.
**Мĕске́р** — мĕн.
**Нcaptionśм** — пĕчĕк ачам, мăнукăм.

**2.** (наушники) **Хуравла.**

1. Мĕн вăл мерчен?
2. Унпа мĕн тунă?
3. Вăл мĕн тĕслĕ пулнă?

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Темиçе иртнĕ вăхăт пĕлтерĕшне **-ат (-ет), -т** аффикссем кăтартаççĕ: лар-**ат**-тăм, пурăн-**ат**-чĕ, пĕл-**ет**-чĕç. Темиçе иртнĕ вăхăтра пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсен **-рăм, -рăн, -рĕ, -рăмăр, -рăр, -рĕç** аффиксĕсем *-тăм, -тăн, -чĕ, -тăмăр, -тăр, -чĕç* аффикссемпе улшăнаççĕ: кала-рăм — кала-**т**-тăм, чуп-рĕ — чуп-**ат**-чĕ, çи-рĕр — çи-**ет**-тĕр. |

2. (ручка) **Иртнĕ вăхăтри глаголсене ушкăнла**.

**Вуларăр**, илтĕм, кайрăмăр, кăтартрĕ, **килеттĕмĕр**, куратăр, кураттăр, пĕлетчĕ, сăн ӳкереттĕм, çырчĕ, тăватчĕç, турăм, шутлаттăм, ярăнаттăмăр.

| Пĕрре иртнĕ вăхăт | Темиçе иртнĕ вăхăт |
|---|---|
| вуларăр | килеттĕмĕр |
| … | … |

**3.** (ручка) **Кирлĕ аффикссем лартса пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсем ту.**

**Тĕслĕх:** *Çулла эпĕ яла ка**яттăм** — Çулла эпĕ яла кайр**ăм**.*

1. Асанне хуран кукли пĕçеретчĕ — Асанне хуран кукли пĕçер___. 2. Эпир ачасемпе уçланкăра футболла выляттăмăр — Эпир ачасемпе уçланкăра футболла выля_____. 3. Канмалли кунсенче аттепе анне килетчĕç — Канмалли кунсенче аттепе анне кил____. 4. Эпĕ каçхине кĕнеке вулаттăм — Эпĕ каçхине кĕнеке вула___. 5. Эпир кӳлĕ хĕрринче канаттăмăр, пулă тытаттăмăр — Эпир кӳлĕ хĕрринче кан___, пулă тыт___.

2 стр.

**4.** (наушники) **Диалога вула. Темиçе иртнĕ вăхăтри глаголсене туп.**

У л и н е. Кукамай, эсĕ çамрăк чухне чăваш кĕпи тăхăнаттăн-и?
К у к а м ă ш ĕ. Эпĕ тăхăнман, манăн асанне вара чăваш кĕпипе çӳретчĕ, умне саппун çакатчĕ.
У л и н е. Тухья та тăхăнатчĕ-и?
К у к а м ă ш ĕ. Тухья качча кайман хĕрсем тăхăнатчĕç, асанне хушпу тăхăнатчĕ.
У л и н е. Мăн асанне те ача чухне тухья тăхăннă-и?
К у к а м ă ш ĕ. Хĕр ачасем тăхăнман. Хĕрсем вăййа тухнă чухне тăхăннă.
У л и н е. Мĕнле вăййа? Мечĕкпе вылянă-и? Хăваламалла вылянă-и?
К у к а м ă ш ĕ. Ун чухне компьютер пулман, телевизор пулман, телефон пулман. Çамрăксем çуркунне, çурхи ака вĕçленсен, пĕр-пĕр уçланкăра пуçтараннă. Вăйăçă купăс калană, ыттисем юрланă, ташланă, чăваш вăййисем вылянă.
У л и н е. Мĕнле чăваш вăййисем?
К у к а м ă ш ĕ. Акă итле. Çамрăксем икĕ ушкăна пайланаççĕ, хире-хирĕç тăраççĕ, алăран алă тытаççĕ. Малтан пĕрисем пĕр йĕрке юрлаççĕ, кайран теприсем тепĕр йĕрке юрлаççĕ. Юрланă вăхăтра пĕр-пĕрин патне утаççĕ.

**5.** (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

1. Улине кукамăшĕ çамрăк чухне чăваш кĕпи тăхăннă-и?
2. Улинен мăн асламăшĕ мĕн тăхăннă?
3. Улинен мăн асламăшĕ мĕн çакнă?
4. Хĕрсем вăййа тухнă чухне мĕн тăхăннă?
5. Улинен кукамăшĕн ача чухне мĕн пулман?
6. Вăйăра мĕн-мĕн тунă?
7. Эсĕ мĕнле чăваш вăййисем пĕлетĕн?

**6.** (маски) **«Çерем ватса вир акрăм» чăваш вăййине выля. Фразеологизм туп.**

| Пĕрремĕш ушкăн | Иккĕмĕш ушкăн |
|---|---|
| — Çерем ватса вир акрăм, вир акрăм, | — Эпир ăна таптатпăр, таптатпăр! |

Вирĕ пулчĕ пăрçа пек, пăрçа пек.

— Эсир мĕнпе таптатăр, таптатăр?
— Лашăрсене тытатпăр, тытатпăр!
— Чĕн йĕвенпе тытатпăр, тытатпăр!
— Пин сум парса илетпĕр, илетпĕр!
— Сире тата мĕн кирлĕ? Мĕн кирлĕ?

— Лашасене яратпăр, яратпăр!
— Эсир мĕнпе тытатăр, тытатăр?
— Чĕн йĕвенĕ пин тенкĕ, пин тенкĕ!
— Пире пин сум кирлĕ мар, кирлĕ мар!
— Хĕрлĕ питлĕ хĕр кирлĕ, хĕр кирлĕ!

«Хĕрлĕ питлĕ» сăмах вырăнне хирĕç ушкăнри пĕр-пĕр хĕр ятне каламалла. Çав хĕрĕн чупса пырса хирĕç ушкăнри çамрăксен аллисене татмалла.

**Çере́м** — курăк.
**Вир** — тырă-пулă ячĕ, унран сарă тĕслĕ пăтă пĕçереççĕ.
**Пăрçа́** — ӳсен-тăран, çавраκа, унран яшка, пăтă пĕçереççĕ, симĕс пăрçана салата яраççĕ.
**Чĕн** — выльăх-чĕрлĕх тирĕнчен тунă япала, унран пиçиххи те тăваççĕ.
**Йĕве́н** — лаша пуçне тăхăнтартмалли хатĕр.
**Сум** — тенкĕ.

**Урок 56**
1 стр.
**Название раздела: ÇУЛТАЛĂК ВĂХĂЧĔ. ÇУРКУННЕ** (ВРЕМЯ ГОДА. ВЕСНА)
**Название урока: ЮХАН ШЫВ ТУПРИ**

(восклицательный знак)

Предложенисем пурлă тата çуклă формăра пулаççĕ. Пурлă формăри предложенисем: Эпĕ шкула каятăп; Манăн çывăрас килет. Çуклă формăри предложенисем тĕрлĕ мелпе пулаççĕ:

| № | Çуклăх паллисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1 | Çуклăх аффиксĕсем:<br>1) -м<br>2) -ма (-ме)<br>3) -мас (-мес) | <br>1. Эпĕ ыран кинона кай**м**ăп<br>2. Вăл урама тух**ма**рĕ<br>3. Эсĕ пĕл**мес**тĕн-и? |
| 2 | Татăксем:<br>1) ан<br>2) мар<br><br>3) çук | <br>1. Йытăран **ан** хăра!<br>2. Мана пулăшу кирлĕ **мар**.<br>Ыран шкула каймалла **мар**.<br>3. Кая юлас **çук**. |
| 3 | «Çук» паллă ячĕ | Паян манăн вăхăт **çук**. |

**1.** (ручка) **Предложенисенче çуклă формăри сăмахсене туп. Çуклăх паллине палăрт.**

1. Эпĕ ыран пушă пулмăп. 2. Эпир килти ĕçе вăхăтра тумарăмăр. 3. Асамат футбол секцине çӳрмест. 4. Манăн кун пек кĕнеке çук. 5. Эпĕ çулла лагере каймăп. 6. Атнер гитара калама пĕлмест. 7. Вăл хăнана килмерĕ. 8. Пирĕн картишĕнче спорт лаптăкĕ

çук.

**2.** (ручка) **Кирлĕ татăк (ан, мар, çук) ларт.**

1. Халь унта каяс ______. 2. Нихăçан та ___ кулян. 3. Кун пек калас ____. 4. Кӳренмелле ____. 5. Алă ____ ус! 6. Усал пулмалла ____.

**3.** (наушники) **Диалога вула. Çуклă предложенисене туп. Пурлă предложенисене çуклă формăра ларт.**

А с а м а т. Артём Сергеевич, эпир ĕнер аттепе пулла кайрăмăр.
А р т ё м С е р г е е в и ч. Шăнмарăр-и? Çурхи çанталăк ултавлă-çке.
А с а м а т. Темех мар. Эпир мĕн тупнине пăхăр-ха!
А р т ё м С е р г е е в и ч. Аюй! Санăн кунта тем те пур! Юхан шыв тупри!

**Çурхи́** — çуркуннехи.
**Ултáвлă çантáлăк** — хăвăрт улшăнакан çанталăк, пĕрре ăшă, тепре сивĕ пулать.
**Тупри́, тупрá** — пуянлăх.

2 стр.
**4.** (наушники) **Хуравла. Юман шыв хĕрринче мĕн-мĕн тупнă?**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Рис. 56_1 50 х 50 железная пуговица середины 20 века. | Рис. 56_2 50 х 50 галька необычного цвета (например, фиолетовая с прожилками) | Рис. 56_3 50 х 50 чертов палец (белемнит) | Рис. 56_4 50 х 50 стеклышко с закруглившимися краями (которое долго лежало на песчаном берегу) | Рис. 56_5 50 х 50 Немного поржавевшая 5-копеечная монета 1930 года |
| тимĕр тӳме | вĕт чул | качи-мăчи | кĕленче катăкĕ | пăхăр укçа |

**5.** (наушники) **Текста вула. Хыç сăмах туп.**

| | |
|---|---|
| Рис. 6 50 х 50 портрет Артёма Сергеевича (рассказывающего о чертовом пальце) | Пăхăр-ха, Юман мĕн тупнă?! Çак чула халăхра качи-мăчи теççĕ. Ăсчахсем ăна белемнит теççĕ. Вăл авалхи моллюск кĕлетки. Эпир ача чухне сăрт çинче качи-мăчи пуçтарнă. Эпĕ ăна асаннене панă. Асанне çак чулсене пухнă. Вĕсене çĕçĕпе хырнă та çăнăх тунă, суран çине сапнă. Хăш-пĕр халăх качи-мăчирен капăрлăх е талисман тунă. |

**Çĕçĕпé хы́рнă** — çĕçĕпе тасатнă.
**Курáн** — аманнă вырăн.
**Сáпнă** — тăкнă, хунă.

**6.** (наушники) **Ыйтусене йĕркеле. Хуравла.**

1. мĕн, Юман, тупнă?
2. ăна, Ăсчахсем, теççĕ, мĕн?
3. Мĕн, качи-мăчи, вăл?

4. Артём Сергеевич, пуçтарнă, ăçта, качи-мăчи?
5. панă, ăна, Вăл, кама?
6. мĕн çине, Качи-мăчи, çăнăхне, сапнă?
7. Качи-мăчирен, тунă, мĕн-мĕн?

**7.** (наушники) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

| | | |
|---|---|---|
| Тӳме | | Вăл тĕрлĕ тĕслĕ пулать. Хĕвел çинче йăлтăртатать. |
| Вĕт чул | | Вăл тимĕртен, йывăçран, пластикран, кĕленчерен, керамикăран пулать. Ăна тумтир çине çĕлесе лартаççĕ. |
| Кĕленче татăкĕ | | Вăл япала туянма кирлĕ пулнă. Халь унпа усă курмаççĕ. |
| Пăхăр укçа | | Ăна шыв хĕрринче тупаççĕ. Вăл тĕрлĕ тĕслĕ пулать. Ăна асфальт айне хураççĕ. |

**Йăлтăртата́ть** — çуталать, çутă курăнать.

## Урок 57

1 стр.

**Название раздела: ÇУЛТАЛĂК ВĂХĂЧĔ. ÇУРКУННЕ** (ВРЕМЯ ГОДА. ВЕСНА)

**Название урока: ÇУРХИ КАЛЕЙДОСКОП.**

(восклицательный знак)

Чăваш чĕлхинче ыйтуллă предложенисене икĕ мелпе тума пулать:
1) **- и, - им, - ши** татăксемпе: Эсĕ пирĕнпе пыратăн-**и**? Ку санăн кĕнекӳ-**им**? Паян çумăр çăвать-**ши**?
2) **кам? мĕн? ăçта? миçе? хăш? хăçан? мĕнле?** ыйту сăмахĕсемпе: Ку мĕн? Вăл кам? Эсĕ ăçта каятăн? Халь миçе сехет? Хăш кун каятпăр? Хăçан килетĕн? Мĕнле вĕренетĕн?
Предложенире **-и, -им, -шим** татăк пулсан çав предложенире ыйту сăмахĕсем тĕл пулмаççĕ.

**1.** (ручка) **-и татăкпа усă курса ыйтуллă предложенисем ту.**

1. Вăл Шупашкарта пурăнать. 2. Эсĕ паян велосипедпа ярăнма пыратăн. 3. Ку фильм кăсăклă. 4. Вĕрентекен класа кĕчĕ. 5. Çурхи çанталăк ултавлă.

**2.** (ручка) **Кирлĕ ыйту сăмахĕ ларт.**

1. Эсĕ … ятлă? 2. Санăн хушамату …? 3. Эсĕ … çулта? 4. Эсĕ … класра вĕренетĕн? 5. Эсĕ … пурăнатăн? 6. Эсĕ … çуралнă? 7. Эсĕ … пуласшăн? 8. Сана … предмет ытларах килĕшет?

**Кирлĕ ыйту сăмахĕсем:** ăçта, кам, мĕн, мĕнле, миçе, миçемĕш, хăçан, хăш.

**3.** (ручка) **Улине хуравĕсене тĕрĕс çыхăнтар. Эсĕ ху çак ыйтусене мĕнле хуравлăттăн?**

| | |
|---|---|
| 1. Эсĕ ирхине миçере тăратăн? | 1. Троллейбуспа. |
| 2. Эсĕ шкула мĕнпе çӳретĕн? | 2. Алинăна. |

3. Эсӗ парта хушшинче кампа ларатӑн? — 3. Атнерпе.
4. Эсӗ шкулта миҫеччен вӗренетӗн? — 4. Иккӗччен.
5. Эсӗ уроксем хыҫҫӑн ӑҫта каятӑн? — 5. Улттӑ ҫурӑра.
6. Эсӗ ҫуралнӑ куна кама чӗнетӗн? — 6. Шӑмат кун.
7. Сана хӑш кун ытларах килӗшет? — 7. Ташӑ кружокне.

**4.** (пазл) **«Ҫурхи калейдоскоп» ыйтуллӑ вӑйӑ.**

1. Ҫуркунне мӗн тӑманӗ пулать? – 1) шӑпчӑк; 2) курак; 3) сӑвӑс.
2. Австралире ҫуркунне хӑш уйӑхра пуҫланать? – 1) утӑ уйӑхӗнче; 2) кӑрлач уйӑхӗнче; 3) авӑн уйӑхӗнче.
3. Хӑш чечек хӑйӗн тӗсне тӑватӑ хут улӑштарать? – 1) пыл куракӗ; 2) лантӑш; 3) крокус.
4. Ҫуркунне кунпа ҫӗр хӑҫан танлашать? – 1) пуш уйӑхӗн 20–21-мӗшӗнче; 2) ака уйӑхӗн 20–21-мӗшӗнче; 3) ҫу уйӑхӗн 20–21-мӗшӗнче.
5. Ҫуркунне мӗнле йывӑҫ сӗткенне пуҫтараҫҫӗ? – 1) ҫӑка; 2) хурӑн; 3) юман.
6. Ваттисен сӑмахӗ тӑрӑх, ҫуркунне мӗн тутлӑ? – 1) серте; 2) ҫеҫпӗл; 3) йывӑҫ хуппи.

2 стр.
7. Ҫак хурт-кӑпшанкӑ пыл пуҫтарать. – 1) вӑрӑм туна; 2) эрешмен; 3) пыл хурчӗ.
8. Ҫуркунне мӗн «каять»? – 1) хӗвел; 2) пӑр; 3) ҫил-тӑман.
9. Пӗрремӗш ҫурхи чечек мӗн ятлӑ? – 1) ҫеҫпӗл; 2) утмӑл турат; 3) шӑнкӑрав куракӗ.
10. Ҫуркунне ҫурт тӑрринчен мӗн тумлать? – 1) сӗт; 2) шыв; 3) сӗткен.
11. Кайӑксем ҫуркунне мӗн ҫавӑраҫҫӗ? – 1) йӑва; 2) шӑтӑк; 3) хӑвӑл.
12. Ҫуркунне мӗн сивви пулать? – 1) хурӑн; 2) ҫӑка; 3) ҫӗмӗрт.

**Вӑ́рӑм туна́** — вӑрӑм ураллӑ хурт-кӑпшанкӑ, юнпа тӑранса пурӑнать, ытларах чухне каҫхине тухать.
**Ҫавӑра́ҫҫӗ** — ҫаврака йӑва тӑваҫҫӗ.

**5.** (земной шар) **Пӗлме кӑсӑклӑ. Ят сӑмах майлашӑвӗсем туп.**

Чӑвашсен ӗҫӗ-хӗлӗ, пурӑнӑҫӗ ҫанталӑкпа тачӑ ҫыхӑннӑ, ҫавӑнпа вӗсем ӗлӗкренех ҫанталӑка сӑнанӑ. Халӑх сӑнани чӗлхере упранса юлнӑ.
1. Кураксем вӗҫсе килсен ҫил-тӑман вӗҫтерет. Ӑна курак тӑманӗ теҫҫӗ.
2. Ҫӗмӗрт ҫеҫки ҫурӑлсан ҫанталӑк сивӗтет. Ӑна ҫӗмӗрт сивви теҫҫӗ.
3. Ҫулла ҫумӑр ҫӑвас умӗн хӗвел хытӑ хӗртет. Ӑна ҫумӑр хӗвелӗ теҫҫӗ.
4. Хӗвеллӗ, уяр ҫанталӑкра ҫумӑр ҫӑвать. Ӑна хӗвел ҫумӑрӗ теҫҫӗ. Хӗвел ҫумӑрӗ ҫусан Асамат кӗперӗ курма пулать.
5. Кӗркунне пуҫламӑшӗнче ҫанталӑк уяр, ӑшӑ тӑрать. Ӑна ватӑ ӑшши теҫҫӗ.
6. Кӗркунне вӗтӗ ҫумӑр ҫӑвать. Ӑна шӑши ҫумӑрӗ теҫҫӗ.

**Та́чӑ** — питӗ вӑйлӑ.
**Ҫӗ́мӗрт** — йывӑҫ ячӗ, чечекӗ шурӑ тӗслӗ, ҫырли хура тӗслӗ, вӗтӗ, усӑллӑ.
**Ҫеҫке́** — чечек.
**Ҫурӑлса́н** — чечеке ларсан.

**5.** (диск) **«Ҫӗмӗрт ҫеҫки ҫурӑлсан» халӑх юррипе паллаш. Ыйтуллӑ**

**предложенисем туп. Вĕсем мĕнле мелпе пулнине кала.**

1. Çĕмĕрт çеçки çурăлсан та,
   Çĕмĕрт çеçки çурăлсан
   Вăрман витĕр курăнать.

2. Шурă кĕпе тăхăнсан та,
   Шурă кĕпе тăхăнсан
   Вăйă витĕр курăнать.

3. Сарă пушмак, шур чăлха та,
   Сарă пушмак, шур чăлха,
   Кирĕк тивмĕ тетĕр-им?

4. Вылямастăр, кулмастăр та,
   Вылямастăр, кулмастăр, —
   Вăйă иртмĕ тетĕр-им?

**Ки́рĕк ти́вмĕ** — таса мар пулмĕ, тусан лармĕ, хуралмĕ.

**«Çурхи калейдоскоп» вăйă хуравĕсем**: 1–2, 2–3, 3–1, 4–1, 5–2, 6–1, 7–3, 8–2, 9–1, 10–2, 11–1, 12–3.

**Урок 58**
1 стр.
**Название раздела: ЧĂВАШ ЕН — МАН ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ** (ЧУВАШИЯ – МОЯ РОДИНА)
**Название урока: МĔН-ШИ ВĂЛ ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ?**

**Мĕн аса илĕн?**

Ыйтуллă предложенисен, çуклă предложенисен пулăвне, сăмах майлашăвĕсене, хальхи тата иртнĕ вăхăтри глаголсене аса илĕн.

Тăтăш усă куракан тата сайра тĕл пулакан сăмахсене, иртнĕ вăхăтри глаголсен пулăвне аса илĕн.

**Мĕн вĕренĕн?**

Чăваш Республикин патшалăх символĕсемпе, кăтарту, таврăну местоименийĕсемпе, топонимсемпе, антропонимсемпе паллашăн.

**1.** (наушники) **Полилога вула. Аялти ӳкерчĕксене ачасен сăмахĕсемпе çыхăнтар.**

А р т ё м   С е р г е е в и ч. Паян эпир Тăван çĕр-шыв çинчен калаçатпăр. Калăр-ха, ачасем, сирĕн шутпа, Тăван çĕр-шыв мĕн вăл?
Т и м у к. Ман шутпа, Тăван çĕр-шыв вăл — çуралнă вырăн, тăван кил, атте-анне.
И р и н а. Ман шутпа, Тăван çĕр-шыв вăл — тăван тавралăх: уй-хир, ката-вăрман, шыв-шур, улăх-çаран.
А л и н а. Маншăн тата Тăван çĕр-шыв вăл — манăн тус-юлташ, тăван шкул, юратнă вырăнсем.
Ю м а н. Маншăн тата Тăван çĕр-шыв вăл — тăван чĕлхе, асатте-асанне, кукаçи-кукамай, халăх кун-çулĕ, артефактсем.
А с а м а т. Артём Сергеевич, Сирĕншĕн вара мĕн вăл Тăван çĕр-шыв?
А р т ё м   С е р г е е в и ч. Эпĕ сирĕнпе килĕшетĕп. Эпĕ те сирĕн пек шутлатăп. Тăван çĕр-шыв пирки чăваш поэчĕ Петĕр Ялкир питĕ лайăх çырнă.

**Артефактсем** — çын тунă япаласем.

(рисунки пронумеровать)

| | | | |
|---|---|---|---|
| Рис. 57_1 50 x 50 Родители | Рис. 57_2 50 x 50 Лес и речка | Рис. 57_3 50 x 50 Друзья на фоне школы (**Шкул** — написать по-чувашски) | Рис. 57_4 50 x 50 сундук, на котором лежит **Тухья** (чув. девичий головной убор) |

**2.** (наушники) **Хуравла.**

1. Тимукшăн Тăван çĕр-шыв мĕн вăл?
2. Иринăшăн Тăван çĕр-шыв мĕн вăл?
3. Алинăшăн Тăван çĕр-шыв мĕн вăл?
4. Юманшăн Тăван çĕр-шыв мĕн вăл?
5. Саншăн Тăван çĕр-шыв мĕн вăл?

2 стр.

**3.** (наушники) **Сăвва вула. Сăмах майлашăвĕсем туп.**

**Тăван çĕр-шыв**

Урамра çилпе кашлаççĕ
Ешĕл тумлă йăмрасем.
Кайăксем чуна çĕклеççĕ,
Янратаççĕ юрăсем.
Ку вăл ман Тăван çĕр-шыв!

Çил вĕрет те кассăн-кассăн,
Тырă-пулă хумханать.
Кунĕпех вăрман мăнаçлăн
Пĕлĕтпе тем канашлать.
Ку вăл ман Тăван çĕр-шыв!

Петĕр Ялкир

**Кашла́ççĕ** — шавлаççĕ.
**Е́шĕл** — симĕс.
**Чуна́ çĕкле́ççĕ** — хавхалантараççĕ.
**Янрата́ççĕ** — юрлаççĕ.
**Ка́ссăн-ка́ссăн** — ялан мар, вăхăтăн-вăхăтăн.
**Ты́рă-пу́лă** — унран çăкăр пĕçереççĕ.
**Хумхана́ть** — çилпе пĕр енчен тепĕр ене куçать.
**Мăна́çлăн** — савăнăçлăн, мухтанса.
**Канашла́ть** — калаçать.

**4.** (наушники) **Ыйтусене хуравла.**

| | |
|---|---|
| 1. Ку **кам?**<br>2. Вăл **кам** пулнă?<br>3. Вăл **ăçта** çуралнă?<br>4. Вăл **миçемĕш** çулта çуралнă?<br>5. Вăл ытларах **камсем** валли çырнă?<br>6. Унăн сăввисемпе **мĕн чухлĕ** юрă кĕвĕленĕ?<br>7. Петĕр Ялкир **кам** ячĕллĕ литература преми лауреачĕ? | Рис. 58 50 x 50 портрет чувашского писателя Петра Ялгира |

**Кирлĕ сăмахсем**: сăвăçă тата драматург, Петĕр Ялкир, 200 ытла, Хĕрлĕ Чутай районĕнче, 1922, ачасем валли.

**5.** (наушники) **Дамир çырнă эссене вула. Эсĕ Дамир шухăшĕпе килĕшетĕн-и?**

Эпĕ Чĕмпĕр облаçĕнче Сайман ялĕнче çуралнă. Унта манăн асатте-асанне пурăнать, тус-юлташсем те пур. Эпĕ унти кашни кĕтесе пĕлетĕп: пулла çӳренĕ, шыва кĕнĕ, вăрманта кăмпа-çырла пуçтарнă, ялти шкула вĕренме çӳренĕ. Халь вара эпĕ Шупашкарта пурăнатăп. Кунта манăн кукаçи-кукамай, атте-анне, çĕнĕ туссем. Эпĕ Сайман ялне те, Шупашкар хулине те юрататăп. Вĕсем маншăн Тăван çĕр-шыв.

**6.** (ручка) **Хăвăн çинчен çыр.**

1. Эпĕ … (ăçта?) çуралнă.
2. Эпĕ (… хулинче / … ялĕнче), (… урамĕнче / … проспектĕнче), …-мĕш çуртра пурăнатăп.
3. Манăн асатте-асанне … (ăçта?) пурăнаççĕ.
4. Манăн кукаçи-кукамай … (ăçта?) пурăнаççĕ.
5. Манăн Тăван çĕр-шыв — … .

**7.** (блокнот и ручка) **Петĕр Ялкир сăвви тăрăх ӳкерчĕк ту. Мĕн ӳкернине каласа пар.**

**Урок 59**
1 стр.
**Название раздела: ЧĂВАШ ЕН — МАН ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ** (ЧУВАШИЯ – МОЯ РОДИНА)
**Название урока: ЧĂВАШЛĂХА ПАЛĂРТАКАН СИМВОЛСЕМ**

**1.** (наушники) **Полилога вула. Ыйтуллă предложени туп.**

А р т ё м  С е р г е е в и ч. Ачасем, Чăваш Республикинче ака уйăхĕнче мĕнле-мĕнле уявсем паллă тăваççĕ?
А л и н а. Ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче Чăваш чĕлхи кунне уявлаççĕ.
А т н е р. Ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче Космонавтика кунĕ пулать.
У л и н е. Эпир килте ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче Лĕпĕш чĕрĕлнĕ куна паллă тăватпăр.
А р т ё м  С е р г е е в и ч. Ман шутпа, ачасем, тата тепĕр кун пирки манмалла мар. Ку вăл Патшалăх символĕсен кунĕ. Ăна ака уйăхĕн 29-мĕшĕнче уявлаççĕ.

**2.** (наушники) **Ыйтуллă предложенисем йĕркеле.**
**Тĕслĕх: Ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче Космонавтика кунне паллă тăваççĕ.**
А. Ака уйăхĕн _____-мĕшĕнче мĕнле уяв паллă тăваççĕ?
Ă. ____________________ кунне хăçан паллă тăваççĕ?

**3.** (наушники) **Текста вула. Ят сăмах майлашăвĕсем туп.**

Кашни патшалăхăн хăйĕн символĕсем пур. Вĕсен шутне герб, ялав тата гимн кĕреççĕ. Çак символсем патшалăх суверенитетне палăртаççĕ. Вĕсен элеменчĕсем халăхăн пурнăçне, ăс-хакăлне кăтартаççĕ. Чăваш Республикин хальхи патшалăх символĕсене 1992 çулта йышăннă. Ялавпа герб авторĕ — Элли Михайлович Юрьев ӳнерçĕ, гимн

авторĕсем — Герман Степанович Лебедев композиторпа Илья Семёнович Тукташ сăвăçă. Ялава патшалăх çурчĕсем çине çакаççĕ, герба официаллă документсем çине лартаççĕ. Пысăк пĕлтерĕшлĕ официаллă мероприятисенче ура çине тăрса гимн юрлаççĕ, ялав çĕклеççĕ.

**4.** (наушники) **Хуравла. Тĕрĕс-и? Тĕрĕс мар-и?**

1. Хăш-пĕр патшалăхăн хăйĕн символĕсем пур.
2. Герб, ялав тата гимн — патшалăх символĕсем,
3. Символ элеменчĕсем халăхăн пурнăçне, ăс-хакăлне кăтартаççĕ.
4. Чăваш Республикин хальхи патшалăх символĕсене 1990 çулта йышăннă.
5. Ялавпа герб авторĕ — Элли Михайлович Юрьев çыравçă.
6. Гимн авторĕсем — Герман Степанович Лебедев композиторпа Илья Семёнович Тукташ сăвăçă.
7. Ялава патшалăх çурчĕсем çине çакаççĕ, герба официаллă документсем çине лартаççĕ.
8. Пысăк пĕлтерĕшлĕ официаллă мероприятисенче ларса гимн юрлаççĕ, ялав çĕклеççĕ.

2 стр.
**5.** (ручка) **Кирлĕ сăмахларт.**

| | |
|---|---|
| Чăваш _______ икĕ тĕслĕ. Ялавăн аялти пайĕ тĕттĕм ______ тĕслĕ, çӳлти пайĕ — сарă. Тĕттĕм хĕрлĕ тĕс чăваш çĕрне __________. Сарă тĕс вара – ________, тырă-пулă, пыл-çу тĕсĕ. Вăл илемлĕхе, _________, тăнăçлăха пĕлтерет. Ялав _________ — пурнăç йывăçĕ. Пурнăç йывăçĕ __________ виçĕ хĕвел. Пурнăç йывăçĕ пурне те ___________ _________: пĕтĕм тĕнчери чăвашсене те, чăваш çĕрĕ çинче пурăнакан ытти халăхсене те. Виçĕ хĕвел вăл — иртни, _________, пуласси. | Рис. 59 50 х 50<br>символы Чувашской Республики<br>1. Герб 2. Флаг |

**Кирлĕ сăмахсем**: варринче, пĕрлештерсе тăрать, пĕлтерет, тăрринче, хальхи, хĕвел, хĕрлĕ, ырлăха, ялавĕ.

**6.** (наушники) **Çӳлти текста ят пар.**

1. Чăваш патшалăх символĕсем. 2. Пурнăç йывăçĕ. 3. Чăваш ялавĕ.

**7.** (наушники) **«Иртни, хальхи, пуласси» сăмахсем хăш йĕркесемпе тӳр килеççĕ?**

1. Ĕмĕрсем иртсе пыраççĕ (Петĕр Хусанкай). 2. Эпир пулнă, пур, пулатпăр! (Петĕр Хусанкай) 3. Иртни асра пултăр, пуласси ăсра тăтăр (ваттисен сăмахĕ).

**Тӳр килéççĕ** — пĕр пекрех.

**8.** (земной шар) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

Патшалăх символĕсемсĕр пуçне чăвашсен тата ытти символсем те пур.

| **Символсем** | **Пĕлтерĕшĕ** | **Ăнлантарса пани** |
|---|---|---|
| Рис. 60_1 50 х 50 национальные блюда шыртан и хуплу | Тараватлăх. | Ĕлĕк-авал кашни хуçалăхра хăмла ӳстернĕ. Хăмларан сăра вĕретнĕ. Уявра хăнасене сăрапа кĕтсе илнĕ. |
| Рис. 60_2 50 х 50 современный символ сердце https://visitvolga.ru/blog/heart-history/  | Вăрăм кун-çул, çирĕплĕх, вăй-хал. | Чăвашсем юмана ĕлекренех хисепленĕ. Аттене, паттăрсене юманпа танлаштарнă. |
| Рис. 60_3 50 х 50 хмель и ковш с пивом | Анне юратăвĕ, анне хӳтлĕхĕ, анне пилĕ. | Чăвашсем те, ытти халăхсем пекех, аннене хисеплеççĕ, юратаççĕ. Атте-анне пил парать. |
| Рис. 60_4 50 х 50 тухья — национальный головной убор девушек. (можно в виде зимнего орнамента который был на Красной площади) https://tavanen.ru/%D0%BD%D0%BE%D0%B2%D0%BE%D0%B3%D0%BE%D0%B4%D0%BD%D0%B5%D0%B9-%D1%81%D1%82%D0%BE%D0%BB%D0%B8%D1%86%D0%B5%D0%B9-%D1%80%D0%BE%D1%81%D1%81%D0%B8%D0%B8-%D0%BC%D0%BE%D0%B3%D1%83%D1%82-%D1%81/ | Тутă, лайăх пурнăç. | Чăвашсем уявсенче сĕтел çине хуплу, шăрттан лартнă. Шăрттанпа хуплу сумлă апат шутланнă. Ăна уявсенче кăна çинĕ. |
| Рис. 60_5 50 х 50 памятник матери на заливе | Юрату, пĕрлĕх, килĕшӳ. | Ку çĕнĕ символ. Ăна чăваш тĕрринчен илнĕ. Ку символа пурнăç йывăçĕ çинче курма пулать. |
| Рис. 60_6 50 х 50 дуб, пару листочков и желудь | Пуянлăх, çамрăмклăх, илемлĕх. | Тухьяна кĕмĕл укçапа, вĕтĕ шăрçапа, мерченпе илемлетнĕ. Чăваш хĕрĕсем тухьяна уявра вăййа тухнă чух тăхăннă. |

**Тарава́тлăх** — хăнасене лайăх кĕтсе илни, пăхни.
**Вăй-хал** – вăй.
**Пил пара́ть** — ырă сунать.

**Урок 60**

**1 стр.**

**Название раздела: ЧĂВАШ ЕН — МАН ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ (ЧУВАШИЯ МОЯ РОДИНА)**

**Название урока: ШУПАШКАР — ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТĔП ХУЛИ**

**1.** (наушники) **Диалога вула. Тĕрĕс хурав суйласа ил.**

А р т ё м   С е р г е е в и ч. Ачасем, Шупашкар гербĕ çине мĕнле кайăксем ӳкернĕ?
У л и н е. Кайăк кăвакалсем.
А р т ё м   С е р г е е в и ч. Тĕрĕс. Мĕнле шутлатăр? Мĕншĕн кăвакалсем ӳкернĕ?
У л и н е. … .

**Кирлĕ хуравсем:** 1. Кайăк кăвакал – хула çыннисен юратнă кайăкĕ. 2. Авал Шупашкар тăрăхĕнче кайăк кăвакал нумай пулнă. 3. Кайăк кăвакалсем çынсене пулăшнă.

**2.** (ручка) **Хуравла.**

- Ку мĕн?
- Унăн авторĕ кам?
- Шупашкар гербне хăçан йышăннă?
- Герб варринче миçе кăвакал ӳкернĕ?
- Герб тăрринче миçе хĕвел?
- Гербăн икĕ айккинче мĕн çулçисем пур?
- Герб айĕнче мĕн çырнă?
- Герб çинче тата мĕн пур?

Рис. 61 ____ 50 x 50
Герб города
Чебоксары




**Кирлĕ сăмахсем:** Шупашкар гербĕ, 1998 çулта, виçĕ юман, Элли Юрьев, «Шупашкар. Чебоксары», виçĕ, хăмла, пилĕк.

**3.** (наушники) **Кирлĕ сăмах ларт. Ыйтусем йĕркеле.**

Шупашкар – __________ хула. Ăна _________ çулта никĕсленĕ.
Шупашкар – ________ Республикин тĕп хули. Вăл – промышленность, культура, вĕренӳ ___________. Кунта пысăк заводсем, фабрикăсем ____________: Трактор завочĕ, «Элара» завод, «Акконд» фабрика тата ытти те. Шупашкарта театрсем, музейсем, парксем, культура керменĕсем, больницăсем, ___________, аслă вĕренӳ заведенийĕсем нумай. Тĕп хула çултан-çул ӳсет, аталанать.
Шупашкар – _________, илемлĕ хула. ăна Атăлçи мерченĕ теççĕ.

**Кирлĕ сăмахсем:** авалхи, Чăваш, 1469, ĕçлеççĕ, центрĕ, шкулсем, таса.

**Çултáн-çул** – кашни çул.
**Никĕслéнĕ** – тунă, йĕркеленĕ.
**Аталанáть** – пысăкланать, çĕнелет.

2 стр.
**4.** (наушники) **Хуравла**.

1. Чăваш Республикинче миçе театр?
а) 6; ă) 9; б) 4.
2. Чи ватă, чи сумлă театр хăшĕ?
а) пукане театрĕ; ă) Çамрăксен театрĕ; б) Чăваш академи драма театрĕ.
3. Чăваш академи театрне миçемĕш çулта йĕркеленĕ?
а) 1984; ă) 1918; б) 1891.
4. Чăваш академи драма театрне кам йĕркеленĕ? Пĕлетĕн-и?
а) И.С. Максимов-Кошкинский; ă) Вера Кузьмина; б) Иосиф Дмитриев-Трер.
5. Чăваш акадами драма театрĕн чи паллă артисчĕ кам?
а) И.С. Максимов-Кошкинский; ă) Вера Кузьмина; б) Иосиф Дмитриев-Трер.

**5.** (наушники) **Текста вула. Ӳкерчĕкри театр ячĕсене текстра туп.**

Чăваш Республикинче халь тăхăр профессионаллă театр. Шупашкарта – 8 театр: Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ, К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ çамрăксен театрĕ, Вырăс патшалăх драма театрĕ, Чăваш патшалăх пукане театрĕ, «Станиславский.com» театр, Шупашкар хулин камера театрĕ, «МАЙленький» театр. Чăваш патшалăх эксперимент драма театрĕ вара Çĕнĕ Шупашкарта вырнаçнă. Вĕсенчен чи ватти, чи сумли — Чăваш академи драма театрĕ. Ăна 1918 çулта Хусанта Иоаким Степанович Максимов-Кошкинский йĕркеленĕ. Чăваш академи драма театрĕн паллă артисчĕ — Вера Кузьминична Кузьмина. Вăл театрта 60 çул ĕçленĕ, сцена çинче 100 ытла роль вылянă.

Рис. 62 (фотографии театров в Чувашии) пронумеровать!: https://www.culture.ru/theaters/institutes/location-chuvashskaya-respublika

| | | |
|---|---|---|
| Рис. 62_1. 50 х 50 Чувашский государственный театр оперы и балета | Рис. 62_2. 50 х 50 Чувашский государственный академический драматический театр им. К.В. Иванова. | Рис. 62_3. 50 х 50 Чувашский театр юного зрители им. Михаила Сеспеля |
| Рис. 62_4. 50 х 50 Государственный русский драматический театр | Рис. 62_5. 50 х 50 Чувашский государственный театр кукол | Рис. 62_6. 50 х 50 Театр «Станиславский.com» |
| Рис. 62_7. 50 х 50 Чебоксарский камерный театр | Рис. 62_8. 50 х 50 Чувашский государственный экспериментальный театр драмы | Рис. 62_9. 50 х 50 МАЙленький театр |

**5.** (маски) **Мăшăрпа ĕçле.**

— Эсĕ хăш театрта пулнă?
— Эпĕ … театрĕнче (театрта) пулнă.
— Эсĕ унта кампа пулнă?
— Эпĕ …па (пе) пулнă.
— Ку театр ăçта вырнаçнă?
— Ку театр Шупашкарта (Çĕнĕ Шупашкарта) вырнаçнă.

**Урок 61**
1 стр.
**Название раздела: ЧĂВАШ ЕН — МАН ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ** (ЧУВАШИЯ – МОЯ РОДИНА)
**Название урока: ШУПАШКАРТИ ПАЛĂКСЕМ**

(восклицательный знак)

| |
|---|
| Кăтарту местоименийĕсен шутне **ку, çак (çакă), çав (çавă), леш (лешĕ), хайхи** сăмахсем кĕреççĕ: **ку** кушак, **çак** хула, **çав** кĕнеке, **леш** урам, **хайхи** ача. Япала çывăхра пулсан эпир **ку, çак (çакă)** местоимениcемпе, япала аякра пулсан **çав (çавă)**, япала тата аяккарах пулсан **леш (лешĕ)** местоимениcемпе усă куратпăр. **Хайхи** местоимени малтан асăннă япалана кăтартать. Кăтарту местоименийĕсем падежсем тăрăх вĕçленеççĕ. |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Рис. 63_1. 50 x 50 Фигура мальчика стоит около 3 столов. 1 стол ближе (он коричневый), другой — дальше (он - зеленый), третий — еще дальше (он - синий) Он говорит: «**Ку** сĕтел хăмăр тĕслĕ», показывая на ближний от него стол | Рис. 63_2. 50 x 50 Фигура мальчика стоит около 3 столов. 1 стол ближе (он коричневый), другой — дальше (он - зеленый), третий — еще дальше (он - синий) Он говорит: «**Çак** сĕтел хăмăр тĕслĕ», показывая на ближний от него стол | Рис. 63_3. 50 x 50 Фигура мальчика стоит около 3 столов. 1 стол ближе (он коричневый), другой — дальше (он - зеленый), третий — еще дальше (он - синий) Он говорит: «**Çав** сĕтел хăмăр тĕслĕ», показывая на второй стол от него стол | Рис. 63_4. 50 x 50 Фигура мальчика стоит около 3 столов. 1 стол ближе (он коричневый), другой — дальше (он - зеленый), третий — еще дальше (он - синий) Он говорит: «**Леш** сĕтел хăмăр тĕслĕ», показывая на третий, самый дальний от него стол |

**1.** (ручка) **Палăртнă сăмахсене кирлĕ местоимениpе ылмаштар.**

1. Манăн **Шупашкарта** юратнă вырăн нумай. 2. Эсĕ **ку япалана** пар-ха мана. 3. Вăл **ку укçапа** мĕн илет? 4. Чĕлхене **ку кĕнекесĕр те** вĕренме пулать. 5. **Ку парнешĕн** эпĕ сана тав тăватăп. 6. Вĕсем **ку ялтан** каясшăн мар.

**Кирлĕ сăмахсем**: куна, кунпа, кунсăр (та), кунта, кунтан, куншăн.

**2.** (наушники) **Рольпе вула. Кăтарту местоименийĕсем туп.**

| | |
|---|---|
| Ачасем автобуса лараççĕ. Экскурси ирттерекен калаçăва пуçлать.<br>Э к с к у р с и   и р т т е р е к е н. Сывлăх сунатăп, ачасем! Эпĕ Вера Николаевна. Эпир паян Шупашкарпа паллашатпăр. Сирĕн кăмăлăрсем лайăх-и?<br>А ч а с е м. Лайăх!<br>Э к с к у р с и   и р т т е р е к е н. Çывăрса тăраннă-и? | Рис. 64-1 50 x 50 памятник Николаеву в Чебоксарах |

| | |
|---|---|
| А ч а с е м. Тăраннă.<br>Э к с к у р с и  и р т т е р е к е н. Çул çӳреве хатĕр-и?<br>А ч а с е м. Хатĕр!<br>Э к с к у р с и  и р т т е р е к е н. Малтан эпĕ сире Шупашкарти паллă çынсем çинчен каласа паратăп. Эсир кама пĕлетĕр?<br>А с а м а т. Андриян Николаев.<br>Э к с к у р с и  и р т т е р е к е н. Вăл кам пулнă?<br>А т н е р. Вăл космонавт пулнă.<br>И р и н а. Чапаев.<br>Э к с к у р с и  и р т т е р е к е н.  Василий Чапаев. Вăл кам пулнă?<br><br>2 стр.<br><br>И р и н а. Вăл Граждан вăрçинче çар пуçĕ пулнă.<br>Э к с к у р с и  и р т т е р е к е н. Тĕрĕс! Маттурсем!<br>У л и н е. Тата Иван Яковлев пур.<br>Э к с к у р с и  и р т т е р е к е н. Вăл кам пулнă?<br>У л и н е. Вăл вĕрентекен пулнă. Чăваш алфавитне çĕнетсе тунă. Чăваш шкулĕсем уçнă.<br>Э к с к у р с и  и р т т е р е к е н. Тĕп-тĕрĕс! Халь эпир Ашмарин урамĕ патне çывхаратпăр. Николай Ашмарин кам пулнă? Кам пĕлет?<br>А с а м а т. Ку урамра куç пульници пур. Куç тухтăрĕ пулнă пуль.<br>Э к с к у р с и  и р т т е р е к е н. Пурте çавăн пек шутлаççĕ-и?<br>А л и н а. Эпир ун çинчен вĕреннĕччĕ. Николай Ашмарин — паллă чĕлхеçĕ.<br>Э к с к у р с и  и р т т е р е к е н. Тĕрĕсех, Алина. Шупашкарта тĕнчипе паллă куç тухтăрĕ Святослав Фĕдоров та пурăннă. Унăн ячĕпе пĕтĕм Раççейре куç микрохирургийĕн центрĕсем ĕçлеççĕ. Шупашкарта та çак центрăн филиалĕ пур. | <br><br>Рис. 64-2 50 х 50 памятник Чапаеву в Чебоксарах<br><br>Рис. 64-3 50 х 50 памятник Яковлеву в Чебоксарах |

**3.** (наушники) **Хуравла. Каласа пар.** (Ответь. Перескажи)

| | |
|---|---|
| 1. Ку **кам**?<br>2. Вăл **кам** пулнă?<br>3. Вăл **ăçта** çуралнă?<br>4. Святослав Фĕдоров Шупашкарта **хăçан** ĕçлеме пуçланă?<br>5. 1960 çулта тĕнчере пĕрремĕш хут вăл **мĕнле** операци тунă?<br>6. 1976 çулта Святослав Фĕдоров **мĕн** йĕркеленĕ?<br>7. Паллă куç тухтăрĕ офтальмологире **миçе** | Рис. 65 50 х 50<br>портрет офтальмолога Святослава Фĕдорова. |

| | |
|---|---|
| çĕнĕлĕх шутласа кăларнă?<br>8. 2002 çулта Пĕтĕм тĕнчери офтальмологсен профессиллĕ пĕрлешĕвĕ ăна **мĕнле** хисеплĕ ят панă? | |

**Офтальмóлог** — куç тухтăрĕ.

**Çéнĕлĕх** — çĕнĕ япала.

**Пĕрлешӳ́** — пĕр ĕç тăвакан, пĕр шухăшлă çынсен ушкăнĕ.

**Хрустáлик** — куç шăрçи.

**Кирлĕ сăмахсем:** 180, 1958 çулта, «Аслăран та аслă офтальмолог», куç тухтăрĕ, куç шăрçине улăштарнă, «Куç микрохирургийĕ» центр, Святослав Фёдоров, Украинăра.

**Урок 62**
1 стр.
**Название раздела: ЧĂВАШ ЕН — МАН ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ** (ЧУВАШИЯ – МОЯ РОДИНА)
**Название урока: КАНАША ÇИТРĔМĔР**

(восклицательный знак)

Таврăну местоименийĕсем сăпат, хисеп тăрăх улшăнаççĕ, падеж тăрăх вĕçленеççĕ.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| эпĕ | **хам** | | эпир | **хамăр** |
| эсĕ | **ху (хăв)** | | эсир | **хăвăр** |
| вăл | **хăй** | | вĕсем | **хăйсем** |

**1.** (наушники) **Юман тĕлĕк курнă. Тĕлĕкре ун патне паллă çынсем килнĕ: А. Николаев, В. Чапаев, И. Яковлев, Н. Ашмарин. Ăна кам мĕн каланă-ши? Таврăну местоименийĕсене туп.**

Рис. 66 140 х 70. Юман уснул в автобусе. Ему приходят образы разных великих людей из предыдущего урока: Николаев, Чапаев, Яковлев, Ашмарин. И все от него чего-то хотят. Наверное, можно нарисовать что-то вроде облачков над головой и в каждом из них великий человек, который еще что-то и говорит.
Облачко №1
Андриян Николаев держит шлем, его реплика: … (многоточие)
Облачко №2
Василий Чапаев и рядом голова его лошади, он говорит: … (многоточие)
Облачко №3
Иван Яковлев держит алфавит и спрашивает: … (многоточие)
Облачко №4
Николай Ашмарин держит свой словарь и говорит: … (многоточие)
Облачко №5
Святослав Фёдоров держит таблицу Сивцева для проверки остроты зрения.

**Кирлĕ сăмахсем:** 1. Эпĕ хам тĕллĕн чăвашла вĕреннĕ. Эсĕ те ху тĕллĕн чăвашла вĕренетĕн-и? 2. Санăн лаша пур-и? 3. Санăн куçу лайăх курать-и? 4. Эсĕ уйăх çинче пулнă-и? 5. Эсĕ вулама пĕлетĕн-и?

**3.** (наушники)
Ю м а н  а м ă ш ĕ. Юман, вăран.
Ю м а н. Мĕн?
Ю м а н  а м ă ш ĕ. Юман, эпир Канаша çитрĕмĕр.
Ю м а н. Ăçта?
Ю м а н  а м ă ш ĕ. Канаша.
Ю м а н. Мĕн тума?
Ю м а н  а м ă ш ĕ. Асласу-асаннӳ патне каятпăр-çке.
Ю м а н. Эпĕ çывăрсах кайнă. Тĕлĕк куртăм.
Ю м а н  а м ă ш ĕ. Мĕн куртăн вара?
Ю м а н. Пĕтĕм паллă çынсемпе калаçрăм.

2 стр.
**4.** (наушники) **Юман тĕлĕкре мĕн хуравланă-ши? Юман хуравне туп.**

1. Юман Андриян Николаева мĕн хуравланă-ши?
2. Юман Василий Чапаева мĕн хуравланă-ши?
3. Юман Иван Яковлева мĕн хуравланă-ши?
4. Юман Николай Ашмарина мĕн хуравланă-ши?
5. Юман Святослав Фёдорова мĕн хуравланă-ши?

**Кирлĕ сăмахсем:** 1. Халь лашапа çӳремеççĕ, халь машинăпа çӳреççĕ. 2. Манăн куçлăх пур… 3. Унта Интернет çук вĕт-ха. 4. Ха-ха-ха. Халь кам вулама пĕлмест? 5. Эпир чăвашла шкулта вĕренетпĕр, килте те калаçатпăр.

**5.** (наушники) **М ĕ н  т ă в а т ь? ыйтури сăмахсенче йăнăшсем туп.**

| | |
|---|---|
| 1. Лашапа çӳрет.<br>2. Вулама пĕлместь.<br>3. Чăвашла вĕренеть.<br>4. Килте калаçать. | 5. Тĕлĕк курат.<br>6. Тĕрĕс хуравлать.<br>7. Канаша çитеть.<br>8. Вăранать. |

**6.** (наушники) **Текстра кирлĕ сăмахсем ларт. Кăтарту местоименийĕ туп, падежне кала.**

| | |
|---|---|
| Канаш пысăках мар çĕнĕ __________. Вăл Чăваш Республикинче __________. Кунта 45 пине яхăн çын __________ . Ăна 1925 çулта __________. «Канаш» сăмах вырăсла «Совет» тенине __________. Канаш урлă чукун çул __________. Кунтан Мускава, Хусана, Саранска пуйăспа __________. Канаш гербĕ çинче — çунатлă __________. Канашра вакунсем юсакан паллă завод __________. Канашпа юнашар пурте пĕлекен Мăкăр кĕперĕ __________. Вăл Чăваш Республикин тĕлĕнтермĕшĕ __________.<br><br>**Кирлĕ сăмахсем**: иртет, вырнаçнă, пĕлтерет, шутланать, кайма пулать, пурăнать, хула, пуйăс урапи, ĕçлет, никĕсленĕ, пур. | Рис. 67 50 х 50 герб города Канаш<br> |

**7.** (пазл) **Чăваш Республикинчи хула ячĕсене туп.**
**(для редактора! Буквы нужно поставить в разноцветные кружочки)**

| | | |
|---|---|---|
| Пашкаршу<br>Нĕçĕ Пашкаршу<br>Нашка | Лемĕрçĕ<br>Пӳçĕр<br>Лавкускка | Нетĕре<br>Тăрула<br>Вăртĕрсĕнри |

**Урок 63**
1 стр.
**Название раздела: ЧĂВАШ ЕН — МАН ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ** (ЧУВАШИЯ – МОЯ РОДИНА)
**Название урока: ÇĔРПӲ ХУЛИ**

**(восклицательный знак)**

Топоним — çут çанталăк объектне е этем тунă объекта панă пайăр ят. Тĕслĕхсем: Атăл, Нева, Альп, Кавказ, Çĕрпӳ, Çĕнĕ Шупашкар, Аслă Таяпа, Вăрманкасси.

(наушники) **Диалога вула.**

Артём Сергеевич. Ачасем, Çĕрпӳ хула ячĕ мĕне пĕлтерет-ши?
Улине. Эпир пĕлместпĕр… .
Артём Сергеевич. Эпĕ сире пулăшатăп. «Çĕрпӳ» сăмах икĕ пайран тăрать.
Улине. «Çĕр» тата «пӳ», анчах çак сăмахсем мĕне пĕлтернине пĕлместĕп.
Артём Сергеевич. «Çĕр» кунта хисеп ячĕ, «пӳ» сăмах «кĕлетке» сăмаха пĕлтерет. Çĕрпӳ «çар пуçĕ» тенине пĕлтерет. Унăн çарĕнче 100 салтак пулнă. Вĕсем Çĕрпӳ хулине хӳтĕленĕ. Ĕлĕк Çĕрпӳ карман хула пулнă. «Пӳ» сăмах ял-хула ячĕсенче сахал тĕл пулать. Хăш-пĕр сăмахпа вара топонимра час-часах усă кураççĕ: «касси», «пуç», «çырма», «ял (ел)». Ял ячĕсенче тата яла пуçарнă çын ятне тупма пулать: Ишек, Патреккел.
Улине. «Касси» мĕн вăл?

А р т ё м  С е р г е е в и ч. Касси «касă» сăмахран пулнă. Вăл «урам» тенине пĕлтерет.
У л и н е. Мĕн тери кăсăклă! Мулкачкасси, Анаткасси, Хыркасси.

**2**. (наушники) **Топоним пайĕсене палăрт.**
Автанкасси, Вăрманьял, Кашкăрçырми, Патăрьел, Çĕньял, Çырмапуç, Типçырма, Упакасси, Хурăнкасси, Чăрăшкасси, Энтриялĕ, Юнкăпуç, Вăтаел.

**3.** (наушники) **Текстра кирлĕ сăмахсем ларт.**

| | |
|---|---|
| Çĕрпӳ пысăках мар авалхи _________. Вăл Чăваш Республикинче Çавал шывĕ хĕрринче _________. Кунта 13 пине яхăн çын _________ . Ăна 1584 çулта _________. Çĕрпӳ «çар пуçĕ» тенине _________.  Çĕрпӳ _________ хула пулнă.<br>Çĕрпӳ гербĕ çинче — _________ йывăçĕ. Юман йĕри-тавра — _________ йĕкелĕ.<br>Çĕрпӳри паллă вырăнсем: Тихвин мăнастирĕ, Çĕнтерӳ паркĕ, Печкин почтальон палăкĕ. Тихвин __________ патĕнче виçĕ ĕмĕр каяллах ярмăркка иртнĕ. Унта паян та тĕрлĕ регионтан суту-илӳ тăвакансем ___________. Юлашки çулсенче Тихвин ярмăрккипе пĕрле Акатуй уявлаççĕ.__________<br><br>**Кирлĕ сăмахсем**: вырнаçнă, пĕлтерет, пуçтарăнаççĕ, пурăнать, хула, никĕсленĕ, карман, юман, хăмла, мăнастирĕ. | Рис. 68 ____ 50 х 50 герб города Цивильск<br> |

2 стр.
**4.** (наушники) **Хуравла. Тихвин ярмăрккинче мĕн-мĕн тăваççĕ?**

Схематические рисунки размером 50*50, пронумеровать (Как в учебнике 4 класса, стр. 112)

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Рис. 69_1<br><br>Микрофон или поющий человек | Рис.69_2 Два борца борются на поясах | Рис. 69_3 шашлык | Рис. 69_4 Силует коровы и овечки | Рис. 69_5 армрестлинг (две руки) | Рис. 69_6 гармонь |
| Рис. 69_7 лошадь | Рис. 69_8 народный танцор | Рис. 69_9 большой котёл (варят суп) | Рис. 69_10 Мотоцикл | Рис. 69_11 Игра в волейбол. Например сетка и волейбольный мяч | Рис. 69_12 фейерверк |
| Рис. 69_13 На дискотеке | Рис. 69_14 Ребёнок прыгает на батуте | Рис. 69_15 карусель | Рис. 69_16 фотоаппарат | Рис. 69_17 Покупка сувенира, возможно, | Рис. 69_18 Мастер-класс: рука , |

| | |
|---|---|
| свисток из глины или магнит с изображением Тихвинского монастыря | которая что-то делает: горшок глиняный, например |

**Кирлĕ сăмахсем:** лашапа чупаççĕ, кĕрешеççĕ, мотокросс ирттереççĕ, алă вăйĕ виçеççĕ, шашлык пĕçереççĕ, фейерверк яраççĕ, юрлаççĕ, халăх ташши ташлаççĕ, карусель ярăнаççĕ, выльăх-чĕрлĕх сутаççĕ, сувенир туянаççĕ, дискотекăра ташлаççĕ, купăс калаççĕ, алă ăстисем ăсталăх лаççи ирттереççĕ, батут çинче сикеççĕ, шӳрпе çиеççĕ, сăн ӳкерĕнеççĕ, пляж волейболĕ выляççĕ.

**4.** (наушники) **Тупсăмне туп. Хуравла. Тихвин ярмăрккинче мĕн-мĕн туянма пулать.**

1. Вăл савăт-сапа. Унпа кăмпа-çырла пуçтараççĕ.
2. Вăл савăт-сапа. Ăна йывăçран та тăваççĕ. Унпа апат çиеççĕ.
3. Ăна пуçа тăхăнаççĕ, тимĕр укçаран тăваççĕ.
4. Вăл какай. Ăна кăвайт çинче пĕçереççĕ.
5. Ăна пусмаран çĕлеççĕ, тĕрĕпе илемлетеççĕ, унта япала хураççĕ.
6. Вăл тумтир. Ăна пусмаран çĕлеççĕ.

**Тупсăмсем:** шоппер, карçинкка, тухья, кашăк, шашлык, футболка.

**Урок 64**
1 стр.
**Название раздела: ЧĂВАШ ЕН — МАН ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ** (ЧУВАШИЯ МОЯ РОДИНА)
**Название урока: САНĂН НИКНЕЙМ ПУР-И?**

**(восклицательный знак)**

Антропоним — çынна палăртакан пайăр ят.

**Антропоним**

**çын ячĕ** **хушамат** **ашшĕ ячĕ** **псевдоним**

**хушма ят** **никнейм** **чăваш ячĕ**

**1.** (ручка) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

| Антропоним | | Пĕлтерĕшĕ |
|---|---|---|
| 1. Çын ячĕ | | Йăх ячĕ |
| 2. Хушамат | | Çынсем панă тепĕр ят |
| 3. Ашшĕ ячĕ | | Çыравçă-сăвăçă усă куракан тепĕр ят |

| | | |
|---|---|---|
| 4. Псевдоним | | Çуралсан панă ят |
| 5. Хушма ят | | Чăваш пулнине палăртакан тепĕр ят |
| 6. Никнейм | | Çыннăн ашшĕ ячĕ |
| 7. Чăваш ячĕ | | Интернетра усă куракан ят |

**2.** (земной шар) **Пĕлме кăсăклă.**

Ĕлĕк чăвашсем ачисене çуралсан тӳрех ят хуман. Малтан вĕсене пурне те Ятсăр тесе чĕннĕ. Пĕр-икĕ эрнерен çывăх тăванĕсем, аслашшĕ-асламăшĕ, кукашшĕ-кукамăшĕ, кӳршĕ-аршă ят хума пуçтарăннă. Çав кун тутлă апат хатĕрленĕ, ача пăтти, ача яшки пĕçернĕ, сăра вĕретнĕ. Ачана ашшĕ-амăшĕпе, çывăх тăванĕсемпе канашласа шурсухал ят хунă. Ачан ячĕпе пĕрле чĕр чун, кайăк е йывăç ячĕсене панă: Упа, Кашкăр, Чĕкеç, Чакак, Курак, Юман.

**Кӳ́ршĕ-а́ршă** — кӳршĕсем.
**Ачá пăттú, ачá яшкú** — çуралнă ача ячĕпе пĕçернĕ пăтă, яшка.
**Шурсухáл** — хисеплĕ ватă çын.

**3.** (наушники) **Тĕрĕс-и? Тĕрĕс мар-и?**

1. Ĕлĕк чăвашсем ачисене çуралсан тӳрех ят хунă.
2. Малтан вĕсене пурне те Ятсăр тесе чĕннĕ.
3. Пĕр-икĕ эрнерен çывăх тăванĕсем, аслашшĕ-асламăшĕ, кукашшĕ-кукамăшĕ, кӳршĕ-аршă çĕр улми лартма пуçтарăннă.
4. Çав кун тутлă апат хатĕрленĕ, ача пăтти, ача яшки пĕçернĕ, сăра вĕретнĕ.
5. Ачана ашшĕ-амăшĕпе, çывăх тăванĕсемпе канашламасăр шурсухал ят хунă.
6. Ачан ячĕпе пĕрле чĕр чун, кайăк е йывăç ячĕсене панă: Упа, Кашкăр, Чĕкеç, Чакак, Курак, Юман.

2 стр.
**4.** (ручка) **Диалога вула. Антропонимсене çырса ил.**

А л и н а. Ирина, итле-ха, эсĕ çулла ăçта каясшăн?
И р и н а. Пĕлместĕп-ха. Тен, çемьепе тинĕс хĕррине каятпăр, кăштах ялта та пурăнасшăн. Эсĕ ăçта каясшăн?
А л и н а. Эпир кăçал çемьепе «Хавал» лагере каясшăн.
И р и н а. Ку мĕнле лагерь?
А л и н а. Вăл çуллахи чĕлхе лагерĕ. Унта çынсем чăвашла калаçма вĕренеççĕ. Кашни çын чăваш ячĕ суйласа илет.
И р и н а. Санăн чăваш ячĕ пур-им?
А л и н а. Çук-ха. Анчах та суйласа илесшĕн. Мана çак ятсем килĕшеççĕ: Илемпи, Кĕмĕлпи, Салампи, Эрнепи.
И р и н а. Пи мĕн тенине пĕлтерет?
А л и н а. Вăл «пике» тенине пĕлтерет.

**5.** (наушники) **Вырăс ячĕсен чăвашлатнă тĕслĕхĕсене туп.**

**Вырӑс ячӗсем:** Александр, Алексей, Анастасия, Анна, Артём, Григорий, Даниил, Дарья, Дмитрий, Егор, Екатерина, Елена, Елизавета, Иван, Ирина, Кристина, Ксения (Оксана), Максим, Марина, Мария, Матвей, Михаил, Николай, Никита, Ольга, Сергей, Семен, Ульяна.

**Чӑваш ячӗсем.**
А р ҫ ы н а ч а я ч ӗ с е м: Йӑван, Кӗркури, Макҫӑм, Матви, Мӗтри, Микки, Микулай, Михала, Сантӑр, Серкки, Симун, Таниле, Уртем, Элексҫей, Энтри, Якур.
Х ӗ р а ч а я ч ӗ с е м: Аннука, Кӗтерне, Лисахви, Марине, Марье, Наҫтаҫ, Тарье, Укҫине, Улине, Ульха, Урине, Христин, Элине.

**6.** (наушники) **Никнейма профильпе ҫыхӑнтар. Никнеймсене чӑваш алфавичӗпе усӑ курса ҫыр.**

**Ӑнлантарса пани.**
a — а; c – ҫ; ch – ч; e – е; i – и; h – х; k – к; l – л; m – м; n – н; o – ӑ; p – п; r – р; s – с; sh - ш; t – т; u - у; ye – ӗ; yi – ы.

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Рис. 70_1<br>50 ч 50 | Рис. 70_2<br>50 ч 50 | Рис. 70_3<br>50 ч 50 | Рис. 70_4<br>50 ч 50 | Рис. 70_5<br>50 ч 50 | Рис. 70_6<br>50 ч 50 | Рис. 70_7<br>50 ч 50 |
| Золотой цветочек | Оловянный солдатик | Ласковая кошка | Большая гора | Голубые глаза | Две вишен-ки | Голубая звезда |

**Кирлӗ никнеймсем**: achashkushak, chiecyirli, chiperkke, chonkacha, hyerlemes, hyerperchi, irtyetre, kovakcoltor, montu, pattor, saracha, senkerkuc, ciltoman, cokapyil, tohlansaltak, uloptovye, vyerichyere, yashkachcho, yiltonchechek, yirotu, yirpike.

**7.** (блокнот и ручка) **Хӑвӑр йӑхри ятсене тӗпче.**

1. Сирӗн йӑхра ытларах мӗнлерех ятсем тӗл пулаҫҫӗ?
2. Сирӗн хушамат мӗнле пулса кайнӑ?
3. Санӑн никнейм, чӑваш ячӗ е псевдоним пур-и?

**Урок 65**
1 стр.
**Название раздела: ЧӐВАШ ЕН — МАН ТӐВАН ҪӖР-ШЫВ** (ЧУВАШИЯ – МОЯ РОДИНА)
**Название урока: ТӐВАН ЯЛӐМ**

**1**. (наушники) **Алинӑн текстне вула. Ят пар.**

Манӑн аннен тӑван ялӗ Вӑтаел ятлӑ. Вӑл Патӑрьел тӑрӑхӗнче вырнаҫнӑ. Халап тӑрӑх, Патӑрьел ялӗнче, Пӑла шывӗ хӗрринче, Паттӑр ятлӑ ҫын пурӑннӑ. Тӑшмансем тапӑнсан Паттӑр хӑйӗн ҫарӗпе Ҫавал шывӗ тӑрӑхне куҫса кайнӑ. Унта та Патӑрьел ятлӑ

ял пулса кайнӑ. Ылтӑн Урта ҫарӗсене хӑваласа янӑ хыҫҫӑн чӑвашсем каялла Пӑла шывӗ тӑрӑхне таврӑннӑ.

Вӑтаел ялне пуҫласа яракансем XVII ӗмӗрте Тӑвай районӗнчи Вӑтаялӗнчен куҫса килнӗ, Пӑла шывӗн сулахай ҫыранне, илемлӗ вырӑна, вырнаҫнӑ.

Авал Вӑтаел йӗри-тавра вӑрман пулнӑ. Вӑрманта ӑвӑс, юман, хыр ӳснӗ. Чӑтлӑхсенче тӗрлӗ кайӑк-кӗшӗк юрланӑ.

Ялӑн кӑнтӑр енӗнче Ҫавра кӳлӗ, Такан, Чӑвакка кӳллисем пулнӑ. Кӳлӗсенче тӗрлӗ пулӑ ишнӗ. Ҫав кӳлӗсем тӗпсӗр пулнӑ теҫҫӗ.

Ял сӑртлӑ вырӑнта вырнаҫнӑ пирки ҫырма-ҫатрапа пуян: Тӑват хӑлаҫ ҫырми, Масар ҫырми, Январь ҫырми, Тарӑн ҫырма, Сад ҫырми, Ӗне кӑларнӑ вар, Учук вар, Япрук ҫырми.

Пирӗн ял ҫаранӗ ҫинче те икӗ пысӑках мар сӑрт пур. Вӗсене Улӑп тӑпри теҫҫӗ. Ваттисем каланӑ тӑрӑх, Улӑп – чӑваш ҫӗрне пуҫласа ярақан ҫын. Вӑл чӑвашсене пулӑшнӑ, тӑшмансенчен хӳтӗленӗ.

Ялӑн хӗвел тухӑҫ енче сад вырнаҫнӑ. Вӑл питӗ пысӑк, унта тӗрлӗ сортлӑ улмуҫҫисем, ҫырла тӗмӗсем, чие, слива ҫитӗнеҫҫӗ. Садран инҫех мар сӑвӑрсен колонийӗ вырнаҫнӑ. Вӗсене Хӗрлӗ кӗнекене кӗртнӗ.

Ялӑн ҫурҫӗр енӗнче – ҫӳллӗ сӑрт. Кунта хӑпарсан ял лайӑх курӑнать: икӗ вӑрӑм урам, Ҫӳлти тата Аялти кассем, вӗсене ҫыхӑнтаракан тӑватӑ тӑкӑрлӑк, Хӑрах кас.

В.П. Яковлева ҫырни тӑрӑх

**Вар** — ҫырма.
**Тӗслӗх ятсем:** Тӑван хула. Тӑван ял. Улӑп тӑпри. Паттӑр.

2. (ручка) **Пӑтраштарнӑ плана тӗрӗс ҫыр.**

| | |
|---|---|
| 1. Сӑвӑрсен колонийӗ. | 5. Вӑтаел ялӗ пуҫланса кайни. |
| 2. Вӑтаел урамӗсем. | 6. Патӑрьел ялӗ. |
| 3. Ҫырма-ҫатра. | 7. Кӳлӗсем. |
| 4. Улӑп тӑпри. | 8. Вӑрман. |

2 стр.
**3.** (наушники) **Кӗске хурав туп.**

| | |
|---|---|
| 1. Вӑтаел ӑҫта вырнаҫнӑ? | кӳлӗсем |
| 2. Патӑрьел ялӗнче мӗн ятлӑ ҫын пурӑннӑ? | икӗ |
| 3. Вӑтаел ялне пуҫласа яракансем ӑҫтан куҫса килнӗ? | Патӑрьел тӑрӑхӗнче |
| 4. Авал Вӑтаел йӗри-тавра мӗн пулнӑ? | сад |
| 5. Ялӑн кӑнтӑр енӗнче мӗн пулнӑ? | Паттӑр |
| 6. Ял мӗнпе пуян? | сӑвӑрсен колонийӗ |
| 7. Ял ҫаранӗ ҫинче миҫе Улӑп сӑрчӗ пур? | Ҫӳлти кас, Аялти кас |
| 8. Ялӑн хӗвел тухӑҫ енче мӗн пур? | ҫырма-ҫатрапа |
| 9. Садран инҫех мар мӗн вырнаҫнӑ? | вӑрман |
| 10. Ялти вӑрӑм урамсем мӗн ятлӑ? | Тӑвай районӗнчен |

**4.** (наушники) **Текстра ӳкерчӗкпе ҫыхӑннӑ предложенисем туп.**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Рис. 71_1 | Рис. 71_2 | Рис. 71_3 | Рис. 71_4 | Рис. 71_5 |
| 50 х 50 | 50 х 50 | 50 х 50 | 50 х 50 | 50 х 50 |
| карась | соловей | На равнине 2 холма | овраг | сурок |

**5.** (ручка) **Тĕрĕс çыхăнтар.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| тăван | шывĕ | Улăп | кĕнеке |
| Пăла | вырăн | Хĕрлĕ | сăрт |
| сулахай | кайăк-кĕшĕк | çӳллĕ | вырăн |
| сăртлă | çыран | илемлĕ | районĕ |
| тĕрлĕ | ял | Тăвай | тăпри |

**5.** (ручка) **Предложени членĕсене аялтан йĕр туртса палăрт.**

1. Чăтлăхсенче тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк юрланă.
2. Кӳлĕсенче тĕрлĕ пулă ишнĕ.

**6.** (ручка) **Текстри топонимсене ушкăнла.**

Январь çырми, Çавра кӳлĕ, Вăтаел, Тăвай, Пăла, Вăтаял, Патăрьел, Такан кӳлли, Аялти кас, Тарăн çырма, Сад çырми, Çӳлти кас.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ял ячĕ | Урам ячĕ | Юхан шыв ячĕ | Кӳлĕ ячĕ | Çырма-çатра ячĕ |
| Тăвай | Хăрах кас | Çавал | Чăвакка кӳлли | Япрук çырми |
| … | … | … | … | … |

**Урок 66**
1 стр.
**Название раздела: ÇУРКУННЕ. ЧĂВАШ ЕН – МАНĂН ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ**
**Название урока: ХĂВНА ТĔРĔСЛЕ**

**1.** (ручка) **Ӳкерчĕкпе çыхăннă предложенисене çырса ил. (**Выписать предложения, связанные с картинкой) **Иртнĕ вăхăтри глагола туп.**

Çуркунне çитрĕ (Пришла весна). Тӳпе кăн-кăвак. (Небо голубое). Кашни кун юр çăвать. Хĕвел хĕртсе пăхать (Солнце ярко светит. Безоблачно). Сăвăр, упа, чĕрĕп вăранать. Симĕс курăк шăтса тухать (Травка всходит). Çĕмĕрт çеçки çурăлать. Йывăççем симĕс çулçă кăлараççĕ. (Деревья листочки распускают.) Кайăксем кăнтăртан вĕçсе килеççĕ (Птицы с юга прилетают). Шăпчăксем юрлаççĕ. Кураксем йăва çавăраççĕ (Грачи гнёзда вьют). Пăр каять. Çырла пиçет. Ачасем урамра сăн ӳкереççĕ. (Дети на улице фотографируют) Çынсем çĕр улми лартаççĕ.

**Рис. 72 70 х 70**
Нарисовать картину, связанную с переведёнными предложениями.

**2.** (ручка) **Ку кам?**

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1. | Вăл аслă Вĕрентекен. Чĕмпĕр чăваш шкулне уçнă. | а) | И. С. Тукташ |
| 2. | Вăл паллă ӳнерçĕ. Чăваш ялавĕн тата гербĕн авторĕ. | ă) | И. Я. Яковлев |
| 3. | Вăл паллă сăвăçă. Чăваш гимнĕн авторĕ. | б) | Э. М. Юрьев |
| 4. | Вăл çар пусĕ, Граждан вăрçи геройĕ. | в) | С. Н. Фёдоров |
| 5. | Вăл виççĕмĕш космонавт. Сĕнтĕрвăрри районĕнче Шуршăл ялĕнче çуралнă. | г) | В. К. Кузьмина |
| 6. | Чăваш академи драма театрĕнче ĕçленĕ чи паллă артистка. | д) | А. Г. Николаев |
| 7. | Вăл пĕтĕм тĕнчипе паллă куç тухтăрĕ. | е) | В. И. Чапаев |

**3.** (ручка) **Предложенисене вĕçле.**

Эпĕ, эсĕ, вăл, эпир, эсир, вĕсем – …
Кам? Мĕн? Ăçта? Миçе? Хăш? Хăçан? Мĕнле? – …
Ку, çак (çакă), çав (çавă), леш (лешĕ), хайхи – …
Хам, ху (хăв), хăй, хамăр, хăвăр, хăйсем – …
Мускав, Куславкка, Днепр, Хура тинĕс, Эльбрус, Сахара – … .
Петров, Асамат, Владимирович, Сарпи, Илемпи – … .
Атте, анне, кил, кай, апат, шкул, кĕнеке, сĕтел – … .
Блогер, сивĕтмĕш, гаджет, видеокарта – … .

**Кирлĕ сăмахсем:** антропонимсем, топонимсем, таврăну местоименийĕсем, тăтăш усă куракан сăмахсем, сăпат местоименийĕсем, çĕнĕ сăмахсем, кăтарту местоименийĕсем, ыйту местоименийĕсем.

2 стр.
**4. Пурлă предложенисенчен çуклă предложенисем ту.**

**Тĕслĕх:** Манăн кĕнеке **пур**. – Манăн кĕнеке **çук**.
Манăн вăхăт пур. Санăн вăй пур. Унăн спорт форми пур. Пирĕн концерт номерĕ пур. Сирĕн билет пур. Вĕсен футбол мечĕкĕ пур.

5. (ручка) **Хуравла. Сана мĕн кирлĕ? Сана мĕн кирлĕ мар? Пилĕкшер пурлă тата çуклă предложени çыр.**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | Кăранташ | | | сахăр | |
| | … | | | … | |
| Мана | … | кирлĕ. | Мана | … | кирлĕ |
| | … | | | … | мар. |
| | … | | | … | |

6. (ручка) **Пурлă предложенисенчен çуклă предложенисем ту.**

**Тĕслĕхсем:** Манăн каçхине урок **тумалла**. – Манăн каçхине урок тумалла мар.

Манăн асаннене пулăшмалла. Санăн хăнана каймалла. Унăн презентаци хатĕрлемелле. Пирĕн класс ертӳçипе калаçмалла. Сирĕн шăмат кун субботника тухмалла. Вĕсен футбол вылямалла.

**7.** (ручка) **Ыйтуллă предложенисенче кирлĕ ыйту сăмахĕ ларт.**

Алина пахчара çырла пуçтарать.

1. ________ пахчара çырла пуçтарать?
2. Алина пахчара ____ ___________?
3. Алина __________ çырла пуçтарать?
4. Алина пахчара ________ пуçтарать?

**Кирлĕ ыйту сăмахĕсем:** мĕн? кам? ăçта? мĕн тăвать?

**8**. (ручка) **Ыйтуллă предложенисенче икĕ йăнăш туп, тĕрĕс çыр.**

Шăмат кун шкулта концерт пулать.

1. Шăмат кун шкулта **мĕнсем** пулать?
2. Шăмат кун шкулта **мĕн** пулать?
3. Шăмат кун **мĕнле** концерт пулать?
4. **Хăçан** шкулта концерт пулать?

**9.** (ручка) **Кирлĕ таврăну местоименийĕ ларт.**

Эпĕ ____ тăватăп. Эсĕ _____ мĕнле шутлатăн? Вăл _____ те пултарулă. Эпир _____ каятпăр. Эсир _______ хутшăнма хатĕр-и? Вĕсем ______ те питĕ маттур.

**Кирлĕ сăмахсем:** хамăр, хам, хăй, хăйсем, ху (хăв), хăвăр.

**Урок 67**
**Название раздела: ВĂЙĂ УРОКĔСЕМ**
**Название урока: ХАМĂРĂН ВĂЙĂ**

**1.** (ручка) **Хуравла.**

| Темăсем | Баллсем | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1. Чăваш Республики | 10 | 20 | 30 | 40 |
| 2. Уявсем | 10 | 20 | 30 | 40 |
| 3. Лексика | 10 | 20 | 30 | 40 |
| 4. Фонетика | 10 | 20 | 30 | 40 |
| 5. Пуплев пайĕсем | 10 | 20 | 30 | 40 |
| 6. Сăмах майлашăвĕсем. | 10 | 20 | 30 | 40 |

**1. Чăваш Республики.**
10 балл. — Чăваш Республикин тĕп хули мĕн ятлă? (Канаш, Шупашкар, Çĕрпӳ, Мускав)
20 балл. — Чăваш Республикинче миçе хула? (10, 5, 9, 21)
30 балл. — Чăваш Республикинче миçе район? (10, 5, 9, 21)
40 балл. — Чăваш Республикин патшалăх символĕсене хăçан йышăннă? (1990, 1992, 2000)

**2. Уявсем.**

10 балл. — Чăваш чĕлхи кунне хăçан паллă тăваççĕ?
20 балл. — Чăваш патшалăх символĕсен кунне хăçан паллă тăваççĕ?
30 балл. — Республика кунне хăçан паллă тăваççĕ?
40 балл. — Чăваш тĕрри кунне хăçан паллă тăваççĕ?

**Кирлĕ хуравсем**: чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче, ака уйăхĕн 29-мĕшĕнче, ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче, çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче.

**3. Лексика.**

10 балл. — Пан улми йывăçĕ – … (пан улми, улмуççи, çĕр улми, хурăн, пилеш).
20 балл. — Литература е музыка ĕçĕ – … (тухья, чĕкеç, хайлав, хуран кукли).
30 — балл. Ăна хĕрарăмсем пуçа сырнă. Тĕрленĕ вăрăм ал шăлли – … (пушмак, сурпан, хушпу).
40 балл. — Пĕр ĕç тăвакан, пĕр шухăшлă çынсен ушкăнĕ – … (пĕрлешӳ, пахча, вăрман).

**4. Фонетика.**

10 балл. — Чăваш алфавитĕнче миçе сас палли? (33, 37, 42)
20 балл. — [а] мĕнле уçă сасă? (çемçе уçă сасă, хытă уçă сасă)
30 балл. — [в] мĕнле сасă? (çемçе уçă сасă, хытă уçă сасă, ялан янравлă хупă сасă, шавлă хупă сасă)
40 балл. — «Çуркунне» сăмах мĕнле сăмахсен шутне кĕрет? (çемçе, хытă, хутăш)

**5. Пуплев пайĕсем.**

10 балл. — Çын, мерчен, çӳпçе, халăх, чĕлхе – … .
20 балл. — Вĕрен, пурăн, савăн, пулăш – … .
30 балл. — Вăйлă, нумай, çӳллĕ, хавасла – … .
40 балл. — Ку, çак, çав, леш – … .

**Кирлĕ хуравсем**: япала ячĕсем, глаголсем, паллă ячĕсем, таврăну местоименийĕсем, хисеп ячĕсем.

2 стр.

**6. Сăмах майлашăвĕсем.**

10 балл. — **Сарă хĕвел** сăмах майлашăвĕн тытăмне палăрт.
20 балл. — **Юман сĕтел** сăмах майлашăвĕн тытăмне палăрт.
30 балл. — **Виçĕ çăлтăр** сăмах майлашăвĕн тытăмне палăрт.
40 балл. — **Пирĕн çемье** сăмах майлашăвĕн тытăмне палăрт.

**Кирлĕ хуравсем**: местоимени + япала ячĕ, паллă ячĕ + япала ячĕ, хисеп ячĕ + япала ячĕ, япала ячĕ + япала ячĕ.

**2.** (пазл) **Сăмах каçмăша шутла. Мĕнле хула ячĕ пытаннă?**



| | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | 5. | | | | | | | |
| | 6. | | | | | | | | |
| 7. | | | | | | | | | |
| | | | 8. | | | | | | |
| | | | 9. | | | | | | |
| 10. | | | | | | | | | |
| | 11. | | | | | | | | |

1. Ку хула ятёнче «лавкка» сăмах пур.
2. Ку хулара Николай Ашмарин çуралнă.
3. Ку хулара вакун юсакан завод пур.
4. Ку хула ятёнче «ула» сăмах пур.
5. Ку хула «ç» сас паллинчен пуçланать.
6. Ку çын хăй тĕллĕн чăвашла вĕреннĕ.
7. Граждан вăрçин çар пуçĕ.
8. Ку юхан шыв хĕрринче Шупашкар вырнаçнă.
9. Ку хула ятёнче «çĕр» сăмах пур.
10. Ку хулара Иван Яковлев чăваш шкулĕ уçнă.
11. Николаев космонавтăн ячĕ.

**Урок 68**
**Название раздела: ВĂЙĂ УРОКĔСЕМ**
**Название урока: ПУÇ ВАТМĂШСЕМ**

**1.** (ручка) **Таблицăна тултар.**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1. | к | | | | 1. Тинĕс хĕрринче … . |
| 2. | к | | | | 2. Кĕпер урлă … |
| 3. | к | | | | 3. … кунта! |
| 4. | к | | | | 4. … кунтан! |
| 5. | к | | | | 5. Класа … . |
| 6. | к | | | | 6. Çăкăра çĕçĕпе … . |
| 7. | к | | | | 7. Мана чарăнура … . |
| 8. | к | | | | 8. Пурăнма яла … . |

**2.** (ручка) **Алфавитпа усă курса мĕн çырнине пĕл.**

А.

| | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 35 | 19 | 12 | 20 | | 19 | 24 | 15 | 17 | 2, | | 19 | 24 | 20, | | 19 | 24 | 15 | 1 | 23 | 19 | 2 | 20 | ! |

Ă.

| | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **19** | **9** | **29** | **9** | **14** | | **9** | **22** | **7** | | **23** | **7** | | **36** | **20** | **1** | **23** | **21** | **1** | | **23** | **24** |

**3.** (пазл) **Тавçăрса ил. Шифрланă предложенисене вула.**

1. **ЁТЁУЁСЁУЁ ЁХЁАЁВЁАЁНЁТЁАЁНЁ ЁМЁАЁТЁТЁУЁРЁ ЁПЁУЁЛЁТЁАЁРЁ!**
2. **WKUASЯZЛVЛLAD GAWHY FЧIARKQ**

**4. (**пазл) **Пуç ватмăша шутла. Мĕнле ваттисен сăмахĕ пытаннă – пĕл.**

В каждом рисунке зашифровано слово. В целом получается пословица. В пословице три слова. Между рисунками оставить расстояние. Запятая означает, что нужно убрать букву, две запятые – две буквы.

| **Рис.** | **Рис.** | **Рис.** | **Рис.** |
|---|---|---|---|
| **Ласточка**. Перед ласточкой – **запятая,** над ласточкой буквы **КЕ,** буквы нужно зачеркнуть горизонтальной линией Рядом **цветок** (неконкретный, можно что-то в виде ромашки, без жёлтой сердцевины). После цветка **три запятые.** После запятых буква **Н.** | **Цифра 50,** над ней буква **Л,** её нужно зачеркнуть горизонтальной линией, | **Нож** перед рисунком запятая, после рисунка ножа тоже запятая. | **Медведь.** Перед медведем буква **Т,** после медведя буквы **ТЬ** |

**Рис.**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| **Цифра 7** | **Ведро.** После ведра **2 запятые.** Над ведром **Т=ç** | **Ёлочная игрушка ввиде шарика.** После шарика 2 **запятые.** | **Цифра 1** | **Скамейка.** Н ад скамейкой цифры **321** |

**5**. (пазл) **5-мĕш класра вĕреннĕ сăмахсене туп. Сăмахсене тĕрĕс тупсан тăвата сас палли юлать. Юлнă сас паллисенчен сăмах ту.**

| | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ă | с | л | ă | л | ă | х | к | и | н | е | м | е | й | м | у | ч | и | к | ĕ | в | ĕ |
| с | а | л | х | у | л | л | ă | ç | ă | м | а | х | х | ă | л | х | а | л | ă | х | э |
| л | ç | ă | в | а | р | л | ă | х | х | ĕ | л | х | е | м | с | ă | в | а | п | л | ă |
| ă | с | ч | а | х | т | т | р | и | л | о | г | и | с | ă | в | ă | с | ç | а | р | а |
| е | к | ă | с | ă | к | л | ă | п | ă | р | ç | а | х | ĕ | р | л | е | м | е | с | м |

Г о р и з о т а л ь п е: 1. Пĕр-пĕр предмета тĕпчени. 2. Хисеплĕ ватă хĕрарăм. 3. Хисеплĕ ватă арçын. 4. Мелоди. 5. «Савăнăçлă» сăмахăн антонимĕ. 6. Çаврака пĕчĕк чуста, ăна яшкана яраççĕ. 7. Хăлхана тăхăнаççĕ, музыка итлеççĕ. 8. Çăвара тăхăнаççĕ. 9. Вут-çулăмăн питĕ пĕчĕк пайĕ.

10. Хисеплĕ. 11. Ăслă çын, тĕпчевçĕ. 12. Виçĕ кĕнекерен тăракан роман. 13. Сакăр уралла, эрешмен пек хăрушă чĕр чун. 14. Çулçăсăр, тумсăр. 15. «Интереслĕ» сăмахăн синонимĕ.

16. Пĕчĕк, çавракa çимĕç, ăна яшкана та, салата та яраççĕ. 17. «Хĕрлĕ сарă» сăмахăн синонимĕ.

В е р т и к а л ь п е: 18. «Ăссăр» сăмахăн антонимĕ.

– «çын» сăмахăн синонимĕ.

**6.** (ручка) **Кирлĕ сас палли ларт.**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Рис. Олень | Рис. Калина | Рис. Трава | Рис. Грач | Рис. Берёза | Рис. Котелок (для костра) |
| П _ ЛАН | П _ ЛАН | КУР _ К | КУР _ К | ХУР _ Н | ХУР _ Н |

**7.** (ручка) **Сăмхсем ту.**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| **кутам** | **ку** | **а** | **тӳпе** | **çăр** | **е** |
| **ку** | **кк** | **а** | **те** | **тт** | **ан** |
| **лав** | **ук** | **а** | **аса** | **ей** | **те** |

**8.** (ручка) **Арифметика действийĕсене ту. Мĕнле сăмах пулать?**

Кун – н + рак = курак

Пил + ешĕл – ĕл =

Вĕрене + кедă – дă + н =

Тар + а + вată – ă +лă =

Юл + ташă – ă + сем =

Ен – н + тĕрĕ – ĕ + не

## Чăвашла-вырăсла словарь

**А**

авалхи – старинный(-ая, -ое, -ые), древний (-яя, -ее, -ие)
авăрла – зарядить, заряди (телефон)
айĕнче – под
алла вĕрент – приручать, приручай
аман – пораниться, поранься
ан – 1) не; 2) спуститься, спустись
анăç – запад
ăнлав – понятие
ăнлан – понимать, пойми

анлă – 1) широко; 2)  широкий (-ая, -ое, -ие)
ансат – простой (-ая, -ое, -ые), лёгкий (-ая, -ое, -ие)
арçын – мужчина
арçын ача – мальчик
арча – сундук
асамлă – волшебный (-ая, -ое, -ые)
асамçă – волшебник
асăн – 1) поминать; помяни; 2) упомянуть
аслă – великий (-ая, -ое, -ие)
аçа – самец
аталан – развиваться, развивайся
Атăлçи Пăлхар – Волжская Булгария
аса ил –  вспомнить, вспомни
асамлă – волшебный (-ая, -ое, -ые)
асамçă – волшебник, маг
асăрхануллă – осторожный (-ая, -ое, -ые); 2) осторожно
ас ту – помнить, помни
ачаш – ласковый (-ая, -ое, -ые)
ашкăнчăк – шаловливый (-ая, -ое, -ые)
аялта – внизу
**Ă**
ăмăр – пасмурный (-ая, -ое, -ые)
ăмăрту – соревнование
ăнлав – понятие
ăнлан – понять, пойми
ăнсăртран – неожиданно
ăрат – порода
ăсат – провожать, провожай
ăслăлăх – наука
ăста – мастер, умелец
ăста лаççи – мастерская
ăсталăх – мастерство
ăсчах – учёный
ăшала – жарить, пожарь
ăшёнче – внутри
ăшне – во внутрь
ăшлăх – начинка
ăшра – про себя; в душе
**В**
валли – для
вар – овраг
варри – середина
васка – спешить, спеши
ват, ватă – старый (-ая, -ое, -ые)
ват асанне – прабабушка
вăлта – удочка
вăрттăн – 1) тайный (-ая, -ое, -ые); 2) тайно
вăрттăнлăх – тайна

вăран – проснуться, проснись
вăраткăç – будильник
вăрă – семена
вăрăм туна – комар
вăрç – ругать, ругай
вăрçă – война
вăтанчăк – стеснительный (-ая, -ое, -ые)
вăхăт – время
вĕлтĕрен – крапива
вĕр – 1) дуть, дуй; 2) лаять
вĕрет – вскипятить, вскипяти
вĕрен – верёвка
вĕрене – клён
вĕçевçĕ – лётчик
вĕтĕ – мелкий (-ая, -ое, -ие)
вил – умереть
вир – просо
вит – покрыть, покрой
витĕр – сквозь
вупăр карчăкĕ – колдунья
выльăх-чĕрлĕх – скотина
вырăн – место
вырнаç – располагаться, располагайся
вырнаçтар – располагать, расположи
вырт – 1) лежать, лежи; 2) ложиться, ложись

**Е**

евĕклĕ – 1) ласковый, вежливый (-ая, -ое, -ые); 2) ласково, вежливо
евĕр – как
елчĕ – дипломат, посол
ентеш – земляк
ерт – 1) руководить, руководи; 2) заразить, зарази
ертӳçĕ – руководитель
Етĕрне – Ядрин
ешĕл – зелёный (-ая, -ое, -ые)

**Ĕ**

ĕлĕкхи – давний (-яя, -ее, -ие), старый (-ая, -ое, -ые)
ĕлĕк – в старину
ĕлкĕр – успевать, успевай
ĕмĕр – век
ĕмĕтлĕ – мечтательный (-ая, -ое, -ые)
ен – сторона
ĕнен – верить, верь
ĕрчет – разводить, разводи
ĕнер – вчера
Ĕпхӳ – Уфа

**И**

иккен – оказывается
иккĕмĕш сыпăкри – двоюродный (-ая, -ое, -ые)

илемлĕх – красота
илсе кил – принести, принеси
илтĕн – слышится
инçе – 1) далёкий (-ая, -ое, -ие); 2) далеко
ирĕк – свобода
ирçе – эрзя
ирт – проходить, проходи
irrter – провести, проведи
иçĕм çырли – виноград

**Й**

йăва – 1) гнездо; 2) колобок
йăваш – кроткий, смирный
йăла-йĕрке – традиции
йăлтах – всё
йăмра – ветла
йăнăш – ошибка
йăрăс – стройная
йăт – поднять, подними; нести, неси
йăх – род, племя
йĕлтĕр – лыжи
йĕлтĕрçĕ – лыжник
йĕпе – мокрый (-ая, -ое, -ые)
йĕпе-сапа – ненастье
йĕплĕ – колючий
йĕр – 1) плакать; 2) линия; 3) след
йĕри-тавра – вокруг
йĕрке – порядок
йĕркеле – организовать, организуй
йӳçĕ – 1) кислый; 2) горький (-ая, -ое, -ие)
йывăр – тяжёлый (-ая, -ое, -ые)
йывăрăш – вес
йышăн –1) занимать; 2) заимствовать; 3) принимать

**К**

кайăк-кĕшĕк – птицы
калав – рассказ
каласа пар – рассказать, расскажи
калаçса татăл – договориться, договорись
канашла – советоваться, посоветуйся
кар – разбить (палатку), разбей
карман – крепость
карталан – образовывать круг
кас – 1) резать, режь; 2) рубить, руби
каçар – извинить, извини
каç – переходить, переходи
каçхине – вечером
катăк – кусок
кахал – лентяй

качча кай – выйти замуж
каччă – парень
кашла – шуметь
кашни – каждый (-ая, -ое, -ые)
каялла – назад, обратно
кая юл – опоздать, опоздай
кăвайт – костёр
кăвакал – утка
кăкшăм – кувшин
кăлар –1) вычесть, вычитай; 2) выкопать, выкопай; 3) выводить, выводи
кăмака – печка
кăмăл – 1) настроение; 2) характер; 3) желание
кăмăллă – приветливый (-ая, -ое, -ые)
кăна – только
кăнтăр – юг
кăнтăрла – днём
кăпăшка – мягкий (-ая, -ое, -ие)
кăмрăк – уголь
кăсăклан – интересоваться, интересуйся
кăсăклă – интересный (-ая, -ое, -ые)
кăçал – в этом году
кăтарт – показывать, покажи
кăтра кăмпа – сморчок
кăшкăр – кричать, кричи
кăшкăру палли – восклицательный знак
кăшла – грызть, грызи
кăшт – немного
кермен – дворец
кĕвĕ – мелодия
кĕленче – стекло
кĕлетке – туловище
кĕлĕ – молитва
кĕлчечек – роза
кĕмĕл – серебро
кĕпер – мост
кĕреш – бороться, борись
кĕркке – форель
кĕрт – 1) впустить, впусти; 2) включить, включи
кĕçĕн – 1) младший; 2) второстепенный (-ая, -ое, -ые)
кĕт – ждать, жди
кĕтсе ил – встретить, встречай
кĕтес – угол
кивĕ – старый (-ая, -ое, -ые)
кулач – калач
килĕшӳ – согласие, гармония
кил карти – двор
кимĕ – лодка
кинемей – пожилая женщина

кирĕк – грязь
кичем – скучно
ку – это
кукка – дядя (со стороны матери)
кукша пуç – одуванчик
кулăшла – смешной (-ая, -ое, -ые)
кулян – переживать, переживай
кун-çул – 1) история; 2) жизнь
курав – выставка
кутăн – капризный (-ая, -ое, -ые)
Куславкка – Козловка
куç – 1) переехать, переезжай; 2) подвинуться, подвинься
куçаруçă – переводчик
куçăмлă пĕлтерĕш – переносное значение
куçлăх – очки
куçса кай – переехать, переселиться (отсюда)
куçса кил – переехать, переселиться (сюда)
куççуль – слеза
кӳлĕ – озеро
кӳрен – обижаться, обижайся
кӳршĕ-аршă – соседи

**Л**

лăплан – успокоиться, успокойся
лăпкă – спокойный (-ая, -ое, -ые)
леш – 1) тот; 2) другой (-ая, -ое, -ие)
лутра – низкий

**М**

ман, манса кай – забыть, забудь
маншăн – для (ради, из-за) меня
ман шутпа – по-моему мнению
мăй – шея
мăйкăч – ошейник
мăн – 1) большой; 2) старший (-ая, -ое, -ие)
мăн асатте – прадедушка
мăн асаттесем – предки
мăнаçлă – 1) величавый; 2) гордый (-ая, -ое, -ые)
мăнаçлăн – 1) величаво; 2) гордо
Мăн кун – Пасха
мăнук – внук
мăшăр – пара
мăшăрлă – парный (-ая, -ое, -ые)
мел – способ
мерчен – 1) коралл; 2) бисер; 3) жемчуг
мĕлке – тень
мĕне те пулин – что-нибудь
мĕншĕн – почему

мĕншĕн тесен – потому что
миçе хут – сколько раз
миçеччен – до скольких
мул – богатство
мунча – баня
мирлеш – помириться, помирись
мухтав – слава
мухтан – 1) хвалиться, хвались; 2) гордиться, гордись
мучи – пожилой мужчина

**Н**
нĕрлĕ – красивый
никĕс – основание
никĕсле – основать
нумай – много
нӳрлĕ – сырой (-ая, -ое, -ые)

**П**
пай – часть
пайла – разделить, раздели
палăк – памятник
палăрт – 1) отметить, отметь; 2) выделить, выдели
палăртуллă – выразительно
паллаш – познакомиться, познакомься
паллаштар – познакомить, познакомь
палла – знать, узнать, узнай
паллах – конечно
паллă – известный (-ая, -ое, -ые)
паллă ячĕ – имя прилагательное
паллă ту – отмечать, отмечай
пан улми – яблоко
парăн – сдаваться, сдайся
парăс – парус
парнеле – подарить, подари
паттăр – герой, богатырь
паттăрлăх – героизм
патша – царь, государь
патшалăх – государство
Пăлхар – Булгар
пăлхар – булгар, булгарский
пăнчă – точка; пятнышко
пăр – лёд
пăрах – 1) кидать, кидай; 2) оставить, оставь
пăрăх – труба
пăрçа – горох
пăсăл – нарушаться; портиться
пăхăн – подчиняться, подчинись
пăхăр – бронза

пăшăрхан – переживать, переживай
пек – как
перекетле – экономить, экономь
пĕлтер – 1) означать; 2) сообщать, сообщай
пĕлтерӳ – объявление
пĕлтерĕшлĕ – значимый (-ая, -ое, -ые)
пĕлӳ – знания
пĕлӳлĕх – грамотность, знания
пĕр йышши – однородные
пĕркенчĕк – покрывало
пĕрле – вместе
пĕрлештер – объединить, объедини
пĕрлешӳ – объединение
пĕррехинче – однажды
пĕтер – завершить, заверши
пике – девушка
пилеш – рябина
пирки – из-за
пил – 1) благословение; 2) слон
пилле – благословляй, благослови
пиçиххи – пояс
пула – из-за
пултар – мочь
пултаруллă – способный (-ая, -ое, -ые)
пупле – разговаривать, разговаривай
пурлăх – богатство
пурнăç – жизнь
пусă – колодец
пусма – ткань
пуçа хыç – думать, думай
пуçламăш – 1) начало; 2) начальный (-ая, -ое, -ые)
пуç тай – поклониться, поклонись
пуш хир – пустыня
пуянлăх – богатство
пӳ – туловище
Пӳлер – Биляр
пӳремеч – ватрушка
пыл хурчĕ – пчела
пыр – подойти, прийти
пытар – спрятать, спрячь

**С**
сайра – редко
саламла – поздравить, поздравь
салхуллă – грустный
саппун – фартук
сарăл – распространяться, распространяйся
сасă – звук

сас палли – буква
сăваплă – священный (-ая, -ое, -ые)
Сăвар – Сувар
сăвăр – сурок
сăвăс – клещ
сăвăçă – поэт
савăт, савăт-сапа – посуда
сăлтав – причина
сăмах майлашăвĕ – словосочетание
сăмахсар – словарь
сăна – наблюдай
сăн ӳкер – фотографировать, фотографируй
сăпайлă – скромный (-ая, -ое, -ые)
сăпас – спас
сăпат – лицо
сăра – пиво
Сăр – Сура
сăрт – холм
сăрт-ту – горы
сенкер – голубой (-ая, -ое, -ые)
серте – сныть
Сĕве – Свияга
Сĕнтĕрвăрри – Мариинский Посад
сĕнӳ – совет
сĕткенлĕ – сочный (-ая, -ое, -ые)
сиплĕ – лечебный (-ая, -ое, -ые)
сирпĕн – брызнуть, разлетаться, взорваться
суй – врать, ври
суйла – выбирать, выбирай
суйласа ил – выбрать, выбери
сукмак – тропинка
сулахай – левый (-ая, -ое, -ые)
сумлă – 1) авторитетный; 2) уважаемый (-ая, -ое, -ые)
сун – желать, желай
сунчăк – зонтик
Сурхури – Рождество
суту-илӳ – торговля
сунчăк – зонтик
суран – рана
сухал – борода
сӳнтер – выключить, выключи
сӳтсе яв – обсудить, обсуди
сывлăхлă – здоровый (-ая, -ое, -ые)
сывлăх сун – поздороваться, поздоровайся
сылтăм – правый (-ая, -ое, -ые)
сыпăк – 1) слог; 2) поколение
сырăш – кормушка
сыхла – беречь, береги

## Ç

Çавал – Цивиль
çавăнпа – поэтому
çавăр – вить (гнездо)
çавракa – круглый (-ая, -ое, -ые)
çаврăн – обернуться, обернись
çав тери – очень
çак (çавă) – этот
çакăнса тăр – висеть, виси
çанталăк – погода
çамрăк – молодой (-ая, -ое, -ые)
çапăç – сражаться, сражайся
çар – войско
çар пуçĕ – военачальник
çара – голый
çара пуçăн – без головного убора
çармăс – мариец
çăвар – рот
çăварлăх – намордник
çăвăн – умываться, умойся
çăлтăр – звезда
çăл – спасать, спасай
çăмах – клёцки
çăмăл – лёгкий (-ая, -ое, -ие)
çăмламас – пушистый (-ая, -ое, -ые)
çăнăх – мука
çăр – месить, замесить, замеси
çемçе – мягкий (-ая, -ое, -ие)
çерем – 1) лужайка; 2) целина
çеçке – цветок
çĕкле – поднять, подними
çĕле – шить, сшей
çĕмĕр – разбить, разбей
çĕмĕрт – черёмуха
çĕнет – обновить, обнови
çĕнĕ – новый (-ая, -ое, -ые)
çĕнĕлĕх – 1) новизна; 2) новинка, новшество
çĕнтер – победить, победи
çĕнтерӳ – победа
çĕнтерӳçĕ – победитель
Çĕпĕр – Сибирь
çĕр – 1) земля; 2) гнить; 3) сто
çĕр каç – переночевать
çĕрле – ночью
Çĕрпӳ – Цивильск
çĕр çырли – клубника

çĕр-шыв – страна
çĕр улми — картофель
çĕçĕ – нож
çил-тăман — метель, вьюга
Çимĕк – Троица
çинчен – о, про
çирĕп – крепкий (-ая, -ое, -ие)
çирĕп кăмăллă – стойкий, с твёрдым характером
çирĕплет – укреплять, укрепляй
çитер – накормить, накорми
çитĕ – покрывало, скатерть
çул – 1) год; 2) дорога; 3) коси, косить
çулăм – пламя, огонь
çул çӳре – путешествовать, путешествуй
çул çӳрев – путешествие
çулталăк – год
çултан-çул – из года в год
çумне – к
çуран – пешком
çурăл – расцвести; разбиться, разбейся
çурçĕр – север
çурта – свечка
çут – включать, включи
çутă – 1) свет; 2) светло; 3) светлый (-ая, -ое, -ые)
çут çанталăк – природа
çухат – потерять, потеряй
çухрăм – километр
çӳллĕ – 1) высоко; 2) высокий (-ая, -ое, -ие)
çӳп-çап – мусор
çӳпçе – сосуд, выдолбленная из цельного дерева
çӳрев – путешествие
çӳлте – наверху
çывăрса кай – заснуть, засни
çывăрса тăран – выспаться, выспись
çывхар – приближаться, приближайся
çын – человек
çыравçă – писатель
çырма-çатра – овраг
çыру – письмо
çых – завязать, завяжи
çыхăнтар – соединить, соедини
çыхăну – связь

**Т**

тавлаш – спорить, спорь
тавçăр – соображать, сообрази
тавра – вокруг
тавралăх – 1) окружающий мир (предмет); 2) местность

таврӑн – вернуться, вернись
тавҫӑруллӑ – сообразительный (-ая, -ое, -ые)
тав ту – благодарить, благодари
тан – наравне
танлаш – сравняться
танлаштар – сравнить, сравни
тантӑш – ровесник
тапӑн – нападать, нападай
тапран – тронуться с места
таран – до
тарӑх – злиться
таса – чистый (-ая, -ое, -ые)
татӑк – 1) кусок; 2) частица
тахҫанах – давно
тачӑ – 1) прочно; 2) крепко
тӑван – родной (-ая, -ое, -ые)
тӑванлӑх – родство
Тӑван ҫӗр-шыв – Родина
тӑвар – соль
тӑварла – посолить, посоли
тӑкӑрлӑк – переулок
тӑкса яр – пролить, пролей
тӑм – глина
тӑнӑҫ – благополучный (-ая, -ое, -ые)
тӑнӑҫлӑх – благополучие
тӑпӑрчӑ – творог
тӑпра – 1) почва; 2) могильный холм
тӑр – 1) стой; стоять; 2) стоит
тӑрӑх – 1) местность, округ; 2) по
тӑрна – журавль
тӑррине – на верхнюю часть предмета
тӑрринче – на верхней части предмета
тӑтӑш – часто
тӑхта – ждать, подожди
тӑшман – враг
темиҫе – несколько
тетел – интернет
техӗмлӗ – вкусный, ароматный
тӗве – верблюд
тӗллев – цель
телейлӗ – счастливый (-ая, -ое, -ые)
тӗлӗк – сон
тӗлӗн – удивляться, удивляйся
тӗлӗнтермӗш – чудо
тӗл пул – встречаться, встречайся
тӗл пулу – встреча
тӗмӗ – куст
тӗнче – мир

тĕп – главный (-ая, -ое, -ые)
тĕпсĕр – бездонный (-ая, -ое, -ые)
тĕп хула – столица
тĕпче – исследовать, исследуй
тĕрĕсле – проверить, проверь
тĕрĕк – тюркский (-ая, -ое, -ие)
тĕрле – вышивать, вышивай
тĕрлĕ – разный (-ая, -ое, -ые)
тĕс – 1) цвет; 2) вид
тĕслĕх – пример
тĕтре – туман
тивĕç – долг
тимĕр – железо
тимĕр-тăмăр – металлолом
тимлĕ – внимательный (-ая, -ое, -ые)
тунти кун – понедельник
тирпейлĕ – аккуратный (-ая, -ое, -ые)
тишкер – исследуй, исследовать
тырă, тырă-пулă – зерно
ту – гора
туйăм – чувство
туп – найти, найди
тупра – богатство
тупсăм – отгадка
турат – ветка
туслăх – дружба
тус-юлташ – друзья
тухăç – восток
тухтăр – врач
тӳлевсĕр – 1) бесплатный (-ая, -ое, -ые); 2) бесплатно
тӳме – пуговица
тӳпе – небо
тӳрех – сразу
тӳрĕ – 1) прямая (-ая, -ое, -ые); 2) прямо
тӳрĕ кăмăллă – 1) честная (-ая, -ое, -ые); 2) справедливая (-ая, -ое, -ые)
тӳрĕ пĕлтерĕшлĕ – прямое значение
тӳрлет – исправить, исправь
тӳрре кăлар – оправдать, оправдай
тымар – корень
тыт – держать, держи
тытăм – строение, структура

**У**

уйăр – 1) отделить, отдели; 2) выделить, выдели
уйăх – 1) луна;   2) месяц
уйрăм –1) отдельный (-ая, -ое, -ые); 2) отдел
уй-хир, уй – поле
укçа – деньги

Улатăр – Алатырь
улах – посиделки
улăп — великан
улăх, улăх-çаран – луг
улăштар – менять, поменяй
улмуççи – яблоня
ултавлă – обманчивый (-ая, -ое, -ые)
умĕн – перед
упра – беречь, береги
урăх – другой (-ая, -ое, -ие)
урлă – через
усал – злой (-ая, -ое, -ые)
усă кур – использовать, используй
услам çу – сливочное масло
уçă – 1) открыто; 2) свежий (-ая, -ое, -ие); 3) ключ
уçă сасă – гласный звук
уçланкă – поляна
уçлăх – простор, пространство
ухмах – глупый (-ая, -ое, -ые)
ушкăн – группа
ушкăнла – сгруппируй
уяв – праздник
уяр – ясная (-ая, -ое, -ые)

**Ӳ**
ӳнер – искусство
ӳнерçĕ – художник
ӳркен – лениться, ленись
ӳркенчĕк – ленивый (-ая, -ое, -ые)
ӳс – расти
ӳсен-тăран – растение
ӳстер – выращивать, выращивай
ӳт – 1) тело; 2) кожа
ушкăн – 1) группа; 2) команда

**Х**
хайлав – произведение
хавал –1) сила; 2) настроение
хаваспа – с радостью
хавхалантар – вдохновлять, вдохновляй
хайхи – тот самый
хакла – цени
хаклă – дорогой (-ая, -ое, -ие)
халап – легенда
хальхи – современный (-ая, -ое, -ые)
хапха – ворота
хаçат – газета

хатӗр – готовый (-ая, -ое, -ые)
хатӗрле – приготовить, приготовь
хӑвала – гнать, гони
хӑваласа яр – прогнать, прогони
хӑвӑл – 1) дупло; 2) пещера
хӑлхалӑх – наушники
хӑма – доска
хӑмла – хмель
хӑмла ҫырли – малина
хӑна ҫурчӗ – гостиница
хӑнӑх – привыкать, привыкай
хӑпар – подняться, поднимись
хӑрушӑ – страшный
хӑҫанччен – до каких пор
хӑш – который (-ая, -ое, -ые)
хӑю – лента
хӑюллӑ – смелый (-ая, -ое, -ые)
хӗвел анӑҫ – запад
хӗвел тухӑҫ – восток
хӗлхем – искра
хӗрарӑм – женщина
хӗр ача – девочка
хӗртӗн – загорать, загорай
хирӗҫ – 1) навстречу; 2) против
хисеп – число
хисепле – уважать, уважай
хисеплӗ – уважаемый (-ая, -ое, -ые)
хисеп ячӗ – имя числительное
хулаш – городище
хулӑн – толстый (-ая, -ое, -ые)
хунар – фонарь
хупӑ сасӑ – согласный звук
хупла – закрывать, закрывай
хурав – ответ
хуравла – ответить, ответь
хуран – котёл
хуран кукли – вареники
хуралҫӑ – сторож
Хура тинӗс – Чёрное море
хурӑн ҫырли – земляника
хурлан – горевать, горюй
хурлӑхан – смородина
хурт-кӑпшанкӑ – насекомое
Хусан – Казань
хуҫалӑх – хозяйство
хут – 1) бумага; 2) раз; 3) этаж
хутӑш – смешанный (-ая, -ое, -ые)
хутӑштар – смешать, смешай

хутшăн – 1) участвовать, участвуй; 2) общаться, общайся
хуш – 1) поручить, поручи; 2) прибавить, прибавь
хушăран – иногда
хушшинче – за, между
хӳреллĕ пăнчă – запятая
хӳтĕле – защищать, защищай
хӳтĕлевçĕ – защитник
хыпар – новость
хыç сăмах – послелог
хыççăн – после

**Ч**
чав – копать, копай
чап – мухтав
чаплă – 1) великолепный; 2) прославленный
чарăн – остановиться, остановись
чарăну – остановка
чаршав – занавес
чатăр – палатка
чăн-чăн – настоящий
чăнкă – крутой (-ая, -ое, -ые)
чăтлăх – чаща
чĕкеç – ласточка
чĕлхеçĕ – языковед
Чĕмпĕр – Ульяновск
чĕн – позвать, позови
чĕнӳ сăмахĕ – обращение
чĕрĕ – живой (-ая, -ое, -ые)
чĕрт – 1) зажечь, зажги; 2) разжечь, разожги
чĕр чун – животное
чи – самый (-ая, -ое, -ые)
чие – вишня
чикĕ – граница
чир – болезнь
чиркӳ – церковь
чирле – болеть, болей
чипер –1) пока; 2) красивый (ая, -ое, -ые)
чул – камень
чун – душа
чуста – тесто
Чулхула – Нижний Новгород
чух – когда
чухăн – бедный (ая, -ое, -ые)
чуччу – качели

**Ш**
шавлă – 1) шумно; 2) шумный (-ая, -ое, -ые)
шакăртма – трещётка

шанăç – доверие
шанчăклă – надёжный (-ая, -ое, -ые)
шăнкăрав – звонок
шăнт – 1) заморозить, заморозь; 2) похолодать
шăрттан – мясное блюдо
шăпа – судьба
шăппăн – тихо
шăпчăк – соловей
шăрпăк – спички
шăтăк – 1) дыра; 2) берлога; 3) нора
шăхлич – свистулька
шеп – красивый (-ая, -ое, -ые)
шур сухал – мудрый старец
шултра – крупный
Шур Атăл – Кама
шурлăх – болото
шутлан – считаться
шухăш – мысль
шухăшла – думать, думай
шӳтле – шутить, шути
шӳрпе – бульон (мясной, рыбный)
шыв-шур – естественные водоёмы
шыра – искать, ищи

**Ы**
ывăл – сын
ывăн – устать, устань
ывăт – кинуть, кинь
ыйту палли – вопросительный знак
ыйтăн – отвечать
ылтăн – золотой (-ая, -ое, -ые)
ыраш – рожь
ырлăх – добро
ытла – более
ытларах – больше

**Э**
этем – человек
эрешмен – паук
эрех – 1) вино; 2) водка

**Ю**
юл – остаться, останься
юлашкинчен – в конце
юлхав – ленивый (-ая, -ое, -ые)
юмăç яр – гадать
юн – кровь
юнашар – рядом

юсав – ремонт
ют – чужой
юх – течь, теки
юхан шыв – река

**Я**

яваплӑ – ответственный
ялан – всегда
ялав – флаг
янӑравлӑ хупӑ сасӑ – звонкий согласный звук
япала – предмет, вещь
япала ячĕ – имя существительное
яр – 1) пустить, пусти; 2) отправить, отправь
ятарлӑ – специальный (-ая, -ое, -ые)
ят хур – назвать, назови
яхӑн – около
яштака – стройный (-ая, -ое, -ые)

## ТУПМАЛЛИ


| № п/п | | Тема | страница |
|---|---|---|---|
| | Пĕлӳ кунĕ | | |
| 1 | 1 | Аван-и? | |
| 2 | 2 | Халь мĕнле урок пулать? | |
| 3 | 3 | Класс сехетĕнче | |
| 4 | 4 | Интервью | |
| 5 | 5 | Манӑн девиз | |
| 6 | 6 | Тӑван чĕлхе | |
| 7 | 7 | Чӑваш чĕлхи | |
| 8 | 8 | Чĕмпĕр чӑваш шкулĕ | |
| 9 | 9 | Чӑвашла калаҫатӑп | |
| | Эпĕ тата манӑн ҫемье | | |
| 10 | 1 | Эпĕ Дамир ятлӑ | |
| 11 | 2 | Эсĕ мĕн пуҫтаратӑн? | |
| 12 | 3 | Эпир вулама юрататпӑр | |
| 13 | 4 | Юратнӑ кĕнеке | |
| 14 | 5 | Асанне, ан пӑшӑрхан! | |
| 15 | 6 | Ҫемьери йӑласем | |
| 16 | 7 | Ҫӑвӑнмалли пӳлĕмре | |
| 17 | 8 | Хӑвна тĕрĕсле | |
| | Шкул | | |
| 18 | 1 | Класс хаҫачĕ | |
| 19 | 2 | Пĕр класра вĕренекенсем | |
| 20 | 3 | Улине валли парне | |
| 21 | 4 | Диктант ҫыратпӑр | |
| 22 | 5 | Паян хӑш кун? | |
| 23 | 6 | Пĕлсе тӑма | |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | Вăхăт. Кĕрхи сăнсем | | |
| 24 | | 1 | Çулталăк вăхăчĕсем |
| 25 | | 2 | Кĕркунне |
| 26 | | 3 | Кĕрхи сăн ӳкерчĕксем |
| 27 | | 4 | Кĕркуннехи каникул умĕн |
| 28 | | 5 | Каникулти плансем |
| 29 | | 6 | Кĕрхи çул çӳрев маршручĕ |
| 30 | | 7 | Пăлхара каятпăр |
| 31 | | 8 | Хăвна тĕрĕсле |
| | Апат-çимĕç | | |
| 32 | | 1 | Килтен илнĕ апат-çимĕç |
| 33 | | 2 | «Хуран кукли» кафе |
| 34 | | 3 | Савăт-сапа |
| 35 | | 4 | Чăваш халăх апачĕ |
| 36 | | 5 | Сĕт-турăх |
| | Çулталăк вăхăчĕ. Хĕллехи кунсем | | |
| 37 | | 1 | Пăлхар хулашĕ юрпа кĕтсе илет |
| 38 | | 2 | Хĕллехи ӳкерчĕк |
| 39 | | 3 | Çĕнĕ çул |
| 40 | | 4 | Манăн та çакăн пек ярăнас килет |
| 41 | | 5 | Эпĕ сноубордпа ярăнма вĕренесшĕн |
| | Пушă вăхăтра | | |
| 42 | | 1 | Кун йĕрки |
| 43 | | 2 | Хуран кукли рецепчĕ |
| 44 | | 3 | Пулас археолог! |
| 45 | | 4 | Кăсăклă кĕнеке |
| 46 | | 5 | Спектакль лартатпăр |
| | Уявсем | | |
| 47 | | 1 | Кам вăл çĕр-шыв хӳтĕлевçи? |
| 48 | | 2 | Пуш уйăхĕн 8-мĕшĕнче |
| 49 | | 3 | Дамирăн çуралнă кунĕ |
| 50 | | 4 | Сурхури уявĕ |
| 51 | | 5 | Мăн кун |
| 52 | | 6 | Хăвна тĕрĕсле |
| | Çулталăк вăхăчĕ. Çуркунне | | |
| 53 | | 1 | Çуркунне мĕн тума пулать? |
| 54 | | 2 | Юман сăн ӳкерчĕкĕсем |
| 55 | | 3 | Кукамай калавĕсем |
| 56 | | 4 | Юхан шыв тупри |
| 57 | | 5 | Çурхи калейдоскоп |
| | Чăваш ен – ман Тăван çĕр-шыв | | |
| 58 | | 1 | Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв? |
| 59 | | 2 | Чăвашлăха палăртакан символсем |
| 60 | | 3 | Шупашкар – Чăваш Республикин тĕп хули |
| 61 | | 4 | Шупашкарти палăксем |

62 5 Канаша çитрĕмĕр
63 6 Çĕрпӳ хули
64 7 Санăн никнейм пур-и?
65 8 Тăван ялăм
66 9 Хăвна тĕрĕсле
Вăйă урокĕсем
67 1 Хамăрăн вăйă
68 2 Пуç ватмăшсем

## Выходные сведения

Вĕренӳ кăларăмĕ

«Чăвашла калаçатпăр» ярăм

**Блинов** Александр Васильевич
**Егорова** Алина Владимировна
**Николаева** Людмила Петровна

**ЧĂВАШ ЧĔЛХИ**

**5 класс**
Вĕренӳ пособийĕ, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан
в ырăс чĕлхиллĕ шкулсем валли

Учебное издание

Серия «Говорим по-чувашски»

**ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК**

**4 класс**

Учебное пособие для общеобразовательных организаций
с русским языком обучения

Ответственный за выпуск *В.А. Жарова*
Редактор *Р.К. Игнатьева*